К 63.3
Д46
-37093

В.Д.Димитриев

ЧĂВАШСЕН ИРТНĔ ПУРНĂÇ ШĂПИ ТАТА НАЦИ АТААНĂВĔН ПАЯНХИ ÇИВĔЧ ЫЙТĂВĔСЕМ

Национальная библиотека ЧР
4-037093

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖ
обозначенного здесь срока



К
К63.3
Д 46

Раççей Федерацийĕнчи
вĕрентӳ министерстви

И.Н.Ульянов ячĕллĕ
Чăваш патшалăх университечĕ

Чăваш Ен
Раççее кĕнĕренпе
450 çул тултарнă тĕле

В.Д.Димитриев

ЧĂВАШСЕН ИРТНĔ ПУРНĂÇ ШĂПИ ТАТА НАЦИ АТАЛАНĂВĔН ПАЯНХИ ÇИВĔЧ ЫЙТĂВĔСЕМ

КР

Шупашкар 2001

К63.3 я44

ББК Ш43(2)1-411.2) 5у 3 23

63.3(2РОС.Чув) я44

Обязат. экз.

ДИМИТРИЕВ В.Д. Историческая судьба и современные национальные проблемы чувашского народа. Сборник статей. Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2001. 160 с.

Отв.редактор **А.П.Данилов.**

Кĕнекене автор юлашки çулсенче хаçатсемпе журналсенче пичетлесе кăларна статьясене кĕртнĕ. Унта чăваш халăхĕ пулса кайни, чăвашсен авалхи пурнăçĕпе паянхи кун-çулĕ çинчен истори документчĕсемпе тулли усă курса ĕненмелле каласа панă. В.Д.Димитриев профессор таван халăх историйĕпе кăсăкланакансене черетлĕ паха кĕнеке парнелет.

ПРОВЕРЕНО
2010

ББК Ш43(2)1-411.2) 5у 3 23

Ч-34093
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

© Димитриев В.Д., 2001.

В.Д.ДИМИТРИЕВ ПРОФЕССОР ЖУРНАЛИСТИКĂРА

Истори наукисен докторĕ, Чăваш Республикин аслăлăхпа ӳнер наци академин академикĕ В.Д.Димитриев профессор нумай çулсем хушши Чăваш патшалах гуманитари аслăлăхĕсен институтĕнче ĕçленĕ, çирĕм çул институт директорĕ пулнă. И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалах университетĕнче 1967 çултан пуçласа çур ставкăра ĕçлекен профессор пулнă, 1988 çултанпа университетăн истори факультетĕнче кафедра пуçлăхĕ пулса ĕçлет. Василий Димитриевич чăваш халăхĕн, унăн çĕршывĕн историне авалхи тапхăртан пуçласа XIX ĕмĕр таринччен тĕпчесе 8 монографи, 14 брошюра, 210 аслăх статйи пичетлесе каларнă. Унăн аслăлăхри ĕçĕсем çинчен "Вестник Чувашского университета" журналăн 1999 çулхи 1-2 номерĕнче "Швецарский историк А.Каппелер о трудах В.Д.Димитриева" статья пичетлесе тухнăччĕ. Вăл статьяра А.Каппелер Димитриев кĕнекисемпе статйисем истори ыйтăвĕсене пуçласа тĕпченĕ паха ĕçсем пулни çинчен, вăл Ватам Атăл тăрăхĕнчи историксем хушшинче чи палла специалист шутланни çинчен çырнă. В.Д.Димитриевăн тĕпчев ĕçĕсем çинчен "Хăлăх шкулĕ" журналăн 2000 çулхи 4-мĕш номерĕнче Ю.П.Смирнов çырнă "Палла историк - медиевист" статьяран та пĕлме пулать. Унăн пысăкрах ĕçĕсем шутĕнче "История Чувашии XVIII века /Шупашкар,1959/, "Чувашия в эпоху феодализма" /Шупашкар,1986/, "Чувашские исторические предания" /Шупашкар,1993/, "История Чувашской АССР" /I т. Шупашкар,1966, 1983. I-IX главасем/ кĕнекисене палартмалла. 2000-мĕш çулта В.Д.Димитриев В.П.Ивановпа тата В.В.Николаевпа пĕрле хатĕрленĕ "Чăваши: этническая история и традиционная культура" кĕнеке Мускавра пичетленсе тухрĕ.

В.Д.Димитриев 1948 çултан пуçласах хаçатсемпе журналсенче истори темисемпе самай пысăк статьясем пичетлесе тăчĕ. Унăн хаçатсенче пичетленсе тухнă статьясен шучĕ 260 та çитет, журналсенче вăл 30 яхăн статья пичетлесе каларнă. Хăйĕн статйисенче чăваш халăхĕ пулса кайни, чăвашсен авалхи пур-

наçĕ, вĕсем Аталçи Пăлхар патшалăхне тытса тăни, вăл патшалăха Бату хан çĕмĕрсе тăкни, Пăлхар çĕрĕнчи пур хуласемпе ялсене çаратса, çунтарса, çĕмĕрсе тăкса пушă хир туса хуни, чĕрĕ юлна пăлхар-чăвашсем Хусан таврашне, Хусантан тухăçалла - Чăваш даругине, Удмурт çĕршывне, хальхи Чăваш Республикин варринчи тата çурçĕр пайĕнчи районсене тарса килсе вырнаçни, Хусан ханствинче асапланса пуранса, çармассемпе хутшăнса хальхи чăваш халăхĕ пулса кайни, 1551 çулта чăвашсемпе туçи çармасĕсем Вырас патшалăхне вăрçăсăр, мирлĕ кĕни, XVII ĕмĕр пуçламашĕнчи пăтранулла тапхăрта чăвашсем те хумханни, ун хыççăн Мускава, Раççее Польшапа Швеци интервенчĕсенчен тасатма чăваш отрячĕсем хутшăнни, чăвашсем Разин вăрçинче, Пугачев вăрçинче кĕрешни, вĕсене тĕне кĕртни, Урал завочĕсене ĕçлеме кайна чăвашсене 1752 çулта персе вĕлерни, чăвашсене XVIII ĕмĕрте хут вĕрентме тытăнни, вĕсенчен П.Е.Егоров архитекторпа Китай историне тĕпченĕ тĕнчипе палла пулна ăсчах Н.Я.Бичурин тухни, чăвашсем 1812 çулта Наполеонпа хастар кĕрешни, 1842 çулта хăйсене удел хресченĕсем тăвассине хирĕç Шурча вăрçине çĕкленни, ун чухне 30-40 пăлхавçăна вĕлерни, çĕршер пăлхавçăна Çĕпере яни, Шупашкар, Çĕрпӳ, Етĕрне, Улатăр хулисен историйĕ, И.Я.Яковлев чăваш халăхне çутта каларассишĕн кĕрешни; совет тапхăрĕнчи палла çынсем - ăсчахсем, культура ĕçченĕсем, палла пулăмсем, Асла Отечественнăй вăрçа çинчен тата ытти ыйтусем çинчен те документсем тарăх ĕнентерӳллĕ çырса пĕлтерме тăрăшнă Василий Димитриевич вулакансене.

Ку кĕнекене автор юлашки çулсенче хаçатсемпе журналсенче пичетлесе каларнă ултă статйине кĕртрĕмĕр.

В.Д.Димитриев Раççейри журналистсен союзĕн члснс. 1999 çулта Союз правленийĕ ăна Раççей пичетĕнче нумай çул хушши пархатарла ĕçленĕшĕн диплом парса чысларĕ.

А.П.ДАНИЛОВ доцент,

Чăваш патшалăх университечĕн журналистика факультечĕн деканĕ.

ПИРĔН ЙĂХ-НЕСĔЛ ĂÇТАН?

Тӳрĕ камалла палла ученайĕсем çакна палӑртнă: истори науки авалхине паянхи куçпа пăхакан политика пулмалла мар. Анчах иртнĕ тапхăр çинчен çыракан хăш-пĕр тĕпчевçĕсем чăнлăха, истори тапхăрĕнчи тĕрĕслĕхе кăтартас выранне фактсене арпаштараççĕ. Философи наукисен кандидачĕ Р.Х.Бариев "Вопросы истории" журналта (1990, 7 №, 188-189 стр.) "Ватăм Атăл тарăхĕнчи халăхсен историйĕ çинчен тĕрĕссине кăна çырмалла" статья пичетлесе каларчĕ. Унта вăл çапла çырать: "Истори документчĕсенчен çака палла: чăваш халăхĕ халĕ хай пуранакан выранта Ватăм Атăл тарăхне пăлхарсем киличченех чăмартанса йĕркеленме тытăннă". Анчах автор çака мĕнле документсенчен палла пулнине кăтартмасть. Кунта ĕç ака мĕнре: çаван пек документсем çук. Р.Х.Бариев татăкланнах çапла çирĕплетсе калать: тутарсем, пĕр вĕсем кăна - пăлхарсем, чăвашсем вара - "туçи çармассем". Вăл çакăн пек ыйту лартать: "XII-XIV ĕмĕрсен картти çине мĕншĕн истори чăнлăхне кăтартса улăх çармасĕсем - марисем, туçи çармассем - чăвашсем, арсем - удмуртсем, пăлхарсем - тутарсем тесе палласем тăвас мар?"

Р.Х.Бариев статйи - çаван йышши пĕрремĕш ĕç мар. Вăл журналта пĕр страница çура йышăнакан материалта мĕн çырса кăтартнине Хусанти историксем, археологсем, этнографсем тата лингвистсем юлашки 45 çул хушшинче вуншар кĕнекере тата çĕршер статьяра каласа панă. Ку ыйтупа А.Х.Халиковпа М.З.Закиев профессорсем уйрăмах нумай çыраççĕ. Каçал Шупашкарти кĕнеке магазинĕсенче А.Х.Халиковăн "Татарский народ и его предки" кĕнекине сутрĕç. 1986 çулта вара М.З.Закиевăн "Проблемы языка и происхождения волжских татар" кĕнеки пичетленсе тухрĕ.

1944 çулччен Хусан ученайĕсем тутар тата чăваш халăхĕсем мĕнле пулса кайнине тĕрĕс ăнлантарса панă. 1944 çулхи августăн 9-мĕшĕнче "Тутар парти организацийĕнче массăлла-политикăлла ĕçпе идеологи ĕçне мĕнле туса пыни тата ăна лайăхлатмалли мера-

сем çинчен" постановлени йышăннă. Унта çапла асăрхаттарса каланă: Тутар республикин историне Ылтăн Уртапа çыхăнтармалла мар! Хусанти наука работникĕсем çăвăнтанпа тутар халăхĕн тĕп компонентчĕсене - монголсемпе килнĕ тутарсене тата XI ĕмĕртех Дон таврашне куçса килнĕ кыпчаксене /половецсене/ шута илмеççĕ, унччĕнхи пекех пĕр салтавсăр Хусан тутарĕсен йăх-несĕлĕ пăлхарсем çеç пулса тăраççĕ, тесе сӳпĕлтетеççĕ.

Истори çине çăвăн пек йăнăш пăхнине "Чăваш халăхĕ пулса кайни çинчен" (Шупашкр, 1957), "Пăлхарсемпе чăвашсем" (Шупашкар, 1984) ятлă статьясен пуххисенче, В.Ф.Каховский профессоран "Чăваш халăхĕ пулса кайни" (Шупашкар, 1965) кĕнекинче тата ытти нумай ĕçсенче кăтартса панă. Асăннă ĕçсен авторĕсем çеç мар, Мускаври тата Ленинградри ученăйсем те, çав шутра тутарсем Э.Н.Надшиппа М.Г.Сафаргалиев, çавнашкалах урăх çĕршывсенчи тюркологсем Н.И.Ашмарин пăлхарсемпе чăвашсен йăх тата чĕлхе тĕлĕшĕнчи пĕрпеклĕхсем çинчен туса хатĕрленĕ теорие тĕрĕс тата витĕмлĕ никĕслесе панă тесе шутлаççĕ. Самах май каласан, урăх çĕршыври тюркологсен, уйрăмах финн, венгр, нимĕç, швед тата америка тюркологĕсен тĕп наука положенийĕсемпе аргуменчĕсене М.Р.Федотов профессор вырăсла куçарнă, хăйĕн икĕ томпа тухнă "Исторические связи чувашского языка с языками угро-финнов Поволжья и Перьми" (Шупашкар, 1965-1968), виçĕ томлă "Чувашский язык в семье алтайских языков" (Шупашкар, 1980-1986), "Чувашско-марийские языковые взаимосвязи" (Шупашкар,1990) кĕнекисене кĕртнĕ. Çав кĕнекесем тăрăх вулакансем çакна курса ĕненме пултараççĕ: урăх çĕшывсенчи ученăйсем пурте чăвашсен тĕп йăх-несĕлĕ пăлхарсем тесе шутлаççĕ.

Чăваш халăхĕ мĕнле пулса кайса йĕркеленнине кĕскен пăхса тухма тăрăшăпăр. Анчах унччен халăхсем çинчен хăш-пĕр пĕтĕмĕшле кăтартусем илсе парар.

Халĕ çĕр чăмăрĕ çинче пĕтĕмпе 7 миллиарда яхăн çын пуранать. Нацисемпе халăхсем тата йăх ушкăнĕсем 4 пине яхăн. Çав шутра 1 миллион ытла çынла 325 наци пысăккисем шутланаççĕ. Вĕсен

шутне чăвашсем те кĕреççĕ (125-мĕш выранта). 1989 çулта халăх йышне шута илнĕ тарăх, ССР Союзĕнче чăвашсем 1839228 çын шутланаççĕ. Чăвашсен 50 процентне яхăн Чăваш Енте, ыттисем Тутарпа Пушкăрт республикисенче, Самар, Ульяновск облаçĕсенче тата ытти чылай республикăсенче, крайсемпе, облаçсенче пуранаççĕ.

Халăх чĕлхисем питĕ нумай пулин те, вĕсем пурте чĕлхесен хуранташлă 9 çемйине кĕреççĕ. Сăмахран, алтай çемйине тĕрĕк, монгол тата тунгус-манчжури чĕлхисем кĕреççĕ. Тĕрĕк чĕлхисемпе халăхĕсем тесе эпир каркăс, казак, узбек, тува, якут, туркмен, туркă, азербаджан, гагауз, пушкăрт, тутар, чăваш тата ытти чĕлхесемпе халăхсене калатпăр. Чăваш чĕлхи - пăлхар тымарĕнче упранса юлнă пĕртен-пĕр чĕлхе, вăл ытти мĕнпур тĕрĕк чĕлхисенчен ротацизмпа (ытти чĕлхесенчи "з" саса выранне "р" саса каланипе) тата ламбдаизмпа ("ш" саса выранне "л" саса каланипе) уйрăлса тăрать.

Çĕр çинчи çынсем 3 миллион çул каялла Кăнтăр Африкăн тата Инди океанĕн территорийĕнче, кунта тип çĕр тăнă чухне, пулса кайнă, каярахпа çурçĕрелле куçса саралнă. Кавказ леш енне малтанхи çынсем 700 пин çул каялла, Вăтам Атăл тăрăхне 70-80 пин çул каялла килсе вырнаçнă. Ун чухне çынсем авалхи кĕтӳ пек пураннă. Ăрусемпе йăхсем 20-30 пин çул каялла, ăслă çын - Homo sapiens пулса кайсан, йĕркеленнĕ.

Çĕр çинче - ӳт-пӳ тĕлĕшĕнчен виçĕ расса çыннисем: негроидсем, монголоидсем тата европеоидсем пуранаççĕ. Хальхи вăхăтра чăвашсен 10,3 проценчĕ ӳт-пӳ тĕлĕшĕнчен ытларах монголоидсем евĕрлĕ, вĕсенчен 3,5 процента яхăн "таса" монголоидсем шутланаççĕ, 68,6 процент хутăшла монголоид-европеоид шутне кĕрет, чăвашсен 21,1 проценчĕ - тĕрлĕ йышши европеоидсен, кĕре ӳтлисен (вĕсем ытларах), çыра çӳçлисен тата çутă куçлисен йăхĕнчи çынсем. Çакă чăвашсем тĕрлĕ йăхсенчен пулса кайнине кăтартса парать.

Пирĕн эрăчченхи I пинçуллăхра Хĕвеланăç Çĕпĕрĕн пĕр пайне тата Хĕвелтухăç Европăн пĕтĕм çурçĕр пайĕпе вăта пайне, хальхи Эстонипе Финлянди

çĕрĕсем таранах, финн-угор йахĕсем йышанса тăнă. Славян тата балт йахĕсем Польша территорийĕнче, Украинăн, Литван тата Латвин çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнче пуранна. Çĕпĕрĕн кантăр пайĕн, Вăтам Азин анлашĕнче, хальхи Казахстанăн, Анат Аталпа Вăтам Аталăн, Çурçĕр Кавказăн тата Украинăн территорийĕнче çурçĕр иран йахĕсем вырнаçнă. Çĕпĕрте полеоçĕпĕр йахĕсем, Кавказра яфет йахĕсем пуранна. Мĕнпур тĕрĕк халахĕсен несĕлĕсем Центрти Азире пуранна, хунсен йахне кĕнĕ.

VII ĕмĕр вĕçнелле Вăтам Атăл тăрахĕнче мĕнле халахсем пураннине санлакан карта çакăн пек пулнă. Кунта пирĕн эрачченхи V пин çуллахран пуçласа хĕвелтухăç финн йахĕсем - мордва, мари тата удмурт халахĕсен несĕлĕсем пуранна. IV-V ĕмĕрсенче Вăтам Атăл тăрахне Хĕвеланăç Çĕпĕрĕн кантарти районĕсенчен угор (мадьяр) йахĕсем куçса килнĕ. Кама юханшывĕн анат пайне тата хальхи Ульяновск облаçĕн территорине именьковецсем йышăннă, вĕсен йышĕнче III-IV ĕмĕрсенче Днепрăн вăта пайĕнчен куçса пынă хĕвелтухăç славянсем пулнă, вĕсем финн-угор йахĕсемпе чылай хутăшса кайнă пулас.VII ĕмĕр вĕçĕнче тата VIII ĕмĕтре Вăтам Атăл тăрахне тĕрĕк чĕлхиллĕ пăлхарсемпе суварсем пырса кĕнĕ хыççăн халахсем йĕркеленес енĕпе пысăк улшăну пуçланнă.

Пăлхар йахĕсем Çурçĕр Кавказа пирĕн эрари III ĕмĕрте пырса çитнĕ, кунта Центрти Азирен куçса пынă. Вĕсен, çурçĕр иран йахĕсем пуранăкан Вăтам Азин тата хальхи Казахстанăн пушхирĕсем урлă каçса, вăрăм çула чылай вăхăт хушши куçма тивнĕ. Пăлхарсем, суварсем тата барсилăсем Çурçĕр Кавказра иран чĕлхипе калаçакан сармат-алан йахĕсемпе кĕршĕллĕ вырнаçнă, лешсем вĕсене хуçалăх, культура тата общество пурнăçĕ енĕпе самай витĕм кĕнĕ. Вĕсен те, кусен те пĕрешкел археологи культури - салтов-маяцк текен культура йĕркеленнĕ. Пăлхар йахĕсем Çурçĕр Кавказра куçса çĕремесĕр пуранма тытăннă, вĕсем хушшинче малтанхи феодал хутшăнăвĕсем йĕркеленнĕ, патшалăх тытăмĕ (VII ĕмĕрти Асла Болгари тата Савир княжестви) паларма пуçланă. VII ĕмĕрте Аспарух пăлхарĕсем Дунай тăрахне куçса вырнаçнă.

Пăлхарсем сĕм авал Центрти Азире пураннине тата Çурçĕр Кавказри, çаван пекех Дунай тарахĕнчи пăлхарсем чăвашсемпе хуранташла пулнине катартакан этнокультура паллисем сахал мар. Чăваш чĕлхин лексикипе фонетикинче монгол чĕлхипе пĕрпеклĕхсем пулнине (пĕрешкел сăмахсем 900 таран пулнине, икĕ чĕлхере те ротацизм паларнине) тупса палартнă. Çака чăвашсен тĕрĕк чĕлхипе калаçакан несĕлĕсем тахçан Центрти Азире монгол йăхĕсемпе кăршăллĕ пураннине е йăхсен икĕ ушканĕ те пĕрлехи алтай йăхĕнчен тухнине катартса парать. Чăвашсен язычество тĕнĕ чылай енĕпе Саян тата Алтай тарахĕнче пуранакан тĕрĕк чĕлхиллĕ халăхсен авалхи тĕнĕпе пĕр евĕрлĕ пулнă. Çав вăхăтра чăвашсен язычество тĕнĕнче, унăн терминĕсенче те, зороастраизман - иран йăхĕсен, каярахпа патшалăхĕсен тĕнĕн витĕмĕ уççăнах паларать. Чăваш чĕлхинче авалхи иран чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсем сахал мар, яфет чĕлхисенчи уйрăм сăмахсем те пур. Дунай тарахĕнчи пăлхарсен славян чĕлхинче чăваш сăмахĕсемпе пĕрешкел, ротацизмпа паларакан тĕрĕк сăмахĕсем вăтăр таран. Çурçĕр Кавказра, Дунай тарахĕнче пуранакан пăлхарсемпе чăвашсен тумĕсенче те пĕрпеклĕхсем нумай. VII ĕмĕрти Каспи тарахĕнче пуранна суварсен тĕнĕ хайĕн йăли-йĕркипе тата хăш-пĕр туррисен ячĕпе чăвашсен язычество тĕнĕпе пĕрешкел.

Чăваш халăхĕ хушшинче çурекен легендăсемпе халапсем чăвашсем Кавказран Вăтăм Атăл тарăхне куçса пыни çинчен каласа параççĕ.

Вăхăтран вăхăта куçса çурекен пăлхар йăхĕсем Вăтăм Атăл тарăхĕнче майĕпен пĕр выранта пуранма тытаннă. Пăлхарсен пысăкрах пайĕ Кама леш енне вырнаçнă. X ĕмĕр тĕлнелле эсегелсемпе темтюзсем текен пăлхар йăхĕсем Атăлан сылтăм çыранĕнче пуранна. Малтанхи тапхăрта пăлхарсем йăхсен союзне йĕркеленĕ, IX-X ĕмĕрсен чиккинче Пăлхар патшалăхне туса хунă, унта çаван пекех марисемпе удмуртсен çĕрĕсем, мордва тата пушкăрт йăхĕсен хăш-пĕр çĕрĕсем, кунта юлнă мадьярсем кĕнĕ (мадьярсен пысăк пайĕ IX ĕмĕр вĕçĕнче Дунай тарăхне куçса кайнă). X ĕмĕр пуçламашĕнче пăлхарсен ятлă çыннисем ислам тĕнне йышăннă. Мусульман тĕнне

хулара пуранакансем тата ялти çынсен пĕр пайĕ ĕненнĕ. Патшалăх туса хуни пăлхар (авалхи чăваш) халăхĕ йĕркеленессине хăвăртлатнă. Пăлхар халăхĕ кунта килсе çитнĕ тĕрĕк чĕлхиллĕ йăхсемпе çывăхланнă, Именьково хĕвелтухăç славян йăхĕсен юлашкине, выранти финн-угор халахĕн чылай йышла пайне, мадьярсемпе буртассен пĕр пайне ассимиляциленипе пулса кайнă. X ĕмĕрте суварсем (Ибн Фадлан çырнисен Мешехедри алçыравĕнче - сувазсем) малтан ислам тĕнне йышанма килĕшмен. (Чуваш этноним суваз текен йăх ятĕнчен пулса кайнă.) Йăх уйрăмлăхĕсем пĕтсе пынă тата XII ĕмĕр тĕлне пăлхар авалхи чăваш халăхĕ йĕркеленнĕ май, вал халăха Пăлхарта чăваш та тенĕ пулас (Н.И.Ашмарин пăлхарсем хайсене чăваш тенĕ, ытти халăхсем вĕсене пăлхар, тенĕ, тет). Çаванпа та Атăл тăрахĕнчи Пăлхар патшалăхĕнче XII ĕмĕр тĕлне пуранна тĕрĕк чĕлхиллĕ халăха пăлхар-чăвашсем тени выраннă. X ĕмĕрте - XIII ĕмĕр пуçламашĕнче тĕрĕк чĕлхиллĕ халăх (пăлхар-чăвашсем), Кама леш енче, хальхи Тутар республикин кăнтăрти районĕсемпе Самар облаçĕн территорийĕнче, çаван пекех хальхи Ульяновск облаçĕн территорийĕнче, Чăваш республикин кăнтăр тата кăнтăр-хĕвелтухăç районĕсенче пуранна.

Археологи тĕпчевĕсем кăтартса пана тăрăх, Атăл тăрахĕнчи пăлхарсен X ĕмĕрти - XIII ĕмĕр пуçламашĕнчи хуçалăх япалисем, ĕç хатĕрĕсем, çурт-йĕр, пурлăх культурипе çыхăннă ытти япаласем чăвашсен XVI-XIX ĕмĕрсенчи пурлăх культурипе нумай енчен пĕр евĕрлĕ. Самахран, чăвашсен тĕренпе каскăчла акапуçĕ пăлхарсен плугĕпе пĕтĕмпех пĕр пек. Чăвашсем çĕрĕç культурине X-XIII ĕмĕрсенчи пăлхарсенчен йышăннă. Пăлхарсен ялĕсем, чăваш ялĕсем пекех, юханшывсем çывăхĕнче, айлăмсенче пулнă, вĕсем пĕр выранта йĕри тавралла урамсем туса вырнаçнă. Пăлхарсемпе чăвашсем кил-çурта çăварасси те пĕр евĕрлех пулнă. Чăвашсен тăвата кĕтеслĕ пури пăлхарсен тăмран туна кăмакалла таваткал çурт пурине аса илтерет. Пăлхарсен те, чăвашсен те саман çуртсем, çулла уçă курмалли шалаш - лаç тата ытти те пулнă. Атăл тăрахĕнчи пăлхарсемпе чăвашсен хут çине çырса хăварнă тăрăх тупнă тата бесер-

мянсен япалисемпе танлаштарса пăхнă тумĕсем, пуçа тăхăнмаллисем, тĕрлĕрен эрешсем пĕр пек пулни уйрăмах лайăх паларать. Пăлхарсенчен пулса кайни бесермянсен касса çĕленĕ кĕпе-тумтирĕ, тĕррисем, пуçа тăханмаллисем тата вĕсен хаш-пĕр ячĕсем чăваш халăхĕнни майлах. Чăвашсемпе пушкартсен авалхи пуçа тăханмалли хатĕрĕсем (тухья - тыкыя, хушпу - кашбау, сурпан - тастар) тата ытти нумай япала пăлхарсем вăхăтĕнчи пĕр тĕпрен пулса кайнă. Хусан тутарĕсен пурлăх культуринче те пăлхарсенчен йышăнна пирĕннипе пĕр евĕрлĕ элементсем пур. Пăлхарсемпе чăвашсем паявласа юпа тĕрри тĕрленĕ. Мусульман тĕнне йышăниччен пăлхарсем вилнисене язычество тĕнне тытса пыракан чăвашсем пекех пĕрешкел йăлапа пытарнă. Чăваш тĕррисенче упранса юлнă пуян орнамента пăлхарсем Вăтам Атăл тарăхне пырса çитиччен çурçĕрти иран халăхĕсенчен йышăннă, вăл çав выранти йăхсем хушшинче саралнă пулнă.

Пăлхарсемпе чăвашсем хушшинчи пĕрешкел енсем чĕлхере уйрăмах лайăх паларăççĕ. IX ĕмĕр вĕçленичченвенгрсем (мадьярсем) чылай вăхăт хушши пăлхар йăхĕсемпе тачă çыхăну тытнă. Çав тапхăртан пуçласа венгрсен чĕлхинче чăваш сăмахĕсемпе пĕр евĕрлĕ 600 яхăн пăлхар сăмахĕ упранса юлнă. VIII ĕмĕртен пуçласа XIII ĕмĕрччен Пăлхар йăхĕсен союзĕнче тата Атăлçи Пăлхар патшалăхĕнче пулса, марисем чăваш сăмахĕсене 1.500 яхăн, удмуртсем 500 таран, коми-пермяксем 300 ытла йышăннă. И.Г.Добродомов, чăваш сăмахĕсемпе уса курса, вырăс чĕлхинче тата ытти славян чĕлхисенче пăлхар чĕлхинчен илнĕ 300-е яхăн сăмах тупса палартнă.

XIII ĕмĕрте монголсем тапанса кĕни, Пăлхар патшалăхне пĕтерсе хуни тата унăн территорине Ылтăн Уртапа пĕрлештерни пĕрлĕхлĕ пăлхар халăхĕ йĕркеленнессине чарса лартнă, çакăн хыççăн Вăтам Атăл тарăхĕнче тĕрĕк чĕлхиллĕ икĕ халăх - чăвашсемпе Хусан тутарĕсем пулса тăнă. Монголсем пăхăнтарнă май чăваш халăхĕ йĕркеленмелли пĕрремĕш тапхăр вĕçленнĕ, хайĕн аталанăвĕнче вăл иккĕмĕш тапхăра кĕнĕ.

Çакна палартмалла: XIII ĕмĕр пуçламăшĕнче Чин-

гисхан хайне тӗрӗк чӗлхипе калаçакан вайлă тутар йăхӗсене пăхăнтарнă. Чингисханпа унăн ывăлӗсен похочӗсенче тутарсем малти ретре пулнă. Çаванпа та Европăра монголсене те тутарсем тенӗ.

1243 çулта пулса тăнă Ылтăн Уртана Бату-хан Дешт-и-Кыпчака, урăхла каласан, Иртышран пуçласа Дунай айлăмне çитиех саралса выртакан Кыпчак çеçенхирне, Çурçӗр Кавказа, Крыма, Атăлçи Пăлхара, Урал тăрăхне тата Хорезма кӗртнӗ. Дешт-и-Кыпчакра хӗвелтухăç кыпчаксем куçса çӳренӗ, çапăçма юратакан хӗвеланăç кыпчаксем (половецсем) те куçса çӳресе пуранна, вӗсем Хӗвелтухăç Европăна XI ӗмӗрте пырса çитнӗ. Ремесла ӗçӗ тата суту-илӳ тавакан аталанна хуласем тытнă хӗвеланăç кыпчаксем Ылтăн Уртан тĕп çар вайӗ шутланнă. Монголсем Уртара хӗвеланăç кыпчаксемпе пӗрлешсе кайнă, хăйсен наци паллисене çухатнă. XIV ӗмӗрӗн пӗрремӗш çурринче пуранна араб авторӗ Ал-Омари çырнă тăрăх, монголсем Уртара пурте "кыпчаксен çӗрӗ çинче пуранма тытăнна май кыпчаксем пскех пулса кайнă, вӗсем машăрланнă". XIV ӗмӗр пуçламăшĕнче хӗвеланăç кыпчаксем те хăйсене тутарсем теме пуçланă, Уртара кыпчак-тутар чӗлхи патшалăх чӗлхи, ислам-патшалăх тӗнӗ пулса тăнă. Кыпчак-тутар чӗлхи ун чухне тӗнчери халăхсем хутшăнмалли чӗлхе шутланнă. Пӗтӗмӗшлӗ тутар халăхӗ Ылтăн Уртара XIV-XVӗмӗр пуçламăшĕнче çитĕнсе çитнӗ, вӗсен шутне пăлхарсем хуштăнман.

Ылтăн Урта пулса тăнă хыççăн Атăлçи Пăлхар территорийӗ Уртана тăрантарса усракан, куçса çӳремесĕр пуранмалли тĕп выран пулнă. Пăлхар хули малтанхи вăхăтра Уртан тĕп хули пулса тăнă. Пăлхарта XIII ӗмӗрӗн 40-мӗш çулĕсенчен пуçласа XIV ӗмӗрӗн 30-мӗш çулĕсем таранах Ылтăн Урта укçисене каларнă, 1270 çулччен вӗсене пĕр çаванта çеç хатĕрленӗ. Тĕп хулана Сарайне куçарнă май, Пăлхар хули XIV ӗмӗрте Ылтăн Урта ханĕнсен çуллахи резиденцийӗ шутланнă.

Пăлхар хулисене хăш-пĕр тутар-кыпчаксем вырнаçса пуранма тытăнна. Анчах XIII-XIV ӗмӗрсенче Пăлхар çĕршывĕнче тутар-кыпчаксем халăхăн çӳлти сийĕсенче те сахал пулнă, çакна масар çинчи чул палăксем кăтартса

параççĕ (вĕсем 200 ытла упранса юлнă), çав палăксен 90 процентне чăваш сăмахĕсемпе (ротацизм), 10 процентне çеç тутар сăмахĕсемпе (зетацизм) çырнă. Çав сăмахсем чăваш сăмахĕсемпе лексика тĕлĕшĕнчен çеç мар, грамматика формисемпе те пĕрешкел. XV ĕмĕртен пуçласа эпитафисенче тутар сăмахĕсене кăна куратпăр. М.Р.Федотов 1990 çулхи ноябрĕн 20-мĕшĕнче "Советская Чувашия" хаçатра пичетлесе кăларнă "Болгары (булгары) в нашей истории" статьяра чăвашсем тата вĕсен чĕлхи мĕнле пулса кайни çинчен вырăс тата урăх çĕршывсен учĕнайĕсем каланисене илсе кăтартать. Анчах М.Р.Федотов XV ĕмĕртен пуçласа пăлхар чĕлхи пĕтсе ларнă тенипе килĕшме çук. Пăлхар чĕлхи халĕ чăваш чĕлхинче пуранать.

XIII ĕмĕрĕн 30-40-мĕш çулĕсенче, Кама леш енчи хуласемпе ялсене монголсем аркатса такнă май, пăлхар-чăваш халăхĕн пĕр пайĕ Хусан çывăхĕнчи, Хусан леш енчи варманла вырансене, тепĕр пайĕ Атăлăн сылтăм çыранĕ тăрăхне куçса пынă. XIV ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче - XV ĕмĕр пуçламăшĕнче Ылтăн Урта ханĕсемпе эмирĕсем, Тамерлан (1391 тата 1395 çулсенче), ушкуйниксем, çаван пекех вырăс кнеçĕсем юлашкинчен Едингей кнеçĕн Мангыт Юрчĕ /каярахпа ăна Нухай Урти тенĕ/ Пăлхар çĕршывĕн 32 хулипе 2000 яхăн ялĕсене юхăнтарса хăваранă, темĕн чухлĕ халăха вĕлерсе пĕтернĕ е тытăна илсе кайнă. Чĕрĕ юлнă пăлхар-чăвашсем Кама леш енчен Хусан çывăхне тата Хусан тепĕр енне куçнă, хăшĕсем Атăл тăрăхĕнчи Чăваш çĕршывĕн центрти тата çурçĕрти районĕсене пырса çитнĕ. Сылтăм çыран тăрăхĕнчи халăх хальхи Ульяновск облаçĕн территорийĕнчен, Тутарстанăн кăнтăр-хĕвеланăç районĕсенчен, Чăваш Енĕн кăнтăр тата кăнтăр-хĕвелтухăç районĕсенчен Сĕве юханшывĕн анат енне, Чăваш çĕршывĕн вăта пайне, çурçĕр-хĕвелтухăçне тата пысăкрах ушкăнпа çурсĕр-хĕвеланăçне пырса вырнаçнă. Кама леш енĕ тата Атăлăн сылтăм çыранĕнчи пушанса юлнă вырансем "тискер уй" /"дикое поле"/ е çара уй пулса тăнă. XIII ĕмĕрте - XV ĕмĕр пуçламăшĕнче монгол-тутарсем пĕтĕм пăлхар-чăваш халăхĕн пилĕк пайĕнчен тăватă пайне яхăн тĕп тунă. Кама леш енче 1262 пăлхар палăкĕ, сылтăм çыранри çаралса юлнă вырансенче

400 ытла палăк тупса палăртнă. Пăлхар-чăвашсем, тĕпрен илсен, икĕ выранта: сылтăм çыранра, ытларах Атăлпа Сăр хушшинчи вăрман тăрăхĕсенче, кăнтăр енчи Кĕтне тата Кире юханшывĕсем таран; Хусан çывăхĕнчи тата Хусан леш енчи вырансенче /кунта кыпчак - тутарсем те йышлă пулнă/ пуранма тытăннă. Чăвашсем пуранакан выран Хусантан пуçласа хĕвелтухăçнелле, Кама юханшывĕ таранах тăсалнă. Чăвашсем Сĕве юханшывĕн тури тата вăта пайĕнчен, Сĕве юханшывĕн вăта тăрăхĕпе Сăр юханшывĕн вăта тăрăхĕ-хушшинчен, Кама леш енчен хальхи Чăваш Енĕн центрти тата çурçĕрти районĕсене пуранма куçни çинчен халăхра сахал мар халап çурет. Билярти Валем хуçа киремечĕсем пĕтĕм Чăваш çĕршывĕпех анлăн сарални тата сайрарах тĕл пулакан Чукету /Жукотин/ киремечĕсем те пăлхар-чăвашсем сулахай çырантан - Биляр тата Жукотин районĕсенчен куçса килни çинчен калаççĕ.

XV ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринче арканнă Ылтан Урта выранне 1438 çулта Хусан ханстви йĕркеленнĕ хыççăн кыпчак-тутарсем Вăтам Атăл тăрăхне йышлăн куçма тытăннă. Хусан ханствине никĕсленĕ Улук-Мухаммед Хусана тутарсен 40-50 пин çынран тăракан çарне илсе пынă, çавна май ханствăна часах Ылтан Урта центрĕнчен Аçтăрхантан, Азов тăрăхĕнчен, Крымран тутарсем пуханма пуçланă. Хусан тутарĕсен чĕлхипе культури кыпчаксенни пекех. XIV ĕмĕрте кыпчак чĕлхи тĕнчере усă куракан чĕлхесенчен пĕри пулнă. 1303 çулта Италири пĕр купца кыпчак чĕлхин словарьне - "Куманикус кодексĕ" туса хатĕрленĕ. Çав словаре шута илсен, ун чухнехи кыпчак чĕлхи хальхи тутар чĕлхипе пĕтĕмпе тенĕ пекех пĕрешкел. Хусанта пуранакан ученăй чĕлхеçĕ Л.М.Махмутова 1982 çулта çакна палăртнă: "Куманикус кодексĕнчи" сăмахсен 80 проценчĕ хальхи Хусан тутарĕсен чĕлхинче упранать. Атăл тăрăхĕнчи мишăр тутарсен тепĕр ушканĕ, çырса хăварнисенче палăртнă тăрăх, XV-XVI ĕмĕрсенче Мещерара, Мускава пăханса тăракан Касим ханствинче, пăлхарсемпе хутшăнмасăр, Мещерăри финн-угорсен пĕр пайĕ /мещерсен пысăк пайĕ вырăссемпе пĕрлешнĕ/ Ылтан Урта центрĕнчен куçарса пынă кыпчак-тутарсемпе ассимиляциленнĕ

май йĕркеленнĕ. Нухай, Крым, Аҫтăрхан тата Çĕпĕр тутарĕсем те пăлхарсемпе хутшăнмасăр йĕркеленнĕ. Тутарсен тĕрлĕ ушканĕсем пĕр-пĕринчен уйрăлса тăмаççĕ, çака пăлхарсем тутар халăхĕ йĕркеленес ĕçре нимĕнле витĕм те кӳменнине катартса парать.

Чăваш халăхĕ йĕркеленнĕ юлашки, иккĕмĕш тапхăрĕ тулаш енчен витĕм кӳресси ӳснĕ, пурнăç йывăрланса пынă тата çынсен ирĕксĕрех урăх вырăнсене куçса кайма тивнĕ условисенче пулса иртнĕ. Çак тапхăрта пуç пулмалли тата паханмалли хутшăнусем, тĕн уйрăмлахĕсем тĕп выранта тăнă. Чăвашсем XVI ĕмĕр пуçламашĕ тĕлне хальхи Чăваш Ен территорийĕн центрти тата çурçĕрти районĕсенче те, Хусан çывăхĕнчи тата унăн леш енчи районĕнче те кыпчак-мусульмансемпе ассимиляциленмен тĕрлĕ турра ĕненекен пăлхар-чăвашсем финн-угорсемпе, уйрăмах марисемпе иккĕмĕш хут хутшăнна май йĕркеленнĕ. Ут-пӳ енчен, пурлăх тата ăс-тăн культури тĕлĕшĕнчен чăвашсен, уйрăмах тури чăвашсен пурнăçĕнче мари халăхĕн паллисем чылай тĕл пулаççĕ. XVI ĕмĕрти - XVII ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринчи документсем катартнă тăрăх Хусан çывăхĕнчи тата унăн леш енчи чăвашсен шăпи урăхларах килсе тухнă. Вĕсенчен нумайашĕ XVI-XVII ĕмĕрсенче Чăваш çĕршывне, XVII ĕмĕрте Кама леш енне пуранма куçнă. Выранта юлнисем тутар халăх йышне кĕнĕ. Чăваш халăхĕ, тĕпрен илсен, пăлхарсенчен йĕркеленсе аталаннă, вĕсен р-л сасăллă чĕлхи тата ытти этнокультура паллисем пăлхарсенчен юлнă. Чăваш халăхĕ пăлхарсенчен тымарланса вăй илнĕ май - пăлхарсем XIII ĕмĕр пуçламашĕччене этнос пулса чăмартанна пĕрлĕхлĕ халăх пулнăран,- чăвашсен чĕлхи, пĕрешкел культурипе йăлисем пăлхарсемпе пĕрешкел, йăх уйрăмлахĕсем пулман. Азин центрти пайĕнче пурăнна авалхи пăлхарсем монголоидсем пулма пултарнă пулсан, Атăлпа Кама тăрăхне пырса çитиччен Çĕпĕрĕн кăнтăр пайĕнчи европеоид-динлинсемпе хутшăнса пуранни, çурçĕрти иран йăхĕсемпе, уйрăмах сармат-алансемпе çыхăну тытни вĕсенче европеоид паллисене чылай аталантарнă. Вăтам Атăл тăрăхĕнче пăлхар йăхĕсем Именьково культурине тытса пынă хĕвелтухăç славян йăхĕсен юлашкисемпе тата хĕвелтухăç финн йăхĕсемпе хутшăнса кайнă, çака вĕсенче

европеоид паллисем аталанассине вăйлатнă. Чăваш халахĕ йĕркеленсе çитнĕ хыççăн та туçи марисен хăш-пĕр пайĕ, вырăссемпе тутарсен йышлă мар ушканĕ чăвашсен шутне кĕрсе пынă.

VIII-XVI ĕмĕрсенче сахал мар пăлхар-чăваш-мари тата удмурт халăхĕсен йышне кĕнĕ. Йышлăрах шутланакан мари тата удмурт халăхĕсем хушшинче пуранна пăлхар-чăвашсем майĕпен хăйсен йăх паллисене çухатса пынă, марисем тата удмуртсем пулса тăнă. Хăш-пĕр ученăйсем марисене финн-çурматĕрĕксем теççĕ.

Çакна палăртмалла: вырăссем XV ĕмĕрччен Вĕтле /Ветлуга/ тата Сăр юханшĕвĕнчен хĕвелтухăç еннерехри территорие "черемиссем" /марисем/ пуранакан выран тесе пĕлнĕ. XIV ĕмĕрте - XV ĕмĕр пуçламăшĕнче марисен пĕр пайне ассимиляцилесе, тепĕр пайне хĕссе каларса хальхи Чăваш республикин пĕтĕм территорине чăвашсем йышăннă хыççăн вырăс летописецĕсемпе чиновникĕсем XVI-XVII ĕмĕрсенче те Сăр юханшывĕн анат пайĕнчи хĕвелтухăç еннерех пуранакан çынсене, йăлана кĕнĕ тăрăх, "туçи черемиссем" тенĕ, тĕрĕссипе вара туçи марисем вăл вăхăталла çак юханшыван варринчен хĕвелтухăçнелле пысăках мар территори кăна йышăнса тăнă. А.М.Курбский кнеç хăйĕн "История о великом князе Московском" кĕнекинче, вырăс çарĕсем 1552 çулта Хусана походпа кайни çинчен çырса катартса, çакна палăртнă: "Егда же переплавишася Суру реку, тогда и Черемиса Горняя, а по их Чуваша зовомые, язык /ку сăмах ун чухне "халăх" тенине пĕлтернĕ. - В.Д./ особливый, начаша встречати по пяти сот и по тысяще их, аки бы радующеся цареву пришествию". А.М.Курбский çапла аңлантарать: вырăссем йăлана кĕнĕ тăрăх туçи черемисĕсем тенĕ çынсем, тĕрĕссипе, хăйне евĕр халăх, чăваш халахĕ. Чăвашсене "туçи черемисĕсем" тенĕ тĕслĕхсем çинчен эпир "О значении этнонима "черемисы" в русских и западноевропейских источниках XVI - начала XVIII веков" тĕпчев ĕçĕнче /"Чувашия в эпоху феодализма" кĕнекере. Шупашкар, 1986/ аңлантарса паначчĕ.

Хусан ханствинче пуранна тапхăрта чăвашсем Хусан ханĕсемпе тутар феодалĕсен пусмăрне хирĕç

пĕрмаях кĕрешнĕ. 1546 çулта вĕсем пăлхав çĕкленĕ, вырăс çарĕсене хăйсене пулăшма чĕннĕ. Ун чухнех Чăваш çĕршывĕ ханăн хĕçпăшалла вăйĕсенчен тата администрацирен тасалнă.

1551 çулта чăвашсем мирлĕ майпа, пуç çапса /ыйтса/ Российăпа пĕрлешнĕ. Мускав патши IV Иван вĕсене ылтăн пичет çакнă грамота панă. 1552 çулта чăвашсем вырăс çарĕсене Хусана тытса илме пулăшнă. Чăвашсем 440 çул хушши Российăпа пĕрле пуранаççĕ. Çак вăхăт хушшинче вырăс халăхĕ унăн этнокультурине аталантарма сахал мар витĕм кӳчĕ.

Пирĕн хамăран авалхи пурнăçа тӳрĕ кăмăлпа катартса памалла, Ватăм Атăл тăрăхĕнчи халăхсен историйĕ çинчен тĕрĕссине кăна çырмалла. Тĕп-тĕрĕс фактсем çакна çирĕплетсе параççĕ: Атăлçи пăлхарĕсен тĕп йăхĕсем чăвашсем пулса тараççĕ. Вĕсем хăйсен йышне çурçĕр иран, хĕвелтухăç славян, финн-угор çыннисене, ытларах марисене сахал мар йышăннă. Тутарсем вара, каларăмăр, монголсемпе килнĕскерсем, тĕрĕк чĕлхипе калаçаканскерсем, кыпчаксемпе хутшăнса пулса кайнă. Хусан тутарĕсем хăйсен йышне пăлхар-чăвашсен, марисен, удмуртсен пĕр пайне пĕрлештернĕ.

Монгол-тутарсем виçĕ ĕмĕр хушши пусмăрласа пураннă чухне чăвашсем хăйсен йышне пилĕк пайран тăватă пая яхăн тата хăйĕн территорине вунă пайран тăхăр пай чухлĕ çухатнă пулсан, Раççейре тăватă ĕмĕр ытла пуранса, чăваш халăхăн йышĕ вунă хута çити, унăн территорийĕ виçĕ-тăватă хут ытла ӳсрĕ. Чăвашсем XVI ĕмĕр варринчен пуçласа вырăс, мордва тата тутар хресченĕсемпе пĕрле Ватăм Атăл тăрăхĕнчи çара уйсенче, Урал çывăхĕнчи кăнтăр енчи ирĕклĕ çĕрсем çинче тата çĕршыван ытти облаçĕсенче, унта куçса кайса, ялсем тăва-тăва лартнă. XVI ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче - XVII ĕмĕрте чăвашсем хальхи Чăваш Енĕн кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнче тата хальхи Ульяновск облаçĕн пысăк пайĕнче, XVII-XVIII ĕмĕрсенче Тутарстанăн кăнтăрти районĕсенче тата Самара облаçĕн çурçĕрти районĕсенче, Пенза тата Саратов облаçĕсенчи чылай выранта ялсем туса лартнă. Пушкăртстана тата Оренбург крайне пуранма куçнă. XIX-XX ĕмĕрсенче чăвашсем çĕршыван хĕвелтухăç районĕсене, Çĕпĕре тата Инçет Хĕвелтухăçне пуранма йышлăн куçнă.

Ч-37093
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Патша правительстви тата провослави тĕнĕ вырăс мар халăхсене тăван чĕлхене шута илмесĕр выраслатас политика тытса пыни нимĕн те паман. Революцичченхи тапхăрта чăвашсем вырасланни питех пулман. Чăвашсен наци культури юлашки вăхăтченех тасан упраннă. Вăл, генетикăллă çыхăнусене пула мари культурипе, çăвăн пекех вырăс тата тутар культуриссмпе пуянланнă.

Фактсемпе кăтартусем çакăн пек шутлама май параççĕ: XIX-XX ĕмĕрсен чиккинче чăваш нацийĕ йĕркеленсе çитнĕ. Унăн тĕп паллисем литература чĕлхин шайне çити аталаннă чăваш чĕлхи тата наци культури пулса тăраççĕ. Чăваш нацийĕн чĕлхе тата культура пĕрлĕхне çирĕплетме халăхăн пысăк пайĕ пĕр территорире пуранни, ăна экономика çыхăнăвĕсем пĕрлештерсе тăни лайăх майсем туса паче. Наци шутне, паллах, Раççейре пуранакан мĕнпур чăвашсем кĕреççĕ. Ытти чылай нацисемпе халăхсем пекех, чăвашсем ĕçчен, сăпайлăх тĕлĕшĕнчен таса пулнипе, ытти наци çыннисемпе тусла çыхăну тытнипе паларса тăраççĕ. Чăвашсем çичçĕр çула яхăн наци пусмăрĕ айĕнче пуранна, вĕсем хушшинче чи лайăххисене пĕтерсе пына, пĕтĕм халăха хура халăх туса хунă май, нацин пĕр пайĕн психологийĕпе шухăш-кăмăлĕнче наци нигилизмĕн паллисем çирĕпленнĕ.

(Тăван Атăл. 1992. 9-10№)

ЧĂВАШ ПАТШАЛĂХĔ МĔНЛЕ ПУЛСА КАЙНĂ

Чăвашсен авалхи тĕп несĕлĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе пурăнакан огур - пăлхар тата сабир /савир, сувар, суваз/ - йăхĕсем пирĕн эрăчченхи I пинçуллăхра тĕрĕк йăхĕсем вырнаçнă тавралăхăн хĕвеланăç пайне йышăннă, Иртыш юханшывĕн тури бассейнĕнче куçса çӳренĕ. Пирĕн эра пуçламăшĕнче вĕсем ытти тĕрĕксенчен уйрăлса кайнă, кантăртан çурçĕрелле /çуркунне/ тата çурçĕртен кантăралла /кĕркунне/ урлă-пирлĕ куçса çӳресе, Семиречье тăрăх хĕвеланăçнелле тата хальхи Казахстан çеçенхирĕсем патне пырса тухнă. Çавăн пек куçса çӳресе икçĕр çула яхăн иртнĕ. II-III ĕмĕрсенче вĕсем Çурçĕр Кавказра иран чĕлхиллĕ алансемпе сарматсем хушшинче пурăнма тытăннă /сăмах май каласан, Птоломей Çурçĕр Кавказри савирсем çинчен пирĕн эрăри II ĕмĕрте асăнать, пирĕн эрăри III ĕмĕрти Сири писателĕ Мар-Абас-Котина Кавказри пăлхарсем çинчен çырать/. Пăлхарсем те, савирсем те чăваш чĕлхине çывăх чĕлхепе калаçнă: вĕсем ытти тĕрĕк чĕлхисенчи "з" саçă выраннe "р" саçă /ротацизм/, "ш" выраннe "л" /ламбдаизм/ калăнă. Сăмахран, тогуз-тăхăр, кемеш-кĕмĕл.

Пăлхарсемпе /оногурсемпе/ суварсем кунта пилĕкçĕр çула яхăн пурăннă, пĕр выранта тĕпленсе пурăнма тата çĕр ĕçне тума хăнăхса пынă. Кăнтăр Çĕпĕрти, Вăтам Азири, хальхи Казахстан çеçенхирĕсенчи çурçĕр иран йăхĕсем, уйрăмах Çурçĕр Кавказри сарматсемпе алансем пăлхарсемпе суварсене хуçалăх, культура тата общество енĕпе чылай витĕм кӳнĕ. Чăвашсем хĕрарăмсен пуçа таханса çӳремелли япалисене /тухъяна, хушпăва, сурпана/,чылай йышши кĕпе-тумтире, тĕрĕсене çурçĕр иран йăхĕсенчен илнĕ. Чăвашсен язычество йăли-йĕркки чылай енĕпе тĕрĕк чĕлхиллĕ йăхсен тата Саянпа Алтай тăрăхĕнчи халăхсен авалхи тĕнĕпе пĕр евĕрлĕ пулин те, унта, йăла-йĕрке терминĕсенче те, зороастримзм - иран йăхĕсен, каярахри тапхăрта вĕсен патшалăхĕсен авалхи тĕнĕ пысăк витĕм кӳни лайăх палăрать. Чăваш чĕлхине сахал мар иран сăмахĕ кĕнĕ.

Çурçĕр Кавказра авалхи чăваш йăхĕсен тĕрĕк чĕлхиллĕ гунсем, аварсем, хазарсем тата ют çĕрсене

хапсанакан ытти халăхсем тапанса кĕнине тӳсме тивнĕ. VII ĕмĕрĕн 30-60-мĕш çулĕсенче Асла Пăлхар пĕрлешĕвĕ вай илнĕ, вăл Каспирен пуçласа Азов тинĕсĕ таран сарăлса выртнă. Унта тĕрлĕ йăхсен пилĕк союзĕ кĕнĕ. Çак пĕрлешĕве Кубрат çулпуç йĕркеленĕ. Вăл вилнĕ хыççăн Асла Пăлхар хазарсем хĕснипе арканнă. VII ĕмĕртех Дагестан территорийĕнче Варачан хули тавра суварсен княжести пулнă. Анчах вĕсем чăн-чăн чăваш патшалăхĕ пек йĕркеленсе çитеймен-ха.

VII ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсенче хĕвеланăç пăлхарсем йăх пуçĕ Аспарух, Кубрат ывалĕ, ертсе пынипе Дунай тăрăхне куçса кайнă, унта Дунай Пăлхарне туса хунă. Çаван чухнех "кĕмĕл пăлхарсем" текен йышăлă йăхсем тата пăлхарсен берсула /берсилсем/ йăхĕ Атăл-Кама тăрăхне куçса вырнаçнă. Хăш-пĕр историксем шутланă тăрăх, "кĕмĕл пăлхарсене" Кубратăн иккĕмĕш ывалĕ Котраг ертсе пынă. Суварсем VII ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенчен пуçласа VIII ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсемччен Хазар каганатне кĕнĕ, 732-737-мĕш çулсенче вĕсен çĕрĕсем çине арабсем тапанса кĕнĕ хыççăн пысăкрах йышпа Каспи таврашĕнчи çеçенхирсенчен Ватам Атăл тăрăхне куçса кайнă. Вĕсем пăлхарсемпе юнашар вырнаçнă. Пăлхарсемпе суварсем кунта пирĕн эрăчченхи IV пинçуллăхран тытăнсах пураннă хĕвелтухăç финн йăхĕсем, уйрăмах мари йăхĕсем, çавнашкалах IV-V ĕмĕрсенче Хĕвеланăç Çĕпĕртен Хăнтăрчапа Çăрăмсан бассейнĕсене пуранма куçнă угор /венгр/ йăхĕсем тата Именьково культурин йăхĕсем - III-IV ĕмĕрсенче Днепран ватам тăрăхĕнчен куçса пынă, Каман анат пайĕнче тата хальхи Ульяновск облаçĕн территорийĕнче хăйсем валли выран тупнă хĕвелтухăç славянсем /Именьково культурин йăхĕсен пысăкрах пайĕ каярахпа Днепр тăрăхне тавраннă/ хушшине пырса тухнă.

VIII ĕмĕрте Ватам Атăл тăрăхĕнче тĕрлĕ йăхсен Пăлхар союзĕ йĕркеленнĕ, унта сувар тата выранти финн йăхĕсем - марисен, удмуртсен, хĕвелтухăç мордвасен, коми-пермяксен йăхĕсем, çаван пекех венгрсем, ун чухнехи огуз чĕлхиллĕ куçса çӳрекен пушкăртсен пĕр пайĕ тата именьковсен-славянсен юлашкисем кĕнĕ, çав союзра пăлхарсем пуç пулса тăнă.

Аякран пынисемпе выранти халăх мирлĕ, килĕштерсе пуранна. Çăлкуçсенче пăлхар-сувар тата финн-угор йăхĕсем хушшинче мĕнле те пулин тытăçусем пулса иртни çинчен калакан нимĕнле факт та çук, летописсенче пăлхарсемпе буртассем хушшинче тытăçусем пулни çинчен асăнни çеç тĕл пулать. Йăхсен Пăлхар союзĕ Хазар каганатне паханса тăна, ăна хырçа туленĕ.

Ватам Атăл тарăхĕнчи пăлхарсемпе суварсен йăхĕсем, вĕсем хушшинче куçса çуренĕ чухнехи йăла-йĕрке юлашкисем чылай вăхăт упранна пулин те, пĕр выранта пуранма тытăнна. Вĕсен пысăкрах пайĕ Атăлăн сулахай çыранĕ енче, Камăн анат пайĕнчен кантăрарах вырнаçна. Эсегелсемпе темтюзсен пăлхар йăхĕсем Атăлăн сылтăм çыранĕ енче пуранна.

Атăлçи Пăлхар çĕршывĕн мĕнпур çĕрĕсене пĕр патшалаха пĕрлештересси Шилка ывалĕ Алмас /Алмуш/ эльтебер /халăх çулпуçĕ, патша/ ертсе пынă тапхарта пулса иртнĕ. Алмуш 895 çултан пуçласа 925 çулччен патшара ларнă. 895-мĕш çула шăпах ĕнтĕ чăваш патшалăхĕ йĕркеленме пуçланă çул теме пулать. Алмас хыççăн Микаиль, Наср, Талиб, Мумин Шамсун, Хайдар, Сагид, Бурадж, Ибрагим, Султан--Мурат, Ильгам Атăлçи Пăлхар патшисем пулнă. Юлашки патша 1236 çулта вилнĕ. Атăлçи Пăлхар çĕршывĕ Ватам Атăл тарăхĕнче пысăк территори йышăннă, кантăр енчен Самар Пĕккинчен пуçласа çурçĕрелле Вятка юханшывĕ таран, хĕвелтухăçĕнчен Камăн ватам пайĕнчен пуçласа хĕвеланăçнелле Сăр юханшывĕ таран саралса выртнă. Пăлхарсемпе суварсен /Ахмед ибн-Фадлан X ĕмĕр пуçламăшĕнче вĕсене сувазсем тенĕ/ пысăк пайĕ хальхи Самарпа Ульяновск орблаçĕсен территорийĕнче, Пенза облаçĕн хĕвелтухăç пайĕнче, Тутарстанăн Кама юханшывĕн леш енчи тата кăнтăр-хĕвеланăç районĕсенче, Чăваш Республикин кăнтăр-хĕвелтухăç районĕсенче пуранна. Атăлçи Пăлхар çĕршывне мари, удмурт, коми-пермяк, çурçĕр партас, хĕвелтухăç ирçе тата хĕвеланăç пушкăрт çĕрĕсем кĕнĕ. Вĕсенче выранан--выранан пăлхарсен çирĕплетнĕ е уçа ялĕсемпе хулисем /колонийĕсем/ пулнă.

IX ĕмĕр вĕçĕнче венгрсен пысăкрах пайĕ Дунай тарăхне куçса кайса вырнаçнă, унта хăйсен патша-

лăхне туса хуна. Венгрсен пĕр пайĕ Аталçи Пăлхар çĕршывĕнчех юлна. Палла ĕнтĕ, 1235-мĕш çулта вĕсем патне венгрсен доминиканецĕ Юлиан монах пырса кайнă. Выранти пăлхарсемпе сувазсем пĕрлешнипе, финн-угор йăхĕсем, именьковсен юлашкисем тата партассемпе пушкартсен пысăках мар пайĕ вĕсемпе пĕрлешсе ассимиляциленнипе XII ĕмĕр тĕлне пĕрлĕхлĕ пăлхар халăхĕ /авалхи чăваш халăхĕ/ пулса тăнă. Араб чĕлхипе çырнă "суваз" сăмаха çаван чухнех пăлхарла "сювазь" тенĕ пулас. Çак сăмаха каярахпа "чăваш" теме тытăнна. Çак пĕрлĕхлĕ халăха пăлхар-чăвашсем тени питех те выранла.

XII ĕмĕрĕн варрине çитиччен Аталçи Пăлхар çĕршывĕн тĕп хули Атăл хĕрринче Кама варринчен инçех мар вырнаçнă Пăлхар, XII ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче - XIII ĕмĕр пуçламăшĕнче вара Пулер /Биляр/ пулнă. Кунсăр пуçне Утка хĕрринче Сувар, Атăлăн сылтăм çыранĕ хĕрринче Ошель, Кама хĕрринче Жукотин /Чукету/, Балымер, Кошан, Тухчин, Торцск тата ытти хуласем пулнă. Вĕсене юман хăмисем тытса çаварнă. Çав хуласенчи пуртсемпе çуртсене йывăçран тунă. Аталçи Пăлхар территоринче чул çуртсене XIII ĕмĕр вĕçĕнче тин тума тытăннă.

Аталçи Пăлхар, хăйĕн экономика, социалла пурнăç, политика тата культура аталанăвĕн шайĕпе илсен, Киев Руçĕн тата Хĕвеланăç Европари феодалла патшалăхсен шайĕнче пулнă. Хуçалăхăн тĕп отраслĕ çĕр сухаласа, тырпул акса тăвасси пулнă. X ĕмĕртен пуçласа çĕре акапуçĕпе сухаласа, çĕртме тăвасси саралать. Кунта çĕртме туса парлак çĕрсем тытасси те йăлара пулнă. Ыраш, пăри, тула, урпа, сĕлĕ, ясмак, пăрçа, вир, кантар туса илнĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Пăлхар çĕршывĕн кантăр-хĕвелтухăç çĕрĕсем çинче выльăх-чĕрлĕхе вăхăтран-вăхăта куçса çуресе ĕрчетнĕ, вăл хуçалăхăн хăйне уйрăм отраслĕ шутланнă. Лашасем, ĕне выльăх, сурăхсем, качакасем, сыснасем ĕрчетнĕ. Тĕвесем те тытнă. Хуçалăхра сунара çуресси, пыл туса илесси, пулă тытасси пысăк выранта пулнă.

Пăлхарти ремесленниксем ĕç хатĕрĕсем, хĕçпăшал, кольчугăсем, хĕçсем, ут хатĕрĕсем, тăм сават-сапа, тир-сăран, кĕпе-тумтир, ата-пушмак, çĕлĕксем, ша-

маран туна япаласем, тӗрлӗрен эрешсем - çӗрӗсем, маясем, кӗмӗл тата бронза суласем, ылтанпа илемлетнӗ кантак шарçасем, çавнашкалах çилӗм тата ытти япаласем хатӗрленӗ. Çав япаласемпе ытларах выранта уса курна. Шалти рынокра çаван пекех аякран, уйрамах хӗвелтухăçӗнчен кӳрсе килнӗ таварсем: металл япаласем, хӗрарамсене кирлӗ тӗрлӗрен эрешсем, пурçан тата ытти пир-авар, пылак апат-çимӗç сутна.

Атăл тарахӗнчи патшалăх урах çӗрсене таварсем таратас тӗлӗшпе пысăк выран йышанна. Пăлхар çӗршывӗнче ирттерекен ярмаркасене хазар, вырас, Ватам Азири халахсен, араб, перс, ермен, Византи купцисем пырса çӳренӗ. Аякран пына купцасенчен пăлхар патши валли кӳрсе пына таваран вуна пайран пӗр пайӗ чухлӗ пошлина илнӗ. Çурçӗрти йахсем патне, "Виса çӗршывне" тата Югрăна çӳресе, пăлхар купцисем хайсен таварӗсене сасар, хантăр, пакша тирӗсемпе усăллă улăштарна, унтан вӗсене урах çӗршывсене сутна. Пăлхар купцисем çавнашкалах Руçре тата хӗвелтухăç çӗршывсенче суту-илӳ туна. X ӗмӗртен пуçласа Атăлçи Пăлхарта хайсен кӗмӗл укçипе уса курма тытăнаççӗ, çака экономикăна тата суту-илӗве малалла аталантарма лайăх майсем туса парать.

Атăлçи Пăлхар феодалла йӗркесем аталанма тытăнна çӗршыв пулса йӗркеленнӗ. Кунта хӗвелтухăçӗнчи евӗрлӗ "патшалăх феодализмӗ" текен хутшăнусем аталанна. Кнеçсемпе çар начальникӗсем патшан выранти çыннисем пулна май, хуласемпе ялсен ушканӗсенчи ӗçсене йӗркелесе пына. Çӗр ӗçченӗсем, выльăх-чӗрлӗх ӗрчетекенсем, ремесленниксем патшалăха куланай тата хырçа тӳленӗ. Ӗçлесе пуранакан мари, удмурт, коми-пермяк, венгр, пушкарт, буртас çыннисем те пăлхар патшине укçа-тенкӗ тӳлесе тăна. Атăлçи Пăлхар çӗршывӗ хăй Хазар каганатне 965-мӗш çулччен пăханса тăна.

Алмас патша чӗннипе Атăлçи Пăлхара 922-мӗш çулта ислам тӗнне сарма Багдад халифӗн Муктадиран посольстви пына. Алмас хăй мусульмансен Джафар ибн-Абдаллах ятне илнӗ. Пăлхарсен патша тавраршӗнчи çыннисем, хула çыннисем, ялта пуранакан-

сен пысăкрах пайĕ ислам тĕнне йышăннă. Сувазсем хăйне хăй кнеç текен Выраxпа пĕрле малтан çĕнĕ тĕне йышăнма килĕшмен, анчах каярахпа вĕсенчен те нумайăшĕ мусульмансем пулса тăнă.

XX ĕмĕр пуçламăшĕнче Чĕмпĕр тата Хусан кĕпĕрнинсенче анатри, варринчи тата тури чăвашсен тĕнĕпе фольклорне тĕпченĕ венгр ученăйĕ Д.Месарош Будапештра чăваш мифологийĕпе фольклорĕ çинчен икĕ кĕнеке кăларнă. Вăл чăвашсен пысăк пайĕ мусульман тĕнне ĕненнĕ тапхăр çинчен калать, анчах каярахпа чăвашсем, самана улшăнса япăхланнине пула, ислам тĕнне пăрахнă, тет. Исламран чăваш тĕнне киремет /ислămра - карамат - Аллах хăйĕн чурине паракан хăват/, пиxампар /ислămра - пейгамбар "пророк"/, пирĕшти /ислămра - фереште "ангел", "хыпар çуретекен"/, эсрел /ислămра азраил "вилĕм хыпарçи"/, ураса /ислămра ураза "типĕ тытни"/, намăс /ислами намус "саккун", "тура уçса пани"/, мăчавăр /ислămра моджавер "çваттуй тупакĕ патĕнче пуранакан"/ тата ытти те кĕнĕ. Чăвашсен авалхи ячĕсенчен нумайăшĕ - ислам халăxĕсен хушшинче сарăлнă ятсем. Пăлхар патшалăxĕнче мечĕтсемпе шкулсем ĕçленĕ, литература йĕркеленнĕ тата малтанхи наука пĕлĕвĕсем паларма пуçланă.

Чăваш чĕлхи Атăлçи Пăлхарта патшалăx чĕлхи шутланнă, унпа саккунсем кăларнă, управленипе канцеляри ĕçне туса пынă, шут шутланă чухне, суд ĕçĕнче, наукăра, халăxа вĕрентес ĕçре, кĕлĕсенче, литературăра, суту-илурe, выранти йăxсемпе хутшăнна чухне усă курнă. Пăлхар /чăваш/ чĕxипе культури Атăлçи Пăлхар çĕршывне кĕрекен халăxсене пысăк витĕм кунĕ. Мари чĕлхине 1500, удмурт чĕлхине 500 ытла, коми-пермяк чĕлхине 300 ытла, ирçе чĕлхине 100 ытла чăваш сăмахĕ кĕнĕ. Венгрсем хăйсен чĕлхине пăлхар союзне кĕнĕ чухнех, IX ĕмĕр вĕçленниччен, 600 ытла чăваш сăмахне йышăннă.

Атăлçи Пăлхаран гербĕ çине утса пыракан барс ӳкернĕ. Пăлхарсен гербне ӳкерни выраcсем çырнисенче упранса юлнă. Мускаван асла кнеçĕ III Иван, 1487 çулта Хусан ханствине вăхăтлăха пăхăнтарса, хăйĕн асла кнеç титулĕ çумне "Пăлхарсен асла кнеçĕ" текен сăмахсем хушнă. Çакна дипломатиллĕ тĕллев-

пе туна: ку вал Вырас патшалăхĕ çумне Хусан ханстви выранĕнче пулна çĕршыва пĕрлештернине пĕлтернĕ. Раççей монархĕсен патшалăх пичетне Аталçи Пăлхар гербĕн ӳкерчĕкне кĕртме тытанна. Самахран, IV Иванан пысăк патшалăх пичечĕ çинче Раççей çĕршывне кĕрекен княжествăсемпе ханствăсен 24 гербĕпе пĕрле "малти урине çĕкленĕ тискер чĕрчуна" ӳкерни пулна, ун тавра "Пăлхар пичечĕ" тесе çырса хуна. Михаил Федорович патшан тронĕ хыçĕнчи кĕмĕл тата ылтăн çипсемпе тĕрленĕ çивитти çинче княжествăсемпе ханствăсен гербĕсем хушшинче çаван пекех Пăлхар гербне ӳкернĕ: унта малти урине çĕкленĕ утса пыракан тискер чĕрчун тата "Пăлхар пичечĕ" тесе çырни пур, 1666-1678 çулсенчи Раççей ялавĕ çинче çакăн пек сăмахсем пур: "Пăлхар пичечĕ, ун çинче - утса пыракан барс". 1672 çулхи Титулярникре çар ялавĕпе пĕрле утса пыракан барса ӳкернĕ тата "Пăлхарсен" тесе çырса хуна.

Хусан ханствине пăхăнтарна хыççăн Раççей патшисен титулне "Хусан патши" текен сăмахсем кĕртнĕ, вĕсен патшалăх пичечĕсем çинче вара Хусан ханствин гербне - açтахана ӳкерме тытанна. Çӳлерех каланине шута илсе, ман шутпа, Чăваш Республикин гербĕнче барса ӳкерни выранла пулмалла.

Кунта çакна палăртмалла: Аталçи Пăлхар территорийĕнче XIII ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурриччен кыпчактутарсем пачах та пулман. Тутар тата вырас ученайĕсем 1944-мĕш çулччен тутар халăхĕ XIV ĕмĕрте Ылтăн Уртара кунта монголсемпе пĕрле пырса çитнĕ Тĕп Азири тĕрĕк чĕлхиллĕ тутарсемпе хĕвеланăçĕнчи кыпчаксенчен /половецсенчен/ йĕркеленнĕ тесе тĕрĕс çирĕплетсе калана. ВКП/б/ Тĕп Комитечĕ 1944 çулхи августăн 9-мĕшĕнче "Тутарсен парти организацийĕнчи массăлла-политикăлла ĕçпе идеологи ĕçĕ тата ăна лайăхлатмалли мерăсем çинчен" постановлени йышăннă. Унта тутар ученайĕсемпе литераторĕсене тутар халăхĕн Ылтăн Уртари пурнăçне идеализацилесе кăтартнăшăн айăплана тата çапла асăрхатарна: малашне тутар халăхĕн историне Ылтăн Уртапа çыхăнтармалла мар.

Çавăнтанпа Хусанти историксенчен, этнографсенчен, археологсенчен, лингвистсенчен, литературовед-

сенчен, искусствоведсенчен нумайăшĕ тутарсем аталçи пăлхарсенчен пулса кайнă тесе тĕрĕс мар анлантарма, Аталçи Пăлхар историне тутарсемпе çыхăнтарма тытăнчĕç. Халĕ вара тутарсен палла археологĕ тата историкĕ, истори наукисен докторĕ Р.Г.Фахрутдинов 1993 çулта каларнă "Ылтăн Урта тата тутарсем" кĕнекере тутар халăхĕ Ылтăн Уртара Тĕп Азири тутарсемпе хĕвеланăç кыпчаксенчен пулса кайнине ĕненмелле катартса парать. Апла пулсан, тутарсем 1236-мĕш çулччен Аталçи Пăлхар историйĕпе нимĕн чухлĕ те çыхăнман. Вĕсем хăйсем халăх пулса йĕркеленсен кăна пăлхар-чăвашсен тата чăвашсен пĕр пайне ассимиляциленĕ /XV-XIX ĕмĕрсенче/.

Аталçи Пăлхар çĕршывĕ Ватам Азири патшалăхсемпе, ытларах Хорезмпа, Киев Руçĕпе, XII ĕмĕртен пуçласа вырăссен хăш-пĕр княжествисемпе, тĕпрен илсен, Владимир-Суздаль княжествипе экономика тата политика енĕпе çыхăну тытнă. Тепĕр чухне мирлĕ хутшăнусене варçăсем пăснă. 985-мĕш çулта Киев кнеçĕ Владимир Аталçи пăлхарĕсене тапаннă, вĕсене çĕнтернĕ. Пăлхарсем присяга тытнă, Киев Руçĕпе договор туса, çапла пĕлтернĕ: "Пирĕн хушăра чул шывра ишсе тухма, хăмла путма тытăнсан кăна мир пулмĕ", - тенĕ.

Тепĕр çултан пăлхар делегацийĕ Киева пырса çитнĕ, Владимир кнеçе Руçра ислам тĕнне йышăнма сĕннĕ. Вырăссен летописĕ çак событие çапла çырса катартатать: "Магомет тĕнне ĕненекен пăлхарсем килчĕç, çапла каларĕç: "Эсĕ, кнеç, ăсла, шухăшлама пултаракан çын, саккуна вара пĕлместĕн. Пирĕн саккуна итле, Магомета пуç тай". Владимир вара çапла ыйтнă: "Сирĕн тĕнĕр еплерех?" Лешсем акă мĕнле хуравланă: "Турра ĕненетпĕр, Магомет пире çапла вĕрентет: арçын ачасене касмалла /обрезание/, сысна ашĕ çимелле мар, эрех ĕçмелле мар, вилсен, тет, хĕрарăмсемпе ашкăнма юрать. Магомет кашнине çитмĕлшер илемлĕ арăм парать... Кунтах, тет, ним шиксĕр кирек мĕнле ашкăнма юрать. Кам çак тĕнчере чухăн, леш тĕнчере те çаплах пулать". Ытти тем те пĕр суя сăмах калана, кун çинчен çырса катартма та намăс. Владимир вара вĕсене итленĕ, мĕншĕн тесен хăй хĕрарăмсене тата ашкăнма юратнă: çаванпа вĕсе-

не тараничченех итленĕ. Ăна ака мĕн килĕшмен: арçын ачасене касни, сысна ашĕ çиме тата эрех ĕçме юраманни, вăл вара çапла калана: “Руçре эрех ĕçме хавасла, унсăр пуранма пултараймастпăр”. Пăлхарсен делегацийĕ Владимир кнеç патĕнчен нимсĕрех тавранна.

1006 çулта Киев Руçĕпе Аталçи Пăлхар пĕр-пĕринпе суту-илу договорĕ туна. 1024 çулта, Суздаль çĕрĕ çинче выçлăх пулсан, Пăлхар çĕршывĕ ана тырпул парса пулашна. 1088 çулта пăлхарсем Окапа Атăл çинче вырассем пăлхар купцисене çаратнашăн таварас тĕллевпе Мурома çаратна. Пăлхар çарĕ 1107 çулта Суздале хупарласа илнĕ. Владимир-Суздаль княжествин çарĕсем вара 1120, 1164, 1172 тата 1184 çулсенче Аталçи Пăлхар çĕршывне тапанна, 1220 çулта пăлхарсен сылтăм çыран хĕрринчи Ошель хулине çунтарса яна. 1209 çулта пăлхарсем Рязань çĕрне, 1218 çулта Устюг хулине тапанна. 1221 çулта Аталçи Пăлхарпа Çурçĕр-Хĕвелтухăç Руç 6 çуллăха мирлĕ пуранма килешу туна, 1229 çулта мирлĕ договор çине ала пусна. Çав çулах Руç çĕрĕнче выçлах пулна, унта пăлхарсем тырпул нумай таратна.

Пăлхар çарĕн /вăл ытларах утла çар шутланна/ лайăх хĕçпăшал пулна: вăл хĕçсемпе, йĕплĕ ухăсемпе, хăрах енĕпе касакан палашсемпе, кинжалсемпе, пуртăсемпе, çĕçĕсемпе, кистеньсемпе, чукмарсемпе, санăсемпе, кольчугăпа, шлемпа уса курна, унăн тапанмалли тата хутеленмелли лайăх тактика пулна. Пăлхар çĕрĕ çинче лайăх çирĕпленнĕ çар крепоçĕсем нумай /38 таран/ шутланна. Çак çар монгол-тутар çарне хирĕç вирлĕн тана. 1223 çулта Калка юханшыв патĕнче вырассемпе половецсем пĕрлештернĕ çарне аркатса такна хыççăн монгол-тутарсем Аталçи Пăлхар енннелле çул тытна. Пăлхар çарĕ вĕсене засадăна илсе кĕнĕ, вĕсем çине тылран тапанна. “Вĕсене хĕç пур енчен тс тураш, вĕсене нумай вĕлерсе пĕтернĕ, вĕсенчен пысакрах мар йышĕ кана чĕрĕ тарса юлна”,- тенĕ çырса хăварнисенчен пĕринче. Монгол-тутарсен отрячĕсем тапаннине пăлхарсем 1229 тата 1232 çулсенче сире-сире яна. 1236 çулта монгол-тутарсен пысак çарĕ, Чингисхан манукĕ Бату ертсе пыраканскер, пăлхар-чăваш çĕрне çитсе тапанна

Пӳлер, Пӑлхар, Жукотин, Сувар, Балымер хулисемпе ытти хуласене, ялсене аркатса тӑкнӑ. Монгол-тутарсем "ватӑсенчен пуçласа çамрӑксемпе ачасем таранах турана", нумайӑшне "тыткӑна илсе кайнӑ". Пӑлхарсем монгол-тутарсене хирӗç вӑйлӑ, вирлӗ кӗрешнӗ. Бату Пӑлхар çӗршывне пӗр çул хушши кӗрешсен тин парӑнтарма пултарнӑ. 1237 султан пуçласа монгол-тутарсем ирçе тата вырӑс çӗрӗсене аркатнӑ. Пӑлхар-чӑвашсем 1240 çулта ют çӗрсене хапсанакансене хирӗç восстание çӗкленнӗ, анчах монголсен полководецӗ Субудай вӗсене каллех путарса лартнӑ. Çаван чухне пӑлхар-чӑвашсен пӗр пайӗ Хусан çывӑхне тата хальхи Чӑваш çӗршывӗн территорине, хӑшӗ-пӗрисем Владимир-Суздаль çӗрӗ çинчи хуласене тарса кайнӑ.

Çапла пуçланнӑ чӑваш халӑхӗн историйӗнчи хӗнасаппа тапхӑр. Чӑваш патшалахӗ - Атӑлçи Пӑлхар çӗршывӗ пӗтсе ларнӑ. 1243 çулта унӑн территорине Ылтӑн Уртана кӗртнӗ, вӑл Пӑлхар улусӗ /провинци/ пулса тӑнӑ. Ылтӑн Урта Кыпчак çеçенхирӗн территорийӗнче /Иртышран пуçласа Дунай варри таран/ йӗркеленнӗ, тӗпрен илсен, куçса çӳрекен йӑхсен империйӗ шутланнӑ. Унта пӑлхарсен çӗрӗ, Хорезмӑн пӗр пайӗ тата Крымӑн кӑнтӑр пайӗ анчах халӑх пӗр вырӑнтанах пуранакан территорисем пулнӑ. Пӑлхар улусӗ пӗтӗм Урта валли тырпул парса тӑракан тӗп выран шутланнӑ.

Пӑлхар улусӗнчи аркатса тӑкнӑ Пӳлер, Пӑлхар, Жукитин, Сувар, Балымер хулисене майӗпен юсаса çӗнетеççӗ. Çӗнӗ хуласем - Керменчук, Тубулгатау, Тэтэш, Кивӗ Хусан, Кам, Таяпа, Веда Суар /Вӑта Сӑвар, вӑл XIII ӗмӗр вӗçӗнче Шупашкар выранӗнче уссе ларнӑ/ йӗркеленеççӗ. Хуласенче пӑлхар-чӑвашсемех пуранӑнна, анчах вӗсенче монгол-тутарсен даругӗсем, баскакӗсем, çар пуçӗсемпе отрячӗсем те тӑнӑ. Ылтӑн Уртан çар вӑйӗ, тӗпрен илсен, тутарсемпе хӗвеланаç кыпчаксенчен тӑнӑ.

Пӑлхар хули Ылтӑн Урта йӗркеленнӗ тапхӑрта Сарай хулине тӑвиччен унӑн тӗп хули шутланнӑ, каярахпа хансен çуллахи резиденцийӗ пулса юлнӑ. Пӑлхарта XIII ӗмӗрӗн 40-мӗш çулӗсен вӗçӗнчен тытӑнса XIV ӗмӗрӗн 30-мӗш çулӗсемччен Бату, Мунке, Берке

тата ытти хансен Ылтăн Урта джучид укçисене каларнă.

Пăлхар улусне кыпчак-тутарсем пыма пуçланă. Анчах XIII-XIV ĕмĕрсенче Пăлхар улусĕнчи палла çынсем хушшинче те пăлхар-чăвашсем ытларах пулнă: вилтăприсем çине лартнă чул палăксен 90 процентне чăвашла çырнă, 10 процентне çеç тутар сăмахĕсемпе çырнă.

Пăлхар улусĕнчи ĕçлекен халăхăн Уртана кашни çул пурлăхăн пĕрре вуннăмĕш пайĕ чухлĕ ясак тата ытти тĕрлĕрен налук тăлемелле, тырпул тăратмалла, çулсем, кĕперсем, крепоçсем тумалла, монгол-тутар çарĕ валли çар çыннисем памалла пулнă. Захватчиксем пăлхар-чăвашсене чура выраннĕнче ĕçлеме илеиле кайнă, вĕсен ремесленникĕсене Ылтăн Уртан анат Атăл пайĕнчи хулисене ăсатнă.

1346 çулта Пăлхар улусĕнчи халăха, пĕтĕм Ылтăн Уртари пекех, харушă чир - чума пысăк инкек кунĕ. 1359 çултан пуçласа Ылтăн Уртари эмирсем пĕр-пĕринпе харкашма тытаннă. 20 çул хушшиче, 1379 çулччен, Сарайра 25 хан ылмашаннă. Араш-пирĕш пуçланнă пирки Ылтăн Орда арканма тытаннна. 1361 çулта Урта кнеçĕ Булат-Тимур Пăлхар улусне хайне валли туртса илнĕ, анчах 1367 çулта ăна Сарайра вĕлернĕ. 1370 çулта пăлхар кнеçĕ - Хасан Пăлхар улусне хайĕн аллинче тытса тăма пуçланă. Вăлах 1370 çулта Хусан хулине лартнă. 1377 çулта Урус-хан Пăлхар çĕрне хĕç-пăшалпа уса курса Сарая паханса тăмалла тунă. 1391 тата 1395 çулсенче Пăлхар çĕрĕ Самарканд империйĕн хаяр патши Тамерлан /Уксах-Тимур/ пырапыра тапаннипе те нумай хĕн-хур, асап тăснĕ. Ют çĕрсене хапсăнакан çак çăтканăн икĕ походне те 200-шер пин çар çынни хутшаннă. Пулере, Пăлхар улусĕнчи ытти хуласене тата нумай ялсене аркатса тăкнă, çаратса пĕтернĕ. XIV ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче - XV ĕмĕрĕн малтанхи виççĕмĕш пайĕнче вырас кнеçĕсем те, çаван пекех Новгород ушкуйникĕсем - варахурахĕсем те кунти хуласемпе ялсене тапаннă. Пăлхар-чăваш çĕрне куçса çурекен Мангыт Юрти (каярахпа ăна Нухай Урти тенĕ) тĕпĕ-йĕрĕпех юхантарса хăварнă. Вăл, Ылтăн Уртаран уйрăлса тухнăскер, XIV ĕмĕрĕн юлашки çулĕсенче - XV ĕмĕрĕн мал-

танхи çулĕсенче Пăлхар улусĕнчи хуласемпе ялсене, унта пуранакансене татăшах пыра-пыра çаратнă, тĕп тунă /нухайсем Чăваш çĕрне каярахпа, XV-XVII ĕмĕрсенче те вара-хурахла тапаннă/.

80 çул хушшинче хальхи Самар, Ульяновск, Пенза облаçĕсен, Тутарстанăн Кама леш енчи тата сылтăм çыран хĕрринчи кăнтăр-хĕвеланăç районĕсен территорийĕнчи, Чăваш Республикин кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнчи мĕнпур пăлхар-чăваш хулисемпе ялĕсене пĕтĕмпех аркатса пĕтернĕ, çĕрпе танлаштарнă. Кунта вара пăлхар-чăвашсен пулнă 32 хула выранĕ, 2000 яхăн ял выранĕ тăрса юлнă. Çак пĕтĕм территори пушă уй пек тăрса юлнă, вăл нухайсем куçса çуремелли ялсемпе хуласемсĕр выран пулса тăнă. Чĕрĕ юлнă пăлхар-чăвашсем Хусан çывăхĕнче тата Хусан леш енне, хальхи Чăваш Республикин центрти тата çурçĕрти районĕсене, марисем пуранакан выранă куçса кайнă. Çак территорисенче пăлхар-чăвашсем пĕтĕмпе те 500 яхăн ял çеç никĕсленĕ. Халĕ çакă лайăх паларать: XIII ĕмĕрте - XV ĕмĕрĕн малтанхи виççĕмĕш пайĕнче геноцида пула, пăлхар-чăвашсем пилĕк пайран пĕр пая яхăн çеç тăрса юлнă. Çаван пек трегеди - геноцид пулман пулсан чăваш халăхĕ паянхи кун 10 миллионран ытла йышлă халăх пулнă пулĕччĕ. Пăлхар-чăвашсен элити пĕтĕмпе тенĕ пекех пĕтнĕ. Тарса кайнисем исламран уйрăлнă. Хусан леш енчи, Чăваш республикин вăта çĕрти тата çурçĕрти районĕсенчи пăлхар-чăвашсем марисен пысăках мар ушканĕпе ассимиляциленнĕ, XV ĕмĕрте хальхи чăваш халăхĕ пулса чăмартаннă. XV-XVII ĕмĕрсенче Хусан çывăхĕнчи тата Хусан леш енчи чăвашсенчен чылайăшĕ тутара тухнă, ыттисем XVI ĕмĕр вĕçĕнче - XVII ĕмĕрте Чăваш Ене, Кама леш енне тата Пушкăртстана куçса кайнă.

Çапла ĕнтĕ, 1995 çулта Чăваш патшалăхĕ чăмартаннăранпа 1100 çул çитет. Çаванпа та халĕ пирĕншĕн, Чăваш Енре пуранакансемшĕн, пуриншĕн те хăмăр ăçтан тухнине, истори пире малашлăх валли хăварнă питех те хакла опыта аса илни çав тери выранлă. Вăл юбилей çулĕсене пĕлсе тăма тата тивĕçлипе палла тума çеç мар, хăмăран авалхи йăх-тымара асра тытса пуранма кирлĕ.

(Таван Атăл. 1995. 1№)

XIV ӖМӖР ВӖҪӖНЧЕ ТАТА XV ӖМӖР ПУҫЛАМАШӖНЧЕ АТӐЛҪИ ПӐЛХАР ҪӖРНЕ ҪАРАТСА ТУСТАРНИ

Ылтӑн Уртана кӗнӗ Пӑлхар ҫӗрӗ хальхи Самар, Ульяновск облаҫӗсен, Пенза облаҫӗн пӗр пайӗн, Тутарстанӑн Кама леш енӗпе кантӑр-хӗвеланаҫ пайӗн тата Чӑваш Енӗн кантӑр-хӗвелтухаҫ пайӗн территорине йышӑнса тӑнӑ. Истори ӗҫӗсенче катартса пана тарӑх, XIV ӗмӗрӗн иккӗмӗш ҫурринче - XV ӗмӗр пуҫламашӗнче Пӑлхар ҫӗрӗн халахӗ ҫурҫӗр еннерехри варманла вырӑнсене куҫса кайма тытӑнна. Статья ҫакна ҫирӗплетсе парать: XIV ӗмӗр вӗҫӗнче тата XV ӗмӗр пуҫламашӗнче Пӑлхар ҫӗрне йӑлтах ҫаратса хӑварнӑ - унти хуласемпе ялсене пӗтӗмпех аркатнӑ, пӑлхар-чӑваш халахӗн пысӑк пайне пӗтерсе тӑкнӑ. Пӑлхар ҫӗрӗн территорийӗ пушӑ хир, нухай йӑхӗсем куҫса ҫурекен выран пулса тӑнӑ.

Археологи, ҫырулӑх, этнографи ҫӑлкуҫӗсемпе самах вӗҫҫӗн ҫурекен тата лингвистла (ытти халӑхсем чӑваш сӑмахӗсене йышӑнни) ҫӑлкуҫсем урлӑ ҫакна пӑлӑртнӑ: IX ӗмӗр вӗҫӗнче - XIII ӗмӗр пуҫламашӗнче Аталҫи Пӑлхар патшалахӗ шутне: 1) пӑлхарсен хальхи Самар, Ульяновск облаҫӗсен, Пенза облаҫӗн хӗвелтухаҫ пайӗн, Тутарстанӑн кантӑр енчи, тӗпрен илсен, Каман сулахай енчи тата тӑрӑхан-тӑрӑхан Каман сылтӑм ҫыранӗнчи, ҫаван пекех Аталан сылтӑм ҫыранӗн кантӑр-хӗвеланаҫ пайӗн тата Чӑваш Енӗн кантӑр-хӗвелтухаҫ пайӗн территорине (асӑннӑ территорире XII ӗмӗрте пӑлхар (авалхи чӑваш) халахӗ йӗркеленнӗ кӗрекен ҫӗрсем; 2) хальхи Чӑваш Енӗн вӑта тата ҫурҫӗр пайӗн, Хӗвелтухаҫ Мордовин, Тутарстанӑн вӑта тата ҫурҫӗр пайӗн, Мари ҫӗршывӗн, Удмуртин, Пермь облаҫӗн, Оренбург облаҫӗн хӗвеланаҫ пайӗн финн халахӗсем пуранакан ҫӗрсем; 3) Атал тӑрӑхне юлнӑ, Хантӑрҫа, Ҫӑрӑмсан, Сук, Кинел юхан шывӗсем тӑрӑхӗнче пуранӑ венгрсен ҫӗрӗсем кӗнӗ. Финн-угорсен ҫӗрӗсем ҫинче пӑлхарсен ҫирӗплетнӗ тата уҫӑ ял-хулисем пулнӑ, вӗсем патшалӑхӑн ҫарпа администраци тата суту-илӳ ӗҫӗсене туса

пыма пулашна. Анчах пĕр çалкуçра та пăлхарсемпе финн-угорсем хушшинче хирĕçу сиксе тухнине асанман [1].

Литературăра пăлхарсемпе тутарсем пĕр халăх пулнă тесе çирĕплетме хăтланни тĕл пулать; ку тĕрĕс мар, юри шутласа каларнă йăнăш. Ватам Азире тата Кантăр Çĕпĕрте пурăннă тĕрĕк чĕлхиллĕ тутарсем çинчен 552 çултан тытăнса çырни палла. Вĕсем Тĕрĕк каганатне кĕнĕ. Монгол империйĕ пулса тăрсан, вĕсене Чингисхан пăхăнтарнă та хайĕн çарне кĕртнĕ. Хĕвелтухăç Европăна тутарсем пĕрремĕш хут 1223 çулта Чингисхан çарĕн йышĕнче, кайран - 1236 çулта - Бату хан çарĕн йышĕнче килсе кĕнĕ. Аталçи Пăлхар 1236 çулта пĕтсе лариччен вĕсем унăн историйĕпе пачах çыхăнман [2].

Вырăс летописĕсенчен тата Тухăç çалкуçĕсенчен çакă палла: 1236 çулта монгол-тутарсем Атăлçи Пăлхара аркатса такна, унăн хулисемпе нумай ялне, питĕ нумай халăха тĕп тунă. Çаван чухнех ĕнтĕ пăлхар-чăвашсен пĕр пайĕ Хусан çывăхне тата Атăлăн сылтăм çыранне, Аслă тата Кĕçĕн Çавал тăрăхне тарса кайнă. XIII ĕмĕр вĕçĕнче Савар хулинчен куçса килнĕ пăлхар-чăвашсем Шупашкар выранĕнче Вăта - Савар хулине никĕсленĕ. 1243 çулта йĕркеленнĕ Ылтăн Урта е Джучи Улус шутне Хорезма, Иртышран пуçласа Анат Дунай таранах саралса выртакан Дешт-и-Кыпчака (Кыпчак çеçенхирĕ), Крыма тата Пăлхар çĕрне кĕртнĕ. Анăç кыпчаксем (вырăс летописĕнче - половецсем) - тĕрĕксен çапăçма юратакан йăхĕсем - 1054 çулта Днепр патнех çитнĕ, 180 çул хушши ытла вырăс кнеçĕсен çĕрĕсене тапăнса канаç паман. XII ĕмĕр вĕçĕнче - XIII ĕмĕр пуçламашĕнче половецсен пĕр пайне ирĕксĕрлесе Сирипе Египета çар çыннисем (мамелюксем) пулма илсе кайнă. Египет çĕрĕнче хĕсметре тăнă вĕсем. Вĕсен çар пуçĕсем Египет патшине ларса 1258-1516 çулсенче патшалăха тытса тăнă. Половецсен тепĕр пайĕ Анат Атăл енче, Дон, Днепр тăрăхĕнчи хуласенче пурăнма пуçланă. Хазарсемпе пĕрлешсе кайнă вĕсем. Пĕтĕмĕшпе илсен, половецсем аталану тĕлĕшĕнчен чылаях çуллĕ шайра тăнă, тĕрлĕ ĕçе пĕлнĕ, суту-илĕве хутшăннă.

Ылтăн Урта пулса тăнă хыççăн анăç кыпчаксем тутарсемпе пĕрле унăн çарĕнче тĕп выраи йышăннă. Икĕ халахĕ те кыпчак ушкăнĕн чĕлхипе ирĕклĕнех калаçнă. Л.Т.Махмутова палăртнă тăрăх, 1303 çулхи кыпчак словарĕнчи сăмахсен 80 проценчĕ тутарсеннипе пĕрешкел пулнă. Ылтăн Урта тĕрĕксен куçса çурекен империйĕ шутланнă (Хорезмра, Пăлхар çĕршывĕнче, Крыман кăнтăр çыранĕнче кăна халăх пĕр выранта тĕпленсе пуранна). Монголсем унта "таса йăх" шутланнă, вĕсем хансемпе эмирсем, асла аристократи пулса тăнă. Араб çыравçи ал-Омари çирĕплетнĕ тăрăх, XIV ĕмĕр варринче Ылтăн Уртари монголсем кыпчак-тутарсемпе хутăшса кайнă. XIV ĕмĕрте - XV ĕмĕр пуçламăшĕнче Уртара анăç кыпчаксемпе тутарсем пĕрлĕхлĕ тутар халăхĕ пулса тăнă. Египетăн палла ăсчах-арабисчĕ, чĕлхеçи тата историкĕ Амин ал-Холи, арабсен Ылтăн Урта çинчен калакан çăлкуçĕсене тĕпченĕскер, çакăн пек пĕтĕмлетӳ тунă: "Кыпчаксем - авалхи йăх, тутарсемпе таванлă. Кыпчаксен çĕрне тутарсем тытса илнĕ хыççăн вĕсем пĕтĕмпех тутарланнă". Тухăç кыпчаксенчен мăнăтсем (ногайсем), каярахпа казахсем, узбексем пулса кайнă. Çĕпĕр тутарĕсем те сыхланса юлнă. Беркехан (1256-1266) тата Узбек-хан /1312-1342/ вăхатĕнче тутарсемпе кыпчаксем ислам тĕнне йышăннă. Анчах, араб çыравçи Ибн-Арабшах /1389-1450/ çирĕплетнĕ тăрăх, тутарсенчен хăшĕ-пĕри çав-çавах пуканесене /идолсене/ пуç çапма парахман-ха. XIII - XIV ĕмĕр чиккинче тутар /кыпчаксен/ чĕлхи Ылтăн Уртан патшалăх чĕлхи пулса тăнă [3].

1236 çулта аркатса тăкнă Пăлхар, Пӳлер, Жукотин, Сăвар, Керменчӳк хулисемпе ытти хуласене, нумай яла XIII ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче çĕнĕрен туса лартнă, çĕнĕ хуласем - Балымер, Тăпалхату, Кашан, Теччĕ, Кам, Таяпа хулисемпе ытти çĕнĕ хуласем никĕсленнĕ. XIII ĕмĕрĕн вĕçĕнче хуласенче чул çуртсем лартма пуçланнăна. Малтан Пăлхар Ылтăн Уртан тĕп хули шутланнă, кайран та хансен çуллахи резиденцийĕ пулнă. XIII ĕмĕрĕн 40-мĕш çулĕсен вĕçĕнчен тытăнса 1342 çулччен Пăлхарта Бату, Мунке, Берке хансемпе ытти хансен Ылтăн Урта /джучид/ кĕмĕл укçисене çапнă. Пăлхарта кыпчык-тутарсен пуçлăхĕсем те

вырнаçма тытăнна [4].

Пăлхар çĕрĕнчи ĕçлекен халăхăн кашни çулах Уртана тпăшăн вуннăмĕш пайне - ясак, темĕн тĕрлĕ налук тăлеме, тыра парса тăма, ямшăкра çуреме, çулйĕрпе кĕперсем, крепоçсем тума, монгол-тутар çарне салтак ачисем пама тивнĕ. Пусмăрçăсем пăлхар-чăвашсене чура пулма тыта-тыта кайнă, ал ăстисене Ылтăн Уртан Анат Атăл хулисене ĕçлеме ăсатнă.

XIV ĕмĕрĕн варринче Ылтăн Урта эмирĕсен çар ушкăнĕсем, куçса çурекен хурахсем Пăлхар çĕрне тăтăшах тустарнă. XIV ĕмĕр вĕçĕнче - XV ĕмĕр пуçламăшĕнче ăна йăлтах çаратса хăварнă. Çакă вăл пăлхар-чăвашсен историйĕнчи чи синкерлĕ, хĕн-хурлă, геноцид алхаснă тапхăр шутланнă.

Раççей историйĕн нумай томлă кĕнекисен авторĕсем /В.Н.Татищев, М.М.Щербатов, Н.М.Карамзин, С.М.Соловьев, Д.И.Иловайский, В.О.Ключевский/, XVIII ĕмĕрте - XX ĕмĕр пуçламăшĕнче пичетленнĕ монографисемпе статьясен авторĕсем хăйсен ĕçĕсенче Новгород ушкуйникĕсем Вăтам тата Анат Атăл тăрăхне кая-кая тапăнни, çурçĕр-хĕвелтухăç Руç кнеçĕсем XIV ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче - XV ĕмĕр пуçламăшĕнче Пăлхар çĕрĕ çине похода кайни çинчен вырăс летописĕсенче асăннă палла тĕслĕхсене илеиле кăтартнă, анчах Пăлхар çĕршывĕн шăпипе - ăна аркатнипе, тустарса пĕтернипе пачах та кăсăкланман. Вырăс историкĕсем Атăлçи Пăлхар историне тĕпчес тĕллев лартман. Ун пирки çырса хăварни те сахал пулнă, археологи палăкĕсене çителĕклĕ таран тĕпчесе пĕлмен. Чăн та, С.М.Шпилевский 1877 çулта Хусанта мăсăльмансен Пăлхар хулисем çинчен калакан çăлкуçĕсен пуххине, вырăс летописĕсенче Атăлçи Пăлхарпа унăн хулисем, хуласемпе ялсене, авалхи крепоçсене, масарсемпе тĕмесене (кургансене) археологсем тĕпчесе тухни çинчен, Хусан кĕпĕрнин территорийĕнче авалхи япаласемпе укçасем тупнă вырăнсем çинчен пĕлтернисене пичетлесе кăларнă. Пăлхар хулисемпе ялĕсем пирки археологи пĕлтерĕвĕсене, çаван пекех çырса хăварнă тата сăмах вĕççĕн çуренĕ уйрăм çăлкуçсене вăхăтпа тачă çыхăнтарса тишкерсе тухни автора Пăлхар çĕрне XIV ĕмĕр вĕçĕнче - XV ĕмĕр пуçламăшĕнче çаратса хăварни-

не çирĕплетекен шухăш патне илсе çитерме пултарна, анчах вăл унашкал пĕтĕмлетӳ туман [5].

XX ĕмĕрти 40-мĕш çулсенчен тытăнса историксем, археологсем, этнологсем халăх Пăлхар çĕрĕнчен çурçĕр енчи вăрманлă вырăнсене куçса кайни е пуранма куçни çинчен яланхи, йĕркеллĕ пулăм выранне хурса кăна çыраççĕ, унти пысăк синкерлĕхе: масăллă геноцида, халăха вĕлерсе пĕтернине, тыткăна илсе кайнине, хăваласа янине, пăлхарсен питĕ анлă çĕр çинчи мĕн пур хули-ялне аркатса тăкнине, пĕтерсе хунине курмаш пулаççĕ. Кун пирки авторсем пурте çиелтен кăна каласа кайнă, пĕр ятарлă тĕпчев ĕçĕ те пулман.

Пăхса тухакан пулăмсене хăш-пĕр авторсем куç кĕрет йăнăш хак панине палăртмалла. "Тутар АССРĕн историйĕ" тата "Вăтам Аталпа Урал çывăхĕнчи тутарсем" кĕнекесен авторĕсем Х.Г.Гимади, Н.И.Воробьев, Р.Г.Фахрутдинов, А.Х.Халиков нимпе çирĕплетмесĕрех пăлхарсемпе тутарсем пĕр халăх пулнă тесе çырнă, вĕсен шучĕпе пăлхарсем Хусан çывăхĕпе Хусан хыçнелле кăна мар, Сĕвен анат тăрăхнелле те куçса кайнă имĕш, каярах, XVII-XX ĕмĕрсенче, унта тутарсем пуранна. А.П.Смирнов шухăшĕ те Хусанти ăсчахсен евĕр пулса пырать, вăл пăлхарсен несĕллĕхне тутарсемпе чăвашсем хушшинче "пайланă". Унăр пуçне Р.Г.Фахрутдиновпа А.П.Смирнов Пăлхар çĕрне ушкуйниксемпе вырăс кнеçĕсем кăна çаратса пĕтернĕ тесе шутланă. М.Г.Сафаргалиев, М.А.Усманов, Г.И.Матвеева, А.Г.Мухамадиев, А.Каппелер пăлхарсем тата тутарсем уйрăм этноссем шутланни çинчен çыраççĕ, Пăлхар çĕршывне çаратса тустарнин чăн-чăн салтавĕсене катартма тăрăшаççĕ. В.Д.Димитриев, И.П.Паньков, Р.Г.Кузеев чăвашсем кăна тӳрремӗнех пăлхарсенчен тухнине тĕрĕс çирĕплетеççĕ /Р.Г.Кузеев пăлхарсем этнокультура тĕлĕшĕнчен тутарсемпе пушкартсене витĕм кӳнине те катартса парать/, пăлхарсем ăçталла куçса кайнине тĕрĕс палăртаççĕ.

Мĕн таран çаратса хăварнине, халăха йышлăн хĕсĕрленине, чĕрĕ юлнисем тата çĕнĕ вырăнсене куçса кайнисем хушшинче пăлхар-чăвашсен тата тутарсен йышĕн тӳпине уçса парайман-ха. Пăлхар çĕршывне тустарнин тата çаратса хăварнин салтавĕсемпе

тапхарĕсене тĕрĕсрех палартни те кирлĕ. Çак статьяра ку ыйтусене уçса парас килет. Вал пысăк регион тата çав вăхăтри пысăк пăлхар /авалхи чăваш/ халăхĕн кун-çулне пырса тивет, ака мĕншĕн эпĕ ку ыйтусем питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ тесе шутлатăп.

Çакна йышăнма тивет: ку статьяра пăхса тухакан ыйтăва тĕпчесе тухмалли çăлкуçсем питех те сахал. Атăлçи Пăлхар, Ылтăн Урта, Хусан ханлăхĕн архивĕсем сыхланса юлман.

Вырăс çăлкуçĕсенчи материалсем, тĕпрен илсен, пĕр енлĕ кăна, вырăс - пăлхар, вырăс - Ылтăн Урта хутшăнавĕсене çеç пырса тивеççĕ. Тухăçри /араб, перс/ çăлкуçĕсем, Пăлхар çĕрĕ çинчен калаканнисем, питĕ чухăн. XIV ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче - XV ĕмĕр пуçламăшĕнче Анăç Европа çул çӳревçисем ку выраналла çитеймен. Юрать-ха XX ĕмĕрте Пăлхар çĕршывĕ пулнă территорире археологин пысăк шыравĕсене ирттернĕ, вĕсем пире касаклантаракан ыйтăва татса памашкăн тĕрĕс тĕслĕхсем илсе кăтартма пулăшаççĕ. Самах вĕççĕн çӳрекен çăлкуçсем - чăвашсен монгол-тутарсен тискерлĕхĕ çинчен калакан истори халапĕсем те питĕ хакла. Сыхланса юлнă çăлкуçсем Пăлхар çĕршывĕнче 1360 çултан тытăнса, уйрăмах XIV ĕмĕр вĕçĕнче - XV ĕмĕр пуçламăшĕнче пулса иртнĕ синкер пуламсене пĕтĕмĕшле кăтартма май параççĕ.

Пăлхарсемпе чăвашсен чĕлхепе этнос пĕрпеклĕхĕ пирки Н.И.Ашмарин никĕсленĕ, XX ĕмĕрте ятла-сумлă асчахсем ырласа йышăннă, аталантарнă теорие истории пăсса кăтартакансенчен нихăшĕ те сирсе яма пултарайман [6].

XIII ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче - XIV ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринче Пăлхар çĕрĕ çинче пуранакансем хушшинче пăлхар-чăвашсем тĕп вырăн йышăннă. Ылтăн Урта куçса çӳрекен империи шутланнă. Куçса çӳрекен пуян феодалсен пĕр пайĕ кăна хăйсен тарçисемпе пĕрле Ылтăн Урта Анат Атăл тăрахĕнче никĕсленĕ хуласенче тĕпленсе пуранна. Çав хуласенче пуранакансенчен ытларахăшĕ çуллахи вăхăтра, тĕпрен илсен, куçса çӳренĕ. Халăх тĕпленсе пуранакан территорисенче, уйрăмăн илсен, Пăлхар çĕрĕнче, куçса çӳрекенсем яланлăха

вырнаçса юлман. Ахартнех, Атăлçи Пăлхар хулисенче монгол-тутарсен администрацийĕпе çарĕн йышлах мар палла çыннисем кăна ялан пуранна пулас. Пăлхар çĕрĕнчи XIII ĕмĕр вĕçĕнче - XIV ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринче ятлă-сумлă çынсен вил тăпри çине лартнă 180 палăка 1960 çулччен тĕпчесе тухни çакна кăтартса парать: çирĕмрен те сахал /10 процент/ палăк çинче кăна тутарла сăмахсемпе уса курнă, 160 ытла эпитафие /90 процент/ чăваш сăмахĕсемпе çырнă. Унта пăлхар-чăваш феодалĕсене, купсасене, палла аластисене пытарнă, "татаризмпа" çырнисемпе танлаштарсан, вĕсен палăкĕсем чухăнрах [7]. Палла ĕнтĕ, асанна вăхăтра пăлхар-чăвашсен кнеçĕсем, çĕрпĕвĕсем, турханĕсем, монгол-тутар элитине, даругĕсемпе баскакĕсене паханса тăнă пулин те, хăйсен çĕрĕ çинчи халăха тытса тăма пăрахман. Енчен те ят-сумлисем хушшинче 90 проценчĕ пăлхар-чăвашсем пулнă пулсан, ялта тата хулара ĕçлекенсем хушшинче пĕтĕмĕшлех пăлхар-чăвашсем пулнă ĕнтĕ.

XШ-XIV ĕмĕрсем чиккинче Ылтăн Урта /Джучи Улусĕ/ икĕ патшалăха - Кок Уртана /урăхла каласан, Кăвак Уртана/ тата Ак Уртана /Шура Уртана/ пайланса кайнă. Ак Урта вассал йĕркипе Кок Уртана паханса тăнă. Иккĕшне те чингисидсем тытса тăнă. Вырăс çăлкуçĕсенче Ак Уртана йăнăшпа Кăвак Урта теççĕ. Чылай чухне ăна Заяицки /Яик леш енчи/ Урта тени тĕл пулать. Кок Уртана вара малашне те Ылтăн Урта, Атăлçи Урта тенĕ.

XIV ĕмĕр варриччен, Ылтăн Уртара монгол ханĕсем централизациленнĕ, вăйлă, пусмăрта тытакан влаçĕ хуçаланнă чухне, куçса çурекенсем, хăйсем икĕ тĕп ĕçпе - выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе тата çар вăйĕпе çаратса пуранна пулин те, империн халăх тĕпленсе пуранакан хутлăхĕсене сайра-хутра çеç тапăна-тапăна çаратнă. Çав вăхăтсенче вĕсем ытларах Ылтăн Урта тулашне кая-кая çаратнă. Чăн та, XIV ĕмĕр варриченнех халăх тĕпленсе пуранакан çĕрсенчен, пуринчен малтан Пăлхар çĕрĕнчен, кантăрти çĕршывсене арçынсемпе хĕрарăмсене чура тума иле-иле кайнă. Араб çыравçи ал-Омари 1348-1349 çулсенче палăртнă тăрăх, Низамеддин Абдульфадаил Яхья ăна çапла ка-

ласа пана иккен: Ылтан Уртари хырҫа тӳлекен халах тыра пулман ҫулсенче выльах-чӗрлӗх вилнӗ май хансене вахатра налук парайманнипе йывӑрлаха кӗрсе ӳкет. Тӳлесе татайман хырҫа выранне ачи-пачине сутма тытанаççӗ. Ал-Омариех 1338 ҫулта Пӑлхар ҫӗршывне ҫитсе курнӑ Шериф Шемседдин купса ҫапла пӗлтернине илсе катартать: "Ҫапла каласа пачӗ мана: хайӗн ҫул ҫӳревӗнче вӑл укҫа ҫуккипе нушаланакан... ҫаванпа хайсен ачи-пачине ирӗксӗрех сутакан ашшӗ-амашӗнчен чура тумашкан арҫын ачасемпе хӗрачасене туянна. Вӗсене илсе кайса лайах та хакла чурасем туса хуна" [8].

Пахантарна халахсене тата харпӑр хай халахне ҫаратна май, эмирсем питӗ пысак пуянлах, улах-ҫаран тата йышла выльах-чӗрлӗх хуҫисем пулса тӑна. Узбек хан /1312-1342/ вахатӗнче, Урта нихҫанхинчен хаватларах пулна чухне, ҫӗршыври 7 эмир хан хаш-пӗр ыйтусене татса пана ҫӗре хутшанна. Узбекан ваталах ывалӗ Джанибек /1342-1357/ пиччӗшӗпе шаллӗне вӗлерсе патшана ларна тапхарта Урта вайсарланса пына. Эмирсем каварлашни тата хурахла ӗҫсем тунипе пӗрлех ҫут ҫанталак инкекӗсем килсе тухна. Китайра 13 миллион ҫын пурнаҫне татна чума чирӗ 1346 ҫулта Ылтан Уртара та сарална, каярахпа Руҫе, Египета, пӗтӗм Европана ҫитнӗ, 1349 ҫулччен хӗн катартна. XV ӗмӗр вӗҫӗнчи Мускав летописӗн пуххинче калана пек, Ылтан Урта территорийӗнче "усал чир Бесерменсене /урахла каласан, пӑлхарсене. - *В.Д.*/ тата Тутарсене, Орьменсене, Обезсене, Жидсене, Фрезсене, Черкассене, унта пуранакан пӗтӗм халаха питӗ вайлан пырса ҫапна, вилнисене пытарма та ҫынсем тарса юлман". Араб авторӗ ал-Айни ҫырна тарах, "чир вайла саралнине" пула Ылтан Уртари ялсемпе хуласенче ҫынсем сахал юлна [9].

Ылтан Урта историйӗн 1357-1374 ҫулсем хушшинчи тапхарне "пысак патрашу", "пысак хирӗҫӳлӗх" тапхарӗ теççӗ. Вырас летописӗсенче ҫав тапхара "Уртари пысак араш-пирӗшлӗх" тесе палартна. 20 ҫул хушшинче 25 хан улшанна унта. Эмирсем, бексем, нойонсем хана паханасшан пулман, тӗп влаҫа паханса тама парахна. Эмирсенчен пӗрисем хайсен ҫарӗсемпе куҫса ҫӳрекен улуссене, уйрӑмах ытти эмирсен

халăх тĕпленсе пуранакан çĕрĕсене çаратса çӳренĕ, çынсене вĕлернĕ, Кантарпа Тухăçри çĕршывсене сутмашкăн тыткăна илсе кайнă, хуласемпе ялсене тĕп тунă. Хăш-пĕр эмирсем, Уртана паханмасар тытса тăрас тĕллевпе, çĕрсене яра-яра илнĕ. Ахартнех, çав 20 çул хушшинче куçса çӳрекен улуссен эмирĕсем Пăлхар çĕрĕсене тустарма, çаратма сахал мар килсе çӳренĕ.

1357 çулта Уртара "питĕ пысăк араш-пирĕшлĕх" пулса иртнĕ: Джанибек хан вилнĕ, унăн ывăлĕ Бердебек хăйĕн пиччĕшĕсемпе шăллĕсене вĕлерсе хана ларнă. Бердебек 1359 çулта вилнĕ. Ун выранне лартнă Кулпа хана тепĕр 5 уйăхран хăйне хан тесе пĕлтерекен Наурус вĕлернĕ. 1360 çулхи çуркунне Хадырь /Хидыр/ чингисид хăйĕн çарĕпе Шура Уртаран Сарай хулине пырса çитнĕ, Наурус ханпа хан арăмне, Уртан чылай кнеçне вĕлернĕ, хан пулса тăнă. "Уртара пысăк пăлхав çĕкленнĕ, патшасене, патша майрисене, патша ывăлĕсемпе ахаль çынсене нумай хĕнесе пĕтернĕ, пĕр-пĕрин хушшинче тытăçу пуçланнă". Çав çулах Новгород бояринĕ Анфал Никитин ушкуйниксен /вăра-хурахсен/ ушкăнĕпе Пăлхар çĕрне пырса кĕнĕ, "Жукотин хулине тытса илнĕ, нумай бесермена пĕтерсе тăкнă, вĕсен пурлăхне çаратнă". Вăра-хурахла ĕçсемшĕн таварса, Пăлхар хулинче вырăс купсисене çаратнă. Жукотинри пăлхар кнеçĕсем пулашу ыйтма Сарай хулине, Хадыр хан патне кайнă, унран "хайне тата вĕсене вăра-хурахсенчен хӳтĕлеме ыйтнă, мĕншĕн тесен çынсене нумай вĕлереççĕ тата пĕр вĕçĕмсĕр тапанса çаратаççĕ." Хадыр хан вырăс кнеçĕсем патне виçĕ элчĕ - Урус, Каирбек, Алтынчибей ятлăскерсене - ярать /паллах, çарпа пĕрле/. Костромара вырăс кнеçĕсен съезчĕ пулнă. Тин кăна аслă Владимир кнеçĕ пулса тăнă Дмитрий Константинович Суздальский кнеç, унăн пиччĕшĕ - Чул Хула кнеçĕ - Андрей Константинович тата Ростов кнеçĕ Константин вăра-хурахсене ярса тытнă та вĕсене пурне те патша /урăхла каласан, хан. - *В.Д.*/ элчисен аллине панă, вĕсене хăйсен пурлăхĕпе пĕрлех Уртана ăсатнă. Вăра-хурахсене çакса вĕлернĕ унта. Жукотинра çаратнă пурлăха пăлхарсене таварса панă. Кун пирки вырассен хăш-пĕр летописĕсенче çапла

каланӓ: “Вырӓс кнеçӗсен нумай тӓкакланма тата тертленме лекнӗ” [10].

Мускавӓн аслӓ кнеçӗ Дмитрий Иванович 1361 çулта Худырь хан патӗнче пулма ӗлкӗрнӗ. Анчах та Владимирӓн аслӓ кнеçӗ Дмитрий Константинович Суздальский, унӓн пиччӗшӗ, Чул Хулан аслӓ кнеçӗ Андрей Константинович, Ростов кнеçӗ Константин тата Ярославль кнеçӗ Михаил Сарай хулине пырса çитнӗ чухне Уртара çӗнӗ “пысӓк арӓш-пирӗшлӗх” пулса иртнӗ: Хадырь ханӓн аслӓ ывӓлӗ Темир-Хаджа ашшӗне - хана тата унӓн кӗçӗн ывӓлне Кутлуя вӗлернӗ, хӓй хана ларнӓ. Анчах та хӓватлӓ темник, Урта кнеçӗ Мамай Темир-Хаджана хирӗç çӗкленнӗ, пӗтӗм Уртана çавӓрса илнӗ, Авдула /Абдуллаха/ хан тесе пӗлтернӗ. “Уртара хирӗçӳ, пысӓк арӓш-пирӗшлӗх пулса иртнӗ”. Каялла таврӓннӓ чухне вырӓс кнеçӗсене тутар кнеçӗсем тапӓннӓ. Темир-Хаджа Атӓлӓн тепӗр енне тухса тарнӓ, ӓна унтах вӗлернӗ /хан вырӓнӗнче вӓл пӗр уйӓх та 7 кун çеç ларнӓ/. Мамай “пысӓк вӓйпа” Атӓлӓн сӓртлӓ енне каçсан, “пӗтӗм Урта”, Авдул хан та унпа пӗрле тухса кайсан, Сарай хулинче хан пуласшӓн тупӓшакан виççӗмӗш çын - Джанибек ывӓлӗ Килдибек пӓлхав çӗкленӗ. Вӓл “нумай çынна вӗлернӗ, хӓйӗн пуçне те çинӗ”. Çавӓн хыççӓн тӗп хулара хупӓнса ларнӓ Сарай кнеçӗсем Хадырь шӓллӗ Мурат хан вырӓнне йышӓнни çинчен пӗлтернӗ. Çав вӓхӓтра “Урта кнеçӗ Булат Темир Пӓлхара, Атӓл çинчи мӗн пур хуласемпе улуссене, пӗтӗм Атӓл çулне тытса илнӗ”. Çавӓн чухнех Уртан тепӗр кнеçӗ Тогай Наровчатпа унӓн пӗтӗм хутлӓхне ярса илнӗ. Уртан ытти хӓш-пӗр улусӗсенче те çавӓн пек сепаратистсем тупӓннӓ. Уртаран уйрӓлнӓ çӗрсенче хирӗçӳ тапраннӓ, юн юхнӓ. 1361-1362 çулсенче Мамай темник Мурат ханпа тата Сарай кнеçӗсемпе пӗрре çеç мар çапӓçнӓ. Мурат хӓй те Атӓл çинче Мамай çарне тапӓннӓ, тутарсене нумай вӗлернӗ. Ылтӓн Уртара икӗ хан пуç пулса тӓнӓ: Мамай Уртинче - Авдул /Абдуллах/ хан, Сарай Уртинче - Мурат хан. Сарай ал-Джедид Сарай Уртин тӗп хули пулса тӓнӓ, Крым - Мамай Уртин центрӗ. Вӗсем хушшинчи хирӗçӳ вырӓс кнеçӗсем Уртапа тата Пӓлхар çӗршывӗпе тытакан хутшӓнусенче те палӓрнӓ [11].

Урта кнеçĕ Булат Тимур, Пăлхар çĕрне çапăçса тытса илнĕ /"Атăл тăрăхĕнчи хуласене, мĕн пур вулассене вăрçăпа пĕрлештерме пултарнă"/ хыççăн унта Уртана паханман кнеçлĕх туса хунă, ăна 1367 çулччен тытса тăнă. Хусан историкĕ Х.Г.Гимади Пăлхар çĕрне çаратасси, унăн хулисемпе ялĕсене пĕтерсе тăкасси, унти халăх çурçĕр еннелле куçса каясси, тĕпрен илсен, Булат Тимур тапанса кĕнĕ вăхăтра пулнă тесе çирĕплетет. Уксак Тимур /Тамерлан/ Пăлхарпа Пулере аркатни çинчен калкан истори халапĕсене те вал Ватам Азирен тапанса килнĕ çын ячĕпе мар, Булат Тимур ячĕпе çыхăнтарать. Паллах, çакна ĕненме май çук. Х.Г.Гимади çирĕплетни 1955 çулта тата 1968 çулта каларнă "Тутар АССРĕн историне" те кĕнĕ /94-96 тата 66 стр./. Булат Тимур Пăлхар çĕрне тустарнине ытлашши пысăклатса катартнă вал. Анчах та çаван чухне тустарни пулнах. Булат Тимур Пăлхар çĕрĕсене, Тогай - Наровчата тытса илни çинчен пĕлтернĕ хыççăн Никон летописĕсенче çапла каланă: "Вĕсенче тем пек пысăк выçлăх, нумай араш-пирĕшлĕх пулнă, йĕрке пулман, пĕр-пĕринпе çапăçаççĕ, юн юхтараççĕ". Çакăн çинчен Рогожски летописец та пĕлтерет. Пăлхар çĕрне Тимур Булат хăй кăна тустарман. Иккĕленмелли çук, çав çулсенче ăна Сарай Уртин, çаван пекех Мамай Уртин çарĕсем тапаннă, халăх тĕпленсе пуранакан, тырă нумай туса илекен территорие каллех Уртана - куçса çурекен империе пăханса тăмалла тума тăрăшнă. 1363 çулта Сарай Уртинче Мурат хана вĕлернĕ. Булат-Ходжа хан пулса тăнă, вал чăн-чăн тиран шутланнă. Пăлхар çĕрне каллех хăй аллинче тытса тăма тата Булат Тимура хирĕç хăй майлă тăракансене шыраса, вал Суздальпе Чулхула кнеçне Дмитрий Константиновича Владимир аслă кнеçлĕхĕн ярлăкне панă, ку енĕпе Мамай ханĕ Абдуллах Мускаван аслă кнеçне панă ярлăка парахăçланă. Абдул-Ходжана 1364 çулта эмирсем вĕлернĕ. Хан вырăнне Азиз йышăннă, вал та Пăлхар çĕрне хăйне пăхăнтарасшăн хыпаннă. 1367 çулта Мамай майлисем Азиза вĕлереççĕ, Мамай ханĕ Абдуллах Сарай патшине ларать. Анланмалла ĕнтĕ, çав хансем пурте Пăлхар çĕрне Урта йышне тавăрассишĕн кĕрешнĕ, ун çине çаратас тĕллевпе тапăн-

на. Булат Тимуран чи хаяр ташманĕ шутланна Мамай. Булат Тимур Сарай Уртине те паханман, Палхарта хайĕн кĕмĕл укçине çаптарна /вĕсенчен 17 экземпляр сыхланса юлна/. Вырас летописĕсенче тутар çарĕсем пайăр пулăмсене, походсемпе çапаçусене палартман, çапах та çулерех икĕ летописрен илсе катартнинченех Булат Тимур хан вахатĕнче Палхар хулисемпе ялĕсене аркатса пĕтернĕ пирки иккĕленмелли çук [12].

1361 çултан пуçласа Хĕвелтухаç Европара хĕлле шартлама сивĕ, çулла типĕ, шарах тана, вуна çул хушши ытла сикекен чир-чĕр асаплантарна пирки, пĕтĕм Уртари тата вырас кнеçлĕхĕсенчи пекех, Палхарта та лару-тару йывăрланна. А.Х.Халиков 1361 çулхи выçлах пирки çапла çырать: "Вырас летописецĕ 1361 çулта палартна тарах, Атал тарахĕнче шартлама сивĕ хĕл тана, юр сахал çуна, çулла вара питĕ шарах тана, тутарсем хушшинче питĕ пысак выçлах пулна". 1362 çулта, çанталак çавнашкал танипе пĕрлех, "Уртара пысак палхав пуçланна. Патшасемпе патша ывалĕсенчен, туре-шарасенчен нумайашĕ пĕр-пĕринпе çапаçна". "Çав /1362/ çулах Уртара çынсем сикекен чирсенчен нумай вилнĕ, мур /эпидеми/ вырас хулисене те сарална". Никон летописĕнче çырна тарах, 1364 çулта "çанталак питĕ шарах пулна, çĕр çинче те, сывлашра та тĕтĕм йăсарланна, Ылтан Уртан Атал тарахĕнчи, çав шутра Палхар çĕршывĕнчи, хуласенчен Бездежран "вайла та харуша мур" Чулхулана, унтан - вырассен нумай хулисене çитнĕ". Çынсем чирлесе уксен виççĕмĕш кунне вилсе кайна. 5-20 вилене пĕр шатакра пытарна. Палхар çĕрĕнче те çаван пекех пулна ĕнтĕ. 1365 çулта "çуллахи вахатан çурри таран тĕтĕм йăсарланна, питĕ шарах, вĕри пулна, вармансем, шурлах тата çĕр çунна, юхан шывсем типсе ларна... çынсем пурте харанипе сехĕрленсе укнĕ, çав тери пысак нуша туснĕ". Тепĕр çулхине, 1366 çулта, "питĕ шарах, типĕ çанталак тана, сывлашра тĕтĕм йăсарланна, çĕр çунна, пур çĕрте те тыра хакĕ уссе кайна, çĕр çинче таçта та выçлах алхасна, çаванпа çынсем нумай вилнĕ", "пысак мур" сарална. Çав çулсенче варçасене пула çеç мар, выçлахпа чир-чĕре пула та Палхар çĕрĕнчи халах йышĕ чакна [13].

Рогожский летописец пĕлтернĕ тарăх, 1366 çулта "Атăл çине аслă Новгородран çĕр аллă ушкуй /кимĕ/ килсе çитнĕ, вара-хурах ушкуйниксем Чулхулара нумай Бесермена /урахла каласан, пăлхарсене. - *В.Д.*/, темĕн чухлĕ арçынпа хĕрарăма, ача-пăчана хĕнесе асаплантарнă, вĕсен питĕ нумай таварне çаратнă, суднисене - кербатсене, кимĕсене, учансене, повозкăсене, стругсене пĕтĕмпех аркатса тăкнă, унтан вара Кама еннелле кайнă, Пăлхар хули патне çитнĕ, çаван пек тискер ĕçсемех тунă, çапăçнă". Ытти летописçенче çырнипе килĕшӳллĕн, Новгород вăра-хурахĕсем 200 ушкуй çинче пулнă, Чулхулара пăлхарсемпе ытти сутуçăсен кимми-карапĕсене "пĕтĕмпех çунтарса янă, хăйсем Кама патне çитнĕ. Кама тарах çуренĕ, Пăлхарпа çапăçнă, нумай çынна асаплантарнă", урахла каласан, вĕсем Пăлхар хулинче чаранман, Камăпа ытти юхан шывсем хĕрринче вырнаçнă ытти хуласене те çаратнă, аркатса тăкнă, кайран Новгорода тавраннă. Çакна пĕлсен, Мускаван аслă кнеçĕ Дмитрий Иванович хăйĕн элчине Новгорода янă, çапла хытах асăрхаттарнă: "Мĕншĕн Атăл çине кайнă, манан купсасене çаратнă тата бесерменсене хĕнесе асаплантарнă?" Новгород çыннисен унран каçару ыйтма тивнĕ, Дмитрий Иванович вĕсенчен "танăçлăхпа юратушăн" 8000 тенкĕ штраф илнĕ, çав шутран 3000 тенкине хăйĕн хунĕшне Дмитрий Константиновича уйăрса панă [14].

1367 çулта Булат Тимур "пысăк вăй пухса, чылай çапăçура çĕнтернĕ май, татах та вăйланса" Суздальпе Чулхула кнеçлĕхне, Борис Константинович кнеç çĕрĕ çине пырса кĕнĕ, Сăр варринчен тытăнса Сундовск таран вырăссен Атăл çинчи ялĕсене çаратнă. Суздальпе Чулхула кнеçлĕхĕн кнеçĕ Дмитрий Константинович хăйĕн таванĕсемпе Бориспа тата Дмитрипе, хăйĕн ачисемпе пĕрле пысăк йышлă çар пуçтарнă, Булат Тимура хирĕç тухнă. Лешĕ çапăçуран паранна, Пьяна юханшывĕн леш еннелле чакнă. Чулхула çарĕ тутарсен çарне хăваласа çитнĕ, нумай тутара пĕтерсе тăкнă, ыттисене Пьяна шывне путарнă, тарса саланнисене тĕрлĕ çĕрте тыта-тыта вĕлернĕ. Хăйĕн тутар çарне çухатнă май, Булат Тимур Пăлхар çĕрне тавранма шикленнĕ, пĕчĕк дружинипе Сарай хулине тарнă, унта ăна Азиз хан вĕлернĕ [15].

Археологсем, çав шутра А.П.Смирнов, чавса тĕпчени Булат Тимур Пăлхар хулине тата пăлхарсен ытти хулисемпе ялĕсене чылай аркатнине çирĕплетет. Археологи тĕпчевĕсене пĕтĕмлетсе, А.Х.Халиков çапла çырать: "Тĕпчевçĕсем шутлана тăрах, Пăлхар уйрăмах пысăк инкек тӳснĕ, археологсенчен нумайашĕ шутлана тăрах, вăл çунса кайнă, çакна Пăлхар хули пулнă выранта Ылтăн Уртан ватăм тапхăрти сийĕнче пушар паллисем пурри те кăтартса парать, ăсчахсем пурте çав пушар 1361 çулта, урăхла каласан, Булат Тимур Пăлхара походпа кайнă вăхăтра пулнине ĕнентереççĕ. Пăлхар çĕршывĕн ытти нумай ялĕ-хули те пысăк инкек тӳснĕ". Г.А.Федоров-Давыдов "Джучид укçисене шыраса тупни" ятлă тĕпчев ĕçĕ пичетленĕ. Вăл çырнипе килĕшӳллĕн, Пăлхар çĕрĕнче Ылтăн Уртан чавса пытарнă укçисене тупнă выраńсенчен ытларахăшĕ 1361-1363 çулсемпе çыханнă: кунта 1310-1379 çулсенче укçа чавса пытарнă 40 выраńтан "36 выранта тупнă укçасене 1358-1362 çулта хатĕрленĕ". Эпир илсе кăтартакан тĕслĕхсем çакна çирĕплетеççĕ: Пăлхар çĕрĕнче пуранакансем, йывăр лару-тăрава кĕрсе ӳксен, хăйсен пуянлăхне чавса пытарнă. Ахăртнех, эпир пăхса тухакан тапхăрта пăлхар-чăвашсем Пăлхар çĕрĕн çурçĕр енчи харушлăхсăртарах, вăрманлă выраńĕсене тухса каясси /тарасси/ вăйланнă пулас [16].

Мамай уйăрса лартнă Абдуллах хан Сарайра пĕр çул хушши кăна тытăнса тăнă. Пĕрисем çирĕплетнĕ тăрах, ăна 1368-1369 çулсенче Сарайра укçа кăларакан Хасан-Оглан хăваласа янă. Анчах та Г.А.Мухамадиев вăл укçа кăларнине асăнмасть. Хасан-Оглан тата 1370 çулта Пăлхар çĕрне тытса тăнă пăлхар кнеçĕ Хасан /Осан/ пĕр çын пулнă тенине те ĕненме йывăр. Сарайра Хасан-Оглан выраńне Хаджи-Черкес, ун хыççăн - Алибек, Карихан, Урус-хан /1377 çултанпа/, Тимур-Мелик йышăннă. 1380 çулта Уксах Тимур уйăрса лартнă Тохтамыш Сарай ханĕ пулса тăрать. Мамай Уртинче Абдуллах выраńне Мухамед-Буляк йышăннă, ăна 1380 çулта Мамай вĕлернĕ, Тулук-бек хан пулса тăни çинчен пĕлтернĕ. 1379 çулта Мамай Çурçĕр Кавказа пăхăнтарать. 1380 çулта Аçтăрхана тытса илет. Ылтăн Уртан Атăлăн сылтăм енчи

пĕтĕм территорине хай аллинче тытна вăл. Пăлхар çĕрĕпе Хорезмсĕр пуçне, Атăлăн тухăçри территорийĕ Сарай аллинче тăна [17].

Новгородан IV летописĕпе килĕшӳллĕн, 1369 çулхи кĕркунне "10 ушкуй Атăл тăрăх, ыттисем Кама тăрăх пына, вĕсене Пăлхар çывăхĕнче пĕтерсе тăкна", урăхла каласан, ушкуйниксене Пăлхарта çапса аркатна. 1370 çулта "Новгород çыннисем икĕ хутчен Атăл тăрăх çӳренĕ, усал ĕç нумай туна" [18]. Ушкуйниксем 1370 çулта Пăлхар çĕрне çитнĕ теме май çук.

Пăлхар çĕршывĕнчи 1370-1376 çулсенчи ĕçсем пирки çырна палла хыпарсем сахал мар вырăс летописĕсенче. Воскресени летописĕ çапла пĕлтерет: 1370 çулта Суздальпе Чулхула кнеçĕ Дмитрий Константинович "хайĕн шăллĕне Борис кнеçе тата хайĕн ывăлне Василий кнеçе пысăк çарпа Пăлхар кнеçĕ Асан патне яна, вĕсемпе пĕрле хан элчи Ачихож пулна; Асан вара вĕсене пуç тайса кĕтсе илсе парнесем нумай пана, çав парнесене йышăнна вĕсем, Пăлхарта Салтан Бак ывăлне кнеç пулма лартна та каялла тавăрна [19]. Çакăн çинчен пĕлтерни ытти летописçенче те пур. Никон летописĕ тĕрĕсрех палартна тăрăх, вырăс çарĕсем Чулхуларан кайна, каялла унтах тавăрна. Вырăс летописĕсенче Булат Тимура урта кнеçĕ тенĕ пулсан, Хасана (Асана) вĕсем пăлхар кнеçĕ тесе шутлана. Ачи-Ходжа Мамай Уртин ханĕн элчи пулна [20].

Суздальпе Чулхула кнеçĕн ирĕксĕрех Пăлхар çĕрне Сарай Уртинчен уйăрлна пăлхар кнеçне Хасана хирĕç çар яма тивнĕ, çаван пек тумашкăн Мамай Уртин элчи, Чулхулана яланхи пекех пысăк çарпа пына Ачи-Ходжа ыйтна. Эпир 1376 çулта вырăс çарĕсем пăлхар çĕрне тапăнни çинчен пĕлнĕ тăрăх, Мамай уйăрса лартна Махмат Салтан /Мухаммед Султан/ тата пăлхар кнеçĕ Хасан пĕр чĕлхе тупма пултарна иккен, иккĕшĕ те хăйсен выраннĕнчех юлна. Анланмалла ĕнтĕ, Махмат Салтан Пăлхар çĕрне Сарай Уртине пăхăнтарассине хирĕç тăна.

1372 çул тĕлнелле вырăс ялĕсем Сăр юхан шывĕн анат тата ватăм тăрăхĕнчи сулахай çыранра куранма пуçлана. Çав çулах Городец кнеçĕ Борис Константи-

нович Сăр хĕрринчи Кармăш хулин никĕсне хывнă. Чулхулара чулран Кремль тума тытăннă [21].

1374 çулта "Вятка юхан шывĕпе 90 ушкуй çине ларнă вăрă-хурахсем анаталла анна, Вяткана çаратнă, Пăлхара тытса илнĕ, хулана çунтарса ярасшăн пулнă, çакăнтан вĕсене пăлхарсем 300 тенкĕ парса хăтăлнă. Ун хыççăн икĕ ушкăна пайланса, 50 ушкуй Атăл тăрăх анаталла Сарай патне çитнĕ, 40 ушкуй вара Атăл тăрăх тăвалла хăпарнă, Обухов тĕлнĕ çитнĕ, Сăр тухăç енне, Маркваша çаратнă, Атăл урлă каçса, карапсене пĕтĕмпех аркатнă, хăйсем Вяткана лашасемпе кайнă, çула май Ветлуга тăрăхĕнчи нумай яла çаратса хăварнă" /22/. Кунта çырса кăтартнинче Сăр тухăç енĕ Сăр юхан шывĕн сылтăм çыранне, Обуховка - Чикме уесĕнчи пысăкак мар юхан шыва пĕлтерет /23/. Маркваш тесе хальхи Чăваш Енри Муркаш ялне асăннă пулас, XIV ĕмĕрте вăл çармăс ялĕ шутланнă.

1375 çулта Новгород ушкуйникĕсем Костромара хурахла ĕçсем пуçланă. Мускаван XV ĕмĕр вĕçĕнчи летопись пуххинче вĕсен похочĕ пирки тĕплĕн çырса хунă: Прокоф тата Смольянин воеводăсем ертсе пыракан икĕ пин вăрă-хурах 70 ушкуйпа Костромана пырса çитнĕ. Унти Тлещей воевода, пилĕк пин çар çынни тытнăскер, "хăйĕн çарĕпе хулине пăрахсах тухса тарнă". Ушкуйниксем воевода хыççăн тухса таракансене вĕлерсе пĕтернĕ е тыткăна илсе, çыхса лартнă. Хулана хупăлекенсем çуккине курса, ушкуйниксем унта пырса кĕнĕ, "мĕн пуррине йăлтах çаратнă, хăйсем илме вăй çитмен йывăр пурлăха Атăла яна; унта пĕр эрне хушши тăрса... пайтах Христос тĕнне ĕненекенсене - арçынсене, хĕрарăмсене, ачапăчана, каччăсемпе хĕрсене хăйсемпе пĕрле илсе, анаталла Чулхулана çити кайнă, унта усал ĕç нумай тунă, Бесерменсене, çаван пекех Христос тĕнне ĕненекенсене те хĕнесе асаплантарнă, хăшне-пĕрне арăмĕсемпе, ачи-пăчипе тыткăна илнĕ, вĕсен таварне çаратнă, анаталла кайса, Кама юхан шывнелле пăраннă, Кама тăрăх пырса нумай çаратнă, унта каллех Атăл çине тухнă, Пăлхара çитсен хăйсем тыткăна илнĕ христьянсене пурне те сутса хăварнă, анаталла Сарай патнелле кайнă..." Атăл тăрăх анаталла анна чухне те пăлхарсемпе тутарсене çаратнă. Аçтăрхан

патне çитсен пур ушкуйниксене те çĕмĕрсе тăкнă, вĕсенчен пĕри те сывă юлман [24]. Ытти летопиçсем те çакăн çинчен пĕлтереççĕ [25].

Илсе кăтартнă тĕслĕхсем çакна çирĕплетеççĕ: Новгород ушкуйникĕсем нимрен малтан вырăс хулисемпе ялĕсене, çаван пекех çармас, удмурт ялĕсене çаратса çӳренĕ. Вĕсем Пăлхар çĕрне те ишсе çитнĕ, çапах та вырăс хулисемпе танлаштарсан пысăк инкек кӳреймен. 1375 çулта ушкуйниксем тыткăна илнĕ вырăссене Пăлхарта сутса хăварнă. Хăш-пĕр историксем, уйрăмах Хусан историкĕсем, Пăлхар çĕрне тĕпрен илсен ушкуйниксем тустарнă тесе çирĕплетни тĕрĕс тесе йышăнма çук.

Çав вăхăтрах, 1372 çултан тытăнса, Мамай вырăс çĕрĕсем тутарсене пăхăнса тăнине çĕнĕрен çирĕплетме тытăннă. 1371 çулта Тверь кнеçĕ Михаил Александрович тата Мускав кнеçĕ Дмитрий Иванович хăйсене "Мамай кнеçпе унăн патшин" - Мухамед-Буляк ăн вассалĕсем тесе йышăннă, ăна хырçа тӳлесе тăма килĕшнĕ. 1371 çулта Рязаньте тутарсем хырçа пуçтарнине хирĕçлесе пăлхав çĕкленĕ, тепĕр çулхине тутарсем Рязане тапăннă. 1373 çулта Дмитрий Иванович Мамай Уртине хырçа тӳлеме парахнă. Вырăс çĕрĕсене час-часах тапăнма пуçланă Мамай тутарĕсем. 1374 çулхи çулла Чулхулара Сарака ертсе пыракан, хырçа пухма пин тутарпа килсе çитнĕ Мамай элчисене "пĕтерсе тăкнă". Чулхула çыннисем нумай тутара вĕлернĕ, дружина юлашкине хуларан кăларса яман. 1375 çулхи çуркунне çав тутар дружинникĕсем хулара владыка çуртне вут тĕртнĕ, çынсем çине пеме тытăннă, Дионисий епископ вилĕмрен аран-аран хăтăлса юлнă. Чулхулари çар çыннисем тутарсене пурне те вĕлернĕ. Çулла Мамай Уртин тутарĕсем Кăш хулине тытса илнĕ, "Пьяна юхан шывĕн леш енне йăлтах çаратнă, çынсене вĕлерсе пĕтернĕ, хăшне-пĕрне тыткăна илсе кайнă" [26].

Ахăртнех, Пăлхар çĕрне Мамай уйăрса лартнă Махмат Салтан /Мухаммед Султан/ тытса тăнăран пулас, 1376 çулта вырăссен пĕрлештернĕ çарĕ Пăлхар çĕршывне тапăннă. Воскресени летопиçĕнче ун пирки тĕплĕн çапла çырнă: "Пăлхар çинчен. Çав хĕллех аслă кнеç Дмитрий Иванович Дмитрий Михайлович

Волынский кнеçе Христос тĕнне ĕненмен Пăлхара çарпа яна. Дмитрий Константинович Суздальский кнеç вара хайĕн ывăлне Василий кнеçе тата Иван кнеçе, вĕсемпе пĕрле боярсене, йышла çар яна; Пăлхар патне Асла типĕ вăхатĕнче, пуш уйăхĕн 16-мĕшĕнче, Качка эрнинчи тунтикун пырса çитнĕ; тĕне ĕненменнисем вĕсене хирĕç çапăçăва тухна, пеме тытăнна, теприсем хуларан аслати пек кĕмсĕртеттерсе хыттăн персе вырăс полкĕсене хăратма пикеннĕ, самострелсенчен персе тăна, тĕвесем çине утланса тухна, вырăссен утла çарне хăратма шут тытна; вырăссем вара нимĕн чухлĕ те хараман, çирĕппĕнех çапăçăва тухна, кар тăрса вĕсем çине тапăнна, вĕсем хайсен хулине тарса кĕнĕ, Руç хăвалана вĕсене, çапса салатна, 70 бесермена вĕлернĕ. Пăлхар кнеçĕ Хасан тата Махмат Салтан асла кнеçе тата унăн хунĕшне Дмитрий Константинович кнеçе икĕ пин тенкĕ парса пуç тайна, вĕсен çарне виçĕ пин тенкĕ туленĕ; Пăлхарта Мускав асла кнеçĕн даругине тата таможникне уйăрса лартна, каялла тавранна чухне нумай усал ĕç туна пăлхарсене, вĕсен кимми-карапĕсене, ялĕсене çунтарса яна, çынсене тыта-тыта хĕненĕ" [27]. Ытти летописçенче те кун пирки тата ураххине çырни те тĕл пулать [28].

Куратпăр ĕнтĕ, Пăлхар çарĕ вырăс çарне хирĕç çапăçна, унăн ухăсем кăна мар, ытти хĕç-пăшал та пулна, хуларан "аслати пек кĕмсĕртеттерсе" пенĕ, утла çара хирĕç тĕвесем çине утланна салтаксене яна, çапах та вырăс çарне çĕнтерме пултарайман, çапăçура 70 çын çухатна. Вырăссем параннисенчен пысăк контрибуци илнĕ çеç мар, вĕсем Пăлхара Мускавăн асла кнеçĕн влаçне пăхăнтарна тесе унта хайсен ертӳçине /даруга/ тата таможникне хăварна. Каялла кайна чухне вырăс çарĕсем çула май пăлхарсен кимми-карапĕсене пĕтерсе тăкна, ялĕсене çунтарса яна, çынсене тĕп туна. Ахăртнех, вĕсен çулĕ хальхи Тутарстанăн кăнтăр-хĕвеланăç тата Чăваш Енĕн кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕ, çав вăхăтра пăлхар-чăваш ялĕсем пулна вырăнсем урла иртнĕ. Çав поход хыççăн Мускавăн асла кнеçне Дмитрий Ивановича "Пăлхара çĕнсе илекен" тесе чĕнме тытăнна.

В.Л.Егоров археолог тата историк, çырулăх, эпигра-

фи, картографи, нумизматика тата археологи ҫӑлкуҫӗсене тӗпчесе, Хусан хули пуҫланса кайни ҫинчен питех те пысӑк пӗлтерӗшлӗ пӗтӗмлетӳ тунӑ. Ӑсчах ҫапла шутлать: Мухаммед Султан 1370 ҫулта Пӑлхар патши пулса тӑрсан /ӑна Мамай мар, Сарай уйӑрса лартнӑ тесе В.Л.Егоров йӑнӑшать, ҫакна вырӑс летописӗсем тӳррӗн катартса параҫҫӗ/, влаҫа Пӑлхар кнеҫӗпе Хасанпа пӗрле пайлана, ӑна Каман сылтӑм енчен юхса кӗрекен Меша шывӗнчен ҫурҫӗререхри ҫӗрсене тытса тӑма сӗннӗ. "Хайӗн резиденцине тата ҫӗрсен администраци центрӗ тума Хасан Пӑлхартан 120 ҫухрам ҫурҫӗр еннерех, халӗ Казанка юхса тухакан выранӑ суйласа илнӗ... Пӑлхар кнеҫӗ Хасан 1370 ҫулта никӗсленӗ ҫӗнӗ хула хайне туса хураканӗн ятне илнӗ". В.Л.Егоров шутланӑ тарӑх, Хасан 1370 ҫулта вырӑс ҫарӗ ҫывхарса ҫитнине чи малтан пӗлнӗ, харушлӑх тухса тӑни ҫинчен Мухаммед Султана асӑрхаттарнӑ. "20 ҫул хушшинче /1370-1390 ҫҫ./ Хасан ҫӗрӗсен администраци центрӗ нумай пысӑкланнӑ, ят илнӗ, 1391 ҫулта вырӑс летописӗ ӑна пурте лайӑх пӗлнӗ Жукотинпа пӗрле асӑнать. Ҫав вӑхӑт тӗлне Пӑлхар хули, XIV ӗмӗрӗн иккӗмӗш ҫурринче пӗрре кӑна мар хаяр ҫапаҫусен выранӗ пулнӑскер, хайӗн пӗлтерӗшне пӗтӗмӗшлех ҫухатать". Каярахпа Хасан хулине тутарсем "Казан", вырӑссем - "Казань" теме пуҫланӑ. Чӑвашсем халиччен те вӑл хулана Хасан ячӗпе "Хусан" теҫҫӗ. В.Л.Егоров ҫакна ӗненмелле ҫирӗплетсе парать: "Хусан летописецӗ" Хусан 1177 ҫулта пуҫланса кайнӑ тени унӑн авторӗ пуҫран шухӑшласа каларни ҫеҫ, хӑш-пӗр летописецсем Хусана Бату хан вӑхӑтӗнче /1242-1355 ҫҫ./ никӗсленӗ тесе пӗлтернине летописе каярахпа, IV Иван патша Хусан ханлӑхне ҫӗнсе илнӗ хыҫҫӑн хушса ҫырнӑ [29]. Малтанхи ҫулсенче Хусана Ҫӗнӗ Пӑлхар тени те пулнӑ. Р.Г.Фахрутдинов ҫакна тӗрӗс кӑтартать: XVI ӗмӗрӗн виҫҫӗмӗш чӗрӗкӗнче, Вырӑс патшалӑхӗ Хусан ханлӑхне ҫӗнсе илнӗ хыҫҫӑн ҫырнӑ Никон летописӗнче унӑн летописецӗсем "Кашан хули" /Кама ҫинче/ выранне "Хусан хули", "Пӑлхарсем" выранне - "Хусан ҫыннисем" тесе тӗрӗс мар тӳрлетӳсем кӗртнӗ. Хӑш-пӗр авторсем /А.Х.Халиков т.ыт./, Хусан хули чылай маларах пулса кайнине никӗслес шутпа, ҫаван пек

тӳрлетӳсене теплӗн тишкермесӗрех йышӑнӑ [30]. Çакна та асӑнса хӑвармалла: чӑвашсен истори халапӗсенче пӗлтернӗ тӑрӑх, Хусан хулине пӑлхар-чӑвашсем, Хусан ятлӑ пуян чӑваш никӗсленӗ [31]. Хасанан çӗрӗ тата çав ятлӑ хула пулса кайни Хусан çывӑхӗнче тата Хусантан тухӑç еннелле пӑлхар-чӑвашсем йышлӑ пураннине çирӗплетет. Çапла вара Хусанта Пӑлхар çыннисем тӗпленсе пуранма пуçланӑ темелле. Темиçе çӗр çултан вӗсен несӗлӗсем, тутара тухна пӑлхар-чӑвашсем, хайсен ячӗ çумне "Булгари" тахаллус-топонимне хушса хунӑ. Тутарсем пӑлхарсенчен тухна текен шухӑш майлӑ тӑракансем вара "Булгари" тахаллус çав çынсем пӑлхартан тухнине пӗлтерет тесе суйӑ. Хусанти палла историк М.А.Усманов, çавнашкал ӑнлантарава хирӗçлесе, çапла каланӑ: "Булгари" тени вӑл Пӑлхар хулинчен тухнӑ çынсене кӑна пӗлтерет /Багдади, Бухари, Хорезми, Кашгари т.ыт. тенӗ пекех/ [32].

Пӑлхар çыннисем, каярах тутарсем те Самарканда, Бухарана, Хорезма кӗлӗ тума кайса килекенсене те "Самарканди", "Бухари", "Хорезми" тенӗ.

Пӑлхара Мухаммед Султан, çаван пекех вырӑс даругӗпе таможникӗ тытса тӑрасси нумаях тӑсӑлман. Сарайри хаяр Урус-хан, Шурӑ Уртаран тухнӑскер, 1377 çулта Пӑлхар çӗрне тытса илнӗ, унран "Урус-хан юрчӗ" туса хунӑ [33]. Вӑрçӑсӑр пулса иртмен ун пекки. Урус-хан Мамай уйӑрса лартнӑ Мухаммед Султана çапӑçса кӑна кӑларса пӑрахма пултарнӑ. Ахӑртнех, ун чухне те Пӑлхар çӗрне аркатнӑ, тустарса хӑварнӑ, унти халӑхран нумайӑшне пӗтерсе тӑкнӑ.

Хан ывӑлӗ Арапша, Шурӑ Уртаран Сарай Уртине, унтан - Мамай Уртине куçнӑскер, 1377 çулта пысӑк çарпа Чулхула çӗрӗсене тапаннӑ. Мордва кнеçӗсем пулӑшса тӑнӑ ӑна. Арапша вырӑссене Пьяна юхан шывӗ çинче аркатса тӑкнӑ, кнеçсенчен чылайӑшне, боярсене, çар çыннисене пӗтернӗ. Дмитрий Константинович кнеç Чулхуларан Суздале тухса тарнӑ, Чулхулара пуранакансенчен нумайӑшӗ Городецра хӳтлӗх тупнӑ. Çурла уйӑхӗн 5-мӗшӗнче тутарсем Чулхулана тытса илеççӗ, "тӑрса юлнӑ çынсене хӗнесе асаплантараççӗ, чиркӳсене, монастирсене çунтраса яраççӗ",

çурла уйăхĕн 7-мĕшĕнче вĕсем хуларан тухса кайнă та Чулхула вулăсĕсемпе ялĕсенче çапăçнă, вĕсене çунтара-çунтара янă, нумай çынна хĕнесе пĕтернĕ, вĕсен арăмĕсемпе ачисене тыткăна илсе кайнă". Каштах вăхăт иртсен Арапша иккĕмĕш хут Мамай Уртинчен похода тухать: Сăр леш енне /урăхла каласан, анат Сăран сылтăм çыранне - хальхи Чăваш Енĕн хĕвеланăç пайĕн тата Мари Элĕн Чикме районĕн территорийĕсене. - *В.Д.*/ çаратать, çунтарса ярать, çынсене тыткăна илсе каять. Кĕркунне мордвасем пуçтарăннă, "нимĕн пĕлтермесĕрех уеса /Чулхула уесне. - *В.Д.*/ тапăннă, нумай çынна хĕнесе пĕтернĕ, ыттисене тыткăна илнĕ, ялсене вут тĕртсе çунтарнă та каялла кайнă". Дмитрий Константинович кнеç хăйĕн çарĕпе мордва çар çыннисене хăвалана, вĕсене çапса салатнă, Пьяна юхан шывне путарнă. Вăл хĕлле Мордва çĕрĕ çине пысăк çар кăларса ярать, çав çар "Мордва çĕрне пĕтĕмпех тытса илет, вĕсен ялĕсемпе вулăсĕсене, хĕлле пуранма лартнă уйри е варманти çурт-йĕрсене çаратать, çунтарса ярать, хăйсене хĕнесе асаплантарать, вĕсен арăмĕсемпе ачи-пăчине тыткăна илет, сахалăшĕ кăна вĕсен аллинчен çăлăнса тухма пултарать. Ялсем выранне пушă хир туса хăварать, Мордвара чĕрĕ юлнисенчен чылайăшне Чулхулана илсе каять, нумайăшне çакса вĕлереççĕ. Вĕсене Атăл çинче пăр тăрăх сĕтĕреççĕ, йытăсемпе туллаттараççĕ" [34]. Хăруша вăхăт пулнă. Тутарсем вырăссене, мордвасене, пăлхар-чăвашсене, çармăссене пĕтерсе тăнă, вырăссем - тутарсене, Атăл тăрăхĕнчи асаннă халăхсене те чылай пĕтернĕ. Мĕнле самана? Таçта та аркатни, çунтарса яни, вĕлерни!

1378 çулта Мамай Мускав кнеçне Дмитрий Ивановича хирĕç Бегич кнеçĕн вăйлă çарне кăларса ярать. Вырăс çарĕсем ăна Вожа юхан шывĕ хĕрринче аркатса тăкаççĕ. Вара Мамай 1379 çулта, Рязань кнеçлĕхне аркатса тăкас тесе, питĕ пысăк çар пуçтарать. Анчах та XV ĕмĕр вĕçĕнчи - XVI ĕмĕрти летопиçсенче Мамай çарĕнче тутарсемпе половецсен, Литва, Рязань отрячĕсем, фрязсем, черкассем, яссем çеç мар, бесерменсем /пăлхарсем/, буртассем тата эрменсем те пулнă тесе кăтартни чăнлăхпа çыхăнман [35]. Ăна каярахпа хушса çырнă. Малтанхи летопиçсенче çакна

палăртнă: "Киревсĕр Мамай кнеç нумай çара, Половецсемпе Тутарсен пĕтĕм çĕрне пуçтарса, Фрязсен, Черкассен тата Яссен çыннисене тара тытса, вĕсемпе асла кнеçе Дмитрий Ивановича тата пĕтĕм Вырăс çĕрне хирĕç кайнă" [36]. Фрязсем - Крымри Венеци, Генуя çыннисем, колонистсем, черкассем /черкессем/ тата яссем - Çурçĕр Кавказ халахĕсем. Мамай çарĕнче бесерменсем (пăлхарсем), эрменсем, бурттассем пулман. Бесерменсем Мамая мар, Сарай Уртине пăханса тăнă [37]. Мамай çарĕнче Сарай Урта тутарĕсем те пулман. Дмитрий Иванович кнеç /каярахпа Донской/ ертсе пынă вырăс çарĕсен пĕрлешĕвĕ Мамая Куликово уйĕнче тĕппипех çапса аркатать. 1380 çулта Сарай ханне ларнă Тохтамыш Мамай параннипе уса курать. Днепр шарлакĕсем тĕлĕнче вăл Мамайăн каялла чакакан çарĕн юлашкине çĕнтерет, вăл çаратнă пурлăха тытса илет. Мамай Крыма тарать. Унти кнеçсемпе мăрсасем Тохтамыш енне куçаççĕ. Крымри Генуя çыннисем Мамая Тохтамыш аллине параççĕ, лешĕ ăна вĕлерет [38]. Чăннипе Дмитрий Иванович Мамая çĕнтернипе Тохтамыш уса курса юлнă.

1380 çулхи кĕркунне Тохтамыш влаçĕ Пĕтĕм Ылтăн Уртана, çав шутра Мамай Урти пулнă территорие, Пăлхар çĕрне саралать. 1382 çулта Тохтамыш хăйĕн тутарĕсене Пăлхара ярать... Вырăс сутуçисене хĕнеме, хăйсене çаратма, вĕсен кимми-карапĕсене таварĕ-мĕнĕпех туртса илме, хăйсене валли илсе килме хушать. Пысăк çар пухса /унта пăлхарсем те пулнă/ Тохтамыш Мускав Руçĕ çинелле тухса каять. Суздальпе Чулхула кнеçĕ Дмитрий Константинович тата Рязань кнеçĕ Олег, унччен Мамай хĕсметĕнче тăнăскер, Тохтамыш енне куçаççĕ, хăйсен çарĕсемпе Мускав çинелле унпа пĕрле пыраççĕ. Тохтамыш Мускава, çаван пекех Серпухов, Владимир, Звенигород, Можайск, Переяславль, Юрьев хулисемпе ытти хуласене тытса илнĕ, çунтарса янă. Тверь, Суздальпе Чулхула кнеçĕсем, ытти кнеçсем Тохтамыша пăханнă, ăна хырçа тулеме пуçланă. Вырăс кнеçĕсем унран кнеçлĕх ярлăкне илме тытăнаççĕ [39].

1384-1385 çулсенче, Самарканд патшине Уксах Тимура хирĕç тăрса, Тохтамыш Азербайджан хули-

сене тытса илнĕ, çаратна. Иккĕленмелли çук, похода пăлхарсем те хутшăннах. 1387 çулта Тохтамыш Ватам Азие çар ярать. Анчах Уксах Тимур çĕнтерет ана, Хорезма аркатса такать. 1387 çулта Тохтамышăн çар пуçĕсенчен пĕри Едигей, унăн хĕрне качча илнĕскер, Уксах Тимур патне тарать. Ашшĕне, Балтычкана, çакса вĕлернĕшĕн каçарма пултараймасть Едигей Тохтамыша. Тохтамыш Уксах Тимура хирĕç иккĕмĕш похода тухмашкăн 1388 çулхи кĕркунне "пĕтĕм улусран вырăссенчен, черкессенчен, пăлхарсенчен, кыпчаксенчен, алансенчен, Крымра, Кафăра тата Азахра пуранакансенчен, пушкартсемпе мăкшăсенчен питĕ пысăк çар пуçтарать". Чулхула кнеçĕ Борис Константинович, унччен Тохтамышран кнеçлĕх ярлакĕ илнĕскер, тутар çарĕпе пĕрле похода кайнă. 1389 çулхи кĕркунне Уксах Тимур Тохтамыш çарне Сыр-Дарья хĕрринче аркатса такнă. Сарай ханĕ Хорезма тытса илме пултарайман [40].

Чее те хаяр Едигей кнеç, хирĕçӳсем кăларма пĕлекенскер, Уксах Тимура Тохтамыша хирĕç похода тухма вĕскĕртнĕ. 1391 çулхи нарăс уйăхĕнче поход ыйтăвне курултайра татса панă та Уксах Тимур 200 пин çынлă çарпа Тохтамыша хирĕç кайнă. Таврă çул суйласа илнĕ: Самаркандран çурçĕрелле, Тобол юхан шывĕ таран, унтан анăçалла çавранса, пушкарт çĕрĕсем урлă - Уртана. Поход çинчен Тохтамыш ака уйăхĕнче тин пĕлнĕ. Васкасах тĕрлĕ улуссенчен çар пуçтарнă. Пăлхар çĕрĕн, Азован, ытти вырăнсен çарĕсем Тохтамыш чĕннипе пуханман. Унăн çарĕн хисепĕ Самарканд çарĕннипе пĕр пекех пулнă. Уксах Тимур çарĕсем, Яик тата Сакмар юхан шывĕсем урлă каçса, Пăлхар çĕрне пырса кĕнĕ, паллах, яланхи йăлапа ялсене аркатнă, мирлĕ çынсене пĕтерсе тăкнă. 1391 çулхи çĕртме уйăхĕн 18-мĕшĕнче Хăнтăрчă юхан шывĕ хĕрринче /хальхи Самар облаçĕн территорийĕнче/ тĕп çапăçу пулса иртнĕ. Уксах Тимур çĕнтернĕ унта. Çапăçу хирĕнчен Тохтамыш çарĕнчи сахал çын çăланса тухнă. "Тохтамыш çав тери пысăк çухату тӳснĕ, - тесе çырать М.Г.Сафаргалиев. - 40 ферсаха /ферсах - 1200 утăм. - *В.Д.*/ тăсăлакан çапăçу хирĕ вилесемпе тулнă: Шармуа шучĕпе, пуç хунисен хисепĕ 100 пин çынна çитнĕ". Уксах Тимур çухатавĕ те

пĕчĕк пулман. 26 кун хушши пулнă Тимур çарĕ çапăçу пулса иртнĕ вырансенче, Пăлхар çĕрĕнче. Çак хушăра унăн ушканĕсем çаратса çӳренĕ, "лагере виçесĕр пысăк тупăш - лашасем, тĕвесем, вăкăрсем, такасем илсе тата урапасем çине нумай чура - хĕрсемпе ача--пăча лартса тавраннă. Итиль /Атăл. - *В.Д.*/ утравĕсем çине çăлăнăç шыранисене яра-яра илнĕ, тыткăна /лагере/ илсе кайнă. Çак мухтавлă çĕнтерĕве тунă çара питĕ нумай пурлăх тивнĕ, ун çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе каласа, çырса кăтартма май та килес çук. Хăш-пĕр çынсен... лашасемпе такасем çав тери йышлă пулнă, каялла тавраннă чухне вĕсене хăваласа пыма вăй та çитмен... Тимур лагерĕнче питех те чиперкке хĕрсемпе хитре яшсем пуханнă, Тимур хайне валли суйласа илнисем кăна 5000 ытла çын шутланнă". Мунаджим-Паша шучĕпе, Тимур çав походра тăватă миллион сурăх, 40 пин ĕне выльăх, 500 пин лаша, 500 пин çын тытса илнĕ. Тен, çак хисепе пысăклатса кăтартнă пулĕ, анчах ку вăл çаратни тата тустарни мĕн тери хăруша пулнине çирĕплетет. Çака, тĕпрен илсен, Пăлхар çĕрĕ çинче пулса иртнĕ. Пуринчен ытла ялан пĕр выранта пуранакан халăха çаратнă. Куçса çӳрекенсене тупса çаратма çăмăл мар. Ахартнех Пăлхар çĕрĕн хулисемпе нумай ялне аркатса такнă, çаратнă пулас. Пăлхар çĕрне тустарса хăварни çинчен калакан истори халапĕсем /вĕсем пирки эпир аяларах чаранса тарăпăр/ чылай енчен Уксах Тимуран çар похочĕпе çыханнă темелле. Тимур хай чаранса тăнă выранта Уртана шалалла кĕмен, каялла çавранса кайнă [41].

1391 çулта Новгород ушкуйникĕсем, Устюг çыннисем тата ыттисем пĕрлешнĕ те сулăсемпе кимĕсем çине ларса Кама çине тухнă, Жукотинпа Кашан хулисене тытса илнĕ, ахартнех, вĕсене çаратнă та каялла тавраннă. Пăлхар çĕрĕнчи ытти хуласемпе кăсакланман вĕсем [42].

Тохтамыша çĕнтерсен, Уксах Тимур хайне чылаях пулашнă Едигее хайĕн улусне янă. Тимур лагерĕнче пулнă чухнех Едигей "таванĕсем, кӳршисем тата сулахай енчи йăхсем патне хайĕн çыннисене янă", вĕсене Уксах Тимуртан вăрттăн унăн çарĕсем çитсе тухакан вырансенчен аяккарах каймашкăн хушнă,

“унсӑран Тимур, вӗсем куç тӗлне пулсан, йалтах салатса ярать, пурне те пӗтерсе такать”, - тенӗ. М.Г.Сафаргалиев çырна тарах, хайӗн Мангыт йахне тавранса, “Едигей çак йах пуçлахӗ пулса, хай Мангыт кнеçне ларни çинчен пӗлтернӗ, каярахпа унан никӗсӗ çинче Нухай Уртине туса хуна”. Мангыт Юрчӗ Иртышан тури пайӗнчен Анат Атӑл таранах питӗ анла территори йышанна. Питӗ пысак çар йӗркелеме пултарна çав Юрт. Часах Едигей, Мамай евӗрлех, Уртан, унан халахӗн шапине татса паракан тискер çын пулса тана [43].

Хан выранне йышанасшан хыпса çунакансене çӗнтерсен, Тохтамыш 1393 çул тӗлне Ылтан Урта пӗрпӗтӗмлӗхне тепӗр хут йӗркелет, Литвапа, Турципе, Грузипе тусла çыханусем тытать, 1394 çулта Кавказ леш енне, Грузипе çапаçакан Уксах Тимура хирӗç çапаçма çар ярать, Тимур мир тумашкан сӗннипе килӗшмест. Çапах та 1395 çул пуçланна тӗле Тохтамыш лару-тӑравӗ каткасланна. Урта эмирӗсемпе кнеçӗсем хушшинче килӗшӳ пулман. Атал çинче пулса иртет те вӗсем хушшинчи çапаçу, “унта, çав çапаçура кнеçсемпе тутарсем нумай вилсе пӗтеççӗ”. 1395 çулхи çуркунне Уксах Тимур питӗ йышла çарпа Уртан кантар чиккине çывхарать. Тохтамыш Терек хӗррине оборона йышанна. Ака уйахӗн 14-16-мӗшӗсенче пулса иртнӗ çапаçура Тохтамыш паранна, пысак çухату тӳснӗ, хайӗн çарӗн юлашкисемпе Палхар çӗрне, вырас кнеçлӗхӗсен чикки патнелле тарна. Тохтамыш çарӗн пысак пайӗ тыткана лекнӗ. Перси авторӗ Шериф-ад-дин Иезди пӗлтернӗ тарах, “Тохтамыш ханлахне, çурт-йӗрне, чаннипе тата варттан хайӗн мӗн пуррине парахса хаварна, хайӗн пурнаçне çалас шутпа, темиçе çынпа пӗрле Палхара, варманла вырансене тухса кайна. Çӗнтернӗ çар /Тимур çарӗ/ юхан шыван ку енӗпе хай пӗрремӗш походра çитнӗ выран патнех çывхарна, шыван тепӗр енӗпе Дешта пырса кӗнӗ тата аркатна /вӗсене пурне те/. Çав выран “тӗксӗмлӗх çӗршывӗнчен” аякрах мар. М.Г.Сафаргалиев çапла шутлать: “Тимур çарӗ хайӗн иккӗмӗш походӗнче çӗнӗрен туса лартма ӗлкӗрнине пӗтӗмпех “çаратна”... Палхар, Жукотин, Керменчӳк хулисемпе ытти хулисене Тимур хайӗн 1395 çулхи иккӗмӗш похочӗ вахă-

тĕнче çаратнă тата тустарса хăварнă пирки иккĕленмелли çук". Автор Хусан тутарĕсен "Тимур пăлхарсене тапăнни çинчен", "Уксах Тимур çинчен" калакан нумай истори халапĕсене илсе кăтартать. Хюсам-Эддин Булгарскин "Пăлхар калавĕсенче" /XVI ĕмĕр/ Уксах Тимур "виçĕ кун хушшинче Пăлхар хулинчен нимĕн те хăварманни, çав хула пулман та пекех тарса юлни" çинчен асăннă... Чулпа çирĕплетнĕ вырăнсене унпипе /таранпа/ аркатма хушнă, вĕсене Атала путарнă, Бичура-ханпа унăн вун икĕ визирĕн пуçĕсене касса таттарнă, ахах евĕр чипер хĕрсенчен чура туса хунă, çар пуçĕсене валеçсе панă: ватăр ултă ăсчаха çакса вĕлерттернĕ, сыхланса юлнă халаха пĕр эрне хушшинче салатса пама хушнă, вĕсене çав выранта пуранмалла мар тунă". Пĕтĕм халăх çурçĕр, хĕвеланăç тата хĕвелтухăç еннелле кайса сапаланнă. Тепĕр халапра пĕлтернĕ тарăх, "унччен вунă пин те çирĕм тавата çурт шутланнă Пăлхар хулинче вăл нихçан та пулман пек таратса хăварнă, тĕнчере унăн ячĕ çеç юлнă". Виççĕмĕш халапра каланине ĕненсен, Уксах Тимур Пăлхар çĕрĕ çине хăй Аçтăрхана тытса илсен, урăхла каласан, 1395 çулхи поход вăхатĕнче килсе çитнĕ. М.Г.Сафаргалиев пĕтĕмлетĕвĕсене тутарсен М.А.Усманов тишкерсе тухнă XVII-XVIII ĕмĕрсенчи çăлкуçĕсем те çирĕплетеççĕ. Арехологсем шутланă тарăх, Пӳлер хули XIV ĕмĕрĕн 30-40-мĕш çулĕсенчех пĕтсе ларнă. Апла пулин те, тутарсен шаджарисенче тата чăвашсен истори халапĕсенче Уксах Тимур Пӳлере тытса илни çинчен каланă. Преданисене тĕпе хурса, Чăваш халăх поэчĕ Н.И.Полоруссов-Шелепи "Уксах Тимур Пӳлере илни" поэма çырнă. Пăлхар çĕрĕнчен тухса кайсан, Уксах Тимур Укек хулине аркатнă. Донпа Днепран кăнтăр-хĕвеланăç енчи улуссене, Крыма /Каффа хули/ тустарнă, унтан Рязань çĕрне кайнă, çаван пекех пысăк сиен кӳнĕ. Çурçĕр Кавказалла анса, Тимур çарĕ унти ялсемпе крепоçсене, кайран - Аçтăрхана çаратнă, Сарай хулине çунтарса янă, ытти хуласене аркатнă. Едигейĕн Мангыт Юртне çеç тĕкĕнмен. 1396 çулхи çуркунне Тимур çарĕ Ирана тухса кайнă [44].

1395 çулта Тохтамыш Пăлхар çĕрĕнчех тытăнса тăма тăрăшнă, тустарнă ăна, выранти халăхран "ыл-

тăн, кĕмĕл тата нумай парне" пуçтарнă, "тутарсене пур çĕрте те хăй тавра пĕтĕçтерес тесе", Анат Камаран çурçĕр еннелле похода кайнă. Ун хыççăн, тутар çарне пухса, Крымалла çул тытнă [45].

1396 çул тĕлне Ылтăн Урта территорийĕнче пĕрне пĕри паханман, пĕр-пĕринпе çапăçакан тăватă урта пулнă: 1/ Сарай çывăхĕнче Куюрчак хан урти; 2/ Аçтăрхан таврашĕнче Тимур-Кутлук хан урти; 3/ Крымра Тохтамыш хан урти; 4/ Едигей кнеçĕн Мангит Юрчĕ. Едигей 1395 çулта Тимурпа пĕрлешмен, хăй юрчĕн вăйне сыхласа хăварнă. Чи пысăк та вăйлă урта шутланнă унăн юрчĕ. Вăл 200 пин ытла çынлă çар пуçтарма пултарнă. Мангыт Юрчĕн центрĕ Сарайчик хули шутланнă. Монгол-тутар уртисенче Чингисхан несĕлĕсем кăна хана лармашкăн тивĕç пулнă. Едигей, хăйне кирек хăш ханран пысăка хунă пулин те, вĕсен шутне кĕмен, хăйне хан тесе пĕлтерме пултарайман. Егидейпе Темир-Кутлук Тохтамыша хирĕç вăрçа пуçтарнă, ăна Крымран хăваласа янă. Литвара хутлĕх тупнă Тохтамыш. Едигейпе Темир-Кутлук çарĕсем 1398 çулта Литва çарне çĕмĕрсе тăкнă, Тохтамыш Çĕпĕрелле куçнă, унта Обь, Том тата Чулым юхан шывĕсем тăрăхĕнче юртсем туса хунă. Едигей Темир-Кутлук вăхатĕнчех "Уртари пĕтĕм кнеçсен кнеçĕ" пулса тăнă, хансем "хăйсен ятне çеç тытса тăнă, вĕсен пĕлтерĕшĕ нимĕн чухлĕ те паларман", Мамай пекех вăл хансене вĕçĕмсĕр улăштарма пултарнă. Темир-Кутлук вилсен Сарай ханĕ пулма Шадибека уйăрса лартнă вăл. 1406 çулта Едигей Çĕпĕрте Тохтамыша вĕлернĕ. Унтан Хорезма çул тытнă, ăна илнĕ. Çав вăхăтра Сарайра Тохтамыш ывăлĕ Джалал-ал-дин /вырăссем ăна Зелени-салтан тенĕ/ Шадибека выртантан кăларнă, хан пулса тăнă. Çапах та нумай тытăнса тăрайман. 1407 çулта вăл Пăлхар çĕрне тытса илнĕ те хăй унăн ханĕ пулни çинчен пĕлтернĕ. Едигей, Хорезмран тавранса, хăйĕн çарĕпе Пăлхар çĕрне пырса кĕнĕ, яланхи пекех çула май пурне те çĕмĕрсе-аркатса хăварнă. Джалал-ал-дин 40 пинлĕ çарпа Руçа тухса тарнă, унтан Литвана куçнă, 1410 çулта Грюнвальд патĕнче Тевтон орденне хирĕç пынă çапăçава хутшăннă. Едигей 1407 çултах Сарая тавраннă, хан пулма Пулата лартнă. Мускав Руçĕ 1395

çултан тытанса хырçа тӳлеменнине пула Едигей 1408 çулхи чӳк-раштав уйăхĕсенче питĕ пысăк çарпа Руçа пырса кĕнĕ, Рязань çĕрне, Коломна, Серпухов, Можайск, Звенигород, Дмитров, Переяславль, Ростов хулисене тустарнă, Мускава хупăрласа илнĕ. Мускав 3000 тенкĕ тӳлесен, Уртана тавăннă /46/.

1399 çулта Семен Дмитриевич Суздальский кнеç Чулхулана хан ывăлне Ентяка пин тутарпа пĕрле илсе пынă, вĕсем хулана çаратнă. Çакна пĕлсен Москаван асламă кнеçĕ Василий Дмитриевич, таварас шутпа, хăйĕн таванĕ Юрий Дмитриевич ертсе пыракан вăйлă çара темшĕн-çке Ентяка хирĕç мар, Пăлхар çĕрĕ çине каларса ярать. Пăлхарсем енчен вырăс çарне хирĕç тăни тата çапаçни пулман, çаванпа "Асла Пăлхара", Жукотин, Кашан, Керменчӳк хулисене çамăлланах тытса илнĕ, "вĕсен пĕтĕм çĕрне кĕрсе кайнă, Бесерменсемпе Тутарсене нумай пĕтерсе такнă... виçĕ уйăх çапаçнă хыççăн асламă çĕнтерӳ туса, Руç валли нумай тупра илсе каялла тавăннă" [47]. Унччен кăна-ха Уксах Тимур çаратса хăварнă, хĕн катартнă, вăйсăрланса юлнă пăлхар халăхне тустарма, ăна парантарса "асламă çĕнтерӳ турăмăр" тесе пĕлтерме йывăр пулман ĕнтĕ. Акă мĕн катартса парать çак пулăм: XIV ĕмĕр вĕçĕ тĕлне Пăлхар çĕрĕнчи халăха пĕтĕмпех пĕтерсе такман-ха, пурне те тыткăна илсе кайман, пăлхар-чăвашсем пĕтĕмпех çурçĕр-хĕвеланăç, çурçĕр тата çурçĕр-хĕвелтухăç енчи варманла вырăнсене тарса пĕтмен.

Çав вăхăтра Пăлхар çĕрне тĕппипех тустарса пĕтереймен-ха, вăл эмирсем ыйтнипе тутар çарĕ валли хăйĕн салтакĕсене уйăрса пама пултарнă. Едигей Мускав таврашне тустарса çӳренĕ вăхăтра тутарсен тахăш ханĕн ывăлĕ /эмир/, унпа пĕрле "нумай Тутар, Пăлхар вăйĕ тата Мордва Чулхулана тытса илнĕ, пĕтĕмпех вут тĕртсе çунтарнă, манастирсемпе таса чиркӳсене пурне те кĕл туса хăварнă, ватă çынсемпе ача-пăчана пĕтерсе такнă, çамрăксене тыткăна илсе кайнă". Ун хыççăн вăрă-хурахсем Городеца тытса илнĕ, ăна вут хыптарнă, унта пуранакансем "ăçта килнĕ унталла тарнă; вĕсене мĕн пур çулсем çинче хăвалана, çынсене курăк пек çулса такна". Каялла тавăннă май "çапаçнă, хăтăлса юлнă çынсене пĕтерсе так-

на... çынсене вăрмансенче шырана, вăрмансенче нумай çынна пĕтерсе тăкна; ун хыççăн Сăр патне çитнĕ, Сăр сывăхĕнче çапăçна, Кăрмаша çунтарса яна; масарсемпе ялсене тытса илнĕ, çулăм айне туна, питĕ нумай выльăх-чĕрлĕхе хайсен çĕрне хăваласа кайна"/48/. Палла ĕнтĕ, çаратна пурлăх хан ывăлĕн аллине лекнĕ. Çак похода пăлхарсем хайсене хĕсĕрленипе çеç хутшăнна.

Тепĕр çулхине Новгород ушкуйникĕсен икĕ ушканĕ çаратма тухса кайна. 150 ушкуйла ушкăн Двина çинчи Заволочьерен Атăл çине, Кострома патне тухна, çапăçăва кĕрсе Чулхулана тытса илнĕ, Атăл тăрăх анаталла ишнĕ. 100 ушкуйла тепĕр ушканĕ Анфал ертсе пынипе "хыçри шывсем" тăрăх Кама патне çитнĕ. Жукотинпа Пăлхар кнеçĕсем Анфалпа мир туна, ăна укçа туленĕ, анчах кайран вăра-хурахсене "пĕтерсе тăкна". Вĕсенчен хăшĕ-пĕри тарса ӳкнĕ. Анфала тытна та асаплантармашкăн Сарая илсе кайна. Унта ăна, ахартнех, укçа тулеттерсе ирĕке каларна. 1412 çулта Анфалпа унăн ывăлне Вяткăра унти пуçлăх М.Росохин вĕлернĕ /49/.

Вырăс летописĕсенче 1411 çулхи кăрлачра Пăлхар тата Жукотин кнеçĕсене юлашки хут асăнна. Хайсен отрячĕсемпе вĕсем Мордва кнеçĕсемпе пĕрле Лысковăра пĕр енчен Мускав, Ростов кнеçĕсем, тепĕр енчен - Суздальпе Чулхула кнеçĕ Данил Борисович хушшинче пына вăрçа юлашкийĕ енне тăрса хутшăнна. "Вĕсен хушшинче хаяр тытăçу пулса иртнĕ; унта Суздаль кнеçне вĕлернĕ, икĕ енчен те нумай çын пĕтернĕ"/50/.

XIV ĕмĕр вĕçĕ тата XV ĕмĕрĕн малтанхи икĕ вуна çуллахĕ, 1419 çулта Едигей виличченхи вăхăт, Пăлхар çĕрĕнче тĕпленсе пуранакан халăхсен - пăлхарчăвашсен пуçнаçĕн чи синкер тапхăрĕ пулна. Едигей 1391 çулта туса хуна Мангыт Юрчĕ кантăр тата тухăç енчен Пăлхар çĕрĕн сулахайри çыранри тата сылтăм çыранри пайĕсемпе чикĕленнĕ. Çуркуннерен пуçласа кĕркуннеччен куçса çӳренĕ чухне Мангыт отрячĕсем Пăлхар çĕрне çывхарна, пăлхарсен хулисемпе ялĕсене пĕрмаях аркатса тăкнă, унти халăха пĕтернĕ. Пăлхар çĕрĕн Атăлăн сулахай çыранĕнче Камăран анатарах, сылтăм çыранран вара - хальхи Краснови-

доваран /Атăл çинче/ - Вăта Биябаш - Чутей - Комсомольски /Каçал/ чиккинчен кăнтăрарах, Сăр çинче Бырăш слободинчен кăнтăрарах вырнаçнă, пĕтерсе тăкнă территори пушă хир, мангытсем куçса çурекен выран пулса тăнă. XV ĕмĕр варричен тытăнса мангытсене ногайсем тенĕ. XVI ĕмĕр варринче "Хусан летописецĕ /"Хусан историйĕ"/ питех те тĕрĕс катартса панине историксем халиччен те асăрхаманха. Пăлхара, Жукотина тата Керменчуке XIV ĕмĕр вĕçĕнче аркатнине кăтартса, летописец çакна палăртать: Ылтăн Урта ханĕсемпе хан ывăлĕсем Пăлхар çĕрĕ çине "хăйсен çарĕсене çĕр типсен кăларса яна", вырăс кнеçсем Атăл тăрах кимĕсемпе çар илсе пынă, тепĕр енчен, хыçалтан, мангытсем пысăк нуша тăстернĕ, вĕсем Яик /Хвалим тинĕсне кĕрекен/ асла юхан шыв тăрăхĕнче куçса çуренĕ... Çав мангытсенчен Пăлхар çĕрĕ йăлтах пушанса юлнă"... "Пысăк Уртана /Пăлхар çĕрĕн территорийĕ çинчен çапла калана. - *В.Д.*/ Яик леш енчен нухайсемпе мангытсем килнĕ, ку таранчченех унта куçса çуреççĕ". Çав летописецах çулерех çакна кăтартнă: Хусан çывăхĕнчи хутлăха "хаяр та тискер чĕлхе /урăхла каласан, халăх. - *В.Д.*/ Кама юхан шывĕн тепĕр енчен пăлхарсен кнеçĕсемпе тата старейшинисемпе пĕрле хура халăха куçарса килнĕ". Патша /Хусан ханĕ. - *В.Д.*/ пăлхар хулисене Хусана пăхăнтарнă: вĕсене Хусан патши тытса тăнă. Малтан вĕсен пĕчĕк пăлхар халăхĕн Кама леш енне, Атăлпа Шуратăл хушшинчи Нухай Урти патне çитиех тасалакан çĕрĕ пулнă. Пысăк пăлхарсем Дунай çинче. Кама çинчех пăлхарсен Брягов ятне панă авалхи хула пулнă, халĕ хули пушанса юлнă..." /51/. "Хусан летописецĕн" авторĕ Пăлхар çĕрне тустарса тăкнине, тĕпрен илсен, тĕрĕс те ĕненмелле кăтартса парать, çав ĕçе мангытсем вĕçленĕ тесе шутлать. Çăлкуçсене тĕпе хурса, çапла шутлама май пур: Пăлхар çĕрне пĕтĕмĕшпех тустарса тăкасси XV ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенче вĕçленнĕ. XV ĕмĕртен пуçласа Пăлхар çĕрĕнче укçа чавса пытарман. Пĕртен пĕр Теччĕ çывăхĕнче кăна XV ĕмĕрĕн пĕрремĕш чĕрĕкĕнче хатĕрленĕ укçа тупнă, вăл 0,6 процент чухлĕ çеç. Укçан чылай пысăк пайне XIV ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче пытарса хăварнă /52/.

XV ёмёр варринчен тытӓнса Мангыт Юртне Нухай Урти тенё. Вӓл XVI ёмёр вёçленичченех хӓйён вӓйне, вӓрçӓ валли 200 пин утлӓ салтак тӓратма пултарнине упраса хӓварнӓ, XVII ёмёр варричченех - 1652-1654 çулсенче Чёмпёр оборона линине тата 1652-1656 çулсенче Кама леш енчи оборона линине тӓвичченех Пӓлхар çёрё пулнӓ территорире нухайсем куçса çӱренё, XV-XVII ёмёрсенче вырӓс, мордва, чӓваш тата тутар çёрёсем çине тӓтӓшах тапӓннӓ, çаратнӓ /53/.

Çакна каламалла: пӓлхар çёрне тёппипех тустарса тӓкнӓ хыççӓн та Пӓлхар хули, унӓн крепоçё 10-15 çул хушши Ылтӓн Уртан çирёплетнё вырӓнё шутланса тӓнӓ-ха. Хӓш-пёр хансем Пӓлхар хулинче укçа та çаптарнӓ: Тимур - 1411 çулта, виççёмёш хут Урта ханне лартнӓ Джелал-ад-дин - 1412 çулта, Кепек-хан - 1414 çулта, Чекри - 1414-1415 çулсенче, Улук-Мухаммед - 1426-1427 çулсенче /54/.

Вырӓс летопиçёсенче Пӓлхара юлашки хут 1431 çулта асӓннӓ. Уйрӓм летопиçсенче каланӓ тӓрӓх, ун чухне Мускавӓн аслӓ кнеçё II Василий "Федор Давыдович Пестрой кнеçе çарпа Атӓлçи Пӓлхара янӓ, вӓл вёсене тытса илнё, вёсен пётём çёрне хупӓрланӓ" /55/. Çапӓçусем пирки асӓнман. Пӓлхар çёрё çинче ярса тытмалли, тыткӓна илмелли пулман та ёнтё. Ахӓртнех, çав похода II Василий кнеçлёх ярлӓкне илмешкён Уртана каяс умён вӓй пуррине кӓтартас шутпа ирттернё, часах ярлӓка илнё те. Хӓш-пёр летопиçсенче вырӓс çарёсем Пӓлхара тытса илнине çеç асӓннӓ: "Василий Васильевич аслӓ кнеç хушнипе воевода Федор Давыдович Пестрой кнеç Пӓлхарпа çапӓçма кайнӓ, ӓна тытса илнё" /56/. Çак хыпартан вырӓс çарёсем хулана аркатни çинчен калама çук, летопиçре ӓна аркатнине асӓнман. Анчах та Хусан кӓларӓмёсенче ун пек ӓнлантарни тёл пулать. 80 çул хушшинче ӓна Ылтӓн Урта çарёсем, вырӓссем, Уксах Тимур, мангытсем вунӓ хутчен аркатнӓ, йӓлтах тустарса тӓкнӓ.

Ку ёçре Пӓлхар çёрне тустарса, çаратса хӓварнин виçё тапхӓрне палӓртакан фактсене тишкерсе тухрӓмӓр /ёненмеллерех тумашкӓн çӓлкуçсен сыпӓкёсене илсе кӓтартрӓмӓр/: пёрремёш тапхӓр 1357-1379 çулсенче, ун чухне

тутар отрячĕсемпе Урта эмирĕсемпе кнеçĕсем, хăш-пĕр таран вырăс кнеçĕсем, ушкуйниксем хутшăнна май, куçса çӳрекен уртасем пăлхарчăвашсен хулисемпе ялĕсене аркатна, çынсене нумай пĕтерсе тăкна; 1380-1399 çулсенчи иккĕмĕш тапхăр пĕрремĕш тапхăрти вăйсем çав-çавах тапаннипе, Едигей мангичĕсем тустарма тытаннипе, пуринчен ытла Уксах Тимур тискеррĕн аркатнипе тата халăха пĕтерсе тăкнипе паларса тарать; виççĕмĕш тапхăр - XV ĕмĕрĕн малтанхи виçĕ вунă çуллахĕ, ун чухне Едигей тата унăн Мангыт Юрчĕ, тăтăшах улшăнса тăнă хансем хутшăннипе тата вырăс кнеçсем пулăшнипе, Пăлхар çĕрне пĕтĕмĕшпех тустарса тăкна. Илсе кăтартна çăлкуçсем çирĕплетнĕ тăрăх, ушкуйниксем ытларах пăлхарсене мар, вырăс хулисемпе ялĕсене çаратна. Пăлхар çĕрĕнчи халăхăн пĕр пайĕ чума тата ытти чир анлă саралнине пула, выçлăх çулĕсенче вилсе пĕтнĕ.

Тустарса хăварнипе геноцид калăпăшĕ мĕнле-ха? Пысăк çĕршыва, калăпăр, хальхи Польша территорийĕпе танлашнă çĕршыва, çĕр питĕнчен шăлса ыватнă. 1974 çулчченхи кăтартусем тăрăх, Р.Г.Фахрутдинов Пăлхар çĕрне, тĕпрен илсен, Тутарстан территорийĕнчи палăксем, 140 яхăн пăлхар хули тата 950 ял выранне паларта хунă. Анчах та çав хисепе Самар, Пенза, Чĕмпĕр облаçĕсенчи, Чăваш тата Мордва республикисен территорийĕнчи пăлхар хулисемпе ялĕсенчен нумайăшне кĕртмен. Вĕсене 1974 çулччен те, ун хыççăн та тĕпчесе тухнă. Асăннă территорисенчи лару-тăрава тĕпченĕ, анчах та шута кĕмен хуласемпе ялсене шута илсен, Пăлхар çĕрĕнчи хуласен хисепĕ 170 таран, ялсен хисепĕ - 2000 таран пулма пултарать. 1961 çулта Кама леш енчи пăлхар ялĕсен выранĕсенче пулнă май çакна курса ĕнентĕм: вĕсем пысăк выран йышăннă /пысăк ялсем пулнă/, упранса юлнă япаласем /керамика, металл япалисем т.ыт./ çĕр çинчех выртаççĕ, çакă вăл ялсене вăрçăпа тапанса, вут чĕртсе пĕр вăхăтрах пĕтерсе тăкнине çирĕплетет. Пăлхар çĕрĕн XIV ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче - XV ĕмĕр пуçламăшĕнче пĕтсе ларнă палла хуласен шутне çаксене кĕртмелле: Пăлхар /XV ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенче/, Пӳлер, Балы-

мер, Жукотин /Джекетау, чăвашла - Чӳкету е Çакату/, Кашан, Керменчӳк, Синбер, Чĕмпĕр, Самар, Арабуга, Кякреш, Карабулак, Теччĕ, Кирман, Чулла, Алабуга, Тубылкатау, Кам, Таяпа, Тухчин, Шункат /Атряч/, Именкискэ, Камай, Кирмен, Крестово, Переволокски /иккĕ/, Хырла т. ыт. /57/.

Чĕрĕ юлнă пăлхар-чăвашсем Анат Кама умне, Ногай даругне, Хусан çывăхне тата Хусан хыçне куçнă, унта Чăваш даругĕ йĕркеленнĕ, вăл Хусантан хĕвелтухăçнелле Кама таран вырнаçнă, Алат, Галич тата Ар даругĕсене, Çурçĕр Удмуртири Чепца юхан шывĕ çинче çаван пекех Чăваш Енĕн вăта тата çурçĕр пайĕсене куçнă /Чăваш Ене хальхи Пенза, Чĕмпĕр облаçсен, Тутарстанăн кантăр-хĕвеланаç, Чăваш Енĕн кантăр-хĕвелтухăç пайĕн территорийĕнчен, çаван пекех сулахай çыран енчен Жукотин, Керменчӳк, Пăлхар, Пӳлер çывăхĕнчен, Самар облаçĕ территорийĕнчен, каярахпа Хусан çывăхĕнчен йышлăн куçнă/. Хусан уесĕн XVI ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринчи - XVII ĕмĕр пуçламăшĕнчи переписре çырнă тĕслĕхсемпе çакна палăртнă: сулахай çыран енче 200 яхăн чăваш ялĕ йĕркеленнĕ. XVI-XVII ĕмĕрсенче Чăваш Енре 300-тен ытла тĕп ял шутланнă. Шупашкар çывăхĕнче Сăвар хулинчен куçса килнисем XIII ĕмĕр вĕçĕнчех Вăта Сăвар ятлă чăваш хулин никĕсне хывнă. Сулахай çыранра Хусан çеç ӳссе ларнă. Пăлхар çĕрĕнчи хуласемпе ялсен тата тарса кайнă пăлхар-чăвашсем никĕсленĕ хуласемпе ялсен хисепне танлаштарни çакна кăтартса парать: питĕ асăрханса шутласан та, пăлхар-чăваш халăхĕн 4/5 пайне пĕтерсе тăкнă. Çакă вăл чăваш халăхĕн историйĕнче çав тери синкер тапхăр шутланнă, ăна унччен курман геноцид тĕп тунă. "Хусан летописецĕн" авторĕ çапла çырать: Хусан çывăхне тата Хусан хыçне "начар пăлхарсем" пуханнă. Хăйсене мăсăльмансем пĕтерсе тăкнине пула тарса килнисем çĕнĕ выраăнта ислам тĕнне тытма пăрахнă. Венгри этнографĕ тата чĕлхеçи Д.Месарош, Вăтам Атăл ялĕсенче чăвашсен мифологийĕпе фольклорне тĕпченĕскер, 1909 çулта "Чăвашсен авалхи тĕнĕн палăкĕсем" кĕнекинче çапла çырнă: "Чăвашсен авалхи тĕнне

тĕнчени тахçан чăваш халăхĕн пысăк пайĕ мăсăльмансем пулнине кăтартса парать, анчах та каярахпа, политика хутшăнăвĕсем япăххине пула, вĕсемпе мăсăльман тĕнчи хушшинчи çыхăну татăлна, халăх чунĕнче вара çирĕплентсе çитеймен ислам йăлтах манăça ĕлкĕреймен авалхи тĕнпе хутăшса кайнă". Сулахай çыранри чăвашсĕн пысăкрах пайĕ XVI ĕмĕр вĕçĕнче - XVII ĕмĕрте хайсен малтанхи çĕрĕсем çине - Кама леш енне, Пушкартстана куçса кайнă; Хусан çывăхĕнчи, Чăваш, Ар, Ногай, Алат, Галич даругисенчи выранта юлнă чăвашсенчен нумайăшĕ тутарланнă. Чепца тăрăхĕнчи чăвашсем удмурт чĕлхине йышăннă. Тутарсем Хусан хутлăхне пырса кĕресси Ылтăн Урта ханĕ пулнă Улук-Мухаммед 1438 çулта темиçе вунă çул хушши пушă ларнă Хусан хулине çĕнерен вăй илтернипе, унпа пĕр ятла ханлăх туса хунă хыççăн пуçланнă. "Хусан летописецĕ" пĕлтернĕ тăрăх, Хусана хан виçĕ пин тутара илсе пынă пулать. Çак цифра тĕрĕс мар тесе выранла палартать М.Г.Сафаргалиев. Улук-Мухаммед виçĕ пин çынлă отрядпа Белев патĕнче Мускаван асла кнеçĕн II Василин 40 пин çынлă çарне çапса аркатма, кăштах вăхăт иртсен, ăна тыткăна илме пултарайман пулĕччĕ. Сахалтан та 40 пин тутар салтакĕ пулнă ханăн. Каярахпа ханлăха тутарсем йышлăрах куçма пуçланă. "Хусан летописецĕ" çапла пĕлтерет: "патша /урăхла каласан, Хусан ханĕ. - В.Д./ патне тĕрлĕ çĕрсенчен: Ылтăн Уртаран, Аçтăрхантан, Азовран, Крымран нумай варвар пуханма тытăннă". Куçса килнĕ тутарсемсĕр пуçне, ку выранти тутарсен хисепĕ пăлхар-чăвашсен пысăк пайĕ, çаван пекех çармассем, удмуртсем тутарланнăран уснĕ /58/.

Усă курнă литературăпа истори çăлкуçĕсем

1.*Шпилевский С.М.* Древние города и другие булгаро-татарские памятники в Казанской губернии. Казань,1877; *Смирнов А.П.* Волжские булгары. М.,1951; *Фахрутдинов Р.Г.* Археологические памятники Волжско-Камской Булгарии и ее территория. Казань,1975;

Фахрутдинов Р.Г. Очерки по истории Волжской Булгарии. М.,1984; Путешествие Абу Хамида ал-Гарнати в Восточную и Центральную Европу /1131-1153/. М., 1971. С.31-48, 56-61, 99-108, 119-120; *Аннинский С.А.* Известия венгерских миссионеров в XIII-XIV вв. о татарах и Восточной Европе// Исторический архив. М., Л., 1940. С. 71-112; *Казаков Е.П.* Этапы взаимодействия волжских болгар с финнами Поволжья // Средневековые древности Волго-Камья. Йошкар-Ола, 1992. С.42-50; Очерки истории Мордовской АССР. Саранск,1955. С. 38-39; Земля Самарская. Куйбышев, 1990. С. 29-34; *Гришкина М.В., Владыкин В.Е.* Письменные источники удмуртов IX-XVII вв. //Материалы по этногенезу удмуртов: Сб. статей. Ижевск,1982. С. 5-14; *Гришкина М.В.* Удмурты: Этюды из истории IX-XIX вв. Ижевск, 1994. С. 10-223; *Кузеев Р.Г.* Происхождение башкирского народа. М.,1974. С. 450-462, 525 /карта Волжской Болгарии/; *Кузеев Р.Г.* Народы Среднего Повольжья и Южного Урала. М.,1992. С. 52-67; *Федотов М.Р.* Исторические связи чувашского языка с языками угро-финнов Поволжья и Перми. Чебоксары,1965-1968. Части 1-2; *Каховский В.Ф.* Происхождение чувашского народа. Чебоксары,1965. С. 311-367; Городище Хулаш и памятники средневековья Чувашского Поволжья. Чебоксары,1972; *Димитриев В.Д.* Чувашские исторические предания. Чебоксары, 1993. С.19-44.

2.*Фахрутдинов Р.Г.* Золотая Орда и татары. Что в душе у народа. Набережные Челны,1993. С.3-11.

3.*Кудряшов К.В.* Половецкая степь. М.,1951; *Шарапова З.М.* Половцы: Канд.дисс. М.,1951. С. 3-329; *Греков Б.Д., Якубовский А.Ю.* Золотая Орда и ее падение. М., Л.,1950. С.17-178; *Сафаргалиев М.Г.* Распад Золотой Орды. Саранск,1960. С. 19-100; *Фахрутдинов Р.Г.* Золотая Орда и татары. С. 11-29; *Махмутова Л.Т.* Татарский язык в его отношении к древнеписьменному памятнику Codex Cumanicus по данным лексики //Исследования по исторической диалектологии татарского языка. Казань,1982. С.68-153; *Тизенгаузен В.Г.* Сборник материалов, относящихся к истории Золотой Орды. СПб.,1884. Т.1. С. X-XI, 235, 450; *Авляев Г.О.* К вопросу о монголо-татарских

этнических контактах и взаимодействиях в послечингисовский период /XIII-XVIвв./ //Литературоведение и история: Тезисы докладов и сообщений на III Всесоюзной тюркологической конференции. Ташкент,1980. С.158-159; *Амин Аль-Холи.* Связи между Нилом и Волгой в XIII-XIVвв. М.,1962. С.10-13,19.

4.*Фахрутдинов Р.Г.* Очерки по истории Волжской Булгарии. С.98-118.

5.*Шпилевский С.М.* Указ.соч.

6.См.: *Димитриев В.Д.* Об основании Н.И.Ашмариным теории болгаро-чувашской языковой и этнической преемственности // Известия Национальной академии наук и искусств Чувашской Республики. 1996. №1. С.183-200.

7.*Юсупов Г.В.* Введение в булгаро-татарскую эпиграфику. М., Л.,1960. 332 с.

8.*Тизенгаузен В.Г.* Сборник материалов. Т.1. С. 234-235.

9.*Сафаргалиев М.Г.* Указ. соч. С. 101-107; Архив Маркса и Энгельса. М.,1996. С.149; Полное собрание русских летописей /ПСРЛ/. Т. XXV. С. 175; Т.IV. С. 57; Т.V. С. 225; Т.VIII. С. 210; Т.X. С. 217; *Тизенгаузен В.Г.* Сборник материалов. Т.I. С. 529, 530; Сборник славянских и русских сочинений и статей, внесенных в хронографы русской редакции /сост. А.Попов. М.,1869. С. 53-54; *Тихомиров М.Н.* Бесермены в русских источниках// Исследования по отечественному источниковедению. М.,Л., 1964. С. 50-56.

10.ПСРЛ. Т.XXV. С. 180-181; Т.VIII. С. 10-11; Т. XV /Тверская летопись/. Стб. 427-428; Т.X. С. 229-232; Т.XVIII. С. 100-102; Т.XXVII. С. 241-242; Т.XXX. С. 11-12; Т.XXXVII. С. 72-73; Т. XXVI. С. 117; Т.XXXIII. С. 84; Т.XVIII. С. 100, 101; Т.XXIV. С. 122; Т.XX. С. 188-190; Т.XXVIII. С. 74, 235; *Тизенгаузен В.Г.* Сборник материалов, относящихся к истории Золотой Орды. М., Л., 1941. Т.II. С. 92-94, 96, 97, 101-103, 128-129, 201; Т.I. С. 289; *Сафаргалиев М.Г.* Указ. соч. С. 108-116.

11.ПСРЛ. Т.X.С. 232-234; Т.XV. Стб. 70; Т.XVIII. С. 101; Т.XXV. С. 181; Т.IV. С. 11-13; Т. XXXIV. С. 114; *Тизенгаузен В.Г.* Сборник материалов. Т.II. С. 129; *Сафаргалиев М.Г.* Указ.соч. С. 117-118.

12.ПСРЛ. Т.X. С. 232-234; Т.XI. С. 1-9; Т.XV. Стб. 70-71; *Сафаргалиев А.Г.* Указ. соч. С. 119-125; *Мухамадиев А.Г.* Булгаро-татарская монетная система XII-XV вв. М., 1983. С. 93-94; *Халиков А.Х.* Монголы, татары, Золотая Орда и Булгария. Казань, 1994. С. 77.

13.*Халиков А.Х.* Указ.соч. С. 65; ПСРЛ. Т.XI. С. 3-6; Т.XV. Стб. 73, 77.

14.ПСРЛ. Т.XV. Стб. 81; Т.XI. С. 6; *Каптеров Л.М.* Нижегородское Поволжье X-XVI веков. Горький,1939. С. 91-92.

15.ПСРЛ. Т.X. С. 9; Т.XV. Стб. 85; Т.VIII. С. 14; Т.XX. С. 191-192; Т.XXXIV. С. 124-125; Т.XXVIII. С. 75; *Каптеров Л.М.* Указ.соч. С. 92.

16.*Халиков А.Х.* Указ.соч. С. 65; *Федоров-Давыдов Г.А.* Клады джучидских монет // Нумизматика и эпиграфика. М.,1960. Кн.1. С. 94-111.

17.*Сафаргалиев М.Г.* Указ.соч. С. 125-133; *Мухамадиев А.Г.* Указ.соч. С. 91-97.

18.ПСРЛ. Т.IV. С. 66.

19.ПСРЛ. Т.VIII. С. 17, 22.

20.ПСРЛ. Т.XXV. С. 185, 190; Т.XV. Стб.92; Т.XXX. С. 118; Т.XXIV. С. 126; Т.XI. С. 12-13, 22.

21.ПСРЛ. Т.XXV. С. 187; Т.VIII. С. 19; Т.XV Стб. 100;. Т.XI. С. 18.

22.ПСРЛ. Т.XXV. С. 189; Т.VIII. С. 21; Т.XV. Стб. 106; Т.XI. С. 20.

23.*Шпилевский С.М.* Указ.соч. С. 174.

24.ПСРЛ. Т.XV. Стб. 191-192.

25.ПСРЛ. Т.IV. С. 70-71; Т.VIII. С. 23-24; Т.XV. Стб. 113-114; Т.XXX. С. 121.

26.*Сафаргалиев М.Г.* Указ.соч. С. 131-132; ПСРЛ. Т.XXV. С. 189-190; Т.VIII. С. 21-22; Т.XV. Стб. 106, 108, 109; Т.XI. С. 20, 21.

27.ПСРЛ. Т.VIII. С. 24-25.

28.ПСРЛ. Т.XXV. С. 192; Т.XV. Стб. 116-117; Т.XX. С. 196-197; Т.XXIV. С. 133; Т.XI. С. 25.

29.*Егоров В.Л.* О времени возникновения Казани// Советская археология. 1975. №4. С. 80-87; *Егоров В.Л.* Историческая география Золотой Орды в XIII-XIV вв. М., 1985. С. 102-105.

30.*Шпилевский С.М.* Указ.соч. С. 184-186; *Фахрут-*

динов Р.Г. Очерки по истории Волжской Булгарии. С. 121.

31.*Димитриев В.Д.* Чувашские исторические предания. С. 57-58.

32.*Усманов М.А.* Татарские исторические источники XVII-XVIII вв. Казань, 1972. С.139-140.

33.*Сафаргалиев М.Г.* Указ.соч. С. 130.

34.ПСРЛ. Т.XXV. С. 193-194; Т.XI. С. 27-28; Т.VIII. С. 25-26; Т.XV. Стб. 118-120; Т.XX. С. 197-198; Т.XXIV. С. 134-135; Т.XXVIII. С. 241; Т.XXX. С. 123-124.

35.ПСРЛ. Т.XXV. С. 199-206; Т.VIII. С. 32-41; Т.IV.С. 311.

36.ПСРЛ. Т.XV. Стб. 139.

37.*Кучкин В.А.* Победа на Куликовом поле// Вопросы истории.1980. №8. С. 8.

38.*Сафаргалиев М.Г.* Указ.соч. С. 142-144; ПСРЛ. Т.XXV. С. 205-206; Т.VIII. С. 41-42; Т.XI. С. 69.

39.ПРСЛ. Т.XXV. С. 206-210; Т.VIII. С. 42-48; Т.XV. Стб. 143-147.

40.*Сафаргалиев М.Г.* Указ.соч. С. 140-150; *Тизенгаузен В.Г.* Сборник материалов. Т.II. С. 110-112, 156; ПСРЛ. Т.XI. С. 121; Т.XVIII. С. 125, 139.

41.*Тизенгаузен В.Г.* Сборник материалов. Т.I. С. 392-393, 456-457, 459; Т.II. С. 112-113, 117, 159-160, 164-165, 171-172, 188; *Сафаргалиев М.Г.* Указ.соч. С. 150-156.

42.*Шпилевский С.М.* Указ.соч. С. 176.

43.*Тизенгаузен В.Г.* Сборник материалов. Т.II. С. 118; Т.I. С. 467-469; *Сафаргалиев М.Г.* Указ.соч. С. 156-158.

44.*Тизенгаузен В.Г.* Сборник материалов. Т.I. С. 254, 330, 363, 393, 465-466, 470, 548, Т.II. С. 112-123, 129, 147, 173-180, 184-185, 207; История Татарии в документах и материалах. М.,1937. С. 43-44, 92; ПРСЛ. Т.XI. С. 158-162; *Сафаргалиев М.Г.* Указ.соч. С. 158-171.

45.ПСРЛ. Т.VIII. С. 72; Т.XXVIII. С. 72; Т.XX. С. 219; Т.XXIV. С. 167. Каярахри хăш-пĕр летописçенче вырăс çарĕсен похочĕ 1395 е 1396 çулсенче пулнă тесе палăртнă. Анчах ку тĕрĕс мар. "Московский летописный свод конца XV в." тăррĕн çапла катартса парать: Юрий Дмитриевич похочĕ çинчен çырнине

йанашпа 1395 /6903/ çула кĕртнĕ /"ку йанаш летописçре пулна"/, ана 1399 çула куçарас пулать /ПСРЛ. Т.XXV. С. 225, 226, 229/. Летописçсенче Кама хĕрринчи Жукотинпа тата Керменчӳкпе пĕрлех Хусан хулине катартнă. С.М.Шпилевский "Казань" выранне Кама хĕрринех вырнаçнă "Кашан" тесе вуламаллине çирĕплетсе парать /*Шпилевский С.М.* Указ.соч. С. 183-186/.

46.ПСРЛ. Т.XI. С. 167; *Тизенгаузен В.Г.* Сборник материалов. Т.I. С. 364; *Лашков Ф.Ф.* Сборник материалов по истории крыменско-татарского землевладения // Известия Таврической ученой комиссии. 1895. №23. С. 124; *Якубовский А.Ю.* Из истории падения Золотой Орды // Вопросы истории. 1947. №2. С. 32; *Сафаргалиев М.Г.* Указ.соч. С. 174-175.

47.*Тизенгаузен В.Г.* Сборник материалов. Т. II. С. 133-134, 212, 214; Т.I. С. 471-472, 531; Путешествие Ивана Шильбергера по Европе, Азии и Африке с 1394 по 1427 г. // Записки Новороссийского университета. Одесса, 1867. С. 35; ПРСЛ. Т.IV. С. 110-111, 130; Т.V. С. 159; Т.VI. С. 135; Т.XXV. С. 236, 238-239; Т. VIII. С. 71, 82-84; Т.XV. Стб. 482-483; Т.XI. С. 171-172, 183, 201-202, 205-210; Т.XX. С. 224-226; Т.XXIV. С. 177-175; Т.XXIV. С. 175-177; Т.XXVII. С. 95-97; Т XXVIII. С. 92; Т.XXXIII. С. 95; *Сафаргалиев М.Р.* Указ.соч. С. 176-185.

48.ПСРЛ. Т.XV. Стб. 484.

49.ПСРЛ. Т.XV. Стб. 480; Т. XXV. С. 39; Т.VIII. С. 84-85; Т. XXXIII. С. 95.

50.ПСРЛ. Т.XV. Стб. 485.

51.ПСРЛ. Т.XIX. Стб. 12-14; Казанская история. М., Л., 1954. С. 47-48; Сказание о царстве Казанском. М., 1959. С. 27-28.

52.*Федоров-Давыдов Г.А.* Клады джучидских монет. С. 120-121; *Халиков А.Х.* Указ.соч. С. 90.

53.Ногай Урти пирки пăхăр: *Кочекаев Б.-А.Б.* Ногайско-русские отношения в XV-XVIII вв. Алма-Ата, 1988. С. 270.

54.*Савельев П.С.* Монеты джучидские, джагатаидские, джелаиридские и другие, обращавшиеся в Золотой Орде в эпоху Тохтамыша. СПб., 1857. С. 316, 324-325; *Марков А.К.* Инвентарный каталог мусуль-

манских монет Эрмитажа. СПб., 1898. С. 501, 503; *Сафаргалиев М.Г.* Указ.соч. С. 186, 187, 190, 191, 200; Халиков А.Х Указ.соч. С. 90.

55.ПСРЛ. Т.XXV. С. 248. См. также: Т.VIII. С. 95; Т. XXVI. С. 187; Т. XXVII. С. 102; Т.XXVIII. С. 98, 264.

56.ПСРЛ. Т.XXVII. С. 269; Т.XX. С. 234.

57.*Шпилевский С.М.* Указ.соч. С. 195-546; *Фахрутдинов Р.Г.* Археологические памятники Волжско-Камской Булгарии и ее территория. С. 3-218; *Егоров В.Л.* Историческая география Золотой Орды в XIII-XIVвв. С. 94-107; *Халиков А.Х.* Указ.соч. С. 78-98; *Димитриев В.Д.* Указ.соч. С. 48-66.

58.ПСРЛ. Т.XIX. Стб. 19-20; Казанская история. С. 53; *Месарош Д.* Памятники старой чувашской веры. Чебоксары, 2000. С. 18-20; *Димитриев В.Д.* О последних этапах этногенеза чувашей// Болгары и чуваши. Чебоксары, 1984. С. 35-43; *Сафаргалиев М.Г.* Указ.соч. С. 245, 253-255.

(”Хыпар” кĕнекиĕ 1997. 3(23)№)

МИРЛӐН, ХАЛӐХ ИРӖКӖПЕ

/Истори çӑлкуçӗсене тишкерсе тухни/

Юлашки вăхăтра хăш-пӗр историксемпе этнографсем нимӗнпе никӗслемесӗрех çапла калаççӗ: чăвашсем Мускав правительстви те, тӗнче те пӗлмен вак халăх пулнă, ун ятне летопиçсенче 1524 çулта тин асăнма тытăннă; XVI ӗмӗр вӗçӗнче Вырăс патшалăхӗ халăхсене пӗрлештерессишӗн мар, Хусан ханлăхӗн анаç енчи хутлăхне хăй çумне яваçтарасшăн тăнă, Ту ен халăхӗсен ят-сумлă çыннисем сепаратистла юхăма хутшăнна-мӗн, çав вăхăтра Чăваш çӗршывӗ пулман та, Хусан ханлăхӗ Ту енне Вырăс патшалăхӗ çумне мирлӗ майпа пӗрлештернине документсем урлă кăтартса паман тата ытти те. Асăннă историксемпе этнографсем хăйӗн самахӗсене çăлкуçсене кăтартса никӗслемеççӗ, вӗсенчи уйрăм вырăнсене çеç суйласа илеççӗ, чăваш халăхӗн историне пачах чухламаççӗ.

Чăваш халăхӗн XVI ӗмӗр варринченхи историне, Чăваш çӗршывӗ Вырăс патшалăхӗ çумне мирлӗн пӗрлешнин сăлтавӗсене, лару-тăрăвне тата вăхăтне истори çăлкуçӗсем кирлӗ таранах туллин те ӗненмелле çирӗплетсе параççӗ. Çав çăлкуçсене тишкерсе тухăпăр, вӗсен ячӗсене кăтартса парапăр.

Авалхи чăвашсем - пăлхарсемпе саварсем - VII-VIII ӗмӗрсенче Вăтам Атăл тăрăхне Çурçӗр Кавказран куçса килнӗ. Çӗнӗ выранта вӗсем венгрсемпе /вӗсем IX ӗмӗр вӗçӗнче Дунай тăрăхнелле кайиччен/, çармассемпе, ытти халăхсемпе кӳршӗллӗ пуранна. Вӗсем малтан Вăтам Атăл тăрăхӗнче Пăлхар йăхӗсен пӗрлешӗвне, IX ӗмӗр вӗçӗнче - Атăлçи Пăлхар патшалăхне туса хунă, пăлхар йăхӗсемсӗр пуçне унта çармассем, удмуртсем, пермяксем, ирçе-мăкшăсемпе пушкăртсен пӗр пайӗ кӗнӗ. Пăлхарсем вӗсен çӗрӗсенче çар-администраци пункчӗсем, суту-илӳ факторийӗсем йӗркеленӗ. XII ӗмӗр тӗлне тӗрӗк чӗлхиллӗ пăлхар /авалхи чăваш/ халăхӗ чăмăртанна.

Вырассен чапла историкӗ, этнографӗ тата географӗ В.Н.Татищев, пирӗн вăхăтчен сыхланса юлайман çăлкуçсене пӗлнӗскер, XVIII ӗмӗр варринчех хăйӗн "История Российская" кӗнекинче çапла çирӗплетнӗ: "Чăвашсем, авалхи пăлхарсем, Атăл тăрăх анатарах, Хусан тата Чӗмпӗр уесӗсене пӗтӗмпех йышăннă",

“Чăвашсем, пăлхар халăхĕ, Хусан çывăхĕнче”, “Каман анат енче пулерсем е пăлхарсем тата чулматсем... вĕсенчен тухнă чăвашсем пурăнаççĕ, вĕсем Атăл тăрăх анаталла йышлă”; “Чăвашсем пăлхар халăхĕсенчен юлнă”. [1]. Хусан университечĕн профессорĕ И.Н.Смирнов этнолог /1856-1904/, Хусанта “Черемисы” /1889/, “Вотяки” /1880/, “Пермяки” /1891/, “Мордва” /1892/ истори-этнографи монографийĕсем пичетлесе кăларнăскер, лингвистика, этнографи, археологи, çырулăх çăлкуçĕсемпе усă курса, Н.И.Ашмарин пăлхарсемпе чăвашсен этноспа чĕлхе çыхăнăвне теори тĕлĕшĕнчен никĕслесе парицченех Атăлçи пăлхарсемпе чăвашсен таванлăхне çирĕплетнĕ, хуçалăх, политика, культура тата чĕлхе енĕпе Атăлçи пăлхарсемпе чăвашсем Атăлпа Урал тăрăхĕнчи финн йăхĕнчи халăхсене чылай витĕм кунине кăтартса панă.

И.Н.Смирнов никамран маларах пăлхар чĕлхи авалхи чăваш чĕлхи шутланать тенĕ, никамран малтан “пăлхар цивилизацийĕ” анлава никĕсленĕ, çав цивилизаци финн-угор халăхĕсене ыра витĕм кунине кăтартса панă.

М.В.Довнар-Запольский редакциленĕ “Книги для чтения по русской истории” кĕнекен I томĕнче /М., 1904. 64-80 стр./ И.Н.Смирновăн “Волжские болгары” статьйи пичетленнĕ, унта Атăлçи Пăлхар авалхи чăваш патшалăхĕ шутланнине нумай енлĕн кăтартса анлантарнă.

Н.И.Ашмарин хăйĕн “Болгары и чуваши” кĕнекинче /Хусан, 1902/, нумай-нумай çăлкуçа тишкернине тĕпе хурса çакăн пек пĕтĕмлетусем тунă: 1/ “Атăлçи пăлхар чĕлхи хальхи чăваш чĕлхипе пĕрешкел” /38 стр./; 2/ “Пирĕн вăхăтри чăвашсем урăх ниçтан та мар, турремĕнех атăлçи пăлхарсенчен тухнă” /49 стр./; 3/ Вĕсен çĕрĕсене туртса илнĕ тутарсем, “пăлхарсен политикине тата хаш-пĕр енчен вĕсен культурине хăйсем çине илсе, ислам тĕнне йышăнса, хăйсем те пăлхарсенчен тухнине çирĕплетсе пама тăрăшнă” /50 стр./. СССР Аслăлăх академийĕн член-корреспонденчĕ Н.И.Ашмаринăн 1925 çулта çапла çырнă: “Чĕлхепе историн мĕн пурри çакна çирĕплетет: чăвашсем - авалхи пăлхар йăхĕ, çаван пек пулсан акă мĕнле шутламалла: урăх халăхсем ăна çав ятпа

пĕлнĕ, хайсене вĕсем чăваш тенĕ" [2]. Н.И.Ашмаринăн пăлхарсемпе чăвашсен чĕлхипе этнос çыхăнавĕн теорине пĕтĕм тĕнчери тĕрĕк тĕпчевçисем ырлаççĕ. Финн ăсчахĕсем /Х.Паасонен, В.Вихман, А.Рясянен/, венгр ăсчахĕсем /Б.Мункачи, З.Гомбоц, А.Рона-Таш, Г.Берецки/, чăваш ăсчахĕсем /В.Г.Егоров, М.Р.Федотов/, вырăс ăсчахĕсем /Н.И.Ашмарин, И.Г.Добродомов/ çармăс чĕлхинче 1500 чăваш сăмахĕ, удмурт чĕлхинче 500, ирçĕ-мăкшă чĕлхинче - 100 ытла, коми чĕлхинче - 300 ытла, венгр чĕлхинче - 600, тухăç славянсен чĕлхинче 300 яхăн чăваш сăмахĕ пуррине тупса палăртнă, асăннă чĕлхесене çав сăмахсем VII-XIV ĕмĕрсенче, Ылтăн Урта XIV ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче - XV ĕмĕр пуçламашĕнче Пăлхар çĕрĕсене çаратса хăвăриччен кĕрсе юлнă. Чăваш сăмахĕсем урăх чĕлхесене кĕни пăлхар цивилизацийĕн аталану шайне, вăл Атăл-Урал тăрăхĕнчи халăхсене хуçалăх тата культура енĕпе ыра витĕм кунине, чăваш чĕлхи Атăлçи Пăлхарта патшалăх чĕлхи шутланнине çирĕплетет. Тутар археологĕ тата историкĕ Р.Г.Фахрутдинов, унччен йăнашнаскер, 90-мĕш çулсенче тĕрĕслĕх çулĕ çинє тăчĕ. Уйрăмăн илсен, вăл тутар халăхĕ пăлхарсенчен тухман, XIV ĕмĕрпе XV ĕмĕр пуçламашĕнче Ылтăн Уртара, пăлхарсем нимĕн чухлĕ те хутшăнмасăрах, монголсемпе пĕрле Тĕрĕк Каганатĕнче 552 çултанпа палла пулнă тĕрĕк чĕлхиллĕ тутарсем килсе кĕнĕ хыççăн тата анăçри кипчаксенчен /половецсенчен/ йĕркеленнĕ тесе тĕрĕс çырса кăтартрĕ. Хусан ханлăхĕнче çеç тутарсем пăлхар-чăвашсене тутарлатма пуçланă, терĕ.

X ĕмĕр пуçланнă хыççăн пăлхарсен ятлă çыннисем, хулара пуранакансем, ялта пуранакансенчен чылайăшĕ ислам тĕнне йышăннă. Анчах Пăлхар çĕрне çаратса хăварнă чухне тата ун хыççăн чăвашсем ислама пăрахăçланă. Венгр этнографĕ Д.Месарош, чăвашсен авалхи халап-юмахĕсене, фольклорне çулталăк çурă хушши тĕпченĕскер, 1909 çулта Будапештра пичетлесе кăларнă кĕнекинче çакăн пек пĕтĕмлетӳ тунă: "Чăвашсен авалхи тĕнне тĕпчени çакна кăтартса парать: халăхăн пысăк пайĕ тăхçан ĕлĕк мăсăльман тĕнне ĕненнĕ,анчах каярахпа, политика лару-тăравĕ пăсăлса çитнине пула, вĕсемпе мăсăльман тĕнчин

çыханавĕ татăлнă, халăх чунĕнче çирĕпленмен ислам чăвашсен авалхи тĕнĕпе хутăшса кайнă. Чăвашсем хальхи вăхăтра ĕненсе пуранакан тĕн çав икĕ тĕнрен никĕсленнĕ, унта хаш-пĕр таран вырăссен христианлăхĕн витĕмне те туйса илетĕн" [3].

XIII ĕмĕрте Атăлçи Пăлхăран политика лару-тăравĕ йывăрланса çитнĕ. 1236 çулта Бату хан çарĕсем Атăлçи Пăлхара çулталăк тăршшĕпех аркатнă. Нумай хулапа яла пĕтерсе тăкнă. пăлхар халăхне питĕ йышлăн вĕлернĕ. Пĕтĕмпех пĕтсе ларнă Атăлçи Пăлхар. 1243 çулта унăн территорине Ылтăн Урта йышне кĕртнĕ. Пăлхарсен халăх тĕпленсе пуранакан çĕрĕсемпе монгол-тутар империйĕ уса курнă. Çав территорие хальхи Самар, Ульяновск облаçĕсем, Пенза облаçĕн тухăç пайĕ, Тутарстанăн Камăран кăнтăралли пайĕпе кăнтăр-анăç пайĕ, Чăваш Республикин кăнтăр-тухăç пайĕ кĕреççĕ. XIV ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче - XV ĕмĕр пуçламашĕнче Ылтăн Урта ханĕсемпе эмирĕсем, 1391 тата 1395 çулсенче Тамерлан, 1391-1420 çулсенче вырăс кнеçĕсем, Асла Новгород ушкуйникĕсем тата, пуринчен ытларах, Мангыт Юрчĕн кнеçĕн Едигейĕн çарĕсем тапаннипе çав территорие пĕтĕмпех çаратса хăварнă. Археологи тĕпчевĕсем палăртнă тăрăх, Пăлхар çарĕнчи 32 хулана, 2 пине яхăн яла йăлтах тĕп тунă, ят-сумла çынсене, тĕн çыннисене, хула халăхне, ялта пуранакансен пысăк пайне - халăхăн 80 процентне вĕлерсе пĕтернĕ е кăнтăр - хĕвелтухăç енчи çĕршывсене чуралăха сутнă. Пăлхар çĕрĕн пĕтĕм территорийĕ мангитсем /ногайсем/ куçса çӳрекен "пуша хир" пулса тăнă [4].

"Казанский летописец" авторĕ 1560 çулсенче çырнă тăрăх, çаланса юлнă "чухăн пăлхарсем" Хусан çывăхнелле тухса тарнă, унта Чăваш тăрăхĕ /даруга/ йĕркеленнĕ. Пăлхарсем çăвăн пекех хальхи Чăваш Ĕнĕн вăта çĕрпе çурçĕр енне, çармассем патне куçса килнĕ. "Чухăн пăлхарсем"-чăвашсем унта хаш-пĕр таран туçи çармассемпе хутăшнă. XIV ĕмĕр вĕçлениччен хальхи Чăваш Ен территорийĕнче, тĕпрен илсен, "çармассем" - туçи çармассем пураннă май, вырăс летописçĕсенче Ту енче пуранакан халăха унччен ханăхнă йăлапа "туçи çармас" тенĕ. Çавна пулах А.М.Курбский кнеç çапла çырнă: "Сăр юхан шывĕ урлă каçсанах

туçи çармăссем патне çитрĕмĕр, вĕсем хăйсене чăваш теççĕ, хăй евĕрлĕ халăх". Атăл тăрăхĕнчи Хусан ханлăхĕн сулахай çыранĕпе çыхăнна летопиçсенче "чăваш" этноним пуçласа 1508 çулта тĕл пулать /"Казанский летописец" кĕнекен уйрăм списокĕсенче, А.И.Лызлован XVII ĕмĕрте çырнă "Скифская история" кĕнекинче/. Чепцана /Çурçĕр Удмурти/ куçса кайнă пăлхар-чăвашсем çинчен калакан пĕрремĕш документа 1510 çулта çырнă. Хăйсене чăваш тенĕ вĕсем. Çав документа М.В.Гришкина пичетлесе каларнă. Хăш-пĕр историксем вырăс летописĕсенче "чăвашсем" энтонима 1524 çулта тин асăнма тытăннă тенипе килĕшме çук, ăна 1521 çулта асăннă. XVI-XVII ĕмĕрсенчи çалкуçсенче сулахай çыранти чăвашсене яланах чăваш тенĕ. XVII ĕмĕрти хăш-пĕр документсенче хĕсметри чăвашсене хĕсметри тутарсем тенĕ [5].

1438 çулта Ылтăн Урта престолĕнчен каларса пăрахнă Улук-Мухаммед хан хăйĕн вырăссен 40 пин çынлĕ çарне çĕнтернĕ çарĕпе Хусана килсе кĕнĕ, Хусан ханлăхне туса хунă. Тутарсен çарĕнче, 130 çул иртнĕ хыççăн "Казанский летописец" авторĕ çырнă пек, 3 пин çын мар, сахалтан та 40-50 пин çын пулнă. [6]. Çав ханлăха часах "Ылтăн Уртаран, Ăçтăрхантан, Азовран, Крымран" тутарсем пуçтăраннă тытăннă [7]. Хусан ханлăхĕн шутне туçи тата улăх çармăссен, сулахай тата сылтăм çыранти чăвашсен, кăнтăр енчи удмуртсем, тухăç енчи ирçе-мăкшăсен çĕрĕсене, урăхла каласан, сулахай çыранти Анат Камаран çурçĕр еннелле, сылтăм çыранта Кама варри - Чутей - Кĕтне юхан шывĕ - Барыш слободи чикĕпе вырнаçнă çĕрсене кĕртнĕ. Пăлхар çĕрĕ шутланнă территори Хусан ханлăхĕн шутне кĕмен.

Хусан ханлăхĕнче халăх йышне катартни çук. XVIII ĕмĕр пуçламăшĕнче кăна Ватăм Атăл тăрăхĕнче пуранакан халăхсен тĕрĕс йышне катартни пичетленĕ. I ревизи /1718-1723 çулсем/ катартăвĕсемпе килĕшӳллĕн, Ватăм Атăл тăрăхĕнче 77,3 пин ирçе-мăкша, 47,6 пин çармăс, 211,1 пин тутар, 217,6 пин чăваш, 12,8 пин ытти халăх çыннисем пуранна [8]. Эпĕ тупса палăртнă тăрăх, XVI ĕмĕрте Хусан ханлăхĕн сулахай çыранĕнче 200 ытла, сылтăм çыранĕн-

че - 300 ытла чăваш ялĕ шутланнă /вĕсене эпĕ ятран асаннă/. Ту енче 30 яхăн туçи çармăс ялĕ, 20 яхăн ирçе-мăкшă ялĕ пулнă, вĕсене Сăрпа Мăкшă юхан шывĕсен бассейнĕнчен хăн çĕрĕсене акса тума куçарса килнĕ. Сĕве уесĕн 1565-1567 çулсенче çырса пынă кĕнекинче катартнă тăрăх, мăкшă-ирçесем 1551 çулта Мăкшăпа Сăр енне тавраннă. Анат Сĕвепе Атăл юхан шывĕсен хушшинче хĕсметри мăрсасемпе тутарсен темиçе ялĕ вырнаçнă. Сулахай çыранти чăваш ялĕсенче те мăрсасемпе хĕсметри тутарсен килĕсем пулнă. Ханлăхра ят-сумлă çынсем, тĕн çыннисем тата çар çыннисем пĕтĕмпе пекех тутарсем шутланнă. Тутарсем ясак тулемен. Хусан çывăхĕнчи тата Анат Сĕвепе Атăл хушшинчи чăваш ялĕсенче вырнаçнă мăрсасем, сойюргаль правипе уçă курса, ясак тулекен чăвашсене хăйсен аллинче тытнă, вĕсене хĕсĕрлесех ислам тĕнне йышăнтарнă, тутара каларнă. Сулахай çыранти тата Сĕве тăрăхĕнчи чăвашсен чылай пайĕ тутарланнă. Çапла шутлама май пур: Хусан ханлăхĕнчи халăхăн 50 проценчĕ чăвашсем, 30 проценчĕ - çармăссемпе кăнтăр удмуртсем, 20 проценчĕ - тутарсем пулнă.

Хăш-пĕр историкем XVI ĕмĕр варринче Чăваш çĕршывĕ пулман тесе çыраççĕ. Анчах, пурте йышăннă йĕрке тăрăх, пайăр этнос /пĕр-пĕр халăх/ йышăнакан территорие çĕршыв теççĕ. Çĕршыв вăл пур чухне те патшалăх пулнине пĕлтермест. "Чăваш Ен" çĕршывĕ çинчен чи малтан Австри посолĕ С.Герберштейн çырнă, вăл 1517 тата 1526 çулсенче çичшер уйăх Мускавра пуранна, 1549 çулта Венăра "Записки о Московитских делах" кĕнеке пичетлесе каларнă. Вăлах çапла çырнă: "Хусан ханĕ "ватăр пин çынла, ытларах пехотăран тăракан çар пуçтарма пултарать, çав шутра çармăссемпе чăвашсем - питĕ тĕл перекенсем. Чăвашсем шывра кимсемпе ишме те ăста" [9].

"Чухăн пăлхарсен"-чăвашсен иккĕ пиллĕкмĕш пайĕ Хусан ханлăхĕн сулахай çыранĕ енче, тĕпрен илсен, çăлкуçсем çирĕплетнĕ тăрăх, Чăваш тăрăхĕнче пуранна /çав тăраха XVII ĕмĕрте тин Хусан уесĕн Зюрей дороги /даругĕ/ тенĕ, XVII ĕмĕрччен вара мĕн пур çăлкуçсенче Чăваш тăрăхĕ /даругĕ/ ятпа асаннă. Д.М.Исхаков вăл Хусан ханлăхĕнчех Зюрей ятлă

пулнă тесе çирĕплетни тĕрĕс мар. Ханлăхан Ногай, Алат, Галици, Ар тăрăхĕсенче те сахал мар чăваш ялĕ пулнă. Чăвашсен пĕр пайĕ Çурçĕр Удмуртири Чепца юхан шывĕн тăрăхне те çитнĕ, çăлкуçсенче вĕсене чăвашсем, кунпа пĕрлех бесерменсем тесе асăннă [10].

XVI ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринчи - XVII ĕмĕрти документсенче сулахай çыранти чăвашсене "ясак тӳлекен чăвашсем" тенĕ. Хусан историкĕсем Е.И.Черныш0в, И.П.Ермолаев, Д.М.Исхаков ун чухне Хусан ханлăхĕнчи ясак тӳленĕ тутарсене те ясак тӳлекен чăвашсем тенĕ тесе, ясак тӳлекенсене пурне те чăваш ятпа чĕннĕ тесе, "чăваш" сăмах этнос терминĕ мар, социалла термин пулнă тесе çирĕплетме хăтланни анăçлă мар. Ĕнентерекен тĕслĕх илсе катартайман вĕсем. Е.И.Чернышов Сĕве уесĕнчи чăваш ялĕсенчи "ясак тӳленĕ чăвашсене" те, вĕсем халĕ те чăваш ялĕсем пулнине пăхмасăрах, тутарсен шутне кĕртет. Ыйтас килет: "ясак тӳлекен чăваш" тени ясак тӳлекен мĕн пур çынсене палăртакан социалла термин пулнă пулсан, мĕншĕн-ха Хусан уесĕн çав документчĕсенчех "ясак тӳлекен çармассене" /унта çармассем кĕнĕ/, "ясак тӳлекен вотяксене" /удмуртсене/ катартнă? М.И.Скворцов профессор çакна çирĕплетсе панă: Хусан уесĕнчи ясак тӳленĕ чăваш ялĕсен топонимĕсем - чăваш топонимĕсем. Хусан уесĕн тăрăхĕсенчи /даругĕсенчи/ ясак тӳленĕ чăвашсен нумай ялĕ /50 ытла/ XVI ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче - XVII ĕмĕрте, ялсен унченхи ячĕсене упраса хăварса, Аталăн сылтăм çыранне тата Анат Каман леш енне, хăйсем малтанхи çĕрĕсем çине куçса кайнă. Çав ялсем халĕ те чăваш ялĕсем шутланаççĕ. Анчах та Хусан ханлăхĕнче ясак тӳлекен чăвашсенчен ытларахăшне тутарлатнă. Хусан ханлăхĕ ытларах вăхăт тытăнса тăнă пулсан тĕрĕк халăхĕ шутланакан чăвашсем пĕтĕмĕшпех тутарланма пултарнă. Хусан ханлăхĕнче, Крым, Касимов ханлăхĕсенчи, ытти тутар ханлăхĕсенчи пекех, ясак тӳлекен тутарсем пулман, пулма та пултарайман. Вĕсенче пур тутар та хуçа шутланнă. Вăтам Атăл тăрăхĕнчи вырăссем XVII-XIX ĕмĕрсенче те тутарсене пурне те "кнеç" тесе чысланă. Хусан уесĕнче çырса пынă кĕнекесенче XVII

ёмёр варринче кана "ясак тӳлекен тутарсем" тени куранма тытанна [11].

Хусан ханлахӗн обществапа политика тата социалла пурнӑçпа экономика тытамӗ Ылтан Уртаринчен кашт кана уйралса тана, çарпа феодал тытамӗ пулна вал. Питех те пысак çар лагерӗ евӗр пулна çав ханлах. Политикари асла влаç тухаçри деспот пек монарх - чингисид-хан аллинче пулна. Ун çумӗнче диван - хайне евӗр правительство ӗçленӗ. Тавата тӗп член кӗнӗ унта - Ширин, Барын, Аргын тата Кипчак йахӗсен карачӗсем /Крым, Касимов ханлахӗсенчи, тутарсен ытти ханлахӗсенчи пекех/. Феодалсен иерархийӗнче карачсем хыççан эмирсем, биксем /кнеçсем/, мӑрсасем, улансем тана. Сеидсем, шейхсем, имамсем, мулласем - мӑсальман тӗнӗн çыннисем пысак правапа уса курна. Вӗсем хыççан тин тутар мар халахсен кнеçӗсем - çӗрпӳсем, аллапӳсем, вунпӳсем тана. Хӗсметри тутарсем - казаксем /ичкисем, исниксем/ çар çыннисен пысак йышӗнче шутланна. Чавашсен хушшинчен те казаксем тухна. Ясак тӳлекен чавашсем, çармассем, удмуртсем ӗçлекен халах шутланна, тыткана лекнӗ вырассем /100 пин çын таран/ чура пулна. Çӗрсем хан /кермен/ çӗрӗ, патшалах çӗрӗ, ятсумла феодалсен сойюргаль çӗрӗ, тӗн феодалӗсен вакуфӗсем çине пайланна. Çӗре сойюргаль йӗркипе тытса таракан тутар феодалӗсем хан уйарса пана вулассенче, ялсенче халахран ясак пуçтармалли, хайсене валли ытти пурлах илмелли правапа уса курна. Хӗсметри тутарсем çар хӗсметӗнче танашан патшалах çӗрӗн пысаках мар лаптакӗсемпе уса курна, вӗсене рента-налук тӳлессинчен хатарна. Патшалах çӗрӗсен ытларах пайӗпе тутар мар халахсен ясак тӳлекен çыннисен общинисем уса курна, вӗсем патшалаха рента-налук тӳлесе тана /20 ытла йышши парам, Сахиб-Гирей ярлакне пахар/. Ясак тӳлекен пӗтӗм халаха выранти бейсем-кнеçсем /чавашсен - пӳсем/ тытса таракан çӗрпӳсем, аллапӳсем тата вунпӳсем çине пайлана. Ясак тӳлекенсен пӗр вахатрах çар тивӗçӗ те пулна. Кнеçсем /пӳсем/ вӗсене, çӗрпӳ, аллапӳ, вунпӳ тарах пуçтарна ясак тӳлекенсен çарне кӗртсе, вырас çӗрӗсене хирӗç çапаçма ертсе кайна. Ясак тӳлекен çынсене пусмарламашкан çарпа крепостла тытам туса хуна.

Хăш-пĕр историксем, Ту ене ханлăхăн япăх аталанăнă пайĕ выранне хурса, хытах йăнăшаççĕ. Пачах урăхла, сылтăм çыранти чăвашсен тата туçи çармассен çĕрĕсем, çавăн пекех сулахай çыранти чăвашсен çĕрĕсем çинче тыра тухаçларах çитĕннĕ. Унта çĕр сухаласа тыра акнă, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетнĕ. Тутар феодалĕсенчен нумайăшĕн сойюргалĕсем Ту енче тата сулахай çыранти чăвашсен çĕрĕсем çинче вырнаçнă. Тутар кнеçĕсемпе марсасем чăвашсемпе туçи çармассенчен виçерен ирттерсе парăм саптарнă. Хан валли пурлăх пуçтармалли çар экспедицийĕсем ирттерсе, вĕсем ясак тулекен чăвашсене куç кĕрет çаратнă; вĕсен ялĕсене çунтарса янă, чăваш каччисемпе хĕрĕсене тыткăна илсе кайни те пулнă [12]. Чăвашсен XIX ĕмĕр варринчи историкĕ тата этнографĕ С.М.Михайлов çапла çырнă: "Хусан патшисем, ялан тенĕ пекех, пуян çĕршывра вырнаçнă чăвашсен шучĕпе пуранна, хăйсене паханакансене час-часах вĕсене çаратма, хĕрĕсене пусмăрламашкăн илсе кайма кăларса янă. Кăшт хирĕç тăрсан та... тутарсем питĕ тискер ĕçсем туна, тăнăç çынсене пĕр шеллемесĕр каса-каса пăрахнă, вĕсен пурлăхне çаратнă" [13]. 1974 çулта эпĕ, вырас летописĕсенче çырни тăрăх, çакна палăртма пултартăм: 1439 çултан пуçласа 1549 çулччен Хусан çарĕсем Чăваш çĕршывĕ урлă 31 хутчен вырассене хирĕç çапаçма кайнă /çĕнĕрен тупанна çăлкуçсене шута илсен ку хисеп 40 çывхарать/; 1455 çултан пуçласа 1550 çулччен вырас полкĕсем Чăваш çĕрĕ урлă 33 хутчен Хусана е ханлăхăн ытти выранĕсене çитме каçса кайнă. Хусан тата вырас çарĕсен хушшинчи çапăçусем те сылтăм çыранти чăвашсемпе туçи çармассене çарата-çарата хăварнă. Ту ене час-часах нухай отрячĕсем вăрă-хурахла киле-киле тапанна. Чăвашсемпе туçи çармассем Хусан ханĕсемпе феодалĕсене хирĕç вĕçĕмсĕр кĕрешсе тăнă [14].

Улăхри çармассемпе кăнтăр енчи удмуртсем вăрманлă вырансенче /тайгара/ пуранна, Ветлуга çармасĕсем çĕр ĕçĕпе çыхăнман, унта тутар администрацийĕ пырса çуреме шикленнĕ; унти территорисенче тутар феодалĕсен сойюргалĕсем, Чăваш Енпе Туçи çармассем енчи пек тутар крепоçĕсемпе острогĕсем

(тĕкме е чикме хулисем) пулман. Хан çарĕсем улăхри çармăссемпе удмуртсен çĕрĕсем урла вырăс çĕрĕсене тапăнма сайра-хутра çеç каçса çӳренĕ.

Çав вăхăтрах XV ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче - XVI ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринче Галичри вырăссем улăхри çармăссем çине вăра-хурахла тапăннă. XV ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче вырăс çарĕсем, Вятка çĕрĕшĕн тата Çурçĕр Удмуртишĕн çапăçса, удмурт халăхне пысăк сиен кӳнĕ. А.Г.Бахтин кăтартса панă тăрах, вăра-хурахла çапăçусем Хусаншан тупăш илмелли лайăх çăлкуç шутланнă. Вăл çапла çырать: "Сулахай çыранти çармăссем те çакăн пек майпа уçă курнă, мĕншĕн тесен хуçалăх никĕсĕ хавшак пулнă вĕсен, чикĕ хĕрринче пуранна, унта лару-тăру нихçан та лăпкă пулман. Нумай-нумай çăлкуç çакна çирĕплетет: сулахай çыранти çармăссем нумай хушă вăра-хурахла ĕçпе тата чура сутса пуранна" [15]. Çапла вара улăхри çармăссемпе удмуртсем Вырăс патшалăхĕ çумне мирлĕн /хăйсен ирĕкĕпе/ пĕрлешме пултарайман.

Хăйсен синкерлĕ аваллăхне: монгол-тутарсем 1236 çулта вĕсен патшалăхне - Атăлçи Пăлхара аркатнине, Пăлхар çĕрне çаратса хăварнине, XIV ĕмĕр вĕçĕнчи - XV ĕмĕр пуçламăшĕнчи тискер геноцида, ирĕксĕрех хальхи Чăваш Енĕн вăта тата çурçĕр районĕсене куçса кайма тивнине, Хусан ханĕсемпе феодалĕсем хаярран пусмăрланине асрах тытнă чăвашсем. Туçи çармăссем чăвашсемпе пĕрлешнĕ, вĕсемпе туслă пуранна. Чăвашсемпе туçи çармăссем Хусан ханĕсемпе феодалĕсене пулăшма пултарайман. XVI ĕмĕр варринче чăвашсем вăйла Вырăс патшалăхĕ тата хăйсене пусмăрлакан Хусан хушшинче пуранна, хăйсен патшалăхне çĕнĕрен туса хурассине шанма пултарайман. Пĕртен-пĕр çул пулнă вĕсен - çынсене вĕлерсе пĕтермесĕр, мирлĕн, пуç тайса /ыйтса/ Вырăс патшалăхĕн йышне кĕресси.

Çакна та шута илес пулать: пĕр енчен сылтăм çыранти чăвашсем, туçи çармăссем, тепĕр енчен, Чулхула хутлăхĕнчи вырăс çыннисем хушшинче ырă кӳршĕллĕ çыхăнусем йĕркеленсе пынă. XIV ĕмĕрте вырăс çĕрĕсен чикки Сăр юхан шывĕ çумнех çитнĕ. 1373 çулта вырăссем Сăр хĕрринче Кăрмăш хулине никĕсленĕ. Чăвашсем çывăх туслашнă вырăс çынни-

семпе, вĕсемпе суту-илӳ туна, ĕçлĕ çыхăнусем аталанна. XVI ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринчех чăвашсемпе туçи çармассен ясак тӳлекен çыннисем Чулхула уесĕнче хурт-хăмăр ĕрчетмелли вăрмансене оброк йĕркипе уса курма илнĕ [16]. Чăвашсем тытканри вырăс çыннисемпе çывăхланнă, вĕсене хан çĕрĕсем çинче ĕçлемешкĕн чăваш ялĕсене яна. Тыткана лекнисенчен нумайашĕ Хусан паранна хыççăн та вырăс уесĕсене тавранман, чăваш ялĕсенчех пуранма юлнă [17].

Хайĕн "Присоединение Чувашии к России" ĕçĕнче [18] СССР Ăслăлăхсен академийĕн академикĕ М.Н.Тихомиров, хайĕн темиçе ĕçĕнче истори ăслăлăхĕсен докторĕ С.О.Шмидт профессор Чăваш Ене Раççей çумне пĕрлештернин ыйтăвĕсене тĕрĕс çăлкуçсене /документсене/ катартса парса тĕпчесе тухнă. Чăваш историкĕсем Т.Г.Гусев /1950/ тата В.Д.Димитриев /1976/ Чăваш Ене Раççей çумне пĕрлештернине ятарласа тĕпченĕ, çав тĕпчев ĕçĕсене пичетлесе каларнă. Чăваш Ен, чăваш халăхĕ 1551 çулхи çĕртме уйăхĕнче Раççейпе мирлĕн пĕрлешнине катартса пана çав ĕçсенче. М.Н.Тихомиров академик "Россия в XVI столетии" ятлă сумлă ĕç пичетленĕ, унта çакăн пек сыпăксем пур: Горная сторона Волги и земли чувашей /XXV сыпăк, 467-484 стр./, Казанское ханство и Луговая сторона /XXVI сыпăк, 485-507 стр./ [19].

Чăваш Ен тата Туçи çармăс районĕ Вырăс патшалăхĕ çумне мĕнле пĕрлешнине çырулла çăлкуçсем тăрăх пăхса тухăпăр.

Летописĕн пĕр палакĕнче асăннă тăрăх, 1523 çулта "аслă кнеç воеводисем Сăр юхан шывĕ çинче Суреск хулине /урăхла каласан, Васильсурск. - В.Д./ лартнă, Мордвана тата Хусан Çармăсне пĕтĕм Руç кнеçĕ майлă таратнă, тупа тутарнă" [20]. М.Н.Тихомиров çав ĕçе Анат Сăр тăрăхне Раççей патшалăхĕ çумне вăхăтлăха пĕрлештерни выранне хурать пулсан та, çав сăмахсенче, ахăртнех, Сăр тепĕр енчи халăх Васильсурска тапăнмалла мар тесе сăмах пани çинчен калаççĕ. Ытти летописçем тăрăх, III Василий, 1521 çулта Хусан ханлăхĕ тĕлĕшпе протекторат çухатнине тӳрлетме тăрăшса, Васильсурска никĕсленĕ вăхăтра "Шигалей патшана Атăл çинчи кимĕсем çине лартнă çарпа тата хайĕн воеводисемпе Хусан еннел-

ле каларса янă, çаван пекех уй тарах нумай çынла утлă çар тухса кайнă, Хусан патĕнчи вырансене тытса илме хушнă... Аслă кнеç воеводисем Хусан енчи вырансене тытса илнĕ, ыра-сыва тавраннă, хайсемпе пĕрле тыткăна илнĕ çынсене нумай илсе килнĕ" [21].

1531 çулхи раштавра, III Василий тата Мускав майлă таракан Хусан феодалĕсем Сафа-Гирей хана сирпĕтсе антарма, ун выранне Касимов ханне Шах-Алие лартма чĕннĕ чухне, чăвашсене, çармассене тата удмуртсене чĕнсе калани ярса панă, унта Мухаммед-Амин вăхатĕнче III Василий тарашнипе вĕсене парăм тата тивĕç тĕлĕшĕнчен çамаллах панине, халĕ вара, Сафа-Гирее сирпĕтсе антарсан, Мухаммед-Амин вăхăчĕ тавранасси çинчен уйрăмăн палартнă [22]. 1532 çулхи çу уйăхĕнче пĕтĕм халăх Сафа-Гирее хирĕç çĕкленнĕ, унта чăвашсемпе туçи çармассем те хутшăннă [23]. Хан пулма Мускава паранна Джан-Алие лартнă [24].

Марк Левкеинский çырнă летопись çапла пĕлтерет: 1534 çулта вырас полкĕсемпе пĕрле "Касимов тутарĕсем, ытти нумай тутар, мордва, çармас, чăвашсем... ытти нумай чĕлхесем" /урахла каласан, халăхсем. - В.Д./ Литва çĕрĕшĕн çапăçнă [25].

Анчах Хусан çарĕсем Джан-Али вăхатĕнче те вырас çĕрĕсем çине тапăнма пуçланă. Вырас летописçĕсемпе усă курса А.Г.Бахтин çакна катартса парать: 1534 çулта Хусан çарĕсем Вяткăна тапаннă. "Çавна май Вырас правительстви 1522 çулхи грамотăна тепĕр хут çирĕплетнĕ, унпа килĕшӳллĕн Вятка çĕрĕ çинче пуранакан тутарсен, удмуртсен тата чăвашсен вырăссемпе пĕрле Хусан тапаннине сирсе яма хутшăнмалла. 1534 çулхи кĕркунне тутарсемпе çармассем /улăхри çармассем. - В.Д./ Галича тапаннă. "1534-1535 çулсенчи хĕлле Хусанăн нумай çынни Чулхулана тата Чулхула çывăхĕнчи вырансене килсе кĕнĕ, нумай вырăна çаратса хăварнă.... питĕ нумай çынна тыткăна илнĕ, боярсен арамĕсемпе ачисене, çаван пекех çĕр ĕç çыннисене арамĕсемпе тата ачисемпе пĕрле тыткăна нумай илнĕ", - тесе çырнă летописец.

1535 çулта Хусан престолне ларсан Сафа-Гирей "Хусан çыннисене тӳрех Раççейпе варçмашкăн кайма пуçтарнă". Малалла А.Г.Бахтин хăйĕн кĕнекинче,

летопиҫсенчи ытти ҫалкуҫсене катартса, Сафа-Гирейпе унăн ҫар пуҫĕсем 1535-1544 ҫулсенче Вырас ҫĕрĕсене 21 хут вара-хурахла тапаннине тата аркатса пысăк сиен кунине ҫырса парать. Ҫав ҫулсенче выраҫсем енчен Хусан ханлăхне хирĕҫ пĕр похода та тухман. Хусан ҫыннисем ҫав ҫулсенче "христиансене нумай вĕлернĕ, хуласене тĕппипех ҫаратнă". Чулхулана, Мурома, Мещерăна, Гороховеца, Балахнана, Заволжьене, Галичпа унăн таврашне, Вологдăна, Тотьмăна, Устюга, Перме, Вяткăна, Владимира, Шуйăна, Юрьевец-Вольские, Костромана, Кинешмăна, Унжăна, Касимова, Темникова, ытти хуласене ҫаратнă. Ҫапла ҫырнă IV Иван патша: "Крымпа Хусан тапаннине пула [Вырас] ҫĕрĕн ҫуррине яхăнах пушă выртнă". А.М. Курбский хайĕн "История о великом князе Московском" кĕнекинче ҫакна палартнă: "Хусан ҫыннисем Мускавран 18 миля таранчченех пурне те ҫаратнă, Ока леш енчи ҫĕрсене Крымпа Ногай ҫыннисем тустарса пĕтернĕ". 1997 ҫулта Д.А.Мустафина Варшавăри архивра Хусан ханĕ Сафа-Гирей 1538-1545 ҫулсенче /А.Г.Бахтин шучĕпе - 1542-1545 ҫулсенче/ Польшăпа Литва королĕ I Сигизмунд-Ватти патне ҫырнă виҫĕ ҫырăва тупнă, пичетлесе кăларнă. Вĕсенче Сафа-Гирей Сигизмунда ҫапла пĕлтернĕ: "Мускав ҫĕрне тытса илтĕм, ҫаратса хăвартăм... Хаман ҫарсемпе вĕсен замокĕсене те /урăхла каласан, крепоҫсемпе хуласене. - В.Д./ тытса илтĕм, вĕсене ҫунтарса кĕллентертĕм, хаман пĕтĕм ҫарпа пĕрле Ока юхан шывĕ урлă каҫрăм, ташман ҫĕрĕ ҫинче питĕ инҫетре пултăм". Хан походра 10 пин, 40 пин, 70 пин ҫын таранах, Хусан ҫыннисем кăна мар, 10000 ҫынпа нухай марси Али, Ăстăрхан ҫыннисем хутшаннине катартса парать. "Халĕ ҫав ҫĕрхăр-пушă... Пăрлă тинĕс таранах", - ҫырнă хан. Пĕр ҫыравĕнче Вятка ҫĕрне тытса илнине, унта хырҫă пуҫтарнине катартса парать. Мускаван мирлĕ пуҫаравĕсемпе килĕшмен Сафа-Гирей, "Мускаван аслă кнеҫĕ, - тенĕ вăл король патне яна ҫырура, - пирĕн пата посолсем, хыпарҫăсем ячĕ, унта хирĕҫмелле мар, мирлĕ пуранмалла тесе ҫырнă, эпĕ унăн сĕнĕвĕсене йышăнмарăм. Эпĕ ун пек тăвассăн мар, унпа мир тăвас шухăша йышăнмарăм". "Казанский летописец" авторĕ Хусан ҫыннисем 1534-

1545 çулсенче вырăс çĕрĕсем çинче тискер ĕçсем туни çинчен "От казанцев пленение Русскую землю..." ятлă уйрăм сыпăк çырнă [26].

Руçа Сафа-Гирей Батый хан 1237-1240 çулсенче катартнинчен кая мар сиен кунĕ. Тыткăна илнĕ 100 пин вырăс çынни Хусан ханлăхĕн чуралăхĕнче асапланнă. Вырăс çĕрĕсене çаван пек çаратса хăварнă тата вырăс çыннисене чуралăхра тытнă хыççăн 1545 çул тĕлне вăй илме пуçланă Руç Хусана парăнтарасси çинчен шутламасăр тăма пултарайман. XVI ĕмĕрĕн 40-мĕш çулĕсем варриччен Мускав Хусан тĕлĕшĕнчен протекторат туса хума тарăшнă пулсан /Ту енчи халăхсем çав политикăна килĕштернĕ/, 1545 çулта Хусана хирĕç вăрçа пуçарса IV Иван ханлаха парăнтармалли политика çине куçать. Çав политикăна Суйланă Рада витĕмĕпе тата дворянсен идеологĕ И.С.Пересветов туса хатĕрленĕ "Хисеплесе пуç çапнине" /Большая челобитная/ тĕпе хурса хатĕрленĕ.

Вырăс патшалăхĕ 1545 çулта Хусана хирĕçле вăрçа пуçарнă. Хусан патне вырăс полкĕсем çитсен "Хусанта кулешу пуçланса кайнă". Сафа-Гирей хан "кнеçсене шанми пулнă", "аслă кнеç воеводисене эсир ертсе килнĕ" тенĕ, вĕсене вĕлерме хушнă, çаванпа нумайăшĕ Хусантан аслă кнеç патне, теприсем урăх çĕрсене туха-туха кайнă" [27].

Тутарсен Мускав майлă таракан феодалĕсем 1545 çулхи юпа-раштав уйăхĕсенче Сафа-Гирейпе унăн Крым тутарĕсен тавралăхне хирĕç пăлхав çĕкленнĕ, вăл пĕтĕм халăх пăлхавĕ пулса тăнă. "Казанский летописец" авторĕ, çав ĕçсене хăй курнăскер, çапла çырнă: "Хусанта вельможăсем тата пĕтĕм халăх хыта пăлханать; пурте - аслисем те, кĕçĕннисем те хăйсен патшине Сапкирее хирĕç кĕрешме пĕрлешнĕ, ăна патшаран сирпĕтсе антарасшăн, хăйĕн патша майри-семпе пĕрле Хусантан хăваласа ярасшăн, хăйĕн çĕрĕнчи çынсене /урăхла каласан, ентешĕсене. - В.Д./, Крым срацынĕсене Хусана хăй патне чĕнсе илнĕшĕн, вельможăсем туса лартнăшăн, пуйма, мухтава тухма, пысăк влаç илме май туса панăшăн, Хусан çыннисене курентерсе, таçтан килнисене юратнăшăн тата хĕрхеннĕшĕн айăпа кĕнĕскере вĕлерме те хатĕр. Патша /урăхла каласан, Сафа-Гирей. - В.Д./ Нухай енне

тухса тарна" [28]. Вырассем Хусан тĕлĕшĕнчен протекторат тунине ырлана май чавашсемпе туçи çармассем те çав пăлхава хутшăнмасăр тăма пултарайман.

1546 çулта çуркунне Хусан ханĕ пулмашкăн Мускав Касимов ханне Шах-Алие лартна. Хусаналла кайнă чухне чавашсемпе туçи çармассем çул çинче кĕтсе илнĕ ăна, саламлана, çапла майпа хайсем Вырас патшалăхне камалланине палартна [29]. Анчах та çĕнĕ хана Хусанти ят-сумла феодалсемпе масальман тĕнĕн çыннисем ташманла кĕтсе илнĕ. Шах-Али престолта пĕр уйăх çеç ларна, Хусантан тухса тарна.

Хусан ханĕн престолĕнчен каларса парахсан Сафа-Гирей Аçтархана çитме васкана, Аçтархан çарне илнĕ те Хусан патне çитнĕ. Икĕ уйăх хупарласа тана вăл Хусана, анчах нимĕн те тавайман. Унтан Сафа-Гирей Нухай Уртине, хайĕн хунĕшĕ Юсуф кнеç патне çул тытна. Юсуф ывăлĕсем - Юнус марса тата Али марса /Али-Акрам/ IV Иван патне яна çыруран /1551 ç./ çака палла: Сафа-Гирей Ногай кнеçĕсене çапла шантарна: "Хусана тытса илетĕп те, кнеça /Юсуфа/ тата сире Ту енне, çаван пекех Ар таврашне паратăп... Çапла майпа Сафа-Гирей патша пире /урăхла каласан, Нухай кнеçĕсене. - В.Д./ пуçсене çаварса ямаллах тупа турĕ. Пирĕн атте Юсуф кнеç, мирзасем ĕненчĕç ăна. Пире Сафа-Гирей патшапа пĕрле çар парса чысласа ячĕç". Нухай çарĕ, Хусаншăн сакăр кун çапăçса, ăна тытса илнĕ, Сафа-Гирее каялла Хусан престолне лартна. [30].

Иккĕленмелли çук, куçса çурекен Нухай çыннисем Сафа-Гирей Ту енĕпе Ар таврашне Нухай Уртине пама шантарни çинчен унта пуранакан халăх пĕлнех. Ту енĕ куçса çурекен Нухай Уртине паханса тăрас малашлăх унти халăхшăн çав тери усал хыпар пулна, мĕншĕн тесен çĕр çул ĕлĕкрех çав урта варăхурахла тапаннипе чавашсем пăлхар çĕрне пĕтĕмпех çухатна, вĕсен хулисемпе ялĕсене йăлтах тĕп туна, халăхăн ытларах пайне вĕлерсе такна тата чуралăха сутма тыткăна илсе кайна, каярахпа Нухай çарĕ çулленех çуркунне-çулла киле-киле тустарна. Эпĕ çапла пулна тесе шутлатăп: 1546 çулхи кĕркунне, тыр-пул пухса кĕртнĕ хыççăн, Ту ен халăхĕ Сафа-Гирее хирĕç

пăлхав çĕкленĕ, хăйĕн çыннисене пулăшу ыйтмашкăн Мускава янă.

Чăваш Ен Вырăс патшалăхĕ çумне пĕрлешнин ыйтăвĕсене чи малтан тĕпчекенсем Т.Г.Гусевпа М.Н.Тихомиров Нухай кнеçĕн ывăлĕсем Юнус мăрсапа Али мăрса янă çырава пĕлмен, çавна пула ун пирки нимĕнле пĕтĕмлетӳ те тума пултарайман. М.Н.Тихомиров, çаван пекех Т.Г.Гусев Никон летописĕнче çапла çырнине кăна пĕлнĕ: "Раштаван 6-мĕшĕнче /1546 ç./ Ту енчи Çармăсран Тукайпа унăн юлташĕсем - икĕ çармăс - асла кнеç патне пуç çапма яма, патшаран Хусана çар яма ыйтнă, хăйсем воеводăсемпе пĕрле патша хĕсметĕнче тăма килĕшнине пĕлтернĕ. - Ту ен çыннисем пуç çапса ыйтнипе асла кнеç çав хĕлле Александр Борисович Горбатый кнеçпа хăйĕн ытти воеводисене Хусан çывăхĕнчи вырансенче çапăçма янă; асла кнеç воеводисем Сĕве вăрри тĕлне çитнĕ, нумайăшĕ Хусан патĕнче çапăçнă, Мускава çĕр çармăс илсе тавраннă" [31]. Львов летописĕнче те çаван пек çырни пур, унта раштаван 6-мĕшĕ выранне раштаван 7-мĕшĕ тенĕ [32]. М.Н.Тихомиров шутлана тарăх, вырăс çарĕсем Ту енĕпе Сĕве вăрри патне çити кайнă, туçи çармăссем /чăвашсемпе туçи çармăссем. - В.Д./ икĕ çармăса IV Иван патне Ту ен халăхĕ Раççей йышне хăй ирĕкĕпе кĕме шутлани çинчен пĕлтерме янă. 1950 çулта М.Н.Тихомиров çакан пек пĕтĕмлетӳ тăвать: "Çапла вара 1546 çулта Атăлăн ту енĕ Хусан аллинчен тухать те Раççей влаçне пăхăнать. Тĕпрен илсен ку вăл шăпах та чăвашсем, Хусан аллинчен тухса, Мускав çарĕсем пырса çитичченех, Раççей влаçне пăхăнмашкăн хăйсен ирĕкĕпе куçнине пĕлтернĕ" [33]. Çапла çирĕплетсе пани XX ĕмĕрĕн 50-60-мĕш çулĕсенче совет истори литературинче питĕ анлă сарăлнă.

1966 çулта "1475-1598 çулсен разряд кĕнекине" пуçласа пичетлесе кăларнă. Унта çакан пек йĕркесем пур: "7055 /1447/ çулхи нарăсра туçи çармăссем - Атачик çĕрпӳпе унăн юлташĕсем - патшаран хăйсен асла кнеç майла хĕсметре тăма шутланине палăртса пуç çапсах ыйтнă май Александр Борисович Горбатый кнеçе, боярина тата воеводăна, ытти воеводăсемпе Хусан енчи вырансене кăларса янă, туçи çармăс-

сем аслă кнеç воеводисене Василий хули патĕнче кĕтсе илме, Хусаналла вĕсемпе пĕрле кайма сăмах пана /малалла пысăк, малта, сылтăм тата сулахай енче пыракан полксемпе хурал полкне асăннă. - В.Д./ [34].

М.Н.Тихомиров 1950 çулта "Хронографи летопиçĕнче" çапла пĕлтернине асăрхамасăр хăварнă: "Çав хĕллех аслă кнеç /патша/ хайĕн кнеçне Александр Борисович Горбатый боярина тата воеводăна, Семен Иванович Микулинский кнеçе тата хайĕн ытти воеводисене Мускав çĕрĕпе Чулхулан нумай çыннисемпе пĕрле Ту ен çармăссем ыйтнипе Мускавран Хусан çĕрĕсем еннелле каларса яна. Ту ен çармăсĕсем Хусана хирĕç кайма, Шигалей патшана Хусана лартма ыйтнă. Патша боярĕсем Шигалие каларса яман, воеводăсене Улăх енче çапăçма яна, Хусан хули çывăхнелле пыма хушман. Патшан тата аслă кнеçĕн воеводисем Хусан енче Улăх ен çармăсĕсемпе пĕрле çапăçнă, Турра шĕкĕр, çыннисем пурте ыра-сывă тавраннă, Хусана 30 çухрăм чухлĕ çитеймен. Ту ен çармăсĕсем воеводăсем патне пынă, анчах патша воеводисемпе пĕрле Шигалей çуккине туйса илсен каялла çавранса кайнă, хăш-пĕр çармăссене воеводăсем хăйсем патĕнче хăварнă, Мускава илсе кайнă" [35].

Пĕр ĕç пирки калакан виçĕ çăлкуçра хăш-пĕр уйрăмлăхсем пур. Пĕрремĕш çăлкуçпа килĕшуллĕн, туçи çармăссем - "Тукайпа унăн юлташĕсем" Мускава, IV Иван патша патне хăйсен икĕ çыннине яна. Тукай чăвашсен çĕрпĕвĕ пулнă, ун ялĕ Тукай ятлă пулнă. Раççейпе пĕрлешнĕ хыççăн вуласа ун ятне пана /1589 çултанпа вăл Çĕрпӳ уесне кĕнĕ/. Иккĕмĕш çăлкуç çакна кăтартса парать: Мускавра туçи çармăссен çĕрпĕвĕ Атачикпе "юлташĕсем" пуç çапса ыйтнă. Виççĕмĕш çăлкуçра чăвашсемпе туçи çармăссене кам ертсе пынине асăнман, Ту ен çармăсĕсем пуç çапса ыйтни çинчен калана.

Виçĕ çăлкуçран та çакă куранать: чăвашсемпе туçи çармăссем Сафа-Гирее каларса пăрахма, ун выранне Касимоври Шах-Али хана лартма ыйтнă, хăйсен отрячĕсем вырăс полкĕсене пулăшса тăрасса шантарнă. Анчах та, полксемпе пĕрле Шах-Али хан пулман пирки, туçи çыннисем вĕсенчен уйрăлса кай-

нă. Ахăртнех, полксем Улăх енче унти тутарсене, çаван пекех тутарсем майлă тăракан улăхри çармăссене хирĕç çапăçнă. Ту енче ун пек туни кирлĕ пулман. Çаванпа вырăс çарĕсем 1547-1548 çулсенче Хусаналла похода тухнă вăхăтра вĕсем Çавал юхан шывĕн вăрринче, чăваш ялĕсем вырнаçнă выранта пуçтараннă [36]. 1549-1550 çулта Хусаналла похода тухсан та вырăс çарĕсем Чăваш çĕрĕ урлă пĕр чармавсарах иртсе кайнă. 1549 çулта, Сафа-Гирей вилнĕ хыççăн, Нухай кнеçĕн Юсуфăн политики Мускав еннелле çавраннă. Çав çулах Юсуф IV Иван патшана çакăн пек канаш панă: "Чăвашсемпе çармăссем, ирçе-мăкшă, вĕсем пурте кирек мĕн чухлĕ пулсан та, Шигали патшапа пĕрле вĕсене Хусана хирĕç ямалла" [37]. Юсуф çакна лайăх пĕлсе тăнă: тухăçри мордва, чăвашсемпе туçи çармăссем, чăннипе илсен, Сафи-Гирее пăхăнман, Шах-Алие пулăшма хатĕр тăнă. Престола виççĕмĕш хут ларнă хыççăн Сафа-Гирей вырăс çĕрĕсем еннелле икĕ хут кăна похода тухассине йĕркелеме пултарнă - Кострома çĕрĕсене тата Мурома тапăннă, Нухай çыннисем Мещерăна походпа кайнă. Вĕсене вырăссем чарса лартнă [38].

Хăш-пĕр историксемпе этнологсене çакă иккĕлентерет: Чăваш Енпе Туçи çармăс районĕ 1551 çултах пĕрлешнĕ-и, ун пек пулсан хăш вăхăтра - çĕртме уйăхĕнче-и е çурла уйăхĕнче-и? Çакна документсемпе çирĕплетме çук теççĕ вĕсем. Чăннипе илсен, çăлкуçсем мирлĕ пĕрлешнине çирĕплетсе панинче тавлашмалли пачах та çук, вĕсем çав ĕç хăçан пулса иртнине тĕп-тĕрĕс кăтартаççĕ.

Ту ен Вырăс патшалăхĕ çумне 1551 çулта мирлĕн пĕрлешнипе çыхăннă хыпарсем, тĕпрен илсен, Никон, Львов, Александр Невский, Лебедев летописĕсемпе ытти летописсенче, Патша кĕнекинче, Патша тытăмĕ пуçланнăранпа çырнă летописре пĕрешкелех сыхланса юлнă. "1475-1605 çулсен разряд кĕнекин" 1 томĕн 2-мĕш пайĕнче пĕлтернисем те летописсемпе пĕр евĕрлех. "Казанский летописецри" сведенисем кăна летописрисенчен кăшт урăхларах, унта шухăшласа кăларни тĕл пулатъ.

Вырăс çарĕ, 1549-1550 çулсенче Хусаналла похода кайсан, хăй умне лартнă тĕллевсене пурнăçлай-

ман, нарăсан 25-мĕшĕнче каялла тавранма тухнă: Сĕве варринче чарăнса тăрсан IV Иван хăйĕн çывăх çыннисемпе пĕрле Çавра сăрта ухса пăхнă, унта "Хусан ĕçĕсем валли хула туса лартас, Хусан çĕрĕсене хĕссе тăмалла пултăр", - тенĕ [39]. Мускава тавăнсан IV Иван ку ыйтăва шаллĕсемпе Юрийпе тата Владимирпа, Бояр думин членĕсемпе, Мускавра хăтлĕх тупнă Хусан кнеçĕсемпе килĕштернĕ. 1550 çулхи кĕркунне IV Иван çар инженерне И.Г.Выродкова боярсен ачисемпе пĕрле пулас хула валли крепоç стенисен, чиркӳн, çурт-йĕр пурисене тума Углич уесне, Ушатыйсен вотчинине янă. Ака уйăхĕнче IV Иван пилĕк полка хула туса лартма кимĕсемпе каларса янă, вĕсене Касимов ханĕ Шах-Али ертсе пынă. Ахартнех, Хусан енчен хирĕç тарасса кĕтнĕ пулĕ. Вĕсемпе пĕрлех Хусан кнеçĕсем, марсисем - Костров кнеç, Чапкун, Бурнаш "юлташĕсемпе" пурĕ 500 çын тухса кайнă. Крепоç тумалли пурасемпе ытти материалсене "Шура тинĕсри пысăк кимĕсем" çине тиесе асатнă. Д.И.Хилков воевода кнеç полкĕ тип çĕр тарăх çула тухнă. Атăл тарăх ту енчен аннă казаксем Атăл, Кама тата Вятка çинчи каçасене йышăннă, вĕсем "çар çыннисене Хусантан кайма тата Хусана пыма чарса тăмалла" пулнă. Пуринчен малтан Чулхуларан кимĕсемпе хăйĕн полкĕпе П.С.Серебряный воевода кнеç тухнă. Çу уйăхĕн 17-мĕшĕнче полк Сĕве вĕрринче, Çавра сăрт çинче чарăнать, унта каçхи кĕлĕ ирттереççĕ. Çу уйăхĕн 18-мĕшĕнче ир-ирех П.С.Серебряный полкĕ Хусана ишсе çитнĕ, Хусана тапаннă, унтан Сĕве варрине тавăннă. Ку вăл Хусан çыннисене арпаштарма-пăтратма кирлĕ пулнă пулас [40].

С.Х.Алишев тата пĕр Мускаври историк пĕлтернĕ тарăх, "пĕр вăхăтрах вырăссен 15 воеводи полксене Ту енчи улуссене каларса янă, летописçре пĕлтернĕ тарăх, вĕсен "çапăçмалла тата унта пуранакансене тыткăна илмелле" пулнă. Ку - пĕтĕмпех пустуй шухăшласа каларни çеç! Кимĕсем çинчи полксем /вĕсем пиллĕк пулнă, кашни полкра икĕ воевода/ çу уйăхĕн 24-мĕшĕнче, вырсарни кун, Сĕве варрине пырса çитнĕ. Летописçенчен пĕринче те полксем унта пуранакансене хирĕç çапăçни çинчен каламан, ун пеккине асăнман та. Летописецсем воеводăсем пĕлтернипе уса

курнă, тепĕр чухне хăйсем те çар пĕрлешĕвĕсенче пулнă. "Казанский летописецăн" ятсăр авторĕ кăна, шухăшласа кăларма юратаканскер, çав вăхăтра Хусанта тытканра пулнă май, кимĕсем çинчи çар Сĕве варрине çитнине курма пултарайманскер, хăйĕн хайлавĕнче çапла çырнă: Шах-Алипе воеводăсем вырсарни кунах "çара Хусан улусĕсем тарăх çапăçма тата туçи çармăссемпе йăлăмрисене тыткăна илме янă" [41]. Йĕркеллĕ историксенчен пĕри те çав шухăша йышăнман, мĕншĕн тесен ăна ытти чăн-чăн летописçем хыпарланисемпе çирĕплетме май килмен. Тутар историкĕ С.Х.Алишев кăна çапла çырнă: "Шах-Алипе пĕрле янă 15 воевода хăйсен полкĕсемпе хула туса лартма çеç мар, Атăлăн сылтăм çыранĕн халăхĕсене пăхăнтарма та тивĕçлĕ пулнă. Вĕсем çавна чăннипех пурнăçа кĕртнĕ" [42]. Чăннипе, пилĕк полкри çар çыннисем нимĕнле вăрçа ĕçĕсене те хутшăнман, тăрех "хула лартмашкăн вăрман касма тытăннă, сăрта тикĕслесе молебен ирттернĕ, шыва светить тунă, хуме выранĕ тавра хĕрес йăтса çаврăннă та хула никĕсне тума, Таса Раштав тата Сергий чудотворец ячĕллĕ чиркӳ лартма пуçланă... Хулана /урăхла каласан, крепоç пурисене. - В.Д./ Атăл тарăх кӳрсе килнĕ крепоç сарт çуррине анчах йышăннă, тепĕр çуррине воеводăсемпе боярсен ачисем хăйсем вăрман касса тунă: хулана тăвата эрнере", урăхла каласан, çĕртме уйăхĕн 20-мĕш кунĕсем пуçланнă тĕле, туса лартнă [43]. "Казанский летописец" темшĕн-çке хула туса лартас ĕçе утă уйăхĕн 30-мĕшĕнче тин вĕçленĕ тесе пĕлтернĕ [44].

IV Иван патша вăхатĕнче çырнă "Степенная книга" палăртнă тарăх, вырăс çыннисем хула лартма тытăнсан, "вĕсене хирĕç сăмах никам та каламан, никам та хирĕç тăман. Унран та ытларах, çывăхри туçи çыннисем причак /присяга/ пама тата хула лартакансене пулăшма килнĕ, хулана валли тырă, пыл, выльăх-чĕрлĕх, ытти çимĕç кӳрсе тăнă" [45]. Çапла вара туçи çыннисенчен никам та вырăс салтакĕсене - строительсене хирĕç тăман, килсе çитнĕ кунах вĕсен улусĕсенче /вулăсĕсенче/ çапăçмалли нимĕнле сăлтав та тупăнман. Асăннă çăлкуç пĕлтернĕ тарăх, туçи çыннисем хула лартма пулăшнă, строительсем валли

апат-çимĕçпе ытти кирлĕ япаласене кӳрсе килнĕ. Чăваш халапĕсенче палăртнă тăрăх, чăвашсем Сĕве хулине лартма йывăç касса хатĕрленĕ имĕш. Никон летописĕпе ытти летописем çакăн пирки туллинрех калать: "Хăйсен çĕрĕ çинче православи патшин хулине туса лартнине курса туçи çыннисем патша /урăхла каласан, Шах-Али. - В.Д./, воеводăсем патне килсе пуç çапнă, каçару ыйтнă, Сĕве хулинче пулмашкăн ирĕк пама ыйтнă, пирĕнпе ан çапăçăр, тенĕ" [46].

"Казанский летописец" авторĕ те çакна çирĕплетнĕ: полксене вулассем тăрăх каларса яма вăхăт та пулман иккен: Шах-Али тата вырăс воеводисем "Сĕве хулине туса лартма тытăнсан виççĕмĕш кунах туçи çармăссен /чăвашсен тата туçи çармăссен - В.Д./ старейшинисемпе çĕрпĕвĕсем кучченеçсемпе пыма пуçланă, патшана /урăхла каласан, Шах-Алине. - В.Д./ тата воеводăсене пуççапнă, кнеçсемпе мăрсасем Хусана тарнă тенĕ. Пире ан тивĕр, тенĕ" [47]. Ку енĕпе çакна палăртни кирлĕ; Шах-Алипе, вырăс воеводисемпе, кунта калана пек, хупăрласа илнĕ Хусана тарса кайнă тутар кнеçĕсемпе мăрсасем /масальмансем/ мар, авалхи тĕне ĕненекен чăвашсемпе туçи çармăссен старейшинисемпе çĕрпĕвĕсем пулнă. Вĕсем пĕтĕм халăхпа пĕрлех Ту ене Раççей йышне илме ыйтнă.

Шах-Алипе вырăс воеводисем малтан Мускава хан керменĕн кнеçне Шабас Шамова тата И.Ф.Шишкина янă, вĕсен IV Иван патшана Сĕве хулине туни çинчен, П.С.Серебряный кнеç, Хусан çыннисемпе çапăçса пысăках мар çухату тӳссе, Хусантан каялла тавăнни çинчен тата "туçи çыннисем вара патшана пăхăнса тăрасшăн" пулни çинчен пĕлтермелле пулнă [48].

Çаван хыççăн Шах-Али патне "Ту енчи пур выртантăш та вĕсене патша тата аслă кнеç /IV Иван/ патне пуç çапса ыйтмашкăн ирĕк пама тилмĕрнĕ. Патша /урăхла каласан, Шах-Али. - В.Д./ тата воеводăсем ту çыннисене Магмет Бозубовпа Ахкубек Тогаева юлташĕсемпе, вĕсемпе пĕрле Плещеев ывăлне Григорий Семенова патша /IV Иван. - В.Д./ патне янă. Магметпа унăн юлташĕсем патшана пĕтĕм Ту

енĕ, кнеҫсем, мăрсасем, ҫĕрпӳсемпе вунпӳсем тата чăвашсем, ҫармассем, казаксем ячĕпе патшана /IV Ивана/ пуҫ ҫапнă, патшаран каҫару ыйтнă, Сĕве хулине тытса тăмашкăн, хăйсен ĕненĕвĕпе патшана тӳррĕн шанса тăнине, вĕсем тата вĕсен ывăлĕсем патшаран нихăҫан та уйрăлма шутламаннине, Сĕве хулинчен Хусан еннелле нихăҫан та каялла куҫас маррине пĕлтернĕ, патшаран ясак енĕпе ҫăмăллăх ыйтнă тата вĕсем малашне мĕнле пуранасси çинчен патша грамотине пама ыйтнă. Патша /IV Иван/ вĕсен ыйтăвне тивĕҫтернĕ, çылăхсене каҫарнă, ҫапăҫмасăр пуранма хушнă, вĕсене хăйĕн Сĕве хули çумне илнĕ, ылтăн пичет çакнă грамота панă, виҫĕ çул хушши ясак тӳлессинчен хăтарнă; Магметпа унăн юлташĕсене пысăк шалу панă: кĕрĕксем, укҫа парнеленĕ" [49].

С.Х.Алишев тата ун майлисем Магмет Бозубовпа Ахкубек Тогаев тутарсем пулнă тесе çырать [50]. Çав авторсем çакна шута илмеҫҫĕ: Пăлхар тапхăрĕнче чăвашсен ытларах пайĕ ислам тĕнĕпе пураннă, пурин те тенĕ пекех мăсăльман ячĕ пулнă. Ятсенчен сахалăшĕ çеç чăваш сăмахĕнчен тăнă. XVII ĕмĕр документчĕсенчех чăвашла ятсене чылай палăртнă. Авалхи актсен Раççей патшалăх архивĕнче 1716 çулхи ландрат переписĕн тата 1761-1762 çулта халăха III ревизи тунин перепиҫ кĕнекисем упранаççĕ, унта Вăтам Атăл тăрăхĕнчи мĕн пур чăваш ялĕсенчи чăвашсен арçын тата хĕрарăм ячĕсене, I тата II ревизисен перепиҫ кĕнекисенче - арçын ячĕсене кăтартнă. Унта - вун-вун пин ят. Шупашкар уесĕнчи II ревизин перепиҫ кĕнеки тăрăх В.К.Магницкий "Чувашские языческие имена" кĕнеке пичетлесе кăларнă /Хусан, 1905/. Унта 5 пин ытла арçын ятне кăтартнă. Вĕсене Г.Ф.Сатаровăн "Татар исемиэре сузлеге" кĕнекинче /Хусан, 1981/ илсе кăтартнă Хусан тутарĕсен ячĕсемпе танлаштарсан, чăвашсемпе тутарсен нумай ячĕ пĕр евĕррине асăрхатпăр. Чăваш ячĕсене тĕпчекенсем Л.В.Данилова, Л.П.Петров, М.Р.Федотов та çаврăн пекех пĕтĕмлетӳ тунă. Вĕсем чăваш антропонимикинче араб-иран ячĕсем питĕ нумайййине кăтартса параççĕ. В.К.Магницкий кĕнекинче чăвашсен Махмут /56 стр./, Позип /68 стр./, Ахкибей, Ахкилда, Ахкирей /30 стр./, Тогай /83 стр./ ячĕсене кăтартнă.

IX ӗмӗр вӗҫӗнченпе çармӑссем Атӑлçи Пӑлхар патшалӑхне кӗнӗ. Çармӑссен Христос тӗнне йышӑнинченхи ячӗсенчен нумайӑшӗ - мӑсӑльман ячӗсем.

Магмет Бозубовпа Ахкубек Тогаев "юлташӗсемпе" тутар кнеçӗсем е мӑрсисем пулманни /вӗсем 1551 çул тӗлне хупӑрласа илнӗ Хусана тарнӑ/, тутар казакӗсем те пулманни пӗрре те иккӗлентермест. Ахкубек Тогаев, ахӑртнех, 1546 çулта чӑвашсемпе Туçи çармӑссен делегацине Мускава янӑ чӑваш çӗрпӗвӗн Тукайӑн /Токайӑн/ ывӑлӗ пулас, Çавал тӑрахӗнче вуласа унӑн ашшӗн ятне панӑ. Вӑл 1553 çулхи вырӑс летописӗсенче Мускава хирӗçле пӑлхава хутшӑннисен хисепне кӗртнӗ, сулахай çыран енче пуранна тутар кнеçӗн "Тогай ачисен" ашшӗн ячӗпе пачах та çыхӑнмасть.

Хӑш-пӗр историксем пачах та никӗслемесӗр çапла "çирӗплетсе параççӗ": "1551 çулхи лару-тӑрӑва çӳлерех çырса катартни çакна пӑлӑртать: выранти пуçлӑхсем вырӑс влаçӗнчен патша çарӗсем Хусан ханлӑхӗн Туçи провинцине тытса илнӗ хыççӑн çеç, унта вӑрçа ӗçӗсем пуçланнӑ хыççӑн çеç пулашу ыйтнӑ". Тытса илни ӑçта, вӑрçа ӗçӗсем ӑçта? Ту ене вырӑссем туртса илни те, кунта вырӑс çарӗ вӑрçа пуçлани те пулман-çке!

Ӗлӗк-авалтан пуçласа XVI ӗмӗрчченех Руçра тӗнчери чи палла актсене кӑна ылтӑн пичет çакса ӗнентернӗ. IV Иван патша чӑвашсене, туçи çармӑссене тата Ту енӗн ытти халӑхӗсене панӑ грамота тӗнчери питех те палла акт, чаннипе илсен - икӗ енлӗ килӗшӳ туни шутланать. IV Иван Ту енӗн халӑхӗсене панӑ грамотӑн оригиналӗ упранса юлайман. Н.В.Никольский 1911 çултах Хаяр Иван чӑвашсене ылтӑн пичетлӗ грамота пани çинчен калакан чӑваш халапне пичетлесе кӑларнӑ. "Ӑна илекенсем грамотӑна хума туя евӗрлӗ йӗнӗ ӑсталанӑ, лайӑхрах упрантӑр тесе çӗр сийне чавса хунӑ" [51]. Грамота копийӗ Патша архивӗн "Хусан ӗçӗсен" фондӗнче е Хусан керменӗн приказ фондӗнче упранма пултарнӑ, анчах вӗсем иккӗшӗ те тӗппипех çунса кайнӑ. Летописенче Грамотӑн тулли текстне илсе катартман, çапах та, вӗсенче çырнипе усӑ курса, М.Н.Тихомиров академик çакна пӑлӑртать: хай пана грамотӑра IV Иван патша чӑваш-

сене тата Ту енчи ытти çынсене вĕсен аллинчи çĕрсемпе община çĕрĕсене, пыл пухмалли выранĕсене, вĕсен хĕсмет, уйрăмах ясак тӳлесе тăмалли тивĕçĕсене сыхласа хăварма шантарнă /урăхла каласан, ясак тӳлекен чăвашсемпе туçи çармассене, ытти халăх çыннисене уйрăм хуçасене крепостла йĕркепе паханмашкăн, парамшăн чура пулса тăмашкăн пама чарнă/, вĕсен вырăс çарĕнче хĕсметре тăмаллине палăртнă, ясак енĕпе çăмаллăх панă - вĕсене Мухаммед-Аминан налук реформи тарăх пуçтармаллине, виçĕ çул хушши ясак тӳлессинчен хăтармаллине палăртса хунă. Иккĕленмелли çук, грамотăн иккĕмĕш пайĕ Ту ен çыннисен причакĕпе /тĕрĕслĕхлĕ пулмаллипе/ çыхăннă, ăна аяларах илсе катартатпăр.

Çапла ĕнтĕ, чăвашсем, туçи çармассем тата ытти халăхсем Раççейпе пĕрлешесси мирлĕн, Ту ен çыннисем IV Иван патшаран пуç çапса ыйтнипе, Ту ен халăхĕ хăйĕн ирĕклĕхне палăртнипе пулса иртнĕ. Ăна патшалăхăн чаплă акчĕпе, икĕ енлĕ килĕшӳпе танлашакан актпа - IV Иван ылтăн пичет çакнă грамота панипе йĕркеленĕ, çаван пек пичет Вырăс патшалăхĕн тĕнчери чи палăа акчĕсене çеç тивĕçнĕ. "Казанский летописецăн" авторĕ çакăн пек пĕтĕмлетӳ тунă: "Туçи çармассем пурте патшана, аслă кнеçе пуç çапнă, паханнă, вĕсем Хусан çыннисен çурри таранах пулнă" [52]. "Степенная книга" çапла калăнă: "Ту ен çыннисем православи патшине... пур енĕпе те паханаççĕ" [53]. 1555-1556 çулсенчех Игнатий Зайцев иосифлянин хăйĕн "Летописчик" ал çыравĕнче аслăлăх тĕлĕшĕнчен тĕрĕс пĕтĕмлетӳ çырса хунă: "Туçи çармассем /урăхла каласан, чăвашсем тата туçи çармассем. - *В.Д.*/ 7059 /1551/ çулхи çĕртме уйăхĕнче, Сĕве çинче хула тухса лартнă хыççăн, аслă кнеç енне мирлĕн куçнă" [54]. И.Зайцев чăвашсемпе туçи çармассем Вырăс патшалăхĕ çумне мирлĕн пĕрлешнине, историри питех те пĕлтерĕшлĕ çак ĕç 1551 çулхи çĕртме уйăхĕнче пулса иртнине тĕрĕс палăртнă.

1551 çулхи çĕртме уйăхĕн 18-мĕшĕнче Суздаль епископне уйăрса лартни çинчен çырнă хыççăн летописçенче IV Иван патша И.Вешняков стряпчие Сĕве хулине Шах-Али хан патне ылтăн наградăсем парса янине, хана тата воеводăсене "пĕтĕм Ту ене

тĕрĕслĕхле пулас тĕлĕшпе тупа тутарма /урăхла каласан, причак тыттарма. - В.Д./, Хусан еннелле Ту енчи çынсене вăрçапа ярса вĕсем патшашăн хĕсметре тăма килĕшессине тӳррĕн курса чăнлăха пĕлме хушнă. Вĕсем мĕнле вăрçнине сăнама вырăс боярсен ачисене яма хушнă" [55].

Причак тыттарнă чухне ватти-вĕттисĕр, çитĕнсе çитмен каччăсемсĕр, ватăлса çитнĕ арçынсемсĕр пуçне Ту енчи халăхсен арçыннисене çырса шута илме хушнă. Г.З.Кунцевич "Казанский летописецăн" 100 ытла списокне пурне те тишкерсе тухнă, ПСРЛ-ăн XIX томĕнче çав палăка 8 списокпа тата "История о Казанском ханстве" тĕпчевне пичетлесе кăларнă /СПб., 1905/. Вăл çакна кăтартса панă: "Патша /урăхла каласан, Шах-Али хан. - В.Д./ улуссене вĕсен çыравçисене янă, вĕсем 40000 ухăça шута илнĕ" [56]. Вырăс литературин институчĕ литература хайлавĕ выраннe хурса пичетленĕ "Хусан историйĕнче" 40000 выраннe 12000 кăтартнă [57]. Г.З.Кунцевич тĕрĕсрех хисепе шута илнĕ [58].

Шах-Али хан тата воеводасем "Ту енчи çынсене, мăрсасене, çĕрпӳсемпе вунпӳсене, Чăвашсене, Çармăссене, Мордвана, Мишерсене, Турхансене вĕсем патшалăхшăн тата аслă кнеçшĕн хĕсметре тăрас, пур енĕпе те ырришĕн тăрас, Сĕве хулинчен чакас мар, хура халăхăн хăйсен патшине ытти патшасене тӳленĕ пекех парăм, оброк парса тăрас, вырăссене никама та чурара тытас мар, пурне те ирĕке кăларас тесе тĕрĕслĕхе пуласси çинчен причак тыттарма хушнă" [59]. Палла ĕнтĕ, причак патша панă грамотăн иккĕмĕш пайĕ пекех пулнă, унта Ту ен халăхĕсен тивĕçĕсене палăртса хунă. Виçĕ çуллăх çăмаллăх панă хыççăн налук пуçтарма тытăнмалла пулнă. 1552 çулхи юпа уйăхĕнче IV Иван Патша çакна тепĕр хут çирĕплетнĕ: ясак тӳлекен çынсенчен çав ясака "тӳрех, Магмеделим патша чухне пулнă пекех", урăхла каласан, вырăс протекторачĕ вăхăтĕнче Хусан ханĕ Мухаммед-Амин тунă налук реформипе килĕшӳллĕн пуçтармалла.

Юридици енĕпе илсен перепиç ирттерни те, Ту енче пурăнакансем мирлĕн, хăйсен ирĕкĕпе Раççей йышне кĕнĕ хыççăн халăха причак тыттарни те пра-

во тĕлĕшĕнчен тĕрĕс, икĕ енĕшĕн те кирлĕ ĕçсем шутланнă.

IV Иван патша, туçи çыннисене Хусана илессишĕн çапăçма ярса, вĕсен тĕрĕслĕхне сăнаса пăхма сĕннĕ. М.Н.Тихомиров академик çав ĕçĕн иккĕмĕш тĕллевне тĕрĕс палартнă: Хусан çыннисен туçи çыннисем Вырăс патшалăхне мирлĕ майпа кĕнине, вĕсем Раççей çыннисем тата Хусан ташманĕсем пулса тăнине катартса памалла. 1550 çулта IV Иван пĕтĕм вырăс çарĕпе те Хусана тытса илме пултарайман. Сылтăм çыранти чăвашсемпе туçи çармăссем çакна пĕлнĕ: вĕсен темиçе пин çынлă ушканĕ Хусана тытса илеймест, унта вилсе пĕтме яраççĕ. Анчах килĕшмесĕр тăман вĕсем. Чăвашсен тата туçи çармăссен Сĕве хулине пуçтаранна салтакĕсене Шах-Али ханпа вырăс воеводисем çапла калана: "Патшаран тĕрĕслĕх ыйтнă эсир, халĕ патша умĕнче тĕрĕс пулнине катартăр, унăн ташманне хирĕç çапăçăр!" Вĕсене Хусан еннелле яна. "Ту çыннисем, йышлăн пуçтаранса, тухса кайнă". Чавашсемпе туçи çармăссен ушканĕпе пĕрле боярсен ачисене Петр Туровпа Алексей Ершова янă. Çуранах Ар уйне çитнĕ çав ушкăн, хула патне çывхарнă. "Вĕсем патне Хусанти пĕтĕм çын, Крым тата Хусан çыннисем тухнă, вĕсемпе хытă çапăçнă, икĕ енчен те вилнисем пулнă. Хусан çыннисем хуларан тупăсемпе пищальсем /урăхла каласан, пăшалсем. - В.Д./ илсе тухнă, вĕсемпе пенĕ. Чăвашсемпе Çармăссем, хăраса ӳксе, каялла тарнă, Хусан çыннисем вĕсен çĕр çыннине вĕлернĕ, чĕрĕ юлнă аллă çынна тыткăна илнĕ". Петр Туровпа Алексей Ершов Шах-Алие "Ту енчи çынсем патшана тӳрĕ кăмăлпа паранна" тесе каласа пана [60]. Чăвашсемпе туçи çармăссен ушканĕ Хусан патĕнчен Сĕве хулине тавранна хыççăнах Шах-Алипе воеводăсем "Ту ен çыннисене патша патне ăна курмашкăн тата хĕсметшĕн шалупа парне илмешкĕн каларса яна" [61].

Çапла вара Мускава кайнă пĕрремĕш йышлă делегацире Хусана тапăнма хутшăннисем анчах пулнă. Малашне вĕсем кăна кайман Мускава. "Ту ен çыннисем патша патне çу каçипех пилĕк çĕр, улт çĕр çынлă йышпа кайса çӳренĕ, патша /IV Иван/ вĕсене пысăк шалупа хавхалантарнă, хăйĕн сĕтелĕ хушшине ларт-

са ĕçтернĕ-çитернĕ, кнеçсемпе мăрсасене, çĕрпӳсемпе казаксене ылтăнпа капăрлатнă бархат кĕрĕксем, хăш-пĕр чăвашсемпе çармассене камка тата атлас кĕрĕксем, çамраксене - пĕр рет тӳмеллĕ халатсем /шинельсем/, сукна, пакша тирĕнчен çĕлетнĕ кĕрĕксем парнеленĕ; патша пурне те çар хатĕрĕ, лашасем тата укçа пана. Ханасем, патша хайсене ыра тунине, Тура ырлăхĕпе шиклĕх иртсе кайнине туйса, патшашан тӳрĕ камалпа сехметре тăма, Улах енне çапăçмашкăн кайма, чĕлхесем тытса килме сăмах пана. Вĕсемшĕн патша ырлăхĕ иксĕлмен, патша вĕсене нумай-нумай парне памашкăн нимĕн те хĕрхенмен; унченхи летописçенче патша хай патне пыракансене парне парса çаван чухлĕ такак туни çинчен çырса катартман. Унăн /урăхла каласан, IV Иван патшан. - В.Д./ чĕрине Тура ыр камаллах хушса тăна, христиансен йăхне ыра кӳме, варварсем /урăхла каласан, тутарсем. - В.Д./ тапанассинчен хăтарма, христиансен йăхне бесерменсенчен /урăхла каласан, масăльмансенчен. - В.Д./ ĕмĕр-ĕмĕр ирĕке каларма пулăшна" [62].

Мускаври пĕр историк çапла çырать: "Патша енчен парне питĕ нумай пани /чаннипе каласан, сутăн илни/ выранти ят-сумла çынсене Раççей енне куçма хытах хавхалантарнă. Çу каçиччен чăваш, çармас, ирçе-мăкша аристократчĕсем çĕр-çĕр çын Кремльте патшапа тĕл пулнă, вĕсене чаплăн йышăннă, унран хакла парнесем - укçа, лашасем, çар хатĕрĕсем, мамăк тир илсе тавраннă. Çамаллăхла йĕрке туса панипе камалла пулса Атăл тарăхĕнчи халăхсен çав ертӳçисем хайсен унченхи хуçине - Хусана хирĕç вăрçăпа кайма сĕннине хапăлласах йышăннă... Ахаль çынсем патша енне ырласах куçнине çирĕплетекен нимĕнле шанчăкла тĕслĕх те тупаймарамăр эпир".

Çапла калани вăл - историне пăсса катартни çеç, урăх нимĕн те мар. Çулерехре летописçрен илсе катартнă сыпăксем çакна çирĕплетеççĕ: чăнах та, делегацисен йышĕнче сылтăм çыранти, Сĕвен анат енчи тутар кнеçĕсемпе мăрсисем, чăвашсемпе туçи çармассен çĕрпĕвĕсем пулнă /мордва XIV-XV ĕмĕрсенчех Руç йышне кĕнĕ, Ту енче тухăç мордвасен темиçе ялĕ çеç шутланнă, делегацисен йышĕнче мордва çыннисем пулман/.

Делегацисен пĕр пайĕ казаксенчен - Сĕве тăрăхĕнчи тутарсен, чăвашсен тата туçи çармăссен хĕсметри çыннисенчен тăнă. Иккĕленмелли çук, 500-600 çынлă темиçе делегацире, тĕпрен илсен, чăвашсем тата туçи çармăссем пулнă, вĕсем Хусан ханлăхĕнчех çар тивĕçне пурнăçласа пынă /Вырăс патшалăхĕнче те XVI ĕмĕр варринчен тытăнса ясак тăлекен чăвашсене, çармăссене тата удмуртсене вăрçă вăхăтĕнче виçĕ ясакран /6 килтен/ пĕр салтак шутпа çара илсе кайнă/. Ту ен халăхĕсенчен, пĕрле шутласан, 40 пин "лайăх ухăçă" пуçтаранă. IV Иван патша вĕсене Раççей йышне мирлĕ майпа кĕнĕшĕн, унта çирĕплесе юлмалла тăвассишĕн парнесем пама чĕнсе илнĕ. Çакна анланнă вăл: ханлăхăн çур пайне юн юхтармасăр - вырăссен енчен те, туçи çыннисен енчен те халăха нумай пĕтермесĕрех Раççей çумне пĕрлештерни халăхсем хушшинчи ыйтусене татса памалли чи меллĕрех май пулать. Çаван чухнех IV Иван ханлăхăн сулахай çыранти пайне те Вырăс патшалăхĕ çумне пĕрлештересси çинчен шухăшланă, 1552 çулхи пуш уйăхĕн 12-мĕшĕччченех, Хусан çыннисем ултавлă ĕç тăвичченех, çав шухăша çине тăрсах пурнăçа кĕртме тăрăшнă. Хăйсен çĕрне мирлĕ майпа пĕрлештернĕ хыççăн Ту ен çыннисене IV Иван патша хаклă наградăсем панине выранти ят-сумлă çынсене сутăн илни тесе шутлама май килмест. Пĕрлешнĕ хыççăн 2-3 уйăх иртнĕ хыççăн мар, пĕрлешиччен сутăн илме пултарнă. 500-600 çынлă делегацисем йышлăн кайни халăх мирлĕн пĕрлешессишĕн тăнине çирĕплетет.

Ахаль халăх 1531 çултах ĕнтĕ налук енĕпе çăмăллăх пама, Мухаммед-Аминăн хăйсене килĕшнĕ налук тытăмне каялла таварма ыйтнă, ясак тăлессинчен виçĕ çуллăха хăтармалла, Мухаммед-Аминăн ясак тăлемелли тытăмĕ патне тавранмалла тума пултарнă. Унтан та ытларах, нимрен малтан, ясак тăлекен çынсем ыйтнипе çĕрпуçемпе старейшинисем Ту ен Раççей йышне мирлĕ майпа кĕрессине хускатнă. Çарсен пысăк ушканне /пилĕк полкла темиçе пĕрлешĕве/ 1552 çулта Хусаналла илсе кайнă çар пуçĕ А.М.Курбский кнеç çапла калани Ту ен Раççей йышне кĕрессине пĕтĕм халăх анлăн ырланине кăтартса парать:

“Сар юхан шывĕ урлă каçрăмăр та, туçи çармассем, хăйсене чăваш текенскерсем, хăйне евĕр халăх, вĕсене /урăхла каласан, вырăс полкĕсене. - В.Д./ пилĕк çĕр, пин çын таран пуханса кĕтсе илме тытăнчĕç, [патша килсе çитнĕшĕн хыта саванса хĕпĕртерĕç, патша хушнипе вĕсен çĕрĕ çинче Сĕве хулине туса лартнă-çке]” [63]. Çапла вара пин-пин чăваш “патша килсе çитнĕшĕн” - хăйсен çĕрне Вырăс патшалăхĕ çумне пĕрлештернĕшĕн саванна. Пĕр историк çапла çырнă: “А.М.Курбский çакна палăртать: Ту ен çыннисем патшана “камаллăн тата камалламасăрах”, урăхла каласан, хăйсен ирĕкĕпе е вĕсен камалне шута илмесĕрех паханна”. А.М.Курбский çакна Сĕве хули çывăхĕнчи тутар ялĕсем пирки калать: “Çав хула таврăлла ялсем пулнă /вĕсем хăйсен ирĕкĕпе тата ирĕксĕрех паханна/” [64]. Çаванпа А.М.Курбский самахĕсене чăвашсемпе туçи çармасĕсене тивет тесе калани тĕрĕс пулмасть.

“Ту ен тухса ӳкни Хусан ханлăхĕн шăпине палăртса хунă”, - çапла çырнă М.Н.Тихомиров академик. “Хусан летописецĕ” çырнă тăрăх, Сĕве крепоçне туса лартни тата Ту ен Раççей йышне мирлĕ майпа куçни Хусан çыннисемшĕн питех те кĕтмен япала пулнă. Малтанхи вăхăтра вĕсем вырăссем саванаç хули таваççĕ тесе шутланă. “Хусан çыннисем чăнлăха, пысăк хула туса лартнине курсан, тăтăшах кулянма, хурланма тытăннă” [65]. Ту ен Раççей йышне мирлĕ майпа кĕнин пĕлтерĕшĕ мĕнлине Мускав летописецĕсем тĕрĕс хак панă: “Хусан çыннисем хулара та, ялсенче те çакна курнă: туçи çыннисем çирĕппĕн пĕрлешнĕ патша тавра, вĕсемшĕн пысăк нуша килсе тухнă”, пур енчен те вăрçăпа тапанаççĕ, урăх патшалăхсенчен вĕсем патне пымалли çулсем çук, ниçтан та пулăшу кĕтсе илеймĕн, мĕншĕн тесен Атăл тăрăх Васильсурскран Кама вăрри таранах, Кама тăрăх таваллă Вятка таранах тата Вятка тăрăх таваллă тунă каçăсене пурне те вырăс çарĕ - боярсен ачисем, стрелецсемпе казаксем “воеводасен хурал хĕсметĕнче тăрса” хăйсен аллинче шанчăклă тытаççĕ, - Хусан çыннисем Крым çыннисенчен уйрăлма тытăннă, Ар енчи чăвашсем Крым çыннисемпе çапăçма Хусана килсе çитнĕ. “Вырăс патшине /урăхла каласан, IV

Ивана. - В.Д./ мĕншĕн паханмастпăр", - тенĕ. Хан керменне пынă, Крым çыннисем - Кощак уланпа юлташĕсем чăвашсемпе çапăçнă, вĕсене çĕмĕрсе такна" [66].

Хусан кнеçĕсемпе мăрсисенчен нумайăшĕ IV Иван патша хĕсметне кĕнĕ, вĕсене Сĕве хулинче выран пама хушнă. Крым çыннисем хăйсене Хусан çыннисем вырăссен аллине парасран шикленсе ӳкнĕ, "пурне те пуçтарса, май пуррине çаратса" улансем, кнеçсем, азейсем, мăрсасем, пуян казаксем - 300 çын - хăйсен тарçисене, арăмĕсене, ачи-пăчине пăрахса хăварсах Хусантан тухса тарнă. Камăран крымалла каларса яман вĕсене. Вятка еннелле тарнă вĕсем. Унта вĕсене Вятка воеводи Б.Зузин хăйĕн çар ушканĕпе çапса аркатнă: нумайăшне вĕлернĕ, пĕр пайĕ шыва путнă, 46 улана, кнеçе тата мăрсана тыткăна илнĕ. Сафа-Гирей вилнĕ хыççăн Крым çыннисене Хусантан хăваласа яриччен хан правительствине ертсе пынă Кощак улан та тыткăна çакланнисен хушшинче пулнă. Тыткăна лекнĕ Крым çыннисене Мускава ăсатнă, унта çакса вĕлернĕ [66].

Хусан çыннисем Сĕве хулинчи Шах-Али патне пынă, унран Хусан престолне йышăнма ыйтнă. Шах-Али сĕнĕвĕпе Хусан çыннисем Растов ывăлĕн Енъбарс-мăрсан делегацине IV Иван патша патне мăсăльман тĕнĕн çыннисен, кнеçсен, улансен, мăрсасен, керменти тата кермен тулашĕнчи казаксен, чăвашсен, çармăссен, ирçе-мăкшăсен, турхансен, мишерсен тата пĕтĕм Хусан çĕрĕ ячĕпе çырнă пуç çапнă /челобитная/ грамота парса янă, унта çапла ыйтнă: Шах-Али хана Хусана ямалла, Утямиш-Гирей ханпа унăн амăшне Сююмбикене Мускава илсе каймалла, тыткăнри вырăс çыннисене ирĕке кăлармалла, Хусанта юлнă Крым çыннисене, вĕсен арăмĕсемпе ачи-пăчине Мускав аллине памалла. IV Иван грамотăра çырнă ыйтусемпе килĕшнĕ, тыткăнри вырăс çыннисене пĕр тăхтаса тăмасăр ирĕке кăларма, вĕсене Мускава ăсатмашкăн Хусан шывĕ Атăла юхса тухнă çĕре илсе пыма уйрăмăн хушнă [67]. Тутарсем пуç çапса çырнă грамота пирки суйласа илнĕ рада членне А.Ф.Адашева патша хушăвĕпе Сĕве хулине, Шах-Али, боярсем тата воеводăсем патне янă, вăл вĕсене IV Иван

патша Шах-Алие "Хусана хăй аллинче тытмашкăн пани, Хусанăн Улăх енне Ар таран пĕтĕмпех; Ту енне Сĕве хулине çирĕплетсе пани, вĕсем /Енъбарс-марса делегацийĕ. - В.Д./ пуç çапса çырнине иличченех Ту ене патша Туран ыра камалĕпе тата хĕçпе йышăнни" çинчен пĕлтернĕ. А.Ф.Адашев пĕлтернине итлесе, " Шах-Али патша ĕçне ырлани, анчах Ту ен Хусана мар, Сĕве хули аллине куçнине юратманни çинчен калана. Боярсем патша хушнипе килĕшмелле, урăхла пулма пултараймасть тесе канаш пана". [68].

С.Х.Алишевпа ытти хаш-пĕр историксем А.Ф.Адашев дипломат "вĕсем пуç çапса çырнине иличченех патша Туран ыра камалĕпе тата хĕçпе йышăнна" тенине тĕрĕс мар анлантараççĕ: Ту енне вырассем унти халăх пуç çапса ыйтичченех хĕç-пăшалпа уса курса тытса илнĕ, теççĕ. Пĕрремĕшĕнчен, "хĕçпе йышăнна" тени - çав вăхăтри дипломатире йăлана кĕнĕ сăмахсем. Вăтам ĕмĕрсенче тĕнчери правара хĕç-пăшал вайне çеç, ют çĕрсене хĕç-пăшалпа уса курса тытса илнине тата пăхăнтарнине кăна йышăнна. Тĕслĕх выранне: Бату çарĕсене паранна хыççăн вырăс кнеçлĕхĕсем 242 çул хушши тутар-монголсене парăм тулесе тăна, политика тĕлĕшĕнчен вĕсене пăхăнна. Ту енĕн ыйтавĕнче "хĕçпе йышăнна" тени чăнлăхпа çыхăнман. IV Иван тата вырăс дипломачĕсем каярахпа Хусан çыннисем Ту енне каялла илме шутланине урăхла сăлтавсемпе сирсе яна. Иккĕмĕшĕнчен, "вĕсем пуç çапса ыйтни" сăмахсем 1551 çулхи çĕртме уйăхĕнче туçи çыннисем IV Иван патне пуç çапакан делегаци янипе мар, Растов ывăлĕ Енъбарс-марса пĕтĕм Хусан çĕрĕ ячĕпе çырна грамотапа çыхăнна /çулерехре çырна/. IV Иван патша А.Ф.Адашева Хусан çыннисем пуç çапса ыйтна тăрăх хăй мĕнле йышăну туни çинчен пĕлтерме хушна.

Хусан çыннисен 1551 çулхи çурла уйăхĕн 9-мĕшĕнче Сĕве хулине пырса çитнĕ делегацине Шах-Али хăй çапла хуравлана: пурне те IV Иван хушна пек тăвас пулать, енчен те Хусан çыннисем патша ирĕкне пурнăçа кĕртмесен патша кĕркунне "пысăк йышла çарпа" Хусана тапăнма пултарать. Шах-Али Хусан çыннисенчен Утямыш-Гирей ханпа унăн амăш-

не Сюмбикене пĕр тахтаса тамасар Сĕве хулине илсе пыма хушнă. Вĕсене Сĕве хулине илсе пынă та Мускава асатнă. Çурла уйăхĕн 13-мĕшĕнче Шах-Али вырас боярĕсемпе тата çар çыннисемпе пĕрле Хусан варрине пырса çитнĕ, çурла уйăхĕн 14-мĕшĕнче Хусанти ят-сумлă çынсем ăна Кремльте чаплă кĕтсе илнĕ. Хусан кнеçĕсене боярсем "грамотăна чыслăн упрама - малашне патша /IV Иван/ катартса панă пек пуранма хушнă". "Вĕсем вара /урăхла каласан, Хусанти ят-сумлă çынсен представителĕсем. - В.Д./ пурте Ту ен пирки каласа пуçланă, вĕсем ун пек тума пултараймаççĕ, çĕре пайламаççĕ тенĕ. Боярсем патша мĕнле хушнине ăнлантарса панă, "Турă хушнă пек тунă патша, Сĕве варринче хула туса лартнă, туçи çыннисем патшана пуç çапса тархаслана, ту çыннисем сире хирĕç çапăçнă: урăхла пулма пултарайман, Турă çаван пек хушнă тенĕ. Тавлашса нумай калаçнă унта, Турă пилленипе боярсем патша калана пек тунă, вăл хушнине пурнăçланă" [69]. А.Адашев дипломат пĕлтернипе танлаштарсан /паллă ĕнтĕ, дипломатсем чăннине каламаççĕ/, Хусан кнеçĕсемпе Ту ен пирки тавлашнă чухне боярсем "хĕçпе йышăннă" тесе каламан, туçи çыннисем Раççей çумне хăйсем ыйтнипе, хăйсен ирĕкĕпе пĕрлешнине, ун хыççăн Хусана хирĕç çапăçнине палартнă. Тĕрĕс, витĕмлĕ шухăш пулнă çакă.

1551 çулхи çурла уйăхĕн 14-мĕшĕнче Шах-Алие Хусан ханĕн престолне лартнă чухне "Шигалей патша хăй тата пĕтĕм Хусан çĕрĕ вĕсем Ту ене, çаван пекех Атăл çуррине, пырса кĕмĕç, харпăр хăй çурринче пулă тытăç тесе тĕрĕс сăмах панă; патша грамоти çине хăйсен пичетне лартнă, унта Хусанăн лайăх çыннисем алă пуснă". Куратпăр ĕнтĕ, Шах-Алипе Хусан çыннисен грамотинче Ту ене Раççей йышне кĕртнине йышăнасси тĕп выранта пулнă. Хусан феодалĕсем тыткăнри вырас çыннисене пурне те ирĕке каларма сăмах панă. Вĕсене çапла асăрхаттарнă: енчен те каман тыткăна илнĕ çын пурри паларсан "ăна çакса вĕлереççĕ". Ун чухне Хусан çыннисем пурте Шах-Алие хан престолне лартмалли условисемпе килĕшни çинчен тĕрĕслĕх причакĕ тытнă [70].

Хăш-пĕр историксем çапла пĕлтереççĕ: Ту ен

халăхĕсем Хусан ханлăхĕ ирĕк памасăр Вырăс патшалăхĕ çумне пĕрлешме пултарайман. Çав историксенчен пĕри Шах-Алипе Хусан çыннисен 1551 çулхи çурла уйăхĕн 14-мĕшĕнчи грамоти пирки çапла çырнă: "Апла пулин те Ту енĕ çав-çавах ячĕшĕн ханлăх пайĕ шутланса тăнă, вырăс правительстви хăй илнĕ çĕнĕ территори статусне тутарсемпе калаçусем ирттерсе йĕркелеме тивĕçлĕ пулнă. 1551 çулхи çурла уйăхĕн 14-мĕшĕнче Мускав лартнă Шах-Али хан /ăна часах выртантан кăларнă тата Хусантан хăваласа янă/ тата ят-сумлă çынсен /тутарсен/ съезчĕ Ту ене Вырăс патшалăхне парасси çинче тунă килĕшĕве алă пуснă. Ахăртнех, çав пулăма асаннă региона Раççей çумне пĕрлештернĕ вăхăт тесе шутламалла пулĕ. Унччен вырăс влаçĕсен унти ĕçĕсем ют патшалăхри агресси мероприятийĕсем пулса тăнă, чăваш, çармăс, ирçемăкшă халăхĕсен ят-сумлă çыннисем Мускавпа çывăхланас тĕлĕшпе тунă утăмсем сепаратизм акчĕсем шутланнă". Ава мĕнле, Ту ен халăхĕсем Хусан ханĕсемпе феодалĕсен пусмăрĕнчен ирĕке тухассишĕн кĕрешни сепаратизм юхăмĕ пулнă иккен, вăл вырăс влаçĕсен агресси мероприятийĕсемпе çыхăнса тăнă имĕш!

Шах-Али Хусан престолне ларнă хыççăн, ханлăх тытăнăнче асапланакан 100 пин вырăс çыннине ирĕке кăларас тĕлĕшпе йывăрлăхсем тухса тăнă. Хусан кнеçĕсем вара Ту ене каялла тавăрмалли шухăша пурнăçлама пăрахман. 1551 çулхи юпа уйăхĕнче Москава, IV Иван патша патне Шах-Али хан янă Хусан посолĕсем - Ширин-Муралей Булатов аслă карач, Шибас Шамов кнеç, Абдула-Бакшей çапла пуç çапса ыйтма пырса çитнĕ: "Патшан /IV Иванăн/ Ту ене патшана /урăхла каласан, Шах-Али хана. - *В.Д.*/ каялла тавăрса памалла, пурне те тавăрса памасан Ту енчен хăй килĕшнĕ таран ясак пуçтармашкăн ирĕк памалла". Посолсене IV Иван ячĕпе çапла хуравланă: "Ту енчен патшан Хусана пĕр тенкĕ укçа та памалла мар". Çакна аса илтернĕ посолсене: Хусан çыннисем тытăнри вырăс çыннисене "пĕр çын юлми" ирĕке кăларма причак пани, анчах вĕсем "халĕ те тытăнри нумай çынна хăйсем патĕнче тытаççĕ; патша /урăхла каласан Шах-Али хан. - *В.Д.*/ тытăнри

вырӓссене пӗтӗмпех ирӗке кӓларсан, патша /IV Иван/ çавӓн хыççӓн тӗрӗс ӗçсем тӓвать, ун чухне эсир те кунта пулатӓр". Çав вӓхӓтрах Хусантан Мускава И.И.Хабаров бояринпа И.Г.Выродков тиек пырса çитнӗ. Вӗсем IV Иван патшана "Хусан çыннисем тыткӓнрисене сахал ирӗке кӓлараççӗ, сӓнчӓрлаççӗ, çӗр шӓтӓкӗсенче пытарса усраççӗ", çакна тупса палӓртсан та Шах-Али, халӓх хумханма пуçласран асӓрханса, айӓплисене -"грамотӓра каланӓ пек - çакса вӗлермелле тумасть" тесе каласа панӓ. Бояринпа тиек çавӓн пекех Хусан кнеçӗсем Нухай Уртипе çыхӓну тытнине Шах-Али пӗлни çинчен те хыпарланӓ [71].

1551 çулхи чӱк уйӓхӗнче Шах-Али Бибарс-кнеç, Кадыш-паттӓр, Карамыш-улан тата ыттисем кавар тунине уçса панӓ, вӗсем Шах-Алие вӗлерме тата Нухай Уртинчен хан чӗнсе илме шутласа хунӓ. Хусанти ят-сумлӓ çынсен хушшинче Шах-Али ханпа килӗшменнисем нумайланнӓ. IV Иван А.Ф.Адашева Шах-Али патне хана çакӓн пек сӗнӱ пама кӓларса янӓ: унӓн "Хусана патша хушнӓ пек çирӗп тытмалла", хулана вырӓс çыннисемпе вӓйлатмалла. А.Ф.Адашевпа калаçнӓ чухне Шах-Али çапла пӗлтернӗ: "Хусанта пурӓнма май çук мана"; "Эпӗ патшаран тата аслӓ кнеçрен Ту ене каялла тавӓрса пама ыйтатӓп" тесе Хусан çыннисене шантарнӓ, "патша тата аслӓ кнеç хута кӗрет, Ту ене парать пулсан кӓна эпӗ Хусанта пурӓнма пултаратӓп, эпӗ пурӓннӓ чухне Хусан патшана тата аслӓ кнеçе çирӗппӗн пӓхӓнса тӓрӗ, ман хыççӓн мӗнле пулассине кам пӗлет?" Ун чухне Д.Ф.Палецкий кнеç "патша хушнӓ тӓрӓх çапла каланӓ: патша Ту ене Хусана пама пултараймасть; патшана Турӓ панӓ ӓна, Ту ене парсан Сӗве хулипе мӗн тумалла? Хӓвах пӗлсе тӓратӓн, пирӗн патша Хусан мӗн чухлӗ чыссӓр ӗçпе тӓкак тунине тӱссе тӓнӓ, халӗ те пирӗн патшана тӗрӗс сӓмах /урӓхла каласан, причак. - В.Д./ панӓ пулин те, христиансене хӓвӓр патӓрта тыткӓнра усратӓр, улталатӓр". Ӑна хуравласа çапла каланӓ Шах-Али: "Мана Ту ене памасть пулсан манӓн Хусанта мӗнле тӱссе пурӓнмалла-ха? Манӓн та патша тата аслӓ кнеç патне тарса пыма тивет". Д.Ф.Палецкий кнеçпе А.Ф.Адашев хана çапла каланӓ: "Санӓн патша патнех тарма тивет пулсан

хулана унăн вырăс çыннисемпе çирĕплет". Нумай пулнă тавлашулла самахсем. Патша /урăхла каласан, Шах-Али. - В.Д./ вара çапла каласа хунă: "Пăсарман /урăхла каласан, масальман. - В.Д./ эпĕ, хаман тĕне ĕненме парахас çук, хаман патшапа аслă кнеçе та улталамa пултараймастăп; енчен те мана Хусан çыннисем тапанаççĕ пулсан, чарсаррисене пĕтерсе такăп, патша патĕнче пулăп" [72]. Куратпăр ĕнтĕ, Шах-Али Хусанти ят-сумлă çынсем Ту ене ханлăха таварса пама ыйтнине пурнăçлани хăй Хусан престолĕнче лармалли пĕртен-пĕр май пулать тесе шутланă, урăхла каласан, ханлăх Ту енче пуçтаракан ясак шучĕпе кана пуранма пултарнă.

Д.Ф.Палецкипе А.Ф.Адашев раштавра Хусантан тухса кайнă, хана Хусан çыннисенчен сыхласа тăма тата Хусанти ĕçсем пирки IV Иван патшана хыпарлама Иван Черемисиновпа унăн стрелецĕсене хăварнă. Д.Ф.Палецкий Сĕве хулине çитсен унта пуранакан тутар кнеçĕсем Чапкунпа Бурнаш, ыттисем çапла пĕлтернĕ: "Хусан çĕрĕнче çакăн пек сас-хура пур: çуркунне çитет, Хусан çыннисем пурте патшана улталасшăн, Шигалее юратмаççĕ". IV Ивана пĕлтернĕ çакăн çинчен; вăл Семен Ярцова Шах-Али патне çапла пĕлтерме кăларса янă: "Хусан çыннисенчен сыхланарах пурăнăр". Хусан çыннисем IV Иванран чееpех пулнă. 1552 çулта Мускавра пуранакан Муралей-кнеç, Костров-кнеç тата Алемердин-азий IV Иван патне пынă та çапла пĕлтернĕ: "патша /IV Иван/ Шигалей патшана Хусантан кăларса парахма хуштăр, вĕсен наместникĕ пулма хăйĕн бояринне патăр, вĕсене Сĕве хулинчи пекех тытса тăтăр". Тутар кнеçĕсем IV Ивана çапла шантарнă: "Шигалей патша тухса кайсан Хусан çыннисем патшана тата унăн хулари наместникĕсене пĕтĕм тĕрĕслĕхпе паханса тарĕç, хулана пĕтĕмĕшпех ун аллине парĕç". IV Иван тутар кнеçĕсене сиснĕ, мĕншĕн тесен вăл çав-çавах ханлăхăн сулахай çыранне Ту енĕ пекех мирлĕн пĕрлештерме май килессе шанать [73].

1552 çулхи нарăсра IV Иван А.Ф.Адашева Хусана Шах-Алие çакна пĕлтермешкĕн янă: патша хушнипе унăн Хусантан тухса каймалла, мĕншĕн тесен Хусан кнеçĕсем "Хусанта аслă кнеç наместникĕ пулмалла

теççĕ". Шах-Али А.Ф.Адашева çапла хуравлана: "Вал пăсарман юртне ниепле те пăсма пултараймасть, манăн Хусанта пуранма та май çук, Хусан çыннисем Нухайран патша ярса пама ыйтна, эпĕ Сĕве хулине каятăп, вĕсем мана вĕлерме пултараççĕ" [74].

Шах-Али Хусантан 1552 çулхи пуш уйăхĕн 6-мĕшĕнче тухса кайнă. С.И.Микулинский боярина тата воеводăна, унччен Сĕве хулинче Ту ене тытса тăнаскере, Хусанта наместник пулма уйăрса лартнă. Ăна Хусанта кĕтсе илессине йĕркелеме пуçлана. Хусан çыннисем, Сĕве хулине пырса, наместникшăн хĕпĕртесе кĕтни çинчен пĕлтернĕ. Анчах та наместник воеводăсемпе тата çар çыннисемпе пĕрле Хусана пырса çитсен Хусан кнеçĕсем крепоç хапхисене хупса лартнă, наместникпа воеводăсене кĕртмен. С.И.Микулинский, воеводăсем тата çар çыннисем пуш уйăхĕн 12-мĕшĕнче Сĕве хулине тавраннă [75]. Сулахай çырана Вырăс патшалăхĕ çумне мирлĕ пĕрлештерес ĕç анăçманни çакна катартса панă: халăх хăйĕн ирĕкне палăртмасăр ют территорисене çавăн пек пĕрлештерме май килмест.

Хаш-пĕр историксем нимĕнпе никĕслемесĕрех çапла "çирĕплетеççĕ": пĕтĕм Ту ен 1552 çулхи çуркунне патша администрацине хирĕç пăлхава çĕкленнĕ, каллех Хусан ханлăхне кĕнĕ. Вĕсĕм йăнăшаççĕ. 1552 çулхи çуркуннехи ĕçсемпе çыхăннă ыйтусене М.Н.Тихомиров академик тĕплĕн те объективлăн тĕпченĕ [76].

Сĕве хулин воеводисем 1552 çулхи пуш уйăхĕн вĕçĕнчен пуçласа çĕртме уйăхĕччен мĕнле йывăрлăх тăссе ирттернипе çыхăннă тĕслĕхсен çăлкуçĕсене пăхса тухăпăр. Хусанти ят-сумла çынсем Аçтăрхан ханĕн ывăлне Едигера хан пулма лартнă хыççăн Хусан Ту еннелле çарсем яма пуçланă, ăна Раççейрен уйăрма шут тытнă. 1552 çулхи пуш уйăхĕн варринчех Хусан çыннисем "Ту ене вăрçăпа кайма, вĕсене патшаран уйăрассишĕн тăрăшма тытăннă. Туçи çыннисем пĕр çара çапса салатнă, икĕ кнеçе, Шах-Чюрпа Шама мăрсана, тыткăна илсе воеводăсем патне /Сĕве хулине/ леçнĕ, воеводăсем туçи çыннисене парнесем панă, сутăнчăксене /урăхла каласан тутар кнеçĕсене. - В.Д./ çакса вĕлерттернĕ. IV Иван патша, Хусанти ултав çинчен илтсен, Хусана походпа каймашкăн

хатĕрленме тытăннă. Сĕве воеводисем хыпарланипе вăл Сĕве хулине хушма çар вайĕ янă. Сĕве хулин воеводисем Хусан çарĕсемпе çапăçма хутшăнман. Мускава çапла хыпарланă вĕсем: "Патша çыннисем çине питĕ пысăк инкек, цинга, шыçă-çăпан йăтанса аннă, нумайăшĕ вилнĕ, теприсем выртаççĕ", туçи çыннисем хумханаççĕ, "туçи çыннисем пурте сутаннă, Хусанпа çывăхланнă", "унта итлеменни темĕн чухлех". Анчах ту ен вулăсĕсемпе ялĕсенче вырăс администрацийĕ пулман-çке, администраци пĕтĕмпех Сĕве хулинче вырнаçнă. Воеводăсем хăйсен Мускава ярса паракан донесенийĕсенче туçи çыннисем сутанни тата хумханни çинчен калакан нимĕнле пайăр тĕслĕх те кăтартман. Çакнашкал тĕслĕхсене çеç кăтартма пултарнă вĕсем: "Çавал тăрăх çулерехре пуранакан çынсем Сĕве хулине килсе çуремеççĕ", воеводăсемпе боярсен ачисем Сĕве çывăхне кĕтусем илсе килнĕ... анчах туçи çыннисем кĕтусенчен нумайăшне каялла хăваласа кайнă". Воеводăсем пĕр хутчен кăна Хусан çыннисене хирĕç казаксене каларса янă, анчах та "Хусан çыннисем казаксене аркатса тăкнă, 70 çынна вĕлернĕ, пищальсене туртса илнĕ, халран кайни çылаха кĕртет, нумай çын вилет". Çапла шутлама пулать: Сĕве хулин воеводисем Мускаван çар вайĕ Хусан еннелле хăвăртрах çула тухтăр тесе тăрăшнă. 1552 çулхи çу уйăхĕн 21-мĕшĕнче Макарий митрополит Сĕве хулине çыру янă, çарсене çирĕп кăмăлла пулма, мăсальмансене хирĕç хастар кĕрешме чĕннĕ. Сăмах май çапла çырнă вăл: "... Туçи Çармас пĕтĕмпех, пирĕн патшапа асла кнеç енне тăрса, Сĕве хулипе çыхăннă". Çака палла пулнă: "Сĕве юхан шывĕ тăрăхĕнчи тата Атăл тăрăхĕнчи туçи çыннисем кăна", унта тутарсем пураннă тата Хусан çарĕсем унта пырса кĕнĕ, Сĕве хулинчен уйăрăлнă. Сĕве хулине Мускавран А.Б.Горбатый, П.И.Шуйский тата ытти воеводăсем ертсе пынă çĕнĕ полксем çитсен кăна уйăрăлнă тутарсем патнелле виçĕ полк каларса янă. "Воеводăсен çар çыннисем туçи çыннисемпе çапăçнă, икĕ енчен те çынсем вилнĕ, туçи çыннисене таптаса тăкнă". Кун пирки М.Н.Тихомиров çапла çырать: "... 1552 çулта, вырăс çарĕсем Хусан еннелле похода тухнă вăхăтра, Ту енче хăрушла хумхану пуçланса кайнă. Летописç-

ре çырнă тăрăх, çав хумхану Сĕвепе Атăл хушшинчи территорире, Сĕве хули çывăхĕнче анлăн сарăлнă. Сĕвепе Атăл хушшинчи районта ытларах тутарсем пуранна, вĕсем вырăссен влаçне хирĕç пăлхав çĕкленĕ. Çав вăхăтра Сĕве хулинче ларнă боярсемпе воеводăсем "туçи сутăнчăкĕсене" хирĕç чылаях пысăк ушканпа тухнă, вĕсен ялĕсене тустарса пĕтернĕ. Ту çыннисен çав пăлхавĕнче тутарсем тĕп выран йышăнна". Чăвашсен, туçи çармассен, тухăç ирçе-мăкшăсен тĕп пайĕ Хусан хĕснине пăхăнман, Вырăс патшалăхĕ майлă тăнă. 1552 çулхи çулла чăваш тата туçи çармăс çар çыннисен 4000 çынлă полкĕ Сĕве хулинче тăни те вĕсем Мускава шаннине çирĕплетет.

Вырăс çарĕсем Хусан çинелле кайнă чухне Сăр çинчи 14-мĕш станра "туçи çыннисем Янтуду-мăрса, Бузкей, Кудабердей хăйсен юлташĕсемпе IV Иван патшана çапла каласа панă: Сĕве воеводисем туçи çыннисем еннелле вăрçăпа кайнă та, çаван хыççăн унти халăх Сĕве хулине пăхăннă. Патшана çаван пек пĕлтерекенсем шăпах та Хусан çарĕсем хĕснине пула Сĕве хулине хирĕç çапăçма хутшăннă тутар мăрсисем пулнă. Чăнлă юхан шывĕ çинчи 17-мĕш станра патшана туçи çыннисем йышлăн кĕтсе илнĕ, хăйсем йăнăшни çинчен пуç çапса каласа панă: вĕсенпе Хусан çыннисем çапăçнинчен хăраса ӳкнĕ эпир, тенĕ. Патша вĕсене каçарнă, вĕсем мĕншĕн çаван пек тунине ăнланнă, вĕсене ĕçме-çиме чĕннĕ [77].

1552 çулта, вырăс çарĕсем Чăваш çĕрĕн кăнтăр-хĕвелтухăç енĕпе Хусан еннелле иртсе кайнă чухне, чăвашсен вĕсем валли "мĕн кирлине илсе пынă, юхан шывсем урлă кĕперсем хывнă. Пур çĕрте те стансене йĕркене кĕртнĕ, питĕ пысăк йышлă çар валли мĕн кирли пурте çителĕклĕ пулнă" [78].

Хусаншăн çапăçакан вырăс çарĕсен йышĕнче чăвашсемпе çармассен тăватă пин çынлă полкĕ, IV Иван чĕннипе хăйсен ирĕкĕпе çара кайнă чăвашсен ытти ушканĕсем пулнă. Вĕсем Ар районĕнчи экспедицие хутшăннă, унта тутарсен темиçе тĕрмине аркатса тăкнă, тутарсен пысăк çарне çапса салатнă, тытăкана илнĕ, тытăнра пуранна нумай вырăс çыннине ирĕке кăларнă, Хусан çывăхне вырăс çарне тарантарма çав тери нумай выльăх-чĕрлĕх илсе пынă". Хусана

тапăннă вăхăтра чăвашсемпе туçи çармăссен çар подразделенийĕсем Ар уйĕнче çапăçнă тата тутарсем тулашĕнчен тапанасран вырăс çарĕсен тылне хуттĕлесе тăнă [79].

1552 çулхи юпа уйăхĕн 2-мĕшĕнче IV Иван патша ертсе пынипе вырăс çарĕсем Хусан хулине çĕмĕрсе йышăннă. Хусан ханлăхĕн кун-çулĕ татăлнă.

Ханлăхăн сулахай çыранти халăх Хусан хулине иличчен тутар кнеçĕсемпе мурсисем пуçарнипе, ханлăха тытса илмешкĕн янă вырăс çарĕсене хирĕç çапăçăва хутшăннă. 1552-1557 çулсенче сулахай çыран халăхĕ Мускава хирĕç çĕкленĕ пăлхавсене хутшăннă, вĕсене вырăс çарĕсем хаярран путарнă. Сулахай çыранта пуранакан халăха нумай вĕлерсе пĕтернĕ. Чăвашсемпе туçи çармăссем Раççей йышне мирлĕ майпа кĕнĕ, çаванпа вĕсене пĕтерни пулман. Вĕсем 1552-1557 çулсенче Хусан çĕрĕ çинче Мускава хирĕç çĕкленĕ пăлхавсене пачах та хутшăнман. Шел те, Хусан историкĕсем, М.Г.Худяковран тытăнса /"Очерки по истории Казанского ханства. Казань, 1923/ хальхи вăхăтри авторсем таранах, Ту енче вырăссене хирĕçле пăлхавсем пулса иртнĕ тесе тĕрĕс мар çыраççĕ. Хусан историкĕсем шухăшласа каларнисене эпĕ, тĕрĕс çăлкуçсен никĕсĕ çинче çырса, "Антимосковское движение в Казанской земле в 1552-1557 годах и отношение к нему ее Горной стороны" статьяра тăрă шыв çине калартăм [80].

Ту ене Вырăс патшалăхĕ çумне мирлĕ майпа пĕрлештерни чăваш тата туçи çармăс халăхĕсен историйĕнче питех те пысăк, самана пĕлтерĕшлĕ, пурнăç йĕркине улăштарнă пулăм шутланнă. Раççей йышне кĕрсе чăваш халăхĕ Хусан ханĕсемпе феодалĕсем тискеррĕн пусмăрланинчен хăтăлнă, халăха упраса хăварнă, мирлĕ условисенче пуранма тата хуçалăха тытса пыма пуçланă. Чăваш çĕрĕнче аркатуллă вăрçăсем, Нухай ушканĕсемпе куçса çурекен ытти йăхсем тапăна-тапăна тустарасси чăраннă. Мускав тата Петербург империйĕсем колони йĕркипе пусмăрланă условисенче те чăваш халăхĕ XVII-XIX ĕмĕрсенче хай пуранакан территорие чылай анлăлатнă, халăх йышĕ темиçе хут ӳснĕ, мирлĕ пурнăç условийĕсенче хуçалăха малалла хăварт аталантарнă, нацин хайне евĕр культурипе чĕлхине упраса хăварнă.

1. *Татищев В.Н.* История Российская. М.; Л., 1962. Т. I. С. 254, 426, 498; Т. IV. С. 411, 417.

2. См.: *Петров М.П.* О происхождении чуваш. Чебоксары, 1925. С. 61.

3. *Месарош Д.* Памятники старой чувашской веры. Чебоксары, 2000. С. 20.

4. *Димитриев В.Д.* Опустошение болгарской земли в конце XIV - начале XV веков. // Вопросы истории народов Поволжья и Приуралья. Чебоксары, 1997. С. 7-44.

5. *Курбский А.М.* Сочинения СПб., 1914. Т. I. С. 179; Полное собрание русских летописей /ПСРЛ/. Т. XXIV. С 218; *Лызлов А.* Скифская история. М., 1787. Ч. 1. С. 96; Проблемы аграрной истории удмуртов. Ижевск, 1988. С. 25-38; *Димитриев В.Д.* О значении этнонима "черемисы" в русских и заподноевропейских источниках XVI - начале XVIII веков // Ученые записки ЧНИИ. Чебоксары, 1964. Вып. XXVII. С. 118-132.

6. *Сафаргалиев М.Г.* Распад Золотой Орды. Саранск, 1960. С. 245.

7. ПСРЛ. Т. XIX. С. 19-20.

8. *Кабузан В.М.* Народы России в XVIII веке. М. 1990. С. 84-85.

9. *Герберштейн С.* Записки о Московитских делах. СПб., 1908. С. 95, 145.

10. *Луппов П.Н.* Документы по истории Удмуртии XV-XVII веков. Ижевск, 1958; *Тепляшина Т.И.* Язык бесермян. М., 197; Писцовая книга Казанского уезда 1602-1603 годов: Публикация текста. Казань, 1978; Список с писцовой книги по г. Казани с уездом [1569-1568 годов]. Казань, 1877; Список с писцевой книги города Свияжска и уезда. Казань, 1909.

11. *Черныш ев Е.И.* Татарская деревня второй половины XVI и XVII веков// Ежегодник по аграрной истории Восточной Европы 1961 года. Рига, 1963. С. 174-176; *Он же.* Селения Казанского ханства// Вопросы

этногенеза тюркоязычных народов Среднего Повожья. Казань, 1971. С. 282-283. *Исхаков Д.М.* От средневековых татар к татарам нового времени. Казань, 1998. С. 58-60, 80-102; *Скворцов М.И.* Чувашский языковой материал в "Писцовой книге Казанского уезда 1602-1603 годов" // Межязыковые взаимодействия в Волго-Камье. Чебоксары, 1988. С. 89-101.

12. *Димитриев В.Д.* Чувашские исторические предания. Чебоксары, 1993. С. 68-79.

13. *Михайлов С.М.* Труды по этнографии и истории русского, чувашского, марийского народов. Чебоксары, 1976. С. 331.

14. *Димитриев В.Д.* Чувашские исторические предания. С. 68-79.

15. *Бахтин А.Г.* XV-XVI века в истории Марийского края. Йошкар-Ола, 1998. С. 61.

16. Книга о земельных владениях всероссийских митрополитов, патриархов и св. Синода. СПб., 1871. Приложения. С. 65-73.

17. Список с писцовой и меневой книги города Свияжска и уезда. Казань, 1909.

18. Советская этнография. 1950. № 3. С. 93-106; Российское государство XV-XVII веков. М., 1973. С. 91-115.

19. *Тихомиров М.Н.* Россия в XVI столетии. М., 1962.

20. *Тихомиров М.Н* Российское государство XV-XVII веков. С. 102.

21. ПСРЛ. Т. VIII. С. 270; Т. XIII. С. 43-44; Т. XX. С. 402; Т. XXIII. С. 203.

22. ПСРЛ. Т. VIII. С. 274.

23. ПСРЛ. Т. VIII. С. 274-275.

24. ПСРЛ. Т. VIII. С. 276-277.

25. Исторический архив. М.; Л.: Изд-во АН СССР, 1950. Кн. V. С. 13.

26. *Бахтин А.Г.* XV-XVI века в истории Марийского края. С. 80-90, 104-105. Ссылки на источники №№ 39-70; *Мустафина Д.А.* Послания царя Казанского // Эхо веков. 1997. № 1-2. С. 26-36

27. ПСРЛ. Т. XVIII. С. 146-147; Разрядная книга 1475-1598 гг. М.: Наука, 1966. С. 109; Разрядная кни

га 1475-1605 годов. М.: Ин-т истории СССР, 1977. Т. I. Ч. 2. С. 316-317.

28. Казанская история. М.: Л.: Изд-во АН СССР, 1954. С. 78; ПСРЛ. Т. XIII. С. 147-148; Т. XXI. С. 639.

29. Исторические записки. М.: Изд-во АН СССР, 1954. Кн. 46. С. 286; *Тихомиров М.Н.* Российское государство XV-XVII веков. С. 105.

30. Продолжение Древней российской вывлиофики. СПб., 1793. Ч VIII. С. 272-275.

31. ПСРЛ. Т. XIII. С. 149-150

32. ПСРЛ. Т.XX. С. 468.

33. *Тихомиров М.Н.* Российское государство XV-XVII веков. С. 105-107.

34. Разрядная книга 1475-1598 гг. С. 110.

35. Исторический архив. М.: Изд-во АН СССР, 1954. Кн. VII. С. 291.

36. ПСРЛ. Т XIII. С. 156.

37. Продолжение Древней российской вывлиофики. Ч. VIII. С. 145.

38. *Бахтиев А.Г.* Указ соч. С. 99.

39. ПСРЛ. Т. XIII. С. 460-461; Т. XXIX. С. 157.

40. ПСРЛ. Т. XIII. С. 162-164, 463-465; Т. XX. С. 479-480; Т. XXIX. С. 60-61, 159-161; Разрядная книга 1475-1605 гг. Т. I. Ч. 2. С. 398-399.

41. Казанская история. С. 87.

42. *Алишев С.Х.* Казань и Москва: межгосударственные отношения в XV-XVI веках. Казань: Татар. кн. изд-во, 1993. С. 98.

43. ПСРЛ. Т. XIII. С. 162-164, 463-465; Т. XX. С. 479-480; Т. XXIX. С. 60-61, 159-161.

44. Казанская история. С. 641.

45. ПСРЛ. Т. XXI. С. 641.

46. ПСРЛ. Т. XIII. С. 162-164, 463-465; Т. XX. С. 479-480; Т. XXIX. С. 60-61, 159-161.

47. ПСРЛ. Т.XIX. Стб. 63; Казанская история. С.88.

48. ПСРЛ. Т. XIII. С. 164, 465; Т. XX. С. 481; Т. XXIX. С. 62, 161.

49. ПСРЛ. Т. XIII. С. 164-165, 466; Т. XX. С. 481; Т. XXIX. С. 62, 161.

50. *Алишев С.Х.* Исторические судьбы народов

Среднего Поволжья. XVI - начало XIX вв. М.: Наука, 1990. С. 82; *Он же.* Казань и Москва: межгосударственные отношения в XV-XVI вв. Казань: Татар. кн. изд-во, 1995. С. 99-100.

51. *Никольский Н.В.* Краткий конспект по этнографии чуваш. Казань, 1911. С. 91.

52. ПСРЛ. Т. XIX. Стб. 63; Казанская история. С. 88.

53. ПСРЛ. Т. XXI. С. 641.

54. Исторический архив. М., Л.: Изд-во АН СССР. 1950. Кн. V. С. 18.

55. ПСРЛ. Т.XIII. С. 165, 466; Т. XX. С. 482; Т. XXIX. С. 62, 162.

56. ПСРЛ. Т. XIX. Стб. 62, 308.

57. Казанская история. С. 88.

58. *Кунцевич Г.З.* История о Казанском царстве или Казанский летописец. СПб., 1905. С. 351.

59. ПСРЛ. Т. XIII. С. 165, 466; Т. XX. С. 482; Т. XXIX. С. 62, 162.

60. ПСРЛ. Т. XIII. С. 165, 461. Т. XX. С. 482; Т. XXIX. С. 62, 162.

61. ПСРЛ. Т. XIII. С. 165, 467; Т. XX. С. 482; Т. XXIX. С. 62-63, 162.

62. ПСРЛ. Т. XIII. С. 165-166, 467; Т. XX. С. 482-483; Т. XXIX. С. 63. 162.

63. *Курбский А.М.* Сочинения. СПб., 1914. Т. I. С. 178.

64. Там же. С. 179.

65. Казанская история. С. 92.

66. ПСРЛ. Т. XIII. С. 166-167, 467-468; Т. XX. С. 483-484; Т. XXIX. С. 63-64, 162-163.

67. ПСРЛ. Т. XIII. С. 166-167, 467-468.

68. ПСРЛ. Т. XIII. С. 167, 468-469; Т. XX. С. 484; Т.XXIX. С. 64.

69. ПСРЛ. Т. XIII. С. 168-169, 469-470; Т. XX. С. 485.

70. ПСРЛ. Т. XIII. С. 168-169, 469-470; Т. XX. С. 485.

71. ПСРЛ. Т. XIII. С. 171-172, 472; Т. XX. С. 488; Т. XXIX. С. 67-68, 167.

72. ПСРЛ. Т. XIII. С. 172-173, 472-473; Т. XX. С. 489.

73. ПСРЛ. Т. XIII. С. 173-174, 473-474; Т. XX. С. 489-490; Т. XXIX. С. 69-70, 169.
74. ПСРЛ. Т. XIII. С. 173-473-474; Т. XX. С. 489-490.
75. ПСРЛ. Т. XIII. С. 175-177, 474-476; Т. XX. С. 492-493; Т. XXIX. С. 70-72, 169-171.
76. *Тихомиров М.Н.* Российское государство XV-XVII веков. М.: Наука, 1973. С. 112-113.
77. ПСРЛ. Т. XIII. С. 177-183, 198-200, 476-482, 495-497; Т. XX. С. 493-499, 512-514; то же в Т. XXIX; *Курбский А.М.* Указ. соч. Т. I. С. 178; *Тихомиров М.Н.* Российское государство XV-XVII веков. С. 113.
78. ПСРЛ. Т. XXI. С. 643.
79. ПСРЛ. Т. XIII. С. 210-211, 214, 215.
80. Халăх шкулĕ. 1999. 6 №. 111-123 с.

(Хыпар. 2001, мартăн 27, 28, 29, 30, апрелĕн 3, 4,5).

И.Я.ЯКОВЛЕВĂН ХАЛĂХА ÇУТТА КĂЛАРАС ЁÇРИ ИСТОРИЛЛЁ ПЁЛТЕРЁШЁ

Иван Яковлевич Яковлев /1848-1930/ историе чăваш халăхне çутта кăларас енёпе чапла ёçсем тунипе кёрсе юлнă. Çав каткăс та нумай енлён аталаннă çыннăн ёçне-хёлне хăй пураннă вăхăтрах, чылай чухне, хире-хирёçле хак пана. Ун çинчен çыракан авторсем пурте ăна хайсен социалла пурнăç, идейăпа политика тёлёшёнчи позицийёсене тёпе хурса тишкернё, халё те çаван пекех хаклаççё. Авторсенчен нумайёшё И.Я.Яковлев пирки çырнă чухне унăн ёçёсене пётёмёшпе пăхса тухман, уйрăм тёслёхсене çеç илсе кăтартнă. Асла держава шовинисчёсем ăна национализмла сепаратизмшăн айăплана; эссерсен наци юхамён представителёсем вăл вырассем майла тарать, реакционер тата чăвашсен ташманё шутланать тенё; вырассемпе чăвашсен демократла интеллигенцийё, чăваш хресченёсем 1917 çулччен пирён патриарх чăвашсене çутта кăларас, культурăна аталантарас енёпе ёçленине хапăл туса ырлана. 1917-1922 çулсенче унăн ёçёсем çине хире-хирёçле пăхни паларать. Çав тапхăрта ăна В.И.Ленин хутёленё, пысăк пулăшу пана. 1928 çулта, И.Я.Яковлев çуралнăранпа 80 çул çитнине палла тунă кунсенче, Раççейён тата Чăваш Енён халăха вёрентес ёçён ертуçисем, Чăваш Республикин общественноçё вăл чăвашсене çутта кăларас тёлёшпе çур ёмёр хушши ёçленине лайăх енчен палартнă. 30-мёш çулсенче Яковлев çине туртён пăхасси вăйланать. Ăна Христос тёнён миссионерё, Чёмпёрти чăваш шкулне вара - миссионерсене хатёрлекен центр тесе шутлакансем тупаннă. Çакă вăл истори чăнлăхёпе пачах та çыхăнса тăмасть. 1948 çулта И.Я.Яковлевăн ёçне-хёлне тёрёс хак парасси вăй илет. Анчах та ун хыççăн та 40 çул хушши вăл çут ёçёнче тён вёрентёвне мала хуни çинчен калаçма юраман. Юлашки вăхăтра тин çакăн çине тимлёрех пăхма тытăнчёç. Анчах хăш-пёр авторсем И.Я.Яковлев чăвашсене Христос тёнё майла çутта кăларассишён çеç çуннă, тарăшнă теме пуçларёç.

И.Я.Яковлев çинчен çырнисем XIX ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсенчех куранкалама пуçлана. 120 çул ытла тапхăрта ун пирки тата Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ çинчен çĕр-çĕр статья тата вун-вун монографи пичетленсе тухна, çапах та Яковлева тĕпчес ĕçĕн историографийĕ енĕпе çырнă пĕр ĕç те çук-ха. Монографисен авторĕсем те И.Я.Яковлев пирки çырнисене тишкерсе тухмаççĕ. Ман шутпа, унăн ĕçĕ-хĕлĕ пирки Н.Г.Краснов чи тĕплĕ, тулли те тĕрĕс монографи пичетлесе кăларнă.

Яковлев ĕçне-хĕлне питех те нумай архив материалĕсенче курма пулать: ЧР Тĕп патшалăх архивĕнче, Хусан вĕренӳ округĕн чăваш шкулĕсен инспекторĕн фондĕнче /622 ĕç/, Чĕмпĕрти чăваш учителĕсене хатĕрлекен шкул фондĕнче /1336 ĕç/, Раççей патшалăх истори архивĕнчи Раççейĕн Халăха вĕрентес ĕç министерствин фондĕнче, Хусанти тата Ульяновскри архивсен фондĕсенче, Раççейĕн патшалăх библиотекин Ал çыравĕсен пайĕнчи 361-мĕш фондра - "И.Я.Яковлев архивĕнче" /1887 ĕç/, Чăваш патшалăх гуманитари аслăлăхĕсен институчĕн Аслăлăх архивĕнче, Чăваш республикин наци музейĕн Ал çыравĕсен пайĕнче, çавăн пекех пичетленсе тухнă нумай-нумай ĕçсенче. Иртнĕ çулсенче эпĕ хутшăннипе И.Я.Яковлев çыравĕсен икĕ кĕнеки тата унăн аса илĕвĕсен кĕнеки пичетлесе тухрĕç /шел, аса илӳсене кĕскетсе пичетленĕччĕ/. 50-мĕш çулсенче Чăваш АССРĕн Министрсен Совечĕ çумĕнчи Аслăлăхпа тĕпчев институчĕ И.Я.Яковлев çырнисен икĕ томлă кĕнекине пичете хатĕрлесе çитернĕччĕ, анчах та РСФСРăн Пичет управленийĕ ăна кăларма ирĕк памарĕ. 1997 çулта Чăваш патшалăх университетĕнче Л.П.Кураков ректор тăрăшнипе тунă И.Я.Яковлев лабораторийĕ хамăран аслă вĕрентекенĕн аса илĕвĕсене "Манăн пурнăç" ятпа ним кĕскетмесĕр, пĕр сăмах улăштармасăр пичетлесе кăларчĕ. Кăçал лабораторирен И.Я.Яковлев институчĕ турĕç. Вăл И.Я.Яковлев çырнисен пуххин тепĕр 10 томне хатĕрлесе пичетлесе кăларасшăн. Халăха çутта кăлараканăн тата унăн шкулĕн ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă чи кирлĕ çăлкуçĕсемпе пуринпе те паллашма тӳр килчĕ мана. Çак статьяна та çав çăлкуççене таянса çырма тăрăшрăм.

Çĕр виçевçĕ пулса И.Я.Яковлев Раççейре крепостла правăна пăрахăçланă, 60-мĕш çулсенчи буржуалла реформа - капитализм хутшăнавĕсене аталантармалли анлă майсем уçса панă реформа пуçланнă хыççăн ĕçлеме тытăннă. Çав реформа, пĕр енчен, наци анланулăхне, наци аталанавĕ патнелле ăталассине чĕртсе янă, тепĕр енчен, халăхсем хушшинчи экономика çыхăнавĕсене, вĕсем пĕр-пĕринпе тачăрах хутшăнассине вăйлатнă, нацисем çывăхланасси патне илсе пынă.

И.Я.Яковлев чăваш çырулăхне туса хуни кирлĕ тесе ĕмĕтленни "Христос тĕнĕ майла çутта калармалли" шухăша паханса таман. Çĕр виçевçĕре ĕçленĕ çулсем пирки вăл хăйĕн "Аса илĕвĕсенче" çапла çырать: "Çĕр виçев ĕçĕпе виçĕ кĕпĕрнери тĕрлĕ вырăна, тĕрлĕ сийри халăх /вырас, чăваш, тутар, ирçе/ пуранакан вырансене кайса, тĕрлĕ халăхăн шухăш-камалĕпе, йали-йĕркипе, уйрăмлăхĕсемпе паллашса çурени воспитани тата çутĕç тĕлĕшĕнчен манăн пурнăçра питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Çакă вăл яланах хамăн таван чăвашсем патне илсе çитернĕ, эпĕ вĕсене ытти халăхсемпе танлаштарма пултарнă. Çав вăхăтран асаннă вырансене çуренĕ май, манăн ăшăмра тĕн енĕпе иккĕленесси, шырасси çивĕчленнĕ... Тĕшмĕше яланах ĕнĕннĕ эпĕ, çĕр виçев училищинче вĕреннĕ вăхăтра та пурччĕ-ха çав ĕненӳ, çапах та иккĕленнĕ, патрашаннă... 1864 çулта, уделни ведомствин виçевçи пулса, Чĕмпĕр кĕпĕрнин Сызрань уесĕнчи Винновка салинче, Атăл тăрăх Самартан 40 çухрăм анатарах вырнаçнă салара ĕçлерĕм. Унччен те ман пуçăмра çак уçăмлах мар шухăш пулнă: ытти халăхсен хăйсен çырулăхĕ пур пулсан, мĕншĕн-ха манăн таван чăваш йăхĕн çырулăх çук? Винновкăра пулса иртнĕ пĕр ĕç çав шухăша малалла вăйлатма пулăшрĕ". И.Я.Яковлев унта сивчирпе хыта аптранă. Çаван чухне, хăйне валли çĕр виçевçĕ шыраса, ун патне Долгорукова княгиня именийĕсен управляющийĕ, поляк çынни О.Л.Косинский пынă та хăй патне илсе кайнă. Темиçе эрне пураннă ун патĕнче Яковлев. "Эпĕ Косинскисем патĕнче пулни маншăн чăвашсене çырулăх кирлипе çыхăннă шухăша çирĕплетес енĕпе пысăк пĕлтерĕшлĕ пулчĕ,- çырать И.Я.Яковлев.- Эпĕ поляк

чĕлхипе çырна кĕнекисем пуррипе касаклантăм. Вырасла çеç пĕлнĕ эпĕ. Унччен вырас тата тутар чĕлхипе каларна кĕнекесене çеç курна. Кунта вара сасартăк çакна пĕлтĕм: поляксен, вĕреннĕ ытти халăхсенни пекех, хайсен таван чĕлхипе çырна кĕнекесем пур иккен. Çапла шухăшларăм эпĕ: мĕншĕн-ха чăвашсен çаван пек чăвашла çырна кĕнекесем çук? Маншăн укĕнмелле те куренмелле пулчĕ". И.Я.Яковлев, Косинскин именийĕнче çĕр виçев ĕçĕсене пурнăçласа, 400 тенке яхăн илет. "Çав ĕç тата унпа çыхăннă ĕç укçи мана çакна ĕнентерчĕç: мĕн те пулин тума вăй çитерес тесен, пĕлӳ илни, урăхла каласан, гимназие тата университета кайни кирлĕ. Çак шухăш çирĕпленчĕ: ун пек тăвас тесен, манăн Чĕмпĕре куçмалла, унта гимнази пур, çаванта вĕренме кĕмелле". Пĕтĕмлетсе, И.Я.Яковлев çапла палăртать: 1865 çулта "манăн чăваш халăхне вуламалли тата çырмалли майсем туса парас туртăм çирĕпленчĕ". Куратпăр ĕнтĕ, И.Я.Яковлевăн пурнăçри асла тĕллевĕ малтан тĕн ĕçĕ-хĕлĕн тулашĕнче йĕркеленнĕ.

Чĕмпĕр гимназийĕнче вĕреннĕ вăхăтра, 1868 çулта, уйрăм çын шкулĕ уçса, Яковлев хайĕн тĕллевне пурнăçа кĕртме пуçлать. Çав çулсенче, Н.И.Ильминский профессорпа тĕл пуличченех /вĕсем 1870 çулхи аван уйăхĕнче тĕл пулна/, Яковлева ăс-хакăл тĕлĕшĕнчен Чĕмпĕр кĕпĕрнин Пăва уесĕнчи училище канашĕн председателĕ А.И.Баратынский пуп пысăк витĕм кӳнĕ. Вăл хутшăннипех И.Я.Яковлев хайĕн ĕçĕ-хĕлĕн пĕрремĕш программине палăртса хунă, ăна 1870 çулхи çурла уйăхĕн 25-мĕшĕнче Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи гимназин тата училищĕсен директорĕ И.В.Вишневский ячĕпе янă çырура палăртнă, унта вăл хайĕн халăха çутта калармалли тĕллевĕсене тĕвакансене Христос тĕнне вĕрентессипе, вĕсем ислампа тутар пусмăрне хирĕç кĕрешессипе çыхăнтарнă. Вырассем хушшинче тахçантанпах тенĕ И.Я.Яковлев хăй çыравĕнче, "чувашенин" самаха машкăласа тата курентерсе калаççĕ. "Çав халăх тĕттĕм те канттам-ха, анчах, ăна пăхмасăрах, тӳрĕ камалла, ырă та ĕçчен халăх вăл, хальхи вăхăтра аваллăхран пыракан шухăш-камăлпа тата йăла-йĕркепе пуранать. Вăл тахçанах Раççей йышне кĕнĕ, çĕр аллă çула яхăн каяллах Христос

тĕнне йышăннă, çапах та ку таранчченех хăйĕн халăхне вырăссем витĕм кӳрессинчен сыхлать, вунă ĕмĕр каялла пулнă пекех, хăйĕн авалхи халăх (язычество) тĕнне ĕненет. Çакна та пăшăрханса палăртма тивет: Христос тĕнĕ чăвашсен хушшинче йăла-йĕрке тĕлĕшĕнчен çирĕпленме ĕлкĕреймен-ха, анчах та вĕсем хăйсем, пĕчĕк пайне шута илмесен, пурте тĕне кĕнĕ çынсем пек тата Христос тĕнне ĕненекенсем пек шутланаççĕ". Малалла И.Я.Яковлев çакна уйрăмăн палăрать: халăх тĕнне ĕненекен чăвашсем мăсальмансен витĕмне çăмăлланах кĕрсе ӳкеççĕ, тутарланса каяççĕ, çака чылаях саралнă ĕнтĕ. "Хальхи вăхăтра чăвашсем, вырăссемпе танлаштарсан, тутарсемпе çывăхрах. Паллах, ку хăйсемшĕнех сиенлĕ".

Чăнах та, монгол-тутар пусмăрĕ 315 çул хушши хĕссе тăнă тапхăрта палхар-чăвашсен таваттăпиллĕкмĕш пайĕнчен кая мар йышне пĕтерсе тăкнă. 1551 çулта чăваш халăхĕ мирлĕ майпа Раççей йышне кĕнĕ хыççăн та чăвашсем выраслании пулман, вĕсен чылай пысăк пайĕ /40 процента яхăн/ тутарланнă, православипе патша тытăмне хирĕçле оппозицире тăракан, çавна пула Атăл тăрăхĕнчи вак халăхсем ытларах килĕштерекен конфессие - ислам тĕнне йышăннă. Ислам тĕнне йышăнни вара тутара кăларнă. Енчен те чăвашсем ислам тĕнне йышăнасси малалла та пулса пынă пулсан, чăваш этносĕ пĕтсе ларма пултарнă. Çакна ăнланнă пĕтĕм чăваш халăхĕн шăпи пирки шухăшлакан И.Я.Яковлев. Вăл шутлать тăрăх, халăх тĕнне мар, Христос тĕнĕн идеологине тĕпе хурсан çеç чăвашсене тутарланассичен сыхласа хăварма май килнĕ. Малалла Иван Яковлевич çакна кăтартса парать: вăл ĕненнĕ тăрăх "чăвашсене шкулсем уçса тата вĕсенче ĕçлекен чăваш хушшинчен тухнă çынсем тăрăшнипе кăна çутта кăларма тата вĕрентме май килет", çавăнпа ĕнтĕ вăл Чĕмпĕрте хăй уçнă чăваш шкулне пурлăхпа та, кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен те пулăшма ыйтать.

Хусан университетне кĕнĕ хыççăнхи малтанхи кунсенчех, 1870 çулхи авăн уйăхĕн 3-5-мĕшĕнче, И.Я.Яковлев тĕне кĕнĕ тутарсен Хусанти шкулĕн пуçлăхĕпе Н.И.Ильминскипе паллашать, çĕрĕ-çĕрĕпех унпа чуна уçса калаçать. Н.И.Ильминский Атăл тăрăхĕнчи вак

халăхсене этнос тĕлĕшĕнчен выраслантарасшăн пулман, вăл, вырăс мар халăхсен чĕлхине сыхласа хăварса, вĕсене чиркӳ кĕллисем тата шкул вĕрентĕвĕ урлă "асхакăл тĕлĕшĕнчен выраслантарма" тăрăшнă. Н.И.Ильминский тăрăшнипех 1870 çулхи пуш уйăхĕн 26-мĕшĕнче Патшалăх канашĕ Раççейри вырăс мар халăхсен тăван чĕхипе пуçламăш шкулта вĕрентнĕ çĕрте уса курма ирĕк пачĕ.

Н.И.Ильминскипе калаçни тата тĕне кĕнĕ тутарсен Хусанти шкулĕн ĕçĕпе паллашни И.Я.Яковлева хăйĕн чăваш халăхне çутта кăлармалли программин таллевĕсене тăрăнраххăн палăртса хума пулăшнă. Çăван çинчен вăл 1870 çулхи раштаван 22-мĕшĕнче Хусан вĕренӳ округĕн попечителĕ П.Д.Шестакова çырса пĕлтерет. Унта И.В.Вишневский патне çырса яна тĕп шухăшсенех палăртнă, анчах чылай шухăша тăранлатнă, программăн çĕнĕ тĕллевĕсене кăтартса панă. Çав çырура ислам тĕнĕпе çывăхланнин харушлăхне тата чăвашсем пĕтсе пырасса тĕплĕн никĕсленĕ. Яковлев çакна кăтартса парать: "Магомет тĕнĕ тĕне кĕнĕ тутарсемпе чăвашсене витĕм кӳресси питĕ хăварт вайланса пырать. Пирĕн тăрăхра Магомет тĕнĕ мулласен хăй тĕллĕнлĕхлĕ тата лайăх çирĕпленнĕ тытăмĕ шутланать, Магомет тĕнне ĕненекенсем мулласене çав тери хисеплеççĕ, мулласем халăха çывăх. Ырлăх-пурлăх Магомет тĕнĕ аллинче. Вĕсем хулари суту-илĕвĕн пысăк пайне, ялсенчи хăйсем чăвашсемпе тата вырассемпе хутăш пуранакан вырансенчи вак-тĕвек суту-илĕве пĕтĕмпех хăйсен аллине çăварса илнĕ. Ас-тăн аталанăвĕ тĕлĕшĕнчен илсен, Магомет тĕнне ĕненекен тутарсем хăйсемпе юнашар пуранакан вырăс хресченĕсенчен çӳлте тăраççĕ: ку енĕпе чăвашсем нумай кайра тăни çинчен калаçмалли те çук. Магомет тĕнне тытакан арçынсемпе хĕрарăмсем пурте пекех хутла пĕлеççĕ, паллах, выраслă вĕреннипе мар..." Ака мĕншĕн ислам витĕмĕ пысăк. Наци лару-тăрăвне тĕпе хурса, И.Я.Яковлев çав тĕллевсене палăртать: чăвашсене ислам майлă çăварассине тата тутарлантарассине хирĕç тăрас тесен, пĕлӳлĕхĕпе тата ас-тăн аталанăвĕпе çыхăнман халăх тĕнĕн идеологийĕ кĕрешме пултарайманнине асра тытса, тăван чĕлхепе чиркӳре кĕлĕ туса тата шкулта вĕрентсе, чăвашсене

Христос тĕнĕ майлӓ çавӓрмалла; чӓваш ачисене валли шкулсем уçмалла, унта чӓваш учителĕсем вĕрентчĕр; чӓваш çырулӓхне туса хумалла, тĕн литературине, ытти литературӓна чӓвашла куçармалла; хӓй уçнӓ Чĕмпĕр шкулне пулӓшса, чӓваш учителĕсене хатĕрлес ĕçе йĕркелемелле. Çак программӓна вӓл малашне те лайӓхлатса, анлӓлатса пынӓ. Тĕслĕхрен, И.Я.Яковлевӓн педагогика тытӓмĕнче вĕрентĕве куллен-кунхи ĕçсене пурнӓçлама хӓнӓхтарас тĕллевпе йĕркелеме палӓртса хунине чылай енчен вырӓссен паллӓ педагогĕн, Чĕмпĕрти чӓваш шкулне пур енĕпе те пулӓшнӓ И.Н.Ульяновӓн педагогикӓри шухӓшĕсемпе ĕçĕсенчен илнĕ. И.Я.Яковлев халӓха çутта кӓлармалли ĕçĕсенче яланах "пирĕн чӓваш ĕçĕ" сӓмахсене çине-çинех асӓннӓ, вӓл чӓваш халӓхне наци тĕлĕшĕнчен çĕклентерессине пысӓка хунӓ. Иван Яковлевич хӓй çапла çырнӓ: хӓйĕн ĕçĕ-хĕлĕн малтанхи çулĕсенченех вӓл пĕтĕм чӓваш халӓхĕшĕн ырӓ ĕç тума, чӓвашсене ырлӓх кӳрес тесе, вĕсене çĕр çинчен вершук, икĕ вершук чухлĕ те пулин çӳлелле çĕклеме шутланӓ. "Манӓн тивĕçĕм питĕ явапла, хам çине илнĕ ĕçе пурнӓçлама вӓй çитеймĕ. Николай Иванович, юптармасӓр-тумасӓр çапла çеç калама пултаратӓп: чӓвашсене юрататӓп эпĕ, вĕсене чун-чĕререн ыр сунатӓп. Чӑвашсене ырлӓх кӳрессисĕр пуçне урӓх тĕллев пулман ман пурнаçӓмра...",- çапла пĕлтернĕ вӓл Н.И.Ильминский патне 1883 çулхи нарӓсӓн 27-мĕшĕнче çырнӓ çырура. Чаплӓ патриот, тӓван халӓха чун-чĕрин пĕтĕм ӓшшипе юратакан çын И.Я.Яковлев наци тĕлĕшĕнчен ансӓр шухӓшлӓ пулман, ытти халӓхсене тӳсмесĕр тӓма пултарайман. Вӓл чӓваш нацине çĕклентерессишĕн, халӓхсене çывӓхлатассишĕн тӓрӓшнӓ.

Н.И.Ильминский тунӓ Хĕвелтухӓç Раççейри вырӓс мар халӓхсене çутта кӓлармалли тытӓма /системӓна/ тайӓнса, И.Я.Яковлев чӓваш халӓхне çутта кӓлармашкӓн туса хатерленĕ тытӓм пĕтĕмĕшле илсен, çакӓн пек: пуçламӓш шкулта малтанхи икĕ çул тӓван чĕлхепе вĕрентмелле, ун хыççӓн, чӓваш чĕлхипе усӓ курса, вырӓсла вĕрентсе пымалла, пуçламӓш училищĕсенче тӓватӓ çул /вырӓссен - виçĕ çул/ вĕрентмелле, учительсене, тĕпрен илсен, чӓвашсенчен хатĕ-

рлемелле, тĕн, вĕренту, аслалăхпа çутĕç литератури, ытти йышши литература калармалла, пуçламăш тата икĕ класла училищĕсем уçмалла, туса лартмалла, вĕренекенсене кулленхи ĕçсем валли хатĕрлемелле. И.Я.Яковлев учительсемпе шкулсем урла пĕтĕм чăваш халăхĕн хуçалăхпа культура шайне ӳстерме пулартна. И.Я.Яковлев тытăмĕпе Аталпа Урал тăрăхĕнчи ытти халăхсем хушшинче те уса курна.

Иван Яковлевич халăхсен пурте пĕрешкел тата пĕр тан пулмалла тесе шутлана. Хайĕн "Букварĕнче" çапла çырна вăл: "Вырăссем, тутарсем, чăвашсем - пурте çынсем". Чăвашсем ытларах вырăссемпе хутшăнна. Экономика тата политика аталанавĕ енĕпе вырăс халăхĕ чăвашсенчен, Раççейри ытти хăш-пĕр халăхсенчен çӳлте тăна.

И.Я.Яковлевшăн халăха çутта каларас ĕçĕн тата вăл чăвашсене вĕрентмешкĕн туса хатĕрленĕ тытăмĕн пысăк пĕлтерĕшĕ çаканта: вăл чăваш халăхĕн аталану малашлăхĕн пĕртен-пĕр тĕрĕс çул-йĕрне уçса пана. Хальхи условисенче вырăссемпе тата ытти халăхсемпе тусла пулсан кăна чăваш халăхĕ наци тĕлĕшĕнчен çĕкленме, хуçалăха вăйлатса пыма тата таван чĕлхе никĕсĕ çинче культурăна аталантарма пултарать. Чĕмпĕрти А.В.Годнев педагог 1908 çултах Иван Яковлевич Яковлев пирки çапла çырна: "Эпĕ чăваш тата вырăс халăхĕсен пĕр-пĕрин хушшинчи çыхăнăвĕсен çул-йĕрĕн тата уйрăмлăхĕн питĕ кирлĕ ыйтăвне çав тери ăнăçла татса пана тесе шутлатăп. Çак икĕ халăха истори пĕр-пĕринпе уйрăлми çыхăнтарна, вĕсен культура тата экономика интересĕсем пĕрешкел, вĕсен, ыра кăмăлла кӳршĕсем пулса, пĕрлехи аталанушăн ăнлануллăн ĕçлени кирлĕ, туслăн та килĕшӳллĕн ĕçлени вĕсене пĕрлехи ӳсĕм тума май парать текен шухăш...- çав шухăша эпĕ пĕтĕмĕшпех тĕрĕс тесе кăна мар, кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен те паха тесе шутлатăп".

Чăвашсене вырăс халăхĕн культура шайне çити çĕклесси, таван халăха вырăс культурипе, вырăс халăхĕпе çывăхлатасси Яковлевăн чи хакла тĕллевĕ пулна. И.Я.Яковлев татăкланах çапла калана: "Вак халăхсем вырăс халăхĕн аслă çемйине кĕме тивĕçлĕ, анчах усрав ача пулса мар, пĕр тан ачасем пулса

çирĕппĕн кĕме тивĕçлĕ... Чи малтан вăйпа пусармалли кирек-мĕнле шухăша та, нумай хутчен чи япăх ĕçсем патне илсе çитернĕ шухăша, парахăçламалла". 1917 çулта Яковлев тĕплĕн шухăшласа çапла пĕлтернĕ: "Хăш-пĕр таран правительствăра та, уйрăмах ансăр национализм представителĕсем ертсе пыракан тĕн çыннисемпе земство çыннисем хушшинче, вак халăхсене вăйпа выраслатма тарăшнине нихçан та ырламан эпĕ, унтан та ытларах хам нихçан та çаван пек майсемпе уса курман".

Ислама, тутарлантарнине тата вăйпах выраслантарнине, урăхла каласан, чăвашсене этнос тĕлĕшĕнчен вырассемпе пĕрлештерессине хирĕç кĕрешес ĕçре Яковлев тата унăн вĕренекенĕсем "ăс-хакăл тĕлĕшĕнчен вырасланмалли", урăхла каласан, чăвашсем Христос тĕнне алла илмелли шухăша тĕп вырăна хунă. "Эпир ăс-хакăл тĕлĕшĕнчен вырассем пулма: вырасла шухăшлама тата туйма тивĕçлĕ. Çаванпа пирĕн вырăс культурин шайне çĕкленмелле. Чăвашсен культурине хăйсем анланакан таван чĕлхе пулăшнипе çеç çĕклеме май килет",- çырнă Иван Яковлевич. Хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕн пуçламăшĕнчех Яковлев çапла çирĕплетнĕ: вырăс мар халăхсене "вырассен лайăххи мĕн пур, çавсене пурне те ханăхтарни, хăйсен историпе наци тĕлĕшĕнчен лайăххине пурне те упраса хăварни кирлĕ".

И.Я.Яковлев пуçарнă ĕçрен чăваш халăхĕн наци çĕкленĕвĕн юхăмĕ, вăл вырассемпе тата Раççейри ытти халăхсемпе пĕр тан пулассишĕн, çывăхланассишĕн пыракан юхăм, хускалнă. Чăваш тата вырăс интеллигенцийĕн, хресченсен çĕршер, каярахпа пиншер представителĕ хутшăннă çав юхăма. Ăна И.Я.Яковлев ертсе пынă. Наци çĕкленĕвĕшĕн, таван чĕлхешĕн тата наци культуришĕн, ытти халăхсемпе пĕр тан пулассишĕн, вĕсемпе çывăхланассишĕн пыракан юхăм наци ирĕклĕхĕн юхăмĕн прогрессивлă форми пулса тарать.

И.Я.Яковлев тата унăн йышлă вĕренекенĕсем чăвашсен наци çĕкленĕвĕн, вĕсен ытти халăхсемпе çывăхланассин тĕллевĕсене Раççейĕн ун чухнехи социаллă пурнăçпа экономика, политика тата патшалăх тытăмĕн условийĕсенче культурăпа çутĕç хатĕрĕсемпе тата меслечĕсемпе ĕçе кĕртсе пынă.

И.Я.Яковлеван халăха çутта кăларас ĕçĕн результачĕсем мĕнле-ха? Мĕнлерех унăн историллĕ пĕлтерĕшлĕ?

И.Я.Яковлевпа унăн вĕренекенĕсем чăваш нацине çĕклес, ытти халăхсемпе çывăхланас тĕлĕшпе тăвакан ĕçсенче тăван чĕлхепе усă курса шкулта вĕрентес ĕçе тĕп вырăна хунă. Чăваш хресченĕсем хушшинче çут ĕçне вайлатасси, çапла майпа вĕсен хуçалăхпа культура шайне ӳстересси çине тимлĕ пăхнă.

Вырас графикине тĕпе хурса иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулсен пуçламашĕнче чăваш алфавитне туса хатĕрлени тата чăвашсен çĕнĕ çырулăхне - çутĕçе, литературăна тата халăх культурине аталантармалли питĕ кирлĕ майсем туса пынă çырулăха пуçарса яни И.Я.Яковлев чăваш нацине çĕклес, ăна ытти халăхсемпе çывăхлатас тĕлĕшпе пурнăçлана тава тивĕçлĕ ĕç шутланать.

1868 çулта, гимназире вĕреннĕ чухне, И.Я.Яковлев Чĕмпĕрти чăваш шкулне уçнă, Чĕмпĕр кĕпĕрнинче халăх училищисен инспекторĕ И.Н.Ульянов тарăшнипе 1871 çулта ăна патшалăх тытса тăмалла тунă. Хусан университетĕнчен вĕренсе тухсан, 1875 çулта, И.Я.Яковлева Хусан вĕренӳ округĕнчи чăваш шкулĕсен инспекторĕ пулма уйăрса лартаççĕ, вăл Чĕмпĕрти чăваш шкулне, учительсем хатĕрлекен шкул пулса тăнаскере, ертсе пыма та пăрахмасть. Çав шкул çумĕнче 1878 çулта хĕрарăмсен уйрăмне уçнă, никĕсре тăракан, санавлă пуçламăш шкул ĕçленĕ. И.Я.Яковлев шкул валли лайăх çуртсем лартнă. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ, интернат-шкул шутланса, учительсене педагогикăн малта пыракан тытăмне тĕпе хурса хатĕрленĕ, ĕçе ятарлă тата эстетика тĕлĕшĕнчи вĕрентӳпе тачă çыхăнтарнă. Вĕренекенсем интернат-шкулта чăваш ялĕнчи йăла-йĕркене тытса вĕреннĕ тата пуранна, ял çыннисем пек тумланса çӳренĕ, хайсене пĕтĕмĕшпех хайсем тытса тăнă. Чăвашсен пуçламăш шкулĕсенче тата хресченсем хушшинче ĕçлеме, чăваш нацине çĕклентерес тĕлĕшпе ĕçлеме 1000 ытла учителе вĕрентсе кăларнă çав шкул. Чĕмпĕр шкулне пултарулла, ытларах чухăн çемьесенчи ачасене, вĕренме илнĕ. /Яковлев ялти пуянсен ачисем шкул пĕтерсен учительте ĕçлемĕç, предприниматель, суту-илӳ ĕçĕпе çыхăнĕç тесе шикленнĕ/.

Шкултан вĕренсе тухакан учительсем камăл-сипет енчен таса, педагогика ĕçне лайăх пĕлекен, йĕркеллĕ, тӳрĕ камăлла, сапăр, таван халăха çутта калармалли аслă ĕçе чунтан паранна çынсем пулнă. Хай вĕрентсе каларнисенчен пĕр пайне Иван Яковлевич тĕн семинарийĕсене кĕме пулăшнă, унтан вĕренсе тухсан, вĕсем аслă шкулсене кĕме, е чăваш прихучĕсĕнче пуп пулма пултарĕç тесе шутланă. Пуçламăш училищĕсене пупсем ертсе пынă, çавăнпа вĕренĕве мĕнле йĕркелесе пырасси вĕсенчен килнĕ. Иван Яковлевич чăваш прихучĕсен пупĕсене уйăрса лартас ĕçе хутшăнни час-часах епархи епископĕсемпе тата уессен тĕн правленийĕсемпе, вырăс тĕн çыннисемпе хирĕçесси патне илсе çитернĕ. Чĕмпĕрти чăваш шкулне пĕтернисем хушшинче гимнази курсĕшĕн экстерн йĕркипе экзамен тытса аслă шкула вĕренме кĕрекенсем те пулнă.

И.Я.Яковлев, учительсен уессенчи çуллахи курсĕсене уçса, вĕсен ăсталăхне ӳстерсе пымалли лайăх йĕрке туса хунă. 1919 çулхи чӳк уйăхĕн 12-мĕшĕнче В.И.Ленин патне яна çырура Яковлев çакна палăртать: "Шкул программи, пурнăçпа йăла-йĕркин никĕсĕ çинче вырăс тата чăваш халăхĕсене çывăхлатма пур майпа та пулăшасси эпĕ туса хуракан шкулăн пĕр тĕллевĕ пулнă". Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн вĕрентӳпе воспитани ĕçĕ пĕтĕмĕшпех чăвашсене вырăссемпе, ытти халăхсемпе çывăхлатас çул-йĕрпе пулса пынă, унта чăвашсем кăна мар, вырăс, ирçе-мăкшă, тутар ачисем те вĕреннĕ. Яковлев тĕрĕслесе тăракан пуçламăш тата икĕ класлă шкулсем те çав тĕллеве тытнă. Шкулсенче вĕренекенсем вырăс чĕлхине лайăх алла илччĕр тесе нумай тăрăшнă. Вырăс чĕлхин пĕлтерĕшне ăнланса, Яковлев 1904 çулта çапла çырнă: "Халĕ, ĕçлекен çынсем ытларах та ытларах кирлĕ чухне, вăк халăхсемшĕн вырăс чĕлхи çутă тата сывлăш пекех питĕ кирлĕ пулса тăрать". Вырăс чĕлхине шкулта таван чĕлхепе çырма-вулама ханăхнă хыççăн вĕренме пуçланă. Чĕмпĕр шкулĕнчен вĕренсе тухакансем, таван чĕлхене çеç мар, вырăс чĕлхипе литературине çав тери лайăх пĕлсе, хăйсем тĕллĕн ĕçлеме тытăннă, чăваш ялĕсенчи пуçламăш шкулсенче вы-

расла каласма вĕрентесси питех те анăçлан пурнăçланса пынă.

Хусан вĕренӳ округĕнчи чăваш шкулĕсен инспекторĕ пулса, Яковлев округа кĕрекен Хусан, Чĕмпĕр, Самар тата Саратов кĕпĕрнисенче министерствана паханса таракан училищăсемпе пĕрлех земствăсен, чиркӳ прихучĕсен шкулĕсемпе училищисен ĕçне нумай вăй хунă. Вуншар та çĕршер ялта чăваш хресченĕсемпе тĕл пулса И.Я.Яковлев вĕсене училищĕсем уçни кирлине анлантара-анлантара панă. Çак тĕллевпех ертсе пыракан органсемпе, земство управисемпе, тĕн управленийĕсемпе, учительсемпе тата хресченсемпе çыру урлă тачă çыхăннă вăл. Çапла вара И.Я.Яковлев тата унăн вĕренекенĕсем хутшăннипе Атăл тăрăхĕнче тата Урал енче 400 ытла чăваш училищи уçăлнă (1911 çулта Раççейре 926 чăваш шкулĕ пулнă). Çĕнĕрен уçакан училищĕсенчен нумайăшне И.Я.Яковлев çурт-йĕр лартма пулăшнă, пурлăх тата çĕр лаптăкĕсем уйăрас тĕлĕшпе хресченсен общинисемпе каласса татăлнă, укçа-тенкĕ, строительство материалĕсем, çурт-йĕре туса лартакансене шыраса тупас ыйтусене татса панă.

И.Я.Яковлев шучĕпе, "чăвашсене вырăс халăхĕ йышăннă Христос тĕнĕпе çывăхлатни" те вĕсене вырăссемпе тачăрах хутшăнмашкăн, ислам тĕнне паханса, этнос пĕтсе ларассинчен сыхланмашкăн пулăшма тивĕçлĕ. Ку енĕпе сахал мар ĕçленĕ вăл. Иван Яковлевич хутшăннипе тата тăрăшнипе Евангелие /Çĕнĕ самаха/, Тура саккунне, псалтире, ытти чылай тĕн кĕнекине чăвашла куçарнă. Кивĕ самаха куçарас енĕпе ĕçлеме тытăннă, унăн уйрăм пайĕсенс пичетлесе каларнă.

Хăйне пулăшакансемпе пĕрле И.Я.Яковлев вĕренӳ кĕнекисем каларас, илемлĕ литература, истори, медицина, ял хуçалăх, çутçанталăк, меслетлĕх, музыка литературине чăвашла куçарса каларас тĕлĕшпе çав тери пысăк ĕç пурнăçланă. Пурĕ вăл 100 ытла кĕнекепе брошюра каларнă. Яковлев кĕнекисем халăхăн пĕлӳ вăйне пысăклатма, хуçалăхпа культура тĕлĕшĕнчен çитĕнӳсем тума, тĕнчекурăмпа наци анланулăхне аталантарма, халăхăн санитарипе гигиена лару-тăрăвне лайăхлатма, чăвашсене вырăссемпе тата ытти ха-

лăхсемпе çывăхлатма пулăшнă. Хăйĕн кĕнекисенче, тухса каланисенче, педагогика ĕçĕ-хĕлĕсенче И.Я.Яковлев ура пурнăç йĕркине сарма тăрашнă, табак туртнин сиенне кăтартса панă.

И.Я.Яковлев каларнă вĕренӳ кĕнекисенчен, хăйне евĕрлĕ калавсенчен чăвашсен илемлĕ литератури çуралнă. Чĕмпĕр шкулĕнче вĕреннĕ И.И.Иванов, И.Н.Юркин (ăна начар вĕреннĕшĕн шкултан каларса яна, çаванпа вал пурнăçĕ тăршшĕпех И.Я.Яковлева хăйĕн ташманĕ тесе шутлана), Г.И.Комиссаров, А.В.Княгинина, Т.С.Семенов-Тăйăр çыравçăсем пулса тăнă. Чăваш поэзийĕн чапла классикĕн К.И.Ивановăн, палла поэтăн Н.В.Шупуççыннин таланчĕ Чĕмпĕр шкулĕнче аталанна. Пулас çыравçăсем Трубина Мархви, С.М.Лашман, Н.К.Патман тата ыттисем унтах вĕреннĕ. И.Я.Яковлев "Чăваш юмах-халапĕ" ятпа чăваш поэзийĕн хăйне евĕрлĕ хайлавĕсене - М.Ф.Федоровăн "Арсури" балладине, К.В.Ивановăн "Нарспи" поэмине, Н.В.Шупуççыннин "Янтрак янтравĕ" поэмипе ытти хайлавĕсене пичетлесе каларнă. Чĕмпĕр шкулĕнче чăвашсен малтанхи композиторĕсем Ф.П.Павлов, С.М.Максимов, Г.Г.Лисков, музыка тĕпчевçи В.П.Пазухин, чăваш театрне йĕркеленĕ И.С.Максимов-Кошкинский драматург, математиксемпе педагогсем Н.М.Охотников тата П.М.Миронов, историк тата этнограф М.П.Петров, чĕлхе тĕпчевçисем Т.М.Матвеев, Ф.Т.Тимофеев тата ыттисем ӳссе çитĕннĕ.

И.Я.Яковлевпа унăн вĕренекенĕсем чăваш хресченĕсем хушшинче ал ăсти ĕçĕсене, ял хуçалăхĕн паха культурине сарасси пысăк пĕлтерĕшне ăнланнă. Ку тĕллеве И.Я.Яковлев нимрен малтан учительсем тата ялти шкулсем урлă пурнăçласа пынă. Чăннипе илсен, Чĕмпĕр шкулĕн вĕренӳ планĕнче ял хуçалăхĕн вăтам шкулĕн курсĕ пулнă, унта çутçанталăка тата ял хуçалăх ăслăхне вĕрентнĕ. XIX ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсенчен тытăнсăх пулас учительсем шкул мастерскойĕнче атăç, тимĕрçĕ, столяр тата токарь ăсталăхне алла илнĕ, 90-мĕш çулсенчен тытăнса вара шкул ферминче уй-хир ĕçĕн, выльăх-чĕрлĕх, пахча çимĕç, улма-çырла тата хурт-хăмăр ĕрчетес ĕçĕн малта пыракан, чи лайăх меслечĕсене ханăхнă. Шкултан вĕренсе тухнисем ялти чылай училищĕре ал ăсти мастер-

халăха вĕрентес ĕç министрне анлантарса паниче çапла çырнă вăл: "Пирĕн вак халăхсем хăйсен йĕри-тавра пуранакан вырăс халăхĕнчен нумай кая юлнă, ăс-хакалпа пурлăх тĕлĕшĕнчен чылай чуханрах, çавăнпа вĕсем енчен унашкал нимĕнле шухăшлани те пулма пултараймасть... Вĕсем - аслă вырăс халăхĕн пĕчĕк çулташĕсем кăна, унăн историри çулĕпе паханса пĕрле утаççĕ, унăн телейĕ - вĕсен телейĕ, унăн хурлăхĕ - вĕсен хурлăхĕ, унăн пуласлăхĕ - вĕсен пуласлăхĕ". Иван Яковлевич çакăн пек сăмахсемпе те уса курнă: "Пирĕн тухăçри вак халăхсене политика тĕлĕшĕнчен нимĕнле хăйтĕллĕнлĕх те пурмен, вĕсен нацин нимĕнле хăйне евĕр аталанăвне те шырама кирлĕ мар". "Вырăс историйĕ Раççейри мĕн пур халăхсем валли, çав шутра истори енĕпе уйрăм пулнисем - поляксем, Остзей крайĕнчи нимĕçсем тата ыттисем валли те вырăс халăхĕпе пĕтĕмпех пĕрлешсе каяс ыйтăва каялла тавранмалла мар кăларса таратнă. Вырăс халăхĕ вал - пысăк вăй, унăн историри тĕллевĕ умĕнче Раççей анлашĕнче пуранакансем пурте пуç тайма тивĕçлĕ". Çак сăмахсене те вăлах калана: "Наци чăрсăрлăхне аталантарса, чăвашсем, çармăссем, вотяксем тата ыттисем валли автономи туса хурасси çинчен ĕмĕтленни вăл кирлĕ мар ĕçшĕн вăй-хала тата тимлĕхе пĕтерни, вак халăхсен кунĕ-çулĕпе выляни пулĕччĕ". Хăйĕн кулленхи ĕçĕ-хĕлĕнче И.Я.Яковлев чăвашсем этнос тĕлĕшĕнчен вырăсланассине яланах хирĕç тăнă пулин те, вăл час-часах тахçан-тахçан пуласлăхра чăвашсем вырăссемпе пĕрлешсе каясси çинчен çырнă, анчах çаван сăлтавĕсене уçса паман. Унран вĕреннĕ, унăн ĕçне малалла туса пынă М.П.Петров, хăй 1916 çулта Н.И.Ильминский çинчен çырнă кĕнекере, пĕрлешсе каймалли сăлтавсене çапла анлантарса панă. Христос тĕнĕн шухăшĕсем таван чĕлхепе сарăлса пынăçемĕн "вак халăхсем хăйсем харпăр хăйĕн вăйĕпе туса хунине пурне те парахăçлаççĕ: хăйсем çирĕплетнĕ йăла-йĕркене, хăйсем ханăхнă камăл-сипете, пурнăçра яланах тĕп вырăна хунă хăйсен принципĕсене тата тĕнчене хăйсем мĕнле анланнине манаççĕ. Çакăн вырăнне вĕсем вырăс халăхĕн Христос тĕнĕпе çыхăннă шухăшĕсене, унăн наци йăли-йĕркипе уйрăмлăхĕсене ханăхса пыраççĕ. Çапла вара

вак халăхсен йăхĕсем хăйсем йышĕпе малти ăс-хакалпа камăл-сипет тĕлĕшĕнчен, ĕненӳ тĕлĕшĕнчен вырăс халăхĕпе çывăхланмалли пĕрремĕш, чи кирлĕ утăм таваççĕ, кайран, çитес вăхăтра, гражданла тата культурăри пĕрлехи пурнăçшăн аслă держава халăхĕпе пĕтĕмĕшпех пĕрлешеççĕ". Ахăртнех, Иван Яковлевич та Христос тĕнĕ витĕм кӳнипе чăвашсен этнос енĕпе вырăссемпе пĕрлешсе кайма май килессине çаван пек анланнă пулĕ.

Чăваш халăхне çутта кăлараканĕ хăйĕн кулленхи ĕçĕсенче чăвашсене выраслатас енĕпе нимĕн те туман пулин те, чăваш наци юхăмĕн представителĕсем, ахăртнех, вăл калана сăмахсене тĕпе хурса, И.Я.Яковлева, çаван пекех Н.И.Ильминские те, чăвашсене выраслатма тăрăшакансем тесе сăмах сарнă.

Иван Яковлевичăн революцичченхи çур ĕмĕр тапхарĕнче хăйне чăваш халăхĕн ертӳçи теме сăлтав пулнă. 1921 çулхи çурла уйăхĕнче вăл вырасла тата чăвашла вариантсемпе чăваш халăхне халалланине йĕркеленĕ.

"...Манăн чăваш тусăмсемпе таванăмсем, - çырать халăха çутта кăлараканĕ. - Сирĕншĕн манăн чунăм ыратать, çак сехетре сире манăн шухăшăма, хаманăн юлашки Халалла чи малтан сире калас тетĕп". Вăл турра ĕненнине упрама сĕнсе, çакна кăтартса парать: "Ырăшăн та, усалшăн та таваракан пуррине, чи аслă чăнлăх пуррине, турă сучĕ, хаяр та тĕрĕс суд пуррине ĕненĕр". Иккĕмĕш пысăк статья вырăс халăхĕпе Раççей çинчен: "Раççейе ĕненĕр, юратăр ăна, вăл вара сирĕншĕн анне выранĕнче пулĕ". Виççĕмĕш статьяра Иван Яковлевич вĕренсе пĕлӳ илме пӳрнĕ чăвашсене калать, вĕсене таван халăха пĕлӳ илмешкĕн пулăшма хушать. "Астăвăр, таван чĕлхемĕртен ютшăнмасан кăна эсир халăх чĕрине çаварма пултаратăр". Вĕсенчен Кивĕ сăмаха куçарас ĕçе вĕçне çитерме, Раççейĕн тухăçри халăхĕсене Христос тĕнĕ майла çутта кăларассишĕн ĕçлеме хушать. Таваттамĕш статьяра халăхпа патшалăх тĕрекĕ шутланакан çемьене упрама, пиллĕкмĕшĕнче - пĕр-пĕрин хушшинче туслă пулма, "Çăлавçă" аслă халалне: хăвăра курăмасăр тăракансене юратăр, ӳкĕте кĕнипе çемçе камăл-

ла пулнин пурнăçри вăйне çирĕппĕн ĕненĕр тенине манмасăр пуранма сунать. Ултăмĕш статья мирлĕ ĕç вăйне ĕненме тата ăна юратма, кукăр-макăр та тавра çулсенчен асăрханма хушать. Çиччĕмĕш статьяра вĕрентекен пĕлсе е пĕлмесĕрех курентернĕшĕн хăйне каçарма ыйтать, хăйĕн ĕçĕсенче пулăшу панисене пурне те тав тăвать. Чăвашла вариантăн хушма статйинче И.Я.Яковлев чăвашсем хушшинче тĕл пулакан тăртĕн йăлана: пĕр халăхран тухнă çынна малалла кайма, ăссе пыма чăмантармалли, ура хумалли ирсĕр йăла пурри çинчен асăрхаттарать. Çав йăларан хăтăлма хушать вăл.

Халал çыравĕнчен çака палла: таван наци, ытти халăхсен интересĕсене хĕсмесĕр, хайне-хай лайăхлатса пымашкăн тăрашма, тĕрлĕ енлĕн меллĕ аталанна çынсен, йĕркеллĕ, ĕçчен, пысăк камăл-сипетлĕ, мĕн пур нацисене туслăн юратса пуранакан, хăйĕн ятне хисеплекен наци пулма тивĕç. Халалри нумай шухăшсем паян кун та питĕ выранла.

Хаман статьяри шухăшсене çапла пĕтĕмлетме пулать, И.Я.Яковлев халăха çутта кăларас енĕпе ĕçленин историлле пĕлтерĕшĕ çаканта пулать: 1/ чăвашсене çутта кăлармалли тытăма /системăна/ туса хатĕрлесе, çав тытăма пурнăçласа, шкулсенчи вĕрентӳ ĕçне пысăк пахалăхпа туса пынă, вĕренекенсене пурнăçра кирлĕ, тĕрлĕ енлĕ çирĕп пĕлӳ парса пынă, чăваш шкулĕсенче ĕçлеме чăвашран пин ытла вĕрентекен хатĕрленĕ; 2/ чăвашсене ислам тĕнне йышăнтарасси, вĕсем тутарланса пырасси, çĕнĕ авалхи халăх пĕтсе ларасси патне илсе çитересси чăранна; кунпа пĕрлех чăвашсене этнос тĕлĕшĕнчен выраслатмалли аслă держава политики те ăнăçман; 3/ çур ĕмĕр хушшинче чăваш халăхĕн наци çĕкленĕвĕ чылай çуллĕ шая çитнĕ, вăл вĕрентекен ĕмĕтленнĕ пек, вершук е икĕ вершук чухлĕ кăна мар, пĕр сыпăк таранах çĕкленнĕ: чăваш çырулăхĕ йĕркеленнĕ, халăх хутла пĕлесси 12 процента яхăн çитнĕ, наци интеллигенцийĕ пулса тăнă, чăвашсен хуçалăх ĕçĕпе ханăхавĕ лайăхланса пынă, вĕсен йăлари культури каштах лайăхланнă, чăваш чĕлхиллĕ литературăн тĕрлĕ енĕсен, çав шутра илемлĕ литература, кĕнеке калăрас ĕç, профессиллĕ наци искусствин - музыка, театр,

ӳнер искусствин пуçламашӗ çуралнă, халăхăн наци ăнланулăхӗ çирĕпленнӗ; 4/ чăваш халăхӗ ăс-хакăл, культура, экономика енĕпе вырăссемпе, Атăл тăрăхĕнчи ытти халăхсемпе çывăхланас, чăвашсем Христос тĕнĕн вĕрентĕвесене тата вырăс культурине, вырăс чĕлхине алла илес тĕлĕшпе палăнă улшăнусем пулса иртнĕ, чăваш халăхĕн обществăпа политикăри хастарлăхӗ ӳснĕ.

Чăваш халăхӗ хăйĕн пурнăçĕнче хăйне çутта кăлараканĕн ятне асра тытать. Чăваш патшалăх педагогика институтне, Чăваш Енĕн Шĕнерпуçĕнчи тата Элĕкри вăтам шкулĕсене унăн ятне панă. Шупашкарта, Чăваш Республикин наци бибилиотекин çурчĕ умне И.Я.Яковлевăн бронза палăкне лартнă, ун ячĕллĕ сарлака проспект патшалăхăн Шупашкар-Ульяновск çулĕ çине тухать. Ульяновскра Чĕмпĕрти чăваш учителĕсен шкулĕн çурт-йĕрĕн комплексне юсаса çĕнетеççĕ. Çĕнелекен комплекс та И.Я.Яковлев палăкĕ пулса тăрĕ. Унта Ульяновск тата Самар облаçĕнчи пуçламăш шкулсем валли учительсем хатĕрлекен педучилищĕне çĕнĕрен туса хуни аван пулĕччĕ. Нумай пулмасть Ульяновск облаçĕпе Пушкартстанра И.Я.Яковлев обществисене йĕркеленĕ.

("Хыпар". 1998, апрелĕн 25)

“ ЧĂВАШ ЯТНЕ АН ÇЁРТ”

Чăвашсен иртнĕ пурнăç шăпи тата наци аталанăвĕн паянхи çивĕч ыйтăвĕсем

Çак статьян малтанхи вариантне эпĕ 1992 çулта Чăваш наци конгресĕн I Асламăшĕ Пухăвĕ умĕн вырăсла çырнăччĕ те “Советская Чувашия” хаçата тăратнăччĕ. Анчах хаçат редакцийĕ ăна кĕскетсе, улăштарса, эпĕ çырман сăмахсем хушса “Истощает нацию нигилизм” ятпа 1992 çулхи юпа уйăхĕн 8-мĕшĕнче пичетлесе кăларнăччĕ. Çавăнпа статьян пĕтĕм вырăсла текстне тин анчах çуралнă “Чăвашъен” хаçата патăм та, çав хаçатăн 1992 çулхи 46,48,49-мĕш номерĕсенче “История и национальные проблемы чувашского народа” ятпа пичетленсе тухрĕ. Каярах ăна хаçат-журналта ик-виç хут та пичетлерĕç. 1996 çулхи нарăс уйăхĕн 23-мĕшĕнче ку статьян пăртак кĕскетнĕ вариантне “Хыпар” хаçатра пичетлесе кăларчĕç. Статьян витĕмлĕхĕ питех палăрмарĕ. Чăваш патшалăх университечĕ çеç ялти чăваш, вырăс, тутар, мăкăша ачисене вĕренме икĕ хут нумайрах илме пуçларĕ, районсенче филиалсем, вĕренту пункчĕсем уçса пĕр çивĕч ыйтăва йăвашлатма май пачĕ. Тулай чăвашсем хушшинче те улшăнусем сахал пулчĕç куранать. Çакна шута илсе тата ЧНК вице-президенчĕ Виталий Петрович Станъял ыйтнине тивĕçтерсе, статьяна чылай çĕнетрĕм те ЧНК IV Асламăшĕ умĕн “Ялав” журнала сĕнтĕм.

Чăваш халăхĕн паянхи менталитечĕ, характерĕ, психологийĕ унăн темиçе çĕр çулсем хушши тăсăлнă кунçулĕнче, тĕрлĕрен тапхăрти условийĕсенче пĕтĕçленсе пынă. Мĕнле пулнă-ха пирĕн тăван халăхăн кунçулĕ?

Пирĕн халăхăн -р-л сасăллă тĕрĕк чĕлхипе калаçнă тĕп аслашшĕсем - Алтайăн хĕвеланăç тăвайккисенче куçса çуренĕ огур йăхĕсем Хунсен пĕрлешĕвĕнчен I ĕмĕрте уйăрăлнă та иран чĕлхиллĕ сак, массагет, савромат несĕлĕсем пуранна Ватам Ази тата хальхи Казахстан территорийĕпе ерипен Хĕвеланăç еннелле куçса пынă. Огурсем Çурçĕр Кавказа II-III ĕмĕрсенче çитнĕ. Кунта вĕсем ытларах пăлхар тата

сăвар ятсемпе VII-VIII ĕмĕрчченех пуранна. Иранла калаçакан сарматсемпе тата алансемпе кӳршĕллĕ пуранса пăлхарсем, сăварсем вĕсенчен хуçалахпа культурăра чылай усалла меслетсем, пĕлӳсем йышăнна, куçса çӳрессине парахма тытăнна, пĕр выранта пуранас йĕркене куçса пынă. VII ĕмĕрте пăлхарсем Асла Пăлхар патшалăхне пĕрлешнĕ, сăварсен VII-VIII ĕмĕрсенче хăйсен кнеçлĕхĕ пулнă /VIII ĕмĕрте вал Хазар каганатĕнче шутланса тăнă/.

VII ĕмĕр вĕçĕнче пăлхарсен пĕр пайĕ Дунай шывĕ çине, тепĕр пайĕ /нухрат е кĕмĕл пăлхарсем/ - Камăпа Атăл çине куçса кайнă, хура пăлхарсем Çурçĕр Кавказра юлнă.

Атăлçи Пăлхар IX ĕмĕр вĕçĕнчен пуçласа 1236 çулччен вăйла аталанна патшалăх пулнă. Унта ял хуçалахĕн, тĕрлĕрен аста ĕçсен, суту-илӳпе культурăн аталанавĕ çӳлти шайра тăнă, хуласем чылай пулнă. Пăлхарсемпе сăварсем хальхи Тутарстанăн Кама леш енчи тата кантăр-хĕвеланаçĕнчи пайĕсенче, Чăваш Енĕн кантăр-тухăç пайĕнче, Ульяновск, Самар облаçĕсенче тата Пенза облаçĕн хĕвелтухăç пайĕнче пуранна. XII ĕмĕрте пĕрлĕхлĕ пăлхар /авалхи чăваш/ халăхĕ чăмартанна.

Атăлçи Пăлхарта чăваш чĕлхи патшалăх чĕлхи шутланна, аслалăхра, вĕренӳре, литературăра, сутуилӳре тата халăхсен хутшăнавĕнче çав чĕлхепе уса курнă. Пăлхар-чăвашсем Атăлçи Пăлхара кĕнĕ çармăс, удмурт, мордва тата пушкăрт йăхĕсемпе тĕрлĕ енлĕ çыхăну тытнă. Çак вăхăтра чăваш чĕлхипе культури вĕсене пысăк витĕм кӳнĕ. Ун чухне çармăс чĕлхине 1500 чăваш сăмахĕ кĕнĕ, удмурт чĕлхине - 500, пермяксен /коми/ чĕлхине - 300, мордва чĕлхине - 100 ытла, хĕвел- тухăç славянсен чĕлхине - 300 ытла чăваш сăмахĕ кĕрсе юлнă. Пăлхар чăвашсемпе юнашар, Кама леш енче венгрсем пуранна. IX ĕмĕр вĕçĕнче вĕсенчен нумайăшĕ Дунай шывĕ тăрăхне куçса кайнă, тепĕр пайĕ XIII ĕмĕрте те чăвашсемпе юнашарах пуранна. Дунай тăрăхне куçнă венгрсен чĕлхинче те 600 чăваш сăмахĕ упранса юлнă. Пăлхар-чăвашсем çармăссемпе, мордвасемпе, удмуртсемпе, венгрсемпе, пермяксемпе, пушкăртсемпе нихăçан та вăрçман, вĕсене хисепленĕ, пулăшнă. Документсенче

пăлхарсем парттассемпе хирĕçни çинчен, вырăс кнеçĕсем хăйсен çарĕсемпе килсе тапăнсан вĕсемпе çапăçни çинчен çеç пĕлтереççĕ. Пăлхар-чăвашсем хăйсене те хисепленĕ, пĕрне-пĕри юратна, хăйсен патшалăхĕпе, хуçалăхĕпе, культурипе, чăпла çыннисемпе мухтанна.

Монгол-тутарсен çарĕсем Аталçи Пăлхара 1223, 1229, 1232 çулсенчех килсе тапанна. Анчах вĕсене пăлхарсен вăйлă çарĕ - çĕмĕрсе тăкса хăваласа яна. 1236 çулта Бату хан хăйĕн 200 пинлĕ çарĕпе Аталçи Пăлхара тапанна. Пăлхарсем ăна хирĕç пĕр çул хушши кĕрешнĕ. Монгол-тутар çарĕ Аталçи Пăлхаран мĕн пур хулисене, ялĕсенчен чылайăшне аркатса тăкнă, пăлхар-чăваш халăхĕн пысăк пайне вĕлерсе пĕтернĕ. Уншăн харушă, массăллă геноцид тапхарĕ пуçланнă. Аталçи Пăлхар çĕрне 1243 çулта Ылтăн Уртана кĕртнĕ. Пăлхар çĕрĕ Ылтăн Уртари куçса çурекен монгол-тутар йăхĕсене тарантарса пуранна. XIII ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче - XIV ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринче пăлхар чăваш хулисемпе ялĕсем ерипен ура çине тăнă. Анчах 1360 çулсенчен пуçласа Ылтăн Урта сапаланма тытăннă та Пăлхар çĕрĕшĕн те ахăр самана тапраннă. Ылтăн Урта столицинче - Сарай-Берке хулинче хансене кашни çулах улăштарнă. Куçса çурекен тутар ордисен эмирĕсем те, хансем те Пăлхар çĕрне вăрă-хурахла тапăнма, халăх пурлăхне çаратса кайма, халăха вĕлерсе пĕтерме тытăнна. 1391 тата 1395 çулсенче Тамерлан 150 пинлĕ çарĕпе килсе Пăлхар çĕрĕнчи нумай хуласемпе ялсене çĕмĕрсе тăкса, халăха пĕтерсе çаратса кайнă. Вырăс кнеçĕсен çарĕсем те, Аслă Новгород ушкуйникĕсем /вăрă-хурахсем/ те Пăлхар çĕрне килсе çаратнă, çĕмĕрнĕ. Уйрăмах 1391 çулта нухай кнеçĕ Едигей пуçарнипе Ылтăн Уртаран уйрăлса тухнă Мангыт Юрчĕ /каярах Нухай Урти/ Пăлхар çĕрне çаратма, хуласемпе ялсене çунтарса яма, пăлхар-чăвашсене вĕлерсе пĕтерме тытăннă. 1430 çулсем тĕлне Пăлхар çĕрĕнчи хуласемпе ялсене пурне те аркатса тăкнă, нимĕн те хăварман. Археологсем палăртнă тăрăх, Пенза, Самар, Ульяновск облаçĕсен территорийĕсенче, Тутарстанăн Кама леш енчи тата кăнтăр-хĕвелăнçĕнчи пайĕсенче, Чăваш Енĕн кăнтăр-хĕвел

тухаç районĕсенче çаван хыççан 32 хулапа икĕ пине яхан палхар-чаваш ялĕсем кĕлпе камрак айне пулна. Çак пĕтĕм территори хуласар, ялсар тискер уйхир пулса тана. Унта нухай йахĕсем кудса çуресе пуранна.

Чĕрĕ юлна палхар-чавашсем Хусан çывахне /Хусан хулине 1370 çулта палхар-чаваш кнеçĕ Хасан лартна пулна/ тата Хусантан хĕвелтухаçнелле çармас çĕрĕсене /унта Чаваш тарахĕ - даруги пулса кайна/, хальхи Чаваш Енĕн çармассем пуранакан ватаçĕр тата çурçĕр районĕсене тарна. Çав территорисенче палхар-чавашсен 400 яхан ял//каярахпа вĕсем тĕп ялсем шутланна/ пулса кайна. XIII ĕмĕрти - XV ĕмĕр пуçламашĕнчи тапхарта монгол-тутар геноцичĕ алхаснине пула палхар-чавашсен пиллĕкмĕш пайĕ кана сыхланса юлма пултарна. Вĕсем хаш-пĕр çĕрти çармассемпе хуташса чаваш халахĕ пулса кайна. Çавнашкал геноцид чатса ирттермен пулсан, халĕ чавашсен йышĕ 10 миллион çынна çитмеллеччĕ. Каярахпа, XV-XVII ĕмĕрсенче, Хусан çывахĕнче тата унан хĕвелтухаç тарахĕнче пуранакан чавашсенчен нумай-ашĕ тутара тухна, ыттисем XVI-XVII ĕмĕрсенче Кама леш енне тата Пушкарта кудса кайна.

Ылтан Урта аркансан йĕркеленнĕ Хусан ханлахĕнче чавашсене çав тери пусмарлана. Монгол-тутар пусмарĕ вахатĕнче чавашсен палла çыннисене пĕтĕмпе тенĕ пекех пĕтернĕ е вĕсем тутарланна. Хусан ханлахĕнче чаваш хушшинчен тухна тавралах кнеçĕсем //пусем//, выранти кнеçсем //çĕрпусемпе вунпусем//, турхансем сахал пулна. Чаваш çĕрĕ çинче Хусанпа Мускав çарĕсем хушшинчи çападусем вĕçĕмсĕр тасална. Çав тапхарта чавашсен хайсен никама паханман патшалахне туса хума вай çитмен.

Хайсем таххан авал никама паханмасар пуранни не аставакан чавашсем Раççейпе пĕрлешсен кана монгол-тутар пусмарспчси хаталассине анланна. 1551 çулта вĕсем мирлĕ, пуç çапса Раççей патшалахне кĕнĕ, IV Иван патша вĕсене тивĕçлĕ грамота пана, ваннипе каласан вал икĕ енлĕ килĕшу шутланна.

Патша Раççейĕнче ытти халахсем енĕпе те, чавашсем енĕпе те геноцид пулман. Правительство колони тытăмĕ туса хуна. Унан тĕллевĕ вырас мар

халăхсенчен май килнĕ таран тупăш ытларах саптăрса илесси пулнă. Чăвашсем XVI ĕмĕр вĕçĕнче - XVII ĕмĕр пуçламашĕнчех колони пусмăрне хирĕç тăнă. Çаванпа вĕсене, хĕçпăшал ан туччăр тесе, тимĕрç ĕçне, кĕмĕл ĕçне тума чарнă, тимĕр япаласене уесри воеводаăсем ирĕк парсан çеç сутма пултарнă. Чăвашсене суту-илӳ тума та ирĕк паман. Паллах, ку чăвашсен наци культурине аталантарма пулăшман, çапах та чăвашсене XVIII ĕмĕрте вăйпа хĕсĕрлесе Христос тĕнне йышăнтарнисĕр пуçне, ытлашши хĕсмен. Патша тытăмĕ тата чиркӳ выраса каларас тĕлĕшпе тытнă канттам, тӳрккес политика нимех те паман. Чăваш чĕлхи, халăхăн наци культури упранса юлнă. Питĕ сахал чăваш кăна вырасланнă. Чăвашсене патшалăха ертсе пырас ĕçе хутшăнтарман. Тӳре-шарасемпе улпутсем чăвашсене тата Атăл тăрăхĕнчи ытти халăх çыннисене хăратса, мăшкăласа тăнă, вĕсен ăсĕ катăк, вĕсен хушшинче вĕреннĕ çынсем, купцасем, ал ăстисем пулма та пултараймаççĕ тесе элĕкленĕ, чăвашран мăшкăлăнă. Патша тарçисем чăваш культури пулман та, пулмасть те тенĕ. Яланах ун пек каланине пула хăш-пĕр чăвашсем хăйсем те çавна ĕненме тытăннă. Чăвашсем влаçа хирĕç ан тухчăр тесе тӳре-шарасем пĕр чăваша тепĕр чăвашпа, пĕр чăваш ялне тепĕр чăваш ялĕпе хирĕçтернĕ, çапăçтарнă. Апла пулин те чăвашсем Степан Разин вăрçине, Емельян Пугачев вăрçине, Шурча вăрçине анлă хутшăнса пусмăрçăсемпе кĕрешнĕ.

Раççейре чăваш халăхĕн йышĕ хăвăрт ӳссе пынă. 1989 çул тĕлне ССР Союзĕ пулнă çĕршывра 1 миллион та 842,3 пин чăваш пураннă. Хальхи вăхăтра çĕр çинче 6 миллиард çын, 4 пине яхăн наци, халăх тата этнос ушканĕ шутланать. Çав шутран 1 миллион ытла çынлă 325 халăха тĕнчери пысăк халăхсен шутне кĕртеççĕ. Халăх йышĕпе чăвашсем тĕнчере 225-мĕш, Раççейре 4-мĕш вырăн йышăнаççĕ.

XVI ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче - XVIII ĕмĕрте чăвашсем Чăваш Енĕн кăнтăр-хĕвелтухăç пайне пуранма куçнă, XVII-XVIII ĕмĕрсенче Анат Кама леш енне, Пушкартстана, Чĕмпĕр, Самар, Пенза, Саратов, Оренбург облаçĕсене, XIX-XX ĕмĕрсенче Çĕпĕрпе Инçет Хĕвелтухăçне куçа-куçа кайнă. Хальхи вăхăтра чă-

вашсен 50,8 проценчĕ Чăваш Республикин тулашĕнче, тĕпрен илсен Вăтам Атăл тăрăхĕпе Урал çывăхĕнче пуранать /Тутарстанра 134,3 пин, Пушкартстанра -118,5 пин, Ульяновск облаçĕнче - 116,5 пин, Самар облаçĕнче - 118 пин/, Оренбург облаçĕнче - 21,5 пин çын, çаван пекех Çĕпĕрте /Тюмень облаçĕнче - 31,2 пин, Красноярск крайĕнче - 27 пин, Кемĕр облаçĕнче - 24,4 пин çын/. Урăх çĕре куçса каясси Чăваш Енре çĕр хĕсĕккипе çыхăнна. Малтанхи вăхăтра чăвашсем çĕнĕ çĕрсенче ирĕклĕрех пуранна. Анчах сапаланса пĕтнипе, ытти халăхсем хушшинче пураннипе чăвашсен аталанăвĕ чăранса ларнă, вĕсем çамалланах урăх этноспа хутшăннă.

Чăвашсем - питех те ĕçчен, пултарулла, сапайлă, ытти нацисене хисеплекен халăх. Урăх халăх шучĕпе пуранас тĕллев вĕсен нихăçан та пулман, вĕсем ытти халăхсемпе çапăçман, ытти халăх çыннисене кӳрентермен. Ăхальтен каламаççĕ ĕнтĕ: чăваш чĕлхинче çĕр пин сăмах, чăвашăн çĕр пин юрă, çĕр пин тĕрĕ. Палла ĕнтĕ, ют çĕртен тапăнса килекенсем яланах хăйсем пăхăнтарнă халăхăн палла çыннисене патерсе тăкма тăрăшнă. Раççейре I Петĕр патша вăхăтĕнче чăвашсен çĕрпӳ тата вунпӳ кнеçĕсен, турханĕсен, хĕсметри чăвашсен сийне тĕп туна. 700 çула яхăн /1236 çултан пуçласа XX ĕмĕр пуçламăшĕччен/ чăвашсем монгол-тутар пусмăрĕнче, Мускав тата Петербург империйĕсен колони пусмăрĕнче пуранна май, чăвашсем хăйне евĕр менталитечĕ, психологийĕ, характерĕ, наци уйрăмлăхĕ йĕркеленнĕ, ăна каярахпа чăваш комплексĕ теме тытăннă: чăвашсем хăйсене яланах урăх халăх /малтан - тутар, каярахпа - вырăс/ çыннисем пуç пулса ертсе пымалла, чăвашран влаç çыннисем, должноçри çынсем, вĕреннĕ, ăслă çынсем пулмалла мар тесе шутлана. Чăвашран кама та пулсан пысăк ĕçе лартнине ханăхман вĕсем, ун пекки выранла, килĕшӳллĕ мар тенĕ. Халăха çутта кăларнă И.Я.Яковлев хăйĕн таван халăхне чăвашла çырнă халалĕнче çапла асăрхаттарнă: "Чăваш хушшинче пĕр-пĕр килĕшӳсĕр ĕç час-часах пулкалать. Эпĕ çавна пĕрре анчах курман. Çапла акă чăвашран хăшĕ те пулин мала туха пуçласан ыттисем ăна такăнтарма пăхаççĕ, çулне пӳлеççĕ. Вара унăн та ыра ĕмĕчĕ тата-

лать, çине пыракансем хайсем те тип-типĕ тарса юлаççĕ". Çав вăхăтрах вĕренсе пĕлӳ илнĕ чăвашсенчен хашĕ-пĕри ыттисене хай хыççăн пыма пулăшман, çынна тухма чармантарса тăнă.

Урăх халăхсен пусмарĕнче 700 çула яхăн пуранна май, чăвашсенчен нумайашĕн наци нигилизме, наци малашлăхне шанманни, хайĕн чĕлхипе культурине, хайĕн халăхĕн çыннисене тиркесси вайланнă. Чăваш, хайĕн халăхĕн çыннисене мар, ытларах ытти халăх çыннисене хисепе хума хăнăхнă. Каларăмăр ĕнтĕ, пĕр чăваш тепĕр чăваша хайĕнпе пĕр шайри "хура" çын анчах, хисепе тивĕçсĕр çын тесе шутланă. Чăваш халăх писателĕ Хĕветĕр Уяр "Самар ен" хаçатра /1995 ç., майăн 16/ питĕ таран шухăшлă "Мĕншĕн чăваш чăваша юратмасть?" статья пичетлесе каларчĕ. Писатель ку ыйтăва пур енчен те тĕпченĕ. Юлашкинчен вара вăл çапла çырать: "Хамăр çеç эпир хамăра хисеплеме пĕлместпĕр. Е манна-ши эпир хамăра çынсем выранне картма? Тен, ташмансем хурланине ĕненнĕ эпир? Кайран калани тĕрĕсрех те мар-и? Ĕмĕртен ĕмĕре, аруран ăрава ытти халăхсен ури айĕнче таптанна-муритленнĕ, машкал тӳснĕ, хĕн-хур курнă чăвашсем хайсене читлĕхре çитери-çитерми усракан кайăксем пек туйма тытăннă пулсан, хайсенчен хайсем писе пуçланă. /"...Йĕрĕне пуçланă" тени ытлашширех пулĕ/. Ку вăл наци пĕтес умĕнхи юлашки тапхăр. Хайне хай сума суми пулнă çын, хайне хай хисеплеми пулнă халăх та пĕтес çул çине тăрать. Пĕтсе пыракан халăх çыннисем те ăçта килчĕ унта тарма тытăнаççĕ. Ĕлĕк чăвашсенчен нумайашĕ тутара тухнă. Халĕ пирĕн халăх талккишпе выраçланса пырать. Выраçла вĕреннисем чăвашла калаçми пулаççĕ. Халăхăмăра кирек кам мĕнле кӳрентерсен те эпир , хамăра хӳтĕлесе çăвар та уçмастпăр". Халăха çутта каларнă И.Я.Яковлев та вăхăт иртнĕçемĕн чăвашсем выраç халăхĕпе хутăшасса палăртнă. Анчах çапла шутланă: вĕсем çаван пек хутăшиччен таван чĕлхене таянса ăс-хакăл, культура тата экономика енĕпе выраçсене хăваласа çитме тивĕçлĕ. "Пире, чăвашсене, историре хай тĕллĕнлĕхлĕ пулма пӳрмен, - тесе çырнă вăл. - Эпир маларах е каярах выраçсемпе хутшăнса кайма тивĕçлĕ. Анчах хутшăнса тени-

мĕне пĕлтерет-ха? Ку вăл вырăс тумтирĕпе çуремелле тенине пĕлтермест. Эпир ăс-хакăл тĕлĕшĕнчен вырăссем пулса тăма, вырăсла шухăшлама, туйма тивĕçлĕ. Çапла тумашкăн пирĕн вырăс культурин шайне çити çĕкленес пулать: православи тĕнне, вырăссен культурипе патшалăх пурнăçĕн никĕсне алла илмелле. Чăвашсен культурине хăй анланакан таван чĕлхе урлă кăна çĕклеме май килет. Чиркуре тата шкулта вырăс чĕлхипе уса курма тытанни чăвашсен аталанăвне чарса лартать, вĕсем вырăссемпе хутшăниччен вилсе пĕтме пултараççĕ. Паллă вĕт-ха, культура тĕлĕшĕнчен кая юлни чухăнлăх патне, камăлсипет пăсăласси тата преступленисем ытларах тăвасси патне, çак юлашки вара - вилсе пĕтесси патне илсе çитерет. Эпир кун пек тăвасшăн мар, эпир вырăссемпе пĕтсе пыракан халăх мар, сывă халăх пулса хутăшма тăрăшăпăр, çаван пек хутăшни вырăс халăхне сиен мар, уса кутĕр". /И.Я.Яковлев. Из переписки. Чебоксары, 1989. Часть 1. Стр.237/. И.Я.Яковлев халăх ăс-танĕн нумай енне асăрхана, анчах та анланмалла ĕнтĕ, чăваш халăхĕн ку чухнехи наци ыйтăвĕсен шайĕнче патриарх шухăшĕсене пĕр самахсăрах йышăнма юрамасть: XX ĕмĕрте пурнăç условийĕсем улшăнчĕç. Чăвашсем наци пулса тăчĕç. Чăваш нацийĕ малашне те вăйлăн аталанса, цивилизацире малти рете тухса, хăйĕн культурине çулти шая хăпартса, пассионарлăхне çирĕплетсе ĕмĕр-ĕмĕрех упранса юлма, тĕнче культурине пуянлатма пултарать.

1897 çулта чăвашсен 7,6 проценчĕ кăна хут пĕлнĕ. 1917 çулччен асла пĕлуллĕ 50 чăваш çеç шутланнă. Чăвашсен профессиллĕ музыка культури, театр, санарла искусство пулман. Чăвашсен çĕнĕ çырулăхне И.Я.Яковлев 1871 çулта туна. Çаван хыççăн чăвашсен илемлĕ литератури çуралнă. XX ĕмĕрте, автономи илнĕ май, чăваш наци культури хăварт аталанна. Чăвашсем пурте хут пĕлекен вĕреннĕ çынсем пулса тăнă. Наци интеллигенцийĕ ӳссе çитĕннĕ, литература, профессиллĕ музыка, театр тата санарла искусство аталанна. Анчах та чăваш халăхĕн экономикăпа культура аталанăвĕ Раççейри чи малта пыракан шайне çитмен-ха. Юлашки çулсенче нацисем çывăхланмал-

ли, каярахпа хуташса каймалли официалла доктрина вайра тана май, чавашсен ытларахаш нации нигилизмне пĕтереймен. Вĕсен ытти халахсемпе хуташасси вайланна.

Нацин халăхи ыйтавĕсене пахса тухна чухне пирĕн объективлă чанлахран параннма юрамасть. Истори опытне, истори урокне манмалла мар.

Наци нигилизмĕ тулли аталанна нацие йĕркелеме чармантарать. Наци вал - хай тĕллĕнех аталанса пыракан организм. Кирек-хаш нацин те, çаван пекех уйрам çыннан та, лайахланса пыма, хайĕн пахалах енĕсене устерме тарашмалла. Çакна вара нацин кашни представителĕ пахалах енĕпе лайахланса пырсан, уншан пĕтĕм нации тарашсан çеç пурнаçлама пулать. Нацин хайне лайахлатас ĕçе ытти халахсен шучĕпе тумалла мар.

Хĕветĕр Ӳяр калана пек, чаваш чаваша юратманни, хисеплеменни, ура хума тарашни, пĕрне пĕри элеклени, чаваш халахĕн нации пĕрлĕх туйамĕ çукки, чавашсен хушшинче дуализмла хирĕçусем пулни пире малалла аталанма чармантарать. Чаваш наци юхамĕнче ЧНК-па ЧОКЦ, пĕр ĕç таваççĕ пулин те, пĕрне пĕри хирĕç тараççĕ. Халĕ Чаваш Республикинче писательсен союзĕсем иккĕ, художниксен союзĕсем иккĕ е виççĕ те-и, композиторсен союзĕпе композиторсен ассоциацийĕ пур. 1992 çулта правительство Чаваш Республикин аслалахсен академине уçрĕ те, тепĕр ик-виç уйахранах хай тĕллĕн Чаваш наци академине туса хучĕç. Вал академисене 1995 çулта Н.В.Федоров Президент тарашнипе Чаваш Республикин аслалахпа унер академине пĕрлештернĕ хыççанах Чаваш Республикин инженерипе технологи академийĕ сиксе тухрĕ, аслалахпа унер академине хирĕç кĕрешме тытанчĕ. Шупашкарти пĕр асла шкулпа тепĕр асла шкул кĕрешсе пуранаççĕ. Дуализмла хирĕçĕве хутшанна организацисем, союзсем, учрежденисем хушшинче нимĕнле политика е идея салтавĕсем çук. Вĕсен пурин те пĕр пек тĕллевлĕ ĕç туса пымалла. Вĕсем хушшинче субъективла, пуçлахсем хушшинче паларна салтавсем çеç пур. Хуçалахшан, вĕренушĕн, таван халахшан пĕтĕм вайне, талантне парса пысак çитĕнусем туна улапсене элеклесе пĕтерсе пыраççĕ.

1936-1937 çулхи ĕçсем пирки пурте пĕлетпĕр ĕнтĕ. Вăрçă хыççăнхи тапхăра илер. 1963 çултанпа 1983 çулччен Чăваш педагогига институчĕн ректорĕ пулса А.С.Марков ĕçлерĕ. Вăл институтра музыкапа педагогика, физвоспитани, пуçламăш классен факультечĕсем уçрĕ, нумай çĕнĕ кафедрăсем йĕркелерĕ, икĕ вĕренӳ корпусĕ, 1150 тата 640 выранла общежитисем, икĕ хутлă "Сарпике" столовăй, студентсем валли санатори-профилактори, Атăл хĕрринче кану бази туса лартрĕ. Институт темиçе çул СССРти пединститутсем хушшинче пĕрремĕш выран йышăнса тăчĕ. 1980 çулта Хĕрлĕ Ялав орденне тивĕçлĕ пулчĕ. 1983 çулта А.С.Маркова партие кĕнĕ чухне ашшĕ кулак пулнине кăтартман тесе тата ытти суя айăпсем тупса ĕçрен кăларчĕç. Прокуратура тĕрĕсленĕ хыççăн унăн нимӗнле айăп та пулманни палла пулнă. Чăваш операпа балет театрне никĕслесе 15 çул хушши ертсе пынă РСФСР тата Чăваш АССР халăх артистне Б.С.Маркова та икĕ çĕрте ĕçленĕ тесе ĕçрен кăларса çĕре чикрĕç. Халĕ Чăваш патшалăх университет пуçлăхĕсене 10 çул хушшинче темиçе çĕнĕ факультет, тăвата филиал, тăват вĕренӳпе консультаци пункчĕсем, гимназипе 20 яхăн лицей класĕсем уçса студентсен шутне икĕ хут ӳстернĕшĕн, ялти ачасене асла шкулта вĕренме май туса панăшăн айăплама тытăнчĕç. Чăваш халăх писателĕсене Çемен Элкерпа Хĕветĕр Уяра тапăнса тăчĕç, Петĕр Хусанкайпа Ухсай Яккӑвĕ, хăйсен чапĕнче тем пайласшăн-и, урлăрах пурăнчĕç. Кун пек хирĕçӳсем ăсчахсем, художниксем, композиторсем, артистсем хушшинче тăтăшах пулаççĕ. Айăпсăр инкек куракансене хӳтĕлекенсем те тупăнмаççĕ.

Ытти халăхсем хушшинче çавнашкал хирĕçӳсем сахал пулаççĕ е пулмаççĕ те. Тутарсем пĕрне-пĕри пулăшма тарăшаççĕ, пĕрне-пĕри хисеплеççĕ, юратаççĕ. Ку енчен еврейсем ыра тĕслĕх кăтартаççĕ. "Хыпар" хаçатра "Чăвашăн еврейрен вĕренмелли нумай" /1997 ç. утă уйăхĕн 15-мĕшĕ/, "Еврейсен наци идейи" /1997 ç. аваннă уйăхĕн 16-мĕшĕ/ тата ытти статьясем пичетлерĕç. Еврейсен пурнăç шăпи ĕлĕк-авал асаплă пулнă. Палестинăран хăваласа кăларсан вĕсем пĕтĕм тĕнчипе саланнă. Вĕсем пĕрне-пĕри пулăшма тытăн-

нă, лайăх ĕçсене вĕренме тăрăшнă, хăйсен наци пĕрлĕхне çирĕплетсе пысăк выраńсене йышăнма май тупнă. Тĕнчере чи пуян банкирсем - еврейсем. Совет Союзĕнче вĕсене пур ирĕксене те панă. 1989 çулхи перепись тăрăх, 15 çултан иртнĕ 1000 çын пуçне еврейсенчен 527 çынĕ аслă шкул пĕтернĕ. Хальхи Раççейре чи палла ăсчахсем, писательсем, журналистсем, композиторсем, артистсем, музыкантсем, банкирсем, патшалăх пуçлăхĕсем - еврейсем. Вĕсем пĕр-пĕринпе хирĕçмеççĕ, пĕрне-пĕри çулелле çĕклесе пыраççĕ.

Чăваш наци идейи - пĕрлĕх, пĕрне-пĕри пулăшасси, хисеплесси, кашни çын наци аталанăвĕшĕн тăрăшни, наци кашни чăваш ӳсĕмĕшĕн, ырлăхĕпе телейĕшĕн тăрăшни пулмалла.

Чăваш халăхĕн хуçалăхĕпе культурине аталантарас ĕçре, наци пĕрлĕхне çирĕплетессинче "национализм", "националист", пĕлтерĕшĕсене тĕрĕс мар ăнланса уса курни пысăк сиен кӳрет. Мускавра 1993 çулта каларнă "Политилогия. Энциклопедический словарь" кĕнекере çапла çырнă: "Национализм - это идеология, психология, социальная практика, мировоззрение и политика притеснения одних наций другими, проповедь национальной исключительности и превосходства, разжигание национальной вражды, недоверия и конфликтов" /195 стр./. Кунта национализм мĕне пĕлтернине тĕрĕс калана. Кун пек национализм чăвашра нихăçан та пулман пулĕ. Совет тапхăрĕнче наци культурине, наци пурнăçне лайăхлатас, наци чĕлхине упрас, наци çыннине пулăшас тесе калакансене "националист" тесе айăплана. 1936-1937 çулсенче вĕсене репрессиленĕ. Халĕ те пирĕн пуçлăхсем "националист" тесе çавсенех калаççĕ, хăçатсенче статьясем пичетлеççĕ. Çитменнине тата наци культурипе чĕлхишĕн тăрăшакан хăш-пĕр интеллигентсем хăйсене "националист" теме пуçларĕç /А.П.Хусанкай, Ю.В.Яковлев тата ытти те/. "Национализмпа" харатнинчен, "националист" тесе ятлассинчен хăраса вăрçă хыççăнхи тапхăртан пуçласа юлашки çулченех республикăри патшалăх, хуçалăх, вĕренӳ, культура, пичет, издательство, сывлăх, спорт, профсоюз, парти, кану органĕсенчи пуçлăхсем чăваша епле

те пулсан пулăшма хăраса тăратчĕç. Ăна ĕçе, вĕренме илме, хваттер пама, унăн сывлăхне сыхлама, ăна саккун тăрăх мĕнле те пулсан пулăшма, унăн кĕнекипе статйине пичетлеме тата ыттине те тума ыттисем ыйтнисене тивĕçтернĕ хыççăн тин тытăнса пăхатчĕç. Чăваш Республикинче чăваш юлашкипе çырлахса пуранна. Паян кун та Шупашкарта 4000 "засыпушкăра" пуранакансем - чăваш ĕçченĕсем. Манăн шалламăн ывалĕ çартан таврансан агрегат заводне ĕçлеме кĕчĕ, палла фрезеровщик, бригадир та пулчĕ. Арăмĕ те çав заводрах ĕçлет. "Засыпушкăра" пуранма тытăнчĕç. Виçĕ ача пăхса ӳстерчĕç. Аслă ачи халĕ Чечняра çапăçать. Çирĕм çул ытла пĕр заводрах ĕçлесе пуранаççĕ пулсан та, вĕсене хваттер памарĕç. "Засыпушкăрах" пуранаççĕ. Çав заводрах урăх çĕртен куçса килнĕ çынсене ик-виç çултанах хваттер паратчĕç. "Национализмпа" харатнине пула чăваш чăваша татах хисеплеме пăрахрĕ, наци пĕрлĕх туйăмĕ татах макалчĕ. Пĕр пенсионер, ĕлĕк Патшалăх харушсăрлăх министерствинче ĕçленĕскер, мана çапла каларĕ: "Ĕмĕре "националистсемпе" кĕрешсе ирттертĕм. Ман ĕçленин усси ним те пулмарĕ: "националистсем" халăха та, патшалăха та нимле сăтăр туман. Халĕ чиновниксем те, бизнесменсемпе коммерсантсем коррупци айне пулнă, патшалăх, халăх пурлăхне вăрлаççĕ, анчах вĕсене таса шыв çине кăлармаççĕ, ним те тумаççĕ", - терĕ.

Чĕлхе тата наци культури - халăхăн тĕп паллисем. Нацин чылай пысăк ушканĕ тата сийĕ таван чĕлхене йышăнма пăрахни наци пĕтсе ларасси патне илсе çитерет. Юлашки çулсенче хуласенче тата ытти чĕлхепе калаçакан халăхсемпе пĕрле ялсенче пуранакан чăвашсем таван чĕлхене манса пыраççĕ. Хулари чăвашсен иккĕмĕш аравĕ таван чĕлхене манна ĕнтĕ. 1989 çулхи халăх переписĕн катартавĕсем тăрăх, ССР Союзĕ пулнă çĕршыв территорийĕнче пуранакан чăвашсен 76,5 проценчĕ кăна таван чĕлхепе калаçнă, урăхла каласан, таваттăмĕш пайне яхăн нацин тĕп паллине çухатнă. Чăваш Республикинче хайĕнче чăвашсен 15 проценчĕ таван чĕлхене пĕлмест. Республика тулашĕнче пуранакан чăвашсем хушшинче тăван чĕлхене йышăнманнисем тата нумайрах: тĕрлĕ

республикăсенче, крайсенче тата облаçсенче вĕсем 31 процентран пуçласа 60 процент таранах. 100 пин ытла чăваш пуранакан республикăсемпе облаçсенче ун пеккисем сахалрах: Тутарстанра - 12,1, Ульяновск облаçĕнче - 16,1, Пушкăртстанра - 17,3, Самар облаçĕнче - 20,5 процент. 1992 çулта Чăваш патшалăх университетне 765 чăваша вĕренме илнĕ, вĕсенчен 44,1 проценчĕ кăна чăвашла калаçма пултарнă! Чăваш шутланакан, анчах таван чĕлхене пĕлмен студентсем чăваш чĕлхипе культурине тиркени çитмест, ăна кураймаççĕ, кирлĕ мар тесе шутлаççĕ, хăйсем вырăс культурине алла илеймен пулсан та мĕн пур чăваша вырăс чĕлхипе калаçма тытăнма чĕнеççĕ. Чăваш ялĕсенче вырнаçнă район центрĕсенчи шкулсенчен вĕренсе тухакансенчен ытларахăшĕ, çаван пекех республикăри чăваш ялĕсенчи хăш-пĕр чăваш ачисем таван чĕлхене пĕлмеççĕ.

Намăс пире. Кун пекки ытти халăх хушшинче сахал тĕл пулать. Нумай наци çыннисем урăх чĕлхепе калаçакансем хушшинче пурăнсан та хăйсен чĕлхине, наци культурине çухатмаççĕ. Нимĕç çемйисем пĕтĕм Раççейĕпе саланнă, анчах нимĕç çемйинче ача нимĕçле пĕлет. Е чикансене илĕпĕр. Вырăс хушшинче пĕчĕк ушкăнсемпе пурăнаççĕ, анчах хăйсен чĕлхине манмаççĕ. Ахăртнех, ку вăл вĕсем ĕмĕр-ĕмĕр ирĕклĕ пураннипе çыхăннă.

Республика тулашĕнче пурăнакан чăвашсен пысăк пайĕ чăвашла çырма кăна мар, вулама та пĕлмест. Хамăр республикăра таван чĕлхепе калаçма пĕлекен чăвашсем хушшинче чăвашла тĕрĕс çырма пĕлменнисем йышлă. Чăваш шкулĕсенчен вĕренсе тухнисенчен 90-95 проценчĕ чăвашла çырма пĕлмест. Аслă шкул пĕтернĕ чăвашсенчен çурри ытла чăвашла калаçма та маннă. 99,5 проценчĕ чăвашла çырма пултараймасть. Шупашкарти аслă шкулсенче, Чăваш патшалăх гуманитари аслăлăхсен институтĕнче ĕçлекен, хăйсене чăваш текен профессорсем, доцентсем, преподавательсем, наука сотрудникĕсем хушшинче чăвашла кĕнеке, статья çырма пĕлекеннисем пĕр процента та çитмеççĕ. Аслă шкулсенче ĕçлекен хăш-пĕр чăвашсем акăлчанла, нимĕçле çырма аван пĕлеççĕ, чăвашла çырма пĕлмеççĕ. Патшалăх тытăмĕнче ĕçле-

кен тӳресенчен пери те тенӗ пекех чӑвашла çырма пӗлмест. Постановленисем, указсем, хушусем, хаçата валли статьясем вырӑсла анчах çыраççӗ те тӑлмачсене куçарма параççӗ. 20-30-мӗш çулсенче чӑваш чӗлхипе чылай анлӑн усӑ курнӑ. Вӑл обществӑпа патшалӑх ӗçӗнче сарӑлнӑ. Юлашки вунçуллӑхсенче ӑна пӗтӗмӗшпе пекех хӗссе кӑларнӑ. Чӑваш чӗлхипе пуçламаш пӗлӳ пана çӗрте, чӑвашсен илемлӗ литературри, театрсем, хаçат-журналсем кӑна усӑ кураççӗ.

Чӑвашла кӗнекесем кӑларасси чакнӑ. Чӑваш чӗлхи ялти çемьесен хутшӑну чӗлхи анчах пулса тӑнӑ. Чӑваш Республикинче чӑваш чӗлхине, вырӑс чӗлхи пекех, патшалӑх чӗлхи тесе пӗлтернӗ пулин те, суд ӗçӗсене вырӑсла кӑна çыраççӗ, министерствӑсемпе ведомствӑсем, муниципалитетсем, хуçалӑх тата общество органӗсем хутсене вырӑсла çеç çыраççӗ, вӗсен чӑваш саспаллисемлӗ машинкӑсем те, компьютерсем те çук. Чӑваш шкулӗсенче 5-мӗш класран тытӑнса вырӑсла кӑна вӗрентеççӗ. Чӑваш шкулӗсенче 5-8 классенче гуманитари дисциплинисене вӗрентнӗ чухне вырӑс чӗлхипе пӗрлех чӑваш чӗлхипе те усӑ курма ирӗк пана. Чӑннипе вара ун пеккине сайра хутра çеç курма пулать. Республика тулашӗнчи чӑваш ялӗсенчи шкулсенче 1960 çул хыççӑн чӑваш чӗлхипе литературине вӗрентме пӑрахнӑ, вӗренӳре вырӑс чӗлхипе кӑна усӑ кураççӗ. 1990 çулта йышӑннӑ "Чӑваш республикинчи чӗлхесем çинчен" ятлӑ закон пурнăçланаймарӗ. Вӗрентӳ Министерствине ку закона пурнăçлама укçа уйӑрса парса тӑркаларӗç. Анчах уйӑрнӑ укçан пит сахал пайне çеç çав закона пурнăçлама ячӗç, унӑн нумайрах пайне урах тӗллевсемпе тӑкакларӗç.

Чӑваш чӗлхине упраса аталантарасси пирки калаçнӑ чух вырӑс культурине хурламалла мар. Вырӑс чӗлхине пӗлмесӗр Раççейре пуранма питӗ йывӑр. Чӑвашсем вырӑс патшалӑхне мирлӗн кӗнӗренпе 450 çул çитет ӗнтӗ. Çак вӑрам тапхӑрта чӑваш халӑх культури вырӑс культурин аван енӗсене йышӑнса пуянланчӗ. Чӑваш халӑхӗн профессиллӗ культури /литература, искусство/ вырӑс культуринчен вӗренсе аталанса пычӗ. Тӗнче культурине те чӑвашсем вырӑс культуринчен йышӑнса пыраççӗ. Чӑвашӑн вырӑс

чĕлхине вырăсран начар пĕлмелле мар. Анчах вырăс чĕлхипе культурине вĕренсе çитсе тăван халăх чĕлхипе культурине манмалла мар, вĕсенчен ютшăнса вĕсене хурламалла мар. Хĕвеланăç Европăри патшалăхсенче кашни çын тенĕ пекех икĕ, виçĕ чĕлхе пĕлет, анчах никам та хăйĕн тăван чĕлхине манмасть, тăван культуринчен ютшăнмасть. Пирĕн вара пачах урăхла, тепĕр майла пулса тухать.

Тăван чĕлхене манни, тăван культурăна хисеплеменни чăвашсене ытларах чухне урăх нацие куçасси патне илсе пырать. 70-80 çулсенче демографи тĕпчевĕсем палăртнă тăрăх, тутарсем, грузинсем, эрменсем, азербайджансем, туркменсем, узбексем, ССР Союзĕ пулнă ытти нумай наци çыннисем урăх халăх çыннисемпе, уйрăмах вырăссемпе, машăрланнă хыççăн çуратнă ачисем 80-90 процент таранах тутар, грузин, эрмен т.ыт. пулса юлнă. Чăвашсем ытти халăх çыннисемпе машăрланнă хыççăн вĕсен ачисен 78 проценчĕ чăваш пулма пăрахнă. Çакă вăл йĕркеллĕ мар темелле.

Наци хăйĕн тăван чĕлхине тиркени наци майĕпен пĕтесси патне илсе пырать, унăн интеллект шайне чакарать, наци культурине, илемлĕ литературăна тата искусствăна аталантарма чăрмантарать, вĕсене валли талантсем сахалрах çитĕнтерет. Хальхи вăхăтра чăвашсен палли композиторĕсенчен 90 проценчĕ ытла - 60 çултан асăрах çынсем. Çыравçăсен йышĕ те çаван евĕрлех, вĕсен хушшинче çамрăк, талантлă поэтсемпе прозаиксем сахал. Профессиллĕ музыкантсемпе юрăçсем хушшинче чăвашсем çителĕклĕ мар. Пирĕн республика хулисенче пуранакансенчен çуррине яхăн - чăвашсем, анчах вĕсен чăваш хула культури çук. Ăна тумаллах, анчах ку еннелле турттанни куранмасть. Юлашки çулсенче экономикăпа социаллă йĕрке кризисĕ, ĕçлекен халăх çукăлăха юлни, патшалăх бюджечĕ ĕлĕкхинчен çĕр хут мар, пин хут чакни вĕрентĕве, наукăна, литературăпа искусствăна, пĕтĕм культурăна аталантармалли майсене пĕтерсе лартрĕ. Писательсене, композиторсемпе ăсчахсене, сăмахран, нимĕнле пулăшу та памаççĕ, кĕнекесем çырнăшăн гонорар тулемеççĕ, çырнă кĕнекесене пичетлесе каларма та укçа-тенкĕ çук. Анчах йывăр условисене

пăхса алла усса лармалла мар. Пĕтĕм халăх пĕрлешсе пурнăç условийĕсене юсаса лайăхлатмалла. Наукăна, вĕрентĕве, литературăна, искусствăна, пичете, нацин пĕтĕм культурине аталантарма, çăлса хăварма патшалăхăн укçа-тенкĕ ĕлĕкхи шайпах уйăрса памалла. Чăваш чĕлхине упраса хăварас тата аталантарас енĕпе чи малтан мĕнле ĕçсем пурнăçлама сĕнмеллеха? Мĕн ачаран чăвашла вĕренме тытăнмалла. Чăваш Енĕн наци шкулĕсенче чăваш чĕлхипе вĕрентессине анлăрах сарни кирлĕ. Республика тулашĕнче чăваш ялĕсенче вара шкулĕсене çĕнĕрен йĕркелемелле. Вăтам шкулсенчен вĕренсе тухакансене чăваш чĕлхипе, литературипе экзамен тыттармалла. Чăваш патшалăх университечĕн гуманитари, физикăпа математика, медицина факультечĕсене, республикăри педагогика университетне тата ял хуçалăх академине кĕмелли экзаменсене вырăсла та, чăвашла та /абитуриент ирĕкĕпе/ тыттармалла. Кунпа пĕрлех чăваш шкулĕсенче вырас чĕлхине вĕрентес ĕçе лайăхлатмалла. Патшалăх тата суд ĕçне ытларах чухне чăвашла йĕркелени выранлăрах пулĕччĕ. Чăвашсем хушшинче ĕçлекен туресене, судьясене чăвашла çырма пĕлмен çынсене лартмалла мар. Туресене аттестаци туна чухне чăвавшла çырма пĕлнине тĕрĕслемелле.

Чăваш чĕлхине патшалăх чĕлхи выранне хурса ĕçлеттересси - чи кирлĕ тĕллев. Республика тулашĕнчи чăваш районĕсемпе ял ушканĕсем патшалăх чĕлхи выранĕнче вырас чĕлхипе пĕрлех чăваш чĕлхипе уса курма тивĕçлĕ. Çак правăна саккун йĕркипе çирĕплетмелле. Чăваш Енĕн тивĕçĕ - республика тулашĕнче пуранакан чăвашсене таван чĕлхепе уса курас, ăна шкулсенче вĕрентес, наци культурине аталантарас, культура ыйтăвĕсене тивĕçтерес енĕпе вăйлăрах пулăшасси. Республика тулашĕнче пуранакан чăвашсем валли кĕнеке каларассине темиçе хут ӳстермелле. Раççей Федерацийĕн правительстви урлă Тутарстан тата Пушкартстан, Ульяновск, Самар, Пенза, Саратов, Оренбург, Тюмень, Кемĕр облаçĕсен, Красноярск крайĕн администрацийĕсенчен чăвашсен вăтам тата тĕп /тулли мар вăтам/ наци шкулĕсене çĕнĕрен уçма ыйтма тытăнмалла.

Нацисенчен нумайашĕ çынсен меллĕ /вырăсла: пропорциональчо/ аталанна пĕрлĕхĕ шутланать. Чăваш нацийĕ ун пек пулса тăрайман-ха. Нацин ĕçлев тата интеллект вăй-хăвачĕн ыйтăвĕсем, унăн социаллă тата профессиллĕ йышĕ питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Нацин социаллă йышĕнче хресченсем, рабочисем тата интеллигенци кирлĕ пек, çителĕклĕ шайласа тăни кирлĕ. Хресченсем е интеллигенци ытларахăшĕ шутланакан наци пулмалла мар, çĕр ĕçлекенсемпе кĕтӳçсен нацийĕ тата ученăйсен, литераторсен, музыкантсен нацийĕ пулмалла мар. Шел пулин те, интеллигенци питĕ сахал шутланакан нацисем те, интеллигенци тӳпи ытлашши пысăк нацисем те пур. Чăвашсем хушшинче аслă пĕлӳллĕ çынсем сахалли паллăхантарать. 1989 çулхи кăтартусем тăрăх, Раççей Федерацийĕнче кашни пин çын пуçне аслă пĕлӳллисем чăвашсем хушшинче 62, мордвасем хушшинче 71, тутарсем хушшинче 83, вырăссем хушшинче 115, еврейсем хушшинче 527 çын пулна. Чăвашсем хушшинче аслă шкул пĕтернĕ 62 çынран çурри ытла таван чĕлхене пĕлмен. Чăвашсем хушшинче инженерсемпе техниксем уйрăмах сахал. Республикăра чăвашсем 68 процента яхăн, промышленноçри, строительствăри, çыхăнури тата транспортри инженерсемпе техниксем хушшинче вара чăвашсем 15 процент çеç. Врачсем, аслăлăхпа искусствăри ĕçлекенсем хушшинче чăвашсем сахал, республика тулашĕнче пурăнакан чăвашсем хушшинче учительсем, ял хуçалăх специалисчĕсем те сахал. Аслă шкулсенчи студентсен йышĕ регионти халăхăн социаллă тата наци йышĕпе шайлашуллă пулмалла тени питĕ тĕрĕс. Пирĕн патăрта ун пек мар. 1989 çулхи перепись тăрăх, республикăри хуласенче пурăнакан халăх 58 процент, ялсенче пурăнакансем - 42, рабочисем - 52 процент, колхозниксемпе совхозсенче ĕçлекенсем 24, служащисем 24 процент шутланнă. Наци тĕлĕшĕнчен илсен çакă куранать: чăвашсем - 67,7, вырăссем - 26,7, тутарсем - 2,7, мордвасем - 1,4, ытти наци çыннисем - 1,5 процент.

Аслă шкулсенче студентсен йышĕ мĕнле-ха? Тĕслĕхрен, 1990 çулта Чăваш патшалăх университетне кăнтăрла вĕренме илнисем хушшинче хула çам

ракĕсем - 69,9 процент, çав шутра Шупашкартан 53 процент, рабочисем тата рабочисен ачисем - 38,6, колхозниксемпе колхозниксен ачисем - 9,7, служащисем тата служащисен ачисем - 51,6; чăвашсем - 54,5 процент /вăл шутра 40 процента яхăн çеç чăвашла калаçма пĕлнĕ, çапла вара чăвашла калаçма пĕлекен студентсен шучĕ 20 процент яхăн çеç пулнă/, вырăссем - 40,8, ытти наци çыннисем - 4,7 процент пулнă. Аслă шкулсенче тулай чăвашсен ывăлĕ-хĕрĕ уйрăмах сахал вĕренет. Чăваш Ен аслă шкулĕсенче республика тулашĕнче пурăнакан чăвашсене ытларах вĕренме илме сĕнмелле пулĕ. Нумай пулмасть И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн Улатăрти, Патăръелĕнчи, Канашри, Çĕнĕ Шупашкарти филиалĕсене, Етĕрнери, Ульяновскри вĕренӳпе консультаци пункчĕсем, Куславккари, Вăрнарти наукăпа пĕлӳ центрĕсем уçни аслă шкулсенче вĕренекенсем хушшинче республикăри тата унăн тулашĕнчи ял çамрăкĕсен хисепне ӳстерме пулăшрĕ. Культурăпа çут ĕç училищи валли нумай пулмасть Шупашкарта туса лартнă çĕнĕ çуртра Чăваш культура институтне уçмалла. Тулай чăваш районĕсенче чăваш шкулĕсене çĕнĕрен йĕркелеме педучилищĕсенче пуçламăш шкул учителĕсем вĕрентессине ӳстерсе пыни кирлĕ. Тутарстан тата Пушкартстан, Ульяновскпа Самар облаçĕсен администрацийĕсен умне Раççей Федерацийĕн Правительстви урлă Аксури, Пишпӳлекри, Ульяновскри тата Самарти чăваш педучилищине çĕнĕрен уçма ыйту лартмалла.

Пĕрлĕх /общность/ шутланакан наци йĕркеллĕ, хăйĕн ятне тивĕçлĕ пулма тăрăшмасан кирлĕ пек куранма пăрахать. Ĕлĕк чăвашсем çав тери ĕçчен пулнипе, камăл-сипечĕ пуян пулнипе паларса тăнă. И.Г. Гмелин академик 1733 çулта чăваш ялĕсенче пулнă хыççăн çапла çырнă: "Чăвашсем питĕ перекетлĕ халăх, çавăнпа эрех ĕçмеççĕ". Вĕсем хăнасене ĕçке чĕнсен те, туйсенче те сăра анчах ĕçнĕ. Чăвашсен 20-30 пин çын пурăнакан кирек хăш районĕнче те ĕçкĕпе иртĕхекенсем 4-5 çынран ытла тупăнмăн, мĕншĕн тесен чăвашсем эрех ĕçменпе пĕрех. Чăваш халăх поэчĕ Ухсай Яккавĕ хăй çуралнă ялта, Слакпуçĕнче, революци хыççăн черкке ӳпĕнтерме юратакан

Йаканат ятлă пĕртен-пĕр ĕçкĕç пулни çинчен каласа паратчĕ. Ватă çынсем каласа панă тарах, Тавай районĕнчи пĕр ялта /20-30-мĕш çулсенче унта 500 яхăн хресчен хуçалăхĕ шутланнă/ икĕ ĕçкĕç çеç пулнă. Ячĕсем манăçнă ĕнтĕ, çапах та ялта Пакруç тата Чăкăлкка тесе чĕнни сыхланса юлнă. Районта упăшкипе арăмĕ уйрални çулталакра 2-3 хутран ытла пулман, хĕр пуçăн ача çуратнине теплерен кăна илтнĕ. Хулара та хулиганла ĕçсем саралман. Ялсенче пуртсемпе кĕлетсене çăрапа питĕрмен. Пурлăха çаратни пулман та темелле. Чăвашсем аруран арăва "чăваш ятне ан çĕрт" тесе вĕрентнĕ. Халăхсен çемйинче йĕркеллĕ пуласси вăл - ыра-сыва туртăм.

Варçă хыççăнхи çулсенче лару-тăру улшăнна. Арçынсем хушшинче ĕçкĕпе иртĕхекенсен хисепĕ ӳснĕ, хĕрарăмсем те ĕçме тытăнна. Нумайашĕ алкоголизмпа чирленĕ. Статистика материалĕсенчен çака палла: Раççейри ватам катартупа танлаштарсан, республикăра алкоголь чирĕпе асапланакан çынсем икĕ хут нумайрах. Хам çуралса ӳснĕ районта, ытти районсенчен тухнă юлташсем калăнă тарах та, ялсенче çитĕннĕ арçынсенчен 80 проценчĕ таран ĕçке ернĕ. Хĕрарăмсем хушшинче ĕçекенсен хисепĕ 20 процента та çитет пулĕ. Хăш-пĕр çемьесенче пĕчĕк ачасем те ĕçеççĕ, çитĕнсе çитнĕ тĕле эрех ăшне путнă çынсем пулса тараççĕ. Ĕçекен çын начар ĕçлеме тытăнать, ĕç йĕркине паснине, халăх пурлăхне вăрланине курса çырлахса пуранать. Политикăра ыррипе усаллине уйăрса тăмасть, такама майлă та кайма пултарать. Ĕçекен çынсем час-часах чирлеççĕ /ĕçекен чăвашсем хушшинче психика чирĕпе чирленисем уйрăмах нумай/, вăхăтсăр вилеççĕ. Ĕçекен çыннăн ачипăчи те чирлĕ çуралать, ăс-тăн енчен кăлтăкла пулать. Ĕçке ернĕ арçынсен çемйи час-часах саланса каять, килте вĕсем хăйсене ирсĕр тытаççĕ, арăмĕ çине те ала çĕклеççĕ, ачисене те хĕнеççĕ. Ĕçекенсем хушшинче преступлени тунă çынсен шучĕ питĕ пысăк. Çынсем йĕркерен тухса ĕçни пирĕн наци пуласлăхĕшĕн çав тери харушă. Эрех-сăра ытлашши ĕçнинчен хăтăласси хальхи вăхăтра нацишĕн çивĕч ыйту пулса тăчĕ.

Кашни çулах, машăрланнисен хисепĕпе танлăш

тарсан, çемьесен 30 проценчĕ ытла уйрăлса каять. Хулиганла ĕçсем, преступленисем тавасси нумайланнă. Республикăри çамрăксем ушканăн-ушканăн çапăçнипе Раççейре "чапа тухнăччĕ". Çамрăксене видеозалсенче ют çĕршывсенчен килнĕ "боевиксем", эротика фильмĕсем кăтартса пăсса ячĕç, хашĕ-пĕрисене преступлени çулĕ çине кăларчĕç. Халăхăн хаш-пĕр пайĕ камăл-сипет, чыса çухатнă. Вĕсене ăт-пу тата камăл-сипет тĕлĕшĕнчен сыватасси çивĕч ыйту пулса тăчĕ.

Чи кирли - чăваш халăхĕн патшалăх тытамĕ ĕçлени тата аталанса пыни. Чăвашсен IX ĕмĕр вĕçĕнче - XIII ĕмĕр пуçламăшĕнче Аталçи Пăлхар патшалахĕн пурнăçне хăй тĕллĕн, суверенла тытса таиин питех те пуян опычĕ пур. 700 çул таран монгол-тутар тата Раççей колони пусмарĕнче пураннине пула чăваш халăхĕн çав опычĕ сурĕкленнĕ. Чăваш халăхне 1920 çулта автономиллĕ наци патшалăх йĕрки пачĕç. Ку чăваш халăхĕн наци ăсĕмне питĕ вайла пулашрĕ. СССР, РСФСР, ЧАССР 1924, 1926, 1936, 1937, 1977, 1978 çулхи Конституцисенче автономиллĕ республика - наци патшалахĕ тесе çырнăччĕ. Автономиллĕ республикăсен прависемпе функцийĕсем çинчен тĕплĕн çырнăччĕ. Раççей Федерацийĕн юлашки Конституцийĕнче Федераци субъектчĕсене асăннă чухне анчах "крайсем, облаçсем, республикăсем" тесе калана, республика - Федерацири наципллĕ патшалăх пулни çинчен, унăн прависемпе функцийĕсем çинчен пĕр сăмах та çырман.

1922 çултан пуçласа Шахрай, Шумейко, Жириновский, Солженицын, темĕн чухлĕ выраç облаçĕсен кĕпĕрнаторĕсем, халĕ Шойгу та, Раççейри пур республикăсене пĕтерсе, нацисене шута илмесĕр, территори принципĕпе анчах кĕпернесем тумалла теççĕ. Шахрай министр пулнă чух республикăсене пĕтерсе кĕпернесем тавасси çинчен закон проектне те тăратнăччĕ, анчах ăна ун чухне Патшалăх Думи пăхса тухмарĕ. 1994 çулта Солженицын çапла каларĕ: "А внутри России автономные республики тоже жили за счет России. У русского народа больше нет сил всех кормить". Ку сăмахсем веçех тĕрĕс мар. Автономиллĕ республикăсене бюджет çирĕплетнĕ чухне оборотран

илнĕ налогран 18-20 процентне анчах пана, крайсемпе облаçсене 50 процент таран пана. Автономиллĕ республикăсенче ял хуçалăхĕ арканманччĕ, крайсемпе облаçсенче вăл пĕтсе ларас патнех çитнĕччĕ. Кам кама тарантарна-ши? Жириновский пичетре те, радиопа телевизор урлă та çĕршер хут республикăсене пĕтерес пирки каларĕ, хаçатсенче çĕнĕ кĕпернесен карттине те пичетлерĕ. Вăл, вырăс халăхне сыхлана пек пулса, вырăс халăхне Раççейри вырăс мар халăхсемпе хирĕçтересшĕн. Хăйĕн 1996 çулта каларна "Последний удар по России" кĕнекинче Жириновский çапла çырать: "Под руководством чеченца Хасбулатова в 1992 году выделяется около 200 млн. долларов на создание Чувашского народного Конгресса, который с первых же дней своего существования выступил за изгнание русских из Чувашии при наличии чувашей Федорова и др. в правительстве России и т.д." /35 стр./ Ку чăваш халăхне, ЧНК-на, Н.В.Федорова хирĕç калана харушă элек. Чăваш халăхĕ 450 çул хушши Чăваш Енрен вырăссене хăваласа кăлармалла тесе пĕр сăмах та каламан. 1996 çултах А.П.Хусанкая Жириновский çырни çинчен каларăм та, аллине сулчĕ анчах, вăл тем те калама пултарать терĕ. Жириновский вăл сăмахсене чăвашсемпе вырăссене хирăçтерсе яма, ЧНК-на, Н.В.Федорова /вăл 1996 çулта пирĕн республика Президенчĕ пулнă/ салтавсăр айăпласа çырнă. Нумай политиксем республикăсем Раççейрен тухма пултараççĕ тесе сӳпĕлтетеççĕ. Раççей варринче, Раççей чĕринче вырнаçнă республикăсем ун пек шухăш нихăçан пулман та, пулмасть те. Ун пек тума нимĕнле май та çук.

1996 çулхи çĕртме уйăхĕн 15-мĕш кунĕнче 909 № указпа РФ Президенчĕ Б.Ельцин "Раççей Федерацийĕнчи патшалăх наци политикин концепцине" çирĕплетрĕ. Вăл концепцире Раççейри наци республикисем çинчен пĕр сăмах та каламан, уйрăм сыпăкра вара нацилле-культурăлла автономи çинчен калана. Тепĕр икĕ кунтан Б.Ельцин "Нацилле-культурăлла автономи" ятлă закон çирĕплетрĕ. XX ĕмĕр пуçламăшĕнче Австрири социал-демократсем, Раççейри еврейсен "Бунд" организацийĕ культурăлла наци автономи патшалăх структуринче пулмалла, тенĕ. Ель-

цин законĕпе вара нацилле-культурăлла автономи - общество организацийĕ çеç шутланать. Ун пек организаци /ентешлĕх тата ытти те/ ку закона кăлариччен те тума юрать. Нацилле-культурăлла автономие патшалăх пĕр пус укçа та памасть. Наци профессилле шкулсем, культура учрежденисем нацилле-культурăлла автономисен хăйсен членĕсенчен пухăнă укçапа уçма юрать тенĕ. Ку закон ниме пĕлтермен хут анчах пулчĕ. Малашне республикăсене пĕтерсе нацилле-культурăлла автономи анчах хăварас хăрушлăх пур. Жириновский яланах çапла калать: "Тепĕр Чечня ан пултăр тесен, пур республикăсене те пĕтермелле", - тет. Чăннипе вара республикăсене пĕтерсен çеç çĕнĕ Чечнясем тума пулать. Чăвашсем, çармассем, удмуртсем, мордвасем, комисем республикăсене пĕтернине хирĕç тăмĕç, тутарсем, пушкăртсем, Çурçĕр Кавказри халăхсем хăйсен республикăсемшĕн çапăçăва тухма пултараççĕ.

Пĕтĕм тĕнче историйĕ, сĕм авалхи тапхăртан пуçласах паянхи куна çити те, çакна уççăн кăтартса парать: хăйĕн патшалăх пулнă халăхсем çеç хăйсен экономикине, культурине, чĕлхине, литературипе искусствине аталантарса пынă, патшалăх пулсан çеç наци çырулăхĕ сарăлнă, наци шкулĕсем, наци чĕлхипе çырнă кĕнекесем, хаçатсем, журналсем тухма тытăннă, наци писателĕсем, композиторĕсем, художникĕсем, артисчĕсем, журналисчĕсем çитĕннĕ, наци идеологийĕпе политики пуçланса кайнă, наци патшалăхне тытса пыракан "надстройка" /власть органĕсем, суд, полици, çар, чиркĕ тата ытти те/ йĕркеленнĕ. Патшалăхсăр халăхсем хуçалăхпа культура енчен кая юлса пынă, вĕсенчен нумайăшĕ пĕтсе çухалнă.

Раççей Федерацийĕ вăл облаçсен, крайсен тата республикăсен федерацийĕ мар вĕт-ха, вăл пĕрлĕхлĕ патшалăх тытăмĕллĕ асла вырăс халăхĕ хăйсен автономилле наци патшалăхĕ пур вырăс мар халăхсемпе - республикăсемпе пĕрле туса хунă федераци. Вĕсенчен кашнинчех хăйĕн чĕлхиллĕ, йăли-йĕркиллĕ, культуриллĕ - наци шкулĕллĕ, литературăлла, музыкăлла, театрлă, искусствăлла, наци издательствиллĕ, журналсемпе хаçатсемлĕ, радио-телевиденийллĕ, наци кад-

рĕсемлĕ т. ыт. те уйрăм наци пуранать. Раççейри вырăс мар халăхсен наци патшалăхĕсем пур чухне наци патшалăхĕн йĕркелесе тăракан, пулăшакан пĕлтерĕшлĕ пур чухне кăна вĕсене /вырăс мар халăхсене/ çĕнĕ вăй илтерме май килет.

Авалхи ĕмĕрсенчен паянхи вăхăт таранах пĕтĕм тĕнчере "республика" термин "патшалăха" пĕлтерет, кунпа пĕрлех вăл монарх, диктатор, деспот пуç пулса тăракан патшалăх мар, саккун каларакан, ĕç тăвакан влаççемпе суд влаçне халăх суйлакан патшалăх шутланать. Кашни нацин хăйĕн суверенлă е автономиллĕ патшалăх пулмалла, унта хăйĕн пурнăçне наци уйрăмлăхĕсемпе килĕшӳллĕн йĕркелемелле.

1990 çулта Раççейри нумай автономиллĕ республикăсем хăйсен суверенитечĕ çинчен декларацисем йышăнчĕç. 1990 çулхи юпа уйăхĕн 24-мĕшĕнче Чăваш республикин патшалăх суверенитечĕ çинчен республикăн Аслă Совечĕ декларацине йышăннă. Тутарстанра, Пушкăртстанра суверенитетлăха чылай пурнăçларĕç. Пирĕн республикăра ăна пурнăçлас енĕпе нимĕх те туман-ха. Федерацилле патшалăхра нимĕнле республикăн та пĕтĕмĕшле суверенитет пулма пултараймасть, тулли мар суверенитет анчах пулма пултарать. Республикăн хăш-пĕр суверенлă правăсем пулмалла, вăл тĕнчери право субъекчĕ пулма тивĕçлĕ. Тĕрĕссипе каласан, Раççей Федерацинчи наци республикисен автономиллĕ республикăсем, автономилле патшалăхсем пулмалла. Раççей Федерацийĕн çĕнетсе юсанă Конституцине республикăсен прависемпе функцийĕсем çинчен уйрăм сыпăк кĕртмелле.

Кирек хăш нацин хăйĕн наци патшалăхĕ пулмалли право вăл - тĕнче норми. 1960 çулхи раштавăн 14-мĕшĕнче Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн Генеральнăй Ассамблейи пĕр сасăлă пулса Колони çĕршывĕсемпе халăхсене пикама паханмалăх парасси çинчен калакан Декларацине йышăннă, унта тĕнчери мĕн пур халăхсен самоопределени прави тата наци патшалăхĕ туса хумалли прави пурри çинчен пĕлтернĕ. Ун хыççăн ООН тата тĕнчери халăхсен конференцийĕсем халăхсем патшалăх йĕркине хăйсемех /"самоопределение" правипе/ тăвасси, кашни халăхăн патшалăх

тума право пурри çинчен çирĕм ытла декларации, пакт, харти, конвенци йышăннă. Вĕсене 1995 çулта кăларнă "Права и свободы народов в современных источниках международного права /сборник документов/" кĕнекере вуласа пĕлме пулать. Раççей Федерацийĕнче республикăсене пĕтерсе кĕпернесем туни пĕтĕм тĕнчере йышăннă халăхсен прависен нормине пăсни пулĕччĕ.

1937 çулччен СССР Тĕпĕçтăвкомĕпе Национальноçсен Совечĕ пурччĕ, 1937 çултан пуçласа 1991 çул таранах СССР Аслă Совечĕн пĕр палати Национальноçсен Совечĕ пулнă. Халĕ те Раççей Федерации пухăвĕнче Национальçсен Совечĕ пулмалла. Унта Раççейри кашни халăхран икĕ депутат суйласа ямалла пултăр. Патшалăх Думи ырлана законсене Президент çирĕплетиччен малтан Национальноçсен Совечĕ, унтан Федерации Совечĕ ырламалла пултăр. Раççей Федерацийĕн çĕнетсе юсанă Конституцине кун çинчен уйрăм статья кĕртмелле.

Тулай чăвашсен наци патшалăх йĕркине хутшăнма нимĕнле май та, правăсем те çук. Нацилле-культурăлла автономи çинчен калакан закон вĕсене нимĕн те памасть, мĕншĕн тесен çав автономи патшалăх йĕркине кĕмест. Тулай чăвашсене сыхласа хăварса аталанма пулăшас тесен Атăл тăрăхĕнчи, Урал çывăхĕнчи тата Çĕпĕрти республикăсенче, облаçсемпе крайсенче чăваш районĕсемпе чăваш ял ушкăнĕсем тумалла. 1934 çулччен унта чăваш районĕсем те, ял канашĕсем те пулнă. Вĕсем чăвашлăха упрама аван пулăшнă. Ун пек районсемпе ушкăнсем тума ятарлăн уйăрса панă укçа-тенкĕ кирлĕ мар. Çав районсемпе ушкăнсенче, шкулсенче вырăсла анчах мар, чăвашла та вĕрентмелле, культура учрежденийĕсенче чăваш культурине те пропагандăламалла, район хаçатĕнче вырăсла та, чăвашла та çырмалла, вырăс, тутар, пушкăрт чĕлхипе пĕрле чăваш чĕлхи те патшалăх чĕлхи пулмалла.

"Тулай чăвашсене пулăшмалли тата çăлса хăвармалли фонд" туса хуни кирлĕ, унта патшалăх бюджетĕнчен, предприятисем, колхозсем, совхозсем, учрежденисем тата уйрăм çыннсем укçа куçарса пама пултарччăр. Тулай чăвашсен районĕсенче чăваш хаçач-

ĕсене çĕнĕрен каларассине йĕркелемелле. Чăваш кĕнеке издательствине, республика хаçачĕсемпе журналĕсене, театрсене, филармоние, культуран ытти учрежденийĕсене, Чăваш патшалăх гуманитари аслалăхĕн институтне, Шупашкарти аслă шкулсене Раççейри пĕтĕм чăваш халăхĕшĕн ĕçлемелли йĕрке çине куçарни аван пулĕччĕ. Тулай чăвашсем валли кĕске хумла ятарлă радиостанци тăвасчĕ.

Наци аталанăвĕн паянхи çивĕч ыйтăвĕсене татса парас тесе, нацие упраса хăварса вăйлатас тесе халăхăн нигилизмĕпе дуализмне пĕтересчĕ, халăх пĕрлĕхне çирĕплетесчĕ, хамăр халăха, унăн культурине, чĕлхине хисеплеме, юратма тытăнасчĕ, анне чĕлхине манас марччĕ, пĕтĕм вăя хурса вăтам тата аслă шкулсенче кирлĕ специальноçсем илсе тухаçлă ĕçлесе пуранасчĕ, пĕрне пĕри пулăшма хăнахасчĕ, чăваша чăваш курайманнинчен, ĕçке ерсе пĕтнинчен, сĕмсĕрлĕхрен хăтăласчĕ, çемьесене аркатса хамăр ача-пăчана хур кăтартас марччĕ, республикăна сыхласа хăварасчĕ, тулайри чăвашсене наци культурине упрама пулăшасчĕ, ытти халăх çыннисене хисеплеме пăрахас марчĕ. "Чăваш ятне ан çĕрт!" - тенĕ ваттисем.

(Ялав. 2000. 5№)

ТУПМАЛЛИ

Данилов А.П. В.Д.Димитриев профессор журналистикăра....3

Пирĕн йăх-несĕл аçтан?....5

Чăваш патшалăхĕ мĕнле пулса кайнă....19

XIV ĕмĕр вĕçĕнче тата XV ĕмĕр пуçламĕшĕнче Атăлçи Пăлхар çĕрне çаратса тустарни....31

Мирлĕн, халăх ирĕкĕпе (Истори çăлкуçĕсене тишкерсе тухни)....71

И.Я.Яковлевăн халăха çутта кăларас ĕçри историллĕ пĕлтерĕшĕ....115

"Чăваш ятне ан çĕрт". Чавашсен иртнĕ пурнăç шăпи тата наци аталанăвĕн паянхи çивĕч ыйтăвĕсем....134

ДИМИТРИЕВ Василий Димитриевич

Историческая судьба и современные национальные проблемы чувашского народа

Сборник статей

На чувашском языке

Отв.редактор **А.П.Данилов**
Дизайн-верстка: **Е.Е.Фомина**
Корректор **А.Ф.Мышкина**
Технический редактор **А.А.Данилов**

Подписано в печать 14.06.2001. Формат 60x96/16.
Бумага офсетная.
Гарнитура Journal Chv FVI. Печать офсетная.
Усл. печ. л. 9,30. Уч.-изд. л. 8,0.
Тираж 500 экз. Заказ № 405.

Книга подготовлена на факультете журналистики
Чувашского госуниверситета при участии
Чебоксарского учебно-методического центра

Издательство Чувашского университета
428015 Чебоксары. Московский просп., 15

20=00